ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕМ

ТРАКТĂР

ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА КРИТИКĂ
АЛЬМАНАХĔ

**САККĂРĂМĔШ
КĔНЕКЕ**

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25.

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР ✦ 1953

П. Н. ОСИПОВ.

ÇĔНĔ ХУМ.

V ПАЙЛĂ ДРАМĂ.

ДРАМĂРИ ÇЫНСЕМ:

1. Кустăрма Паԉукĕ — 62 çула çитнĕ типтерлĕхе йуратакан единоличник-алăстаçĕ, кайарахпа — колхозник. Сылтăм урипе уксакласа утат.

2. Ахваниç — Кустăрма Паԉукĕн ывалĕ, тӳлек призывник — активист, çамрăк литератăр — йалкор, ашшĕ пекех йавашрах чĕрелĕскер. Призыв умĕн комсомола кĕрет, активлă ĕçлет.

3. Улитта — Çилтимер колхозĕнчи комсомол йачейкин çекретарĕ, активлăн ĕçлет; вăлах колхозра виççĕмĕш бригадир.

4. Римă — колхоз çекретарĕ, активлă комсомолка.

5. Шахторăв — иккĕмĕш бригадир — призывник, партин кандидачĕ, шахтăра ĕçлесе пурăннăскер.

6. Прамун — Кустăрма Паԉукĕнчен çамрăкрах, колхозник, тăрăшса ĕçлекенскер.

7. Прасни — Прамунăн хĕрĕ, тăлăх арăм, хăйĕн пурнăçне йепле те пулсан телейлерех тума тăрăшаканскер, хăйен йăнăшне кайарахпа çеç ăнланса илекенскер.

8. Лариван — Ахваниççенчен пертак асларах. Колхозра виççĕмĕш бригадир, ĕçкунĕсене хăйсене кирлĕ пек çырса пыракансенчен пĕри, Усламăвпа туслă. Аслашшĕ ĕлĕк вăйлă хăмла хуçи пулнă; тăлăхра ӳснĕ пулсан та, „аслашшĕне пăхнă“.

9. Çитăр кум — ĕлĕк лесопилкă тытнăскер, хаԉ колхозра хăйне кирле пек „активла“ ĕçлекенскер; çиллине шăнарайман чухне „йаланах чĕрхине çыртса çӳремелине“ тӳсеймен скер.

10. Усламăв Иван — Çитăр кумăн ывалĕ, призывник. Колхозра пĕр вăхăтрах завхоз та, счетовод та пулса ĕçлет. Хаԉхи тапхăрти кулакăн политикне ăнланса çитсе „лайăх ĕçлеме тăрăшаканскер“.

11. Сухал Ваçлейĕ — кавак сухаллă подкулачник, ĕлĕк ĕçлесе месерех хырама унта-кунта тăранткаласа пурăнма йуратнăскер, кив хуçасемпе туслă пурăннăскер, хаԉ — хăйне: „батрак пулнă епĕ, революцине епĕр туврă“, теме йуратаканскер

12. Колхоз председателĕ — вăтам çулта, ĕлĕк „гвардейскăй салтак“ пулнăскер, хаԉ колхозра кив хуçасене хӳтĕлесе усраканскер.

13. Çар комиссарĕ — призыв комиççин председателĕ.

14. Кушаков — призывник — единоличник, йалта „веçолăйскер“, анчах Хĕрлĕ çара тин авлан ă пирки „арăмне ытараймасăр“ кайасшăнах марскер.

15. Çектант Александăрĕ — çектантсен çемйинчен, хаԉхи вăхатра йалсевче сайра-хутран перерĕн çех тĕл пулакан „йухан-суран çветуйла çын кĕлеткисенчен“ пĕри.

16. Пушкин — йал тарах гармоньпе ĕçсе йурласа çӳреме йуратакан призывник. Ĕлĕкхи пек: „епĕ салтака кайатăп“, — тесе тăвавĕсенчен — шартансем, хĕрсенчен — алшăлисем пуçтарма йуратаканнисенчен пĕри. Ун пеккисем час часах „салтакне“ те кайаймаççĕ.

17. Петров — Хĕрле çара пит савăнса кайакан призывниксенчен пĕри

18. Ватă тухтăр
19. Çамрăк тухтăр
20. Районтăвкомăн — призыв комиççин членĕсем.
т. ыт. учреждениçсен
представителĕсем

21. Радио, фотограф, колхозниксем, комсомолĕçсем, пушара сӳнтерме пуçтараннă çынсем.

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ.

Паҙук анкартийĕ. Çатан уйрă колхоз анкартийĕ кăшт курăнат. Пĕр йенче пушă авăн. тепĕр йенче — пĕчĕк кĕлет. Кĕлет умĕнче çаврака тырă али çакăаса тăрат ...

1-мĕш курăнни.

Ахванисăпе ашшĕ авăн çапса пĕтернĕ те, йĕтем çинчен пуш кĕлтесене капан тума йăтаççĕ. Анкарти хыçĕпе Улитта васкаса иртсе кайат. Ăна курса Ахванис васа, тăк йăтвă кĕлти е парахса чупат.

Ахванис. Улитта! Чим-ха... „Сунтал“ килмен-и?

Улитта (чарăнса тăрса). Пур. . „Канаш“ та килнĕ.

Ахванис. Епĕ иртнĕ уйăхра пĕр пĕчĕк калав çырса йанăччĕ, çаптарма йурăхлă тесе хыпар килнĕччĕ: ку номĕрте тухман-ши? (Кашта çиве хăпарса ларса „Сунтала“ пăхкаласа тухат).

Улитта. Мĕн йатлă калав?

Ахванис. „Хĕрлĕ çарăн çĕнĕ хумĕ“ — çитес призыва асăнса çырнă калав (Журнала пăхкаласа). Çук пулас, пичетленмен.

Улитта. Çитес номĕрте вăл калав шăпах вăхăта пулат; сирĕн тепĕр уйăхран каймала вĕт-ха?

Ахванис (хыттăн). Çентабĕрĕн 26-мĕшĕнче. (Сасартăк хыттăн декламацилеме пуçлат. Улитта кулкаласа итлесе тăрат).

„Çи, ĕм ултăн вĕсем, çирĕм ултăн,
Çирĕм ултă çулпуç — сахал мăр!
Вĕсен йачĕ пуриншĕн те ылттăн.
Çирĕм ултăн вĕсем, çирĕм ултăн,
Çирĕм ултă чăн чăн комунар!“

Паҙук (каласа пĕтерниччен нарат). Ей, Ахванис, ĕçта ĕçе пăрахса çӳрен? Çирĕм ултăн мар вĕт епĕр, иккĕнех. Тĕттĕм пулаччен пуçтарса пĕтерес, кил часрах.

Ахванис. Халех пыратăп, аттă кăмиçсар! (Кулат). Ну, каллех уйрăлмала пулчĕ хăйамат. Нихăçан та пĕтĕм чун-хавалтан санпа каласма телей тивмест мана: йалан кансĕрлеççĕ. (Кашта çинчен сиксе анат). Тен „индуссене“ кĕрсе пулăшас тейĕн вăскамасан?

Улитта. Шухăш пур та, аçунтан хăймастăп.

Ахванис. Ой, каларĕ... Атте-е? Ларса чĕлĕмне чĕрт; сан вырăна Улитта ĕçлес тет. (Кулкаласа кĕлте йатма чупаççĕ; Паҙук тырă аллат).

Улитта. Ĕçĕ ăнса пытăр, Паҙук пичче.

Паҙук. Спаçибă. Ĕçĕ ăнмалăх тырри те çукрах та-ха пирĕн, çапах пуррине пуçтаркалас пулат. Армана кайма тесе çапрăмăрта-ха: пĕтрĕ вĕт çăнăх, сутăн илкелесе аран çу касрăмăр. Лайăх çĕрсем колхоза карĕç, нач рисем халăха йулчĕç.

Ахванис. Вун-вуник кил колхоза кĕмесĕр йулнă та, вара çав халăх пулат-и, атте? Чăн ĕçхалăхĕ хаҙ колхозниксем ĕнтĕ; ак капла кĕмесĕр кайа йулсан, епĕр санпа кулак шутне те кĕрсе ӳкĕпĕр.

Паҙук. Ĕмĕртенпе лаша усраса курайман уксак Паҙук кулак шутне кĕрейĕмĕ-ха, ывăлăм. Хăрах куç кăшт тĕтрелĕрех кăтарта пуçларĕ-ха, куç вăйĕ пĕтмесен, колхоза кĕмесĕр те пурăнăпăр-ха.

Улитта. Паљук пичче, сирĕн ав тырри те пирĕнчен начар пулнă, çĕрĕ те пирĕн лайăхрах тетĕн,— кам сана чарса тăрат, колхоза кĕме заявлени пар.

Паљук. Çук, çук, çук. Апла аташса пулмĕ ха: унта кĕрсен вара кунĕн-çĕрĕн ĕçлемеле пулат. Ун пек ĕçлеме манăн çулĕ те ĕнтĕ утмăлтан иртнĕ, ури те аманчăк. Килте епĕ пултарнă таран ĕçлетĕп, мана никам та хăваламаст. Урапа тавраш йусамали пулсан, ăна та вăй çитнĕ таран йусаса паратăп... Ав сăмах çинех, Прамун урапа йăтса килет

2-мĕш курăнни.

Прамун хулпуççи çинче урапа йатса килет.

Прамун. Вăй патăр сире ĕçлеме.

Паљук. Спаçибă.

Ахванис. Кам патăр?

Прамун. Кам?! Турă патăр. Сирĕн çамрăксен, турри те çук та ĕнтĕ, тем темеле.

Паљук. Ан та кала, Прамун: вилсен те — йытта пăрахнă пек çырмана кайса йăвантарĕç...

Улитта. Мускавра вилĕссене çунтараççĕ хаљ, Паљук пичче. (Кĕлтиве çўлеле парат).

Прамун. И-и, сан кин мар пуљ çке ку, Паљук? Ак йапала, хаљ колхоз анкартинчеччĕ, кунта килме те ĕлкĕрнĕ. Тĕлĕнмеле хĕрупраçран.

Паљук. Кинĕ кин мар та-ха ку ман, пулăшма тесе кĕчĕ.

Улитта. Мĕн тĕлĕнмели пур: иртсе кайаттăм та, кĕрсе пулăшам çак ик тăлăха терĕм.

Прамун. Ик хусаха мар-и? Хе-хе-хе!

Паљук. Ман ĕнтĕ хусах шутĕнчен тухса иргрĕ пуљ, Прамун. Ывăла авлантарсан та йурĕччĕ.

Ахванис. Ман, атте, кăçал Хĕрлĕ çара каймала — хăвăнах авланма лекет.

Паљук. Кирлĕ мара ан калаç-ха, Ахванис...

Улитта. Чăнах та Ахванисе Хĕрлĕ çара ийсессĕн, сана, Паљук пичче, пĕччен ĕçлесе пурăнма йăвăр пулат: санăн Ахванис кайиччен колхоза кĕрсе йулас пулат.

Паљук. Колхозра, уксакскерĕн, ăçтан ĕçлес ман çынсемпе тан. Выçă ларасси çавăнта пулчĕ вара ман, урапа-тĕнел тавраш йусасси те пĕтет.

Улитта. Йепле пĕтет? Колхоз ураписене йусанăшăн сана ĕçкунĕпе шутласа тырă параççĕ вĕт.

Ахванис. Каларăм вĕт сана, атте, урапа ĕçне ĕçкунĕ шутлаççĕ тесе, есĕ мана ĕненместĕн.

Улитта. Вăл çеç мар, епĕр хамăр колхозра аласти ертелĕ уçма пултаратпăр, есĕ пуçлăхĕ — маçтăрĕ пулатăн. Есĕ пирĕн колхоза уралантаракан çын пулма пултаратăн.

Прамун Главнăй начаљчикĕ, значит!.. директăрĕ пулатăн!

Ахванис. Пурнăç-и ку? Çынсем йурла-йурла ĕçлеççĕ, есĕ пур — ик тăпăч сассипе: пăт-пат, пăт-пат тутарса ик-виç урапа тырăшăн йĕп-йĕпе тара ўкетĕн. Çитменнине тата (Улитта çине пăхса)

хĕрсем те „инхозник“ çине чалăш куçпа çеç пăха пуçларĕç.

Прамун. Сан, Паљук, колхоза кĕресех пулат. ав йепме Ахваниç сан пирки тарăхат, хĕрсем те йуратмаççĕ тет. Хе-хе-хе! Ĕçĕнчен хăрамали çук. есĕ аластипех хăна тăранмалăх ĕçлесе тупатăн. Епĕ ак санран нумайах кĕçĕн мар, çапах 140—150 кунсем колхозра ĕçлесе тупнă пулас пулат. Ĕçкунне вуншар кĕрепенке çеç шутласан та, пайан кун мана пĕр 40 пăтсем тивет. Кăçалхи тырпул тухăçлăхĕпе шутласан, хĕл каçма 100 пăтсем тивессĕн туйăнат-ха мана. Иртен те ир акнă çуртырри колхозăн калама çук тухăçлă пулчĕ кăçал: тулă пĕр гектартан 200 пăта йахăн тухрĕ. Емĕрне курман йапала! Тул кулачисĕр кăçал лармастпăр пуљ-ха.

Паљук. Тырри сирĕн чăнахах та пирĕнчен тухăçлăрах пулнă та кăçал. Не-най? Урапа ĕçне ĕçкунĕ шутлас пулсан „тутиçуги“ хут.

Прамун. Какшĕ? Главнăй директăрĕ, начаљникĕ пулатăн! Ей, Улитта, Ахваниç, зайавлени çырăр: Паљук Митрич колхоза кĕрет.

Ахваниç (хавасланса капан тăрĕнчен сиксе анат). Тавта пуç атте, сана куншăн. Капла епĕ Хĕрлĕ çара колхозник пулса кайатăп!

Улитта (савăнса). Вăт маттур, Паљук пичче! Виççĕмĕш бригадăна илетпĕр сана.

Паљук. Чимĕр-ха есĕр, епĕ колхоза кĕретĕп темерĕм вĕт.

Прамун. Ну, ну, Паљук. Начаљник пулатăн вĕт, начаљник... Директăрĕ!

Ахваниç. Колесных дел мастер! Ха-ха ха!

Улитта. Паљук пичче, ман бригадăра пуластесен ал çапса татас. (Аллине тăсат).

Паљук Ех, кинĕм... Ек-кей-ха, ку шăмăсăр чĕлхепе тем те лаплаттарăн. Ну, хăйамата пултăр! Мĕн пулсан мĕн килет, виличчен çамрăксемпе ĕçлесе курам.

Прамун. Шухăшĕ усал марçке, Паљук. Калани те йурат.

Паљук. Улитта хĕрĕм, аллине парассине парăп та ăна, анчах.. зайавленине пайанах ан çырăр-ха, ыранччен ывăлпа шут туса виçсе пăхар. Кăшт тăхтасан аванрах мар-ши?

Ахваниç. Епĕ сана, атте, пин хут та калянă ĕнтĕ колхоза кĕресси çинчен: малтан анне хирĕçрĕ, халь тата ес кутăнланса тăратăн. Çамрăксем ĕнтĕ мана,—„çемçе пашулу, ашшĕпе амăшне ытараймасăр колхоза кĕмест“—теме пуçларĕç Хаљ епĕр иккĕнех: хут кĕр, хут ан кĕр есĕ, анчах епĕ пайанах çырса паратăп.

Паљук. Не най? Тем тумала ĕнтĕ: те кĕрсен лайăхрах, те кĕмесен...

Прамун. Паљук, ĕмĕртенпе епĕр пĕрле ĕçсе-çисе ӳснĕ темеле, тавай-ха иксĕмĕр сăхман арки тавăрса ал çапар. А ку — „пирвăй заказ“ сана—урапа шăлĕсен директăрне. Çилтивĕр колхоз урописем сана кĕтсе шăлсăрланса пĕтрĕç... Хĕрлĕ обозпа кайма йурăхлă туса парайман-ши?

Паљук. Какшĕ? Мошнĕ! (Тытса çавăркаласа пăхат). Ăн-та-а... Виç шăлĕ çук, кăшăлне те улăштарас пулат. Айта-ха килкартине, виççе пăхар: майлăрах кăшăл тупăнмĕ-и?

Ахваниç. Атте, еп пайанах çырса паратăп!

Паҙук (тухса кайнă чух). Парса пăх еппин. (Прамунпа иккĕш тухса кайаççĕ).

Ахваниç (чылайччен ашшĕ килкартине кĕрессе кĕтсен, хаваслансе Улиттана аллинчен пырса тытат). Улитта! Гекех епĕ „индус" мар, еп Çилтимер колховникĕ! Кала ĕнтĕ, Улитта? Халĕ те есĕ мана йуратмастăн-и?

Улитта. Виççĕмĕш бригадăра ĕçлес тесен, активлă комсомолĕс пулас пулат — унсăрăн пире ăмăргура Ларивансем путараççĕ.

Ахваниç. Колхозник... комсомолĕс... Кам пур манран телейлĕ çын тĕнчере çак самантра? Çырăнатăп, Улитта, пайанах. Анчах есĕ... Есĕ, Улитта (ачашшăн), çы-рă-натăн-и?

Улитта. Еп хаҙ те комсомолкă вĕт, ман ăçта çырăнмала тата. (Иккĕш те пĕр-пĕрне куçран пăхаççĕ, вĕсем çине уйăх çути ӳкет).

Ахваниç. Улитта, татах ыйтатăп: çырăнар-и иксĕмĕр?

Улитта (куçран пăхса). Комсомолĕс... Колхозник... (Сасартăк Ахваниçе ыталаса). Ех, Ахваниç! Сисетĕн вĕт есĕ ыйтмасăрах: виçĕ çул епĕ сан йатна хамăн чĕрере сыхласа усрарăм, виçĕ çул сана комсомолĕс пуласса шанса пурăнтăм — пайанхи каç ман ĕмĕт çитрĕ: манăн Ахваниç—комсомолĕс! (Çавракa ала умĕнче калаçса тăраççĕ). Астăватăн-и, Ахваниç, Шĕнер-пуçĕнче вĕреннине... Епĕр ун чухне иксĕмĕр те улттăмĕш группăраччĕ... Санран епĕ: „çырăнар-и комсомола", — тесе ыйтрăм та, есĕ: „атте хушмаст", — терĕн. Ĕпĕ çырăнтăм, есĕ...

Ахваниç. Çавăн хыççăн есĕ манпа калаçми пултăн. Улитта, астăватăп: есĕ мана пĕрле ĕçлеме тилмĕреттĕн, пĕрле малала вĕренме чĕнеттĕн... Анчах епĕ итлемерĕм, килте ĕçлекен çук тесе вĕренме пăрахрăм... Колхоз ĕçне те хутшăнмарăм. Улитта, иртнишĕн каçар. Халĕ санган уйрăлас çук: пĕрле ĕçлесе, пĕрле малала утар!

Улитта. Уйрăлмастăн?

Ахваниç. Уйрăлмастăп, никам та уйрэс çук. Йуратататăп епĕ сана, Улитта. Йуратататăп çеç мар, мухтанатăп епĕ халĕ санăн йатупа.

Улитта. Мĕнле каларăн-ха есĕ паçăр. Пĕрле ĕçлесе, пĕрле утар терĕн-и?

Ахваниç. Пĕрне-пĕри йуратса, пĕрле ĕçлесе, пĕрле малала утар! (Улиттана патнерех пырсан алнинчен тытат) Улитта!

Улитта (куçран пăхса). Мĕн? (Ахваниç Улиттана ыталаса чуптăвасшăн, анчах леш ала йĕри-тавра выҙакаласа чупат; вара иккĕш те çавракa ала хӳттинче ыталанса чуптăваççĕ. Айакран салтак йурри илтĕнет).

3-мĕш курăнни.

Паҙук капан тăрне хума кăшăл йатса килет.

Паҙук (капан тăрнеле пăхса). Ахваниç... (Лешсем хăвăрт уйрăлаççĕ). Ахвани-иç, капанне тăрласа пĕтертĕн-и... Ăçта çак есĕ?

Ахваниç (çавракa алана вĕçертсе килат). Кунта, атте!.. Улитта, есĕ алине тыт-ха, епĕ çӳлтен вĕçертем.

Паҙук. Алине еп хам та пуçтараттăм, капанне тăрласа пĕтермелеччĕ: çил вĕрет, кĕлтесене вĕçтерсе кайĕ.

Ахваниç (алнне салтса ангароз). Ме, пуçтар еппин! Улитта, есĕ мана кăшăлне тыттар, еп çŷле улăхам. (Кăпан тăрне хыпаланса улăхат).

Улитта (салтак йуррине илтсе). Лешсем каллех ĕçсе ŷсĕрĕлнĕ... Илтетĕн-и, Ахваниç?

Ахваниç. Вăт шелмăсем! Ĕнер çеç сљотра Военкома — „ĕçместпĕр, йал тăрăх ĕлĕкхи салтак йуррипе çŷреместпĕр", — тесе сăмах патăмăр. (Сасăсем кăшкăрашса сывхараççĕ).

Улитта. Кунтала килмеççи çавсем?

Ахваниç. Леш çектант Александăрне хăвалаççĕ... Чарас пулат.

4-мĕш курăнни.

Çектнат Александăрĕ Паљук патнеле чупса пырат. Хыçалтан ŷсĕр Ларивансем хăвалаççĕ.

Çектант Александăрĕ. Кр ву-ул! . Паљук пичче, хĕнеççĕ!..

Лариван (ŷсĕрскер). Стой, долгогривый! (Çектант Александăрне ĕнсерен хуса çитсе тытат). Пљашши, лямзуркă! Усламăв, давай плясовую! (Усламăв ташă кĕвви калат, ыттисем ахăлтатса кулаççĕ)

Çектант Александăрĕ. Краву-ул!.. Пĕтереççĕ!

Паљук. Лариван, ма тиветĕр çав ачана?

Лариван. Молчи, старина!

Пушкин (ташлаттарат). А-ну, свегтуй, ташла йе пĕр литровкă илсе пар—унсăрăн пирĕн алăран хăгăлас çук: пурпĕрех сана Хĕрлĕ çара илмеççĕ, пире те пулсан веçолăйрах ăсат хут. Ех-ма!.. (Алă çупса ташша йарат, хăй хыççăн Çектант Александăрне сĕтĕрет).

Улитта (варне чупса пырса). Чарăнăр! Йал тăрăх çапкаланса çŷресе призывниксен йатне çĕртетĕр. Усламăв, сана—колхозăн счетоводне — ŷсĕрсемпе сĕтĕрĕнсе çŷрени килĕшмест.

Лариван (йурласа калат). Заступница усердная, мати бога небесного... (Çектант Александăрне Улиттапа йунашар тăратса хурат).

Ахваниç (сасартăк, пусма çинче тăнăскер, сиксе анса Ларивана çапса ŷкерет, çектант Александăрĕ Паљук хыçне кайса пытанат). Хулиганить на моем огороде не позволю!

Лариван. Ха-ха-ха! (Витлесе). Не позволю?!. Ха-ха-ха! (Сасартăк сасне улăштарса). Çектанг хутне кĕретĕр?.. Комсомолсен çекретарĕ çектантсене хŷтĕлесе усрат!.. Ребята, религия — опиум для народа: бей сектантов! (Ахваниçе пырса тытат, çектант хăвăрт кĕлет айне упаленсе кĕрсе кайат, ун хыççăн Пушкин кăшкăрашса чупат. Çав вăхăтрах хыçалтан Шахторăвпа ытти çамрăксем чупса кĕреççĕ).

5-мĕш курăнни.

Шахторăв (Ларивана сирпĕтсе йарат). Лариван! Аллуна ирĕк ан пар!

Усламăв. Лариван, есĕ ытларах ĕçнĕ, кайса çывăр, айта ăсатам.

Ахваниç. Мĕн призывниксем хушшинче ерех ĕçме вĕрентсе çŷрет вал, чарас пулат ăна.

II-мĕш бригадир. Давай çыхас ăна, çыхас ăна!

Лариван (веçеронсе тарса). Чавсу кĕске! Куркаланă-çке епĕр сирĕн пек çŷрмесене. Пушкин, айга, кайар—кунта пире ирĕк çук. Усламăв, натягивай сормовскую! (Пушкин Усламăва çавăтат, леш каймаст).

Усламăв. Кайса çыварсан аванрах пулат, çитет пайанлăха.

Пушкин. Айта!.. Уй!

Ларидан. Усламăв!

Усламăв. Ел çывăрма кайатăп, çитет.

Лариван. Пушкин, бери гармонь, крути сормовскую!

Пушкин (Усламăвран гармонне туртса илсе сěрлеттерे пуçлат те, иккěш ыталанса кăшкăрса йурласа кайаççě).

Шахторăв. Ачасем, хурал пуртне хупса лартас мар-и çавсеве, ирччен урăлаççě.

Усламăв. Кайччěр.. Мěн тăвас вěсемпе?

Шахторăв. Ес тата мěн вěсемпе сěтěрěнсе çӳретěн?.. Колхоз правленинче ěçлетěн ху! Асту кăларса пăрахăпăр ак иксěра та.

Усламăв Мана çилампа сěтěрсе тухрěç. Пушкин Чěрěшçырмаран Лариван патне парлашапа çěмěрттерсе килнě. Ман патна ӳсěрскерсем пырса кěчěç те — „Гармоңпа тухмасан, пуçна çапса çуратпăр,—теççě. Мěн тăвас тен—тухрăм. Еп нумай ěçмен.

Улитта. Çав хăрса пěтмен тымарсем чылайччен кансěрлеççě-ха пире.

Çектант Ал-дрě (кěлет айěнчен упаленсе тухса Улитта умне пырат). Спаçибă, тăвансем! Спаçибă, Улитта, турă ан пăрахтăрах сире... (Пурте ахăлтатса кулаççě).

Шахторăв. Ку светуйě ăçтан сиксе тухрě тата?

Улитта. Вăг тепěр „йухан-суранě" — „спаçибă, турă ан пăрахтăр", — тет. Ěлěкхи çěр çулхи старик пек!.. Мěнле намăс мар сана хăвăн тантăшусенчен: Хěрлě çара кайатăн — турра асăнатăн. тийечуксем пек çӳçна ӳстерсе йанă—ни хěрарăм, ни арçын.

Ахванис (кěпе аркинчен туртса). Мěн хывса пăрахмастăн ку асламу кěпине?

Шахторăв. Ку йěм кантрисěр пуçне сан вађђи пиçыххи çук-и? (Пиçыххинчен туртат, леш салтăннă май, çектантăн хěвěнчен пěчěк кивелнě икон, йăвăç кашăк, йăвăç чашăк тухса ӳкеççě).

Кушаков (икконне илсе). Ха-ха-ха! Туррине хырăмра усрат!.. (Пурте кулаççě).

Çектант Ал-рě (вăшт-ваштах икконне тытса илсе тарат). Кравуул!.. Çаратаççě!

Шахторăв (алликчи йăвăç чашăккине кашăкпа шаккаса). Александăр!.. Чашки-тиркине манса хăвартăн, ме,—тыт! Ха-ха-ха! (Пурте ахăлтатса кулаççě, леш хăрах аллипе кěпиве çěклесе чупат).

Чаршав.

ИККĚМĚШ ПАЙĚ.

Колхоз анкарти ыраш çапнă вăхăтра. Сцена çивче молотилкă, радиоустановкă. Колхозниксем кăнтăрлахи апат хыççăн канма выртнă, хăшě-пěрисем радио итлеççě.

1-мěш курăнни.

Пађукпа ывăлě — Ахванис—молотилкă йусаççě. Ларивапа Усламăв кěлтесем хушшинче „ěçкунěсене тӳраѓтсе" лараççě.

Лариван. Асту, Иван, „расхождени" ан пултăр: ěçленě çěраллă... паллă ту: çырас пулат çěрçирěм... ку Мěкěтен ěçкунěсем.

Усламӑв (сырат). Çырнӑ... Пӗр кӗнеки çинче çӗраллӑ, тепӗр кӗнеки çинче — çӗрçирӗм.

Ларивaн. Хамӑнне епӗ тӗрӗс çырсан та аптрамастӑп, çавах та ориентировочно 270-сем паллӑ туса хурас. Вaçлей кумсене ытларах хушса парас пулать, хамӑра мӗнчул тухассине те уйрӑм шутласа пырас. Важно, чтобы балланс сходился. Понял? Кашнинчен ытлашши тухнине кайран виçӗ пайа уйӑратпӑр; пӗр пайӗ хуçине — йулашки пире.

Усламӑв. Так, так.. А, леш Ехрим старик, пӗр 30—40 ӗçкунне сутма пултаратӑп, тет.

Ларивaн. Илес. Мӗн хакпа сутать?

Усламӑв. 10 тенкӗрен пӗр пус та катасшӑн мар.

Ларивaн. Апла пулсан, вӑтӑрӑшне вуннӑпа илес, вуннӑшне укçасӑр. Унӑн ӗçкунӗсен шучӗ 230 пулмала.—Çыр... икçӗрçирӗм... Сисмест. Колхоз мӗнне чухлас пулать... Колхоз — вӑл „коллективное хозяйство" тени пулать, çавӑнпа унта пӗччен ӗçлесе нимӗн те тӑвас çук, ушкӑнпа, пӗр шухӑшпа, пӗр „цель"-па ӗçлес пулать. Ӑнлантӑн-и?

Усламӑв. Ӑна епӗ санран та маларах ӑнланнӑ пулӑттӑм-ха, анчах.. Сана епӗ питех шанмастӑп.

Ларивaн. Пӗрне-пӗри шанмасан вара ӗç тухас çук.

Усламӑв. Санра, Ларивaн, шанчӑк пӗр пуштав ӗçеччен çеç.

Ларивaн. Ес... леш.. пӗр кунхине каласшӑн ӗнтӗ... Кунта та есӗ айаплӑ... Ма чарман ес мана? Мӗн шуйттан тума призывниксемпе çыхланса кайнӑ-ха епӗ?

Усламӑв. Иккӗн харӑс карланкӑран йарса илтӗр вӗт, гармонна та кӑшт çеç çурмаран татса пӑрахмарӑр.

Ларивaн. Еп мар ӑна. (Кулать). Пушкин, шуйттан... Икӗ литровкӑ чиксе пынӑ та, ӑçта тӳсетӗн унта ӗçмесӗр. (Кулать). Йыснӑшӗ патӗнчен цилӑй шӑртан йатса тухнӑ. Чӑрӑш-çырма хӗрӗсен алшӑлли йулмарӗ пулӗ... кашнинчен салтака кайатӑп тесе пӗрер алшӑлли вӗçертсе тухнӑ! Ха-ха-ха! (Иккӗш те кулаççӗ. Çав вӑхӑтра радио çак сӑмахсене кала пуçлать)

Иглӗр!. Иглӗр!.. Шупашкар калаçать. Халӗ комуниссен парти Чӑваш Обкомӗн представителӗ доклад туса парать. Тӑнлӑр!.. Докладчик микрофон умӗнче. (Малала докладчикӑн сӑмахӗсем илтӗнеççӗ).

Радиодоклад. „Пайанхи докладра епӗ йалти клас кӗрешӗвӗ çинче чарӑнса тӑрас тетӗп. Єгалин йулташ Тӗп Комитетпа Тӗп Контроль Комиççин йанварти пӗрлешӳлӗ пленумӗнче йалта ӗçлесси çинчен каласа çакна астутарнӑ: „Хальхи йалти кулаксемпе подкулачниксем, хальхи совета хирӗçле елементсем вӗсем нумайӗшӗ — „йӑваш" „пылпа çу" çынсем, „светойсем" пекех. Вӗсене колхозран инçех шырамала мар, вӗсем колхозсенчех лараççӗ, (Ларивaнпа Усламӑв тинкерсе итлеççӗ), унта кладовшчиксем, завхозсем, счетоводсем, çекретарсем тата ыттисем те пулса ӗçлеççӗ. Вӗсем нихӑçан та — „колхоз кирлӗ мар" — тесе калас çук. Вӗсем колхоз „майлӑ". (Радио малала айаларах кӑтартнӑ сӑмахсене калать).

Усламӑв (сиксе тарса). Вӑт тупса кӑларнӑ тата тепӗр кирлӗ мар йапала.

Ларивaн. Чар çавна кайса.

Усламăв. Улитта — шуйттана сĕтĕрсе килчĕ уйа. (Çарма васкаса кайат).

Радиодоклад. Анчах вĕсем колхозсенче пысăк саботажсем, сăтăрлă ĕçсем тăваççĕ, вĕсенчен вара колхозсене ырри пулмĕ. Вĕсем нихăçан та — „тырпул хатĕрлев кирлĕ мар“ — тесе калас çук. Вĕсем тырпул хатĕрлевĕ „майлă“. (Çав сăмахсем хыççăн Усламăв радиона чарат).

2-мĕш курăнни.

Улитта тăпачипе выçакалзса васкаса иртсе кайат. Ларивак ăна курса хăвăрт сиксе тăрат те, хыçалтан чупат. Васканă май пĕр хутне кĕлтесем çине ўкерсе хăварат, тепĕрне кĕсйине чикет.

Ларивак. Улитта! (Леш чарăнмаст; вара Ларивак хуса çитсе тăпачинчен тытса чарат). Чим, ик сăмахлăха çеç!

Улитта. Васкатăп. Ав почтă селсовета килет. Ĕçлеме пуçлаччен кайса илес.

Ларивак. Ĕлкĕретĕн, ан васка! (Алăкинчен тытса). Улитта, мĕншĕн есĕ йулашки вăхăтра манран пăрăнса çўре пуçларăн, ниçта курса калаçмала мар.

Улитта. Тепĕр чухне калаçăпăр, хаљ мар. (Çăлăнса кайасшăн; çав вăхăтра Праски вăрттăн сыхлат).

Ларивак. Улитта, каçар тархасшăн... Ўсĕрпе еп пĕр кун ухмахланнă

Улитта (вырăсла калат). „Что у трезвого на уме, то у пьяного на языке“ — теççĕ вырăссем. (Çăлăнасшăн).

Ларивак. Çук, тĕрĕс мар, ман санпа калаçмали нумай пуçтарăннă... Пайан каçалапа правленине пыр, Улитта, унта калаçăпăр.

Улитта. Каç пулсан курăнат. Ну, ан чарса тăр!

Ларивак. Кала, пыратăн-и?

Улитта. Ав çынсем кунталла пăхаççĕ... Тем калĕç.

Ларивак. Калĕçин! Çын халаппи маншăн нимĕн те мар. Маншăн Улиттан пурçăн кăтрийĕ çын сăмахĕнчен хаклăрах! Улитта, пайан каçалапа кĕтетĕп... Илтрĕн-и?

Улитта. Ха-ха ха! Йурĕ, кĕт! (Хытăч кулса тухса кайат).

3-мĕш курăнни.

Ларивак пирус чĕртет. Праски хăвăрт йунашар пырса тăрат.

Праски. Çапла еппин?.. Пайан каçалапа кĕтетĕн? Ха-ха ха!.. Улиттан пурçăн кăтрийĕ çын сăмахĕнчен хаклăрах! (Йĕре-йĕре калат). Йăлăхтарчĕ Праски... Праскин ăшши пĕтнĕ. Комсомолкăн сĕткенĕ вĕрирех ĕнтĕ, вĕсем хуласенче çўресе чуптума вĕреннĕ...

Ларивак. Ан кăшкăр, çынсем итлеççĕ!.. Мĕн кирлĕ мара лапăртататăн. (Пирусне çырта-çырта сурат).

Праски. Илтĕçин тата! Ес Улиттана „çын халаппи саншăн нимĕн те мар“ — терĕн çке... Маншăн ан хута кĕр... Ман йатăм çĕрнĕ ĕнтĕ, епĕ пурпĕрех пĕтнĕ çын... (Хыттăн йĕре пуçлат). Киле кўртетĕп тесе йăпатрăн, хама çеç мар, аттисене шантартăн... Халĕ хусах маткапа мĕн тăван ес, çамрăкки серепене лекнĕ!.. Пĕтрĕм ĕнтĕ, пĕтрĕм... йал-йыш умĕнче намăса кĕтĕм. Атти куна пĕлсен ыранах мана килĕнчен хăваласа йарат. (Тата хыттăнтарах йĕрет).

Л а р и в а н (нимтуманптăрасайăпатсакалат). Ну чарăн, чарăн, Праски... Йепле ес çавна та ăнланмастăн? . Санран урăх епĕ никама та йуратмастăп, авăн пĕтерсенех иксĕмĕр çырăнатпăр.

П р а с к и. Мĕншĕн апла пулсан Улитгана каçалапа пыма чĕнтĕн, ăна аллинчен тытса тăтăн?

Л а р и в а н (кулат). Ха-ха-ха! . Ĕнтĕ, ман Праски пур тесе, ытти-сене аллинчен те тытма йурамаст-и? Апла пулсан тĕнчере пурăнма та кирлĕ мар. (Малтан кулат, вара „çерйовнă“ калат). Игле, Праски: Улитга колхоза йăнăш çулпа илсе пырат, вăл сирĕн аçусене колхозран кăларса кулак шутне кĕртесшĕн.

П р а с к и. Пирĕн аттисене? Ĕмĕр тарçăра пурăнса иртернĕ атте çумне мĕнле сăлтавпа çыпăçтăр вăл? Ес куна йури, мана ухмах вырăнне шутласа, калатăн. Кала пĕрех хутчен тӳрех: „Йăлăх-тартăн ес мана, Праски, йуратмастăп еп сана, йуратман та нихăçан та“, — те...

Л а р и в а н. Еп сан аçушăн хуга кĕресшĕн, ес темскерле кирлĕ марла калаçатăн... Прамун пиччене пирĕн асаттеле пĕрле сутуилӳ тунă теççĕ. çав укçапа лаша илнĕ, теççĕ.

П р а с к и. Ха-ха-ха! пирĕн атте хăмла сутти тунă теместĕн-и? Лашине усрама витине тăвайман, шăтăк картарах тытса усранă. Мĕн кирлĕ мара калатăн ес, Лариван... Лашине туйанни те виçĕ çул çех вĕт. Лаша мар — тыха илсе ӳстернĕ... Сирĕн аслаçу вилни те 7—8 çул ытла ĕнтĕ.

Л а р и в а н. Йури чухăна персе пурăннă теççĕ, укçине çĕр айне чиксе усранă, теççĕ.

П р а с к и (кулса). Кам курнă ши ăна?

Л а р и в а н. Кустăрма Пађукĕ курнă, теççĕ. Прамун пиччене систерес пулат: Пађук хутне ан кĕтĕр вăл. Мана калама аван мар, мана ĕненмĕ те вăл: сан калас пулат... Епĕ леш „шуйттан комсомолкин“ пуçне кăшт сĕрĕм тивретем, пĕр каç унпа ирттерипех Лариван пĕтес çук... Праскирен урăх епĕ пурпĕрех никама та йуратас çук... Сан пек илемлĕ, çипуçлă, тăп-тăп ӳт-пулĕ хĕр йалĕпе тупас çук.

П р а с к и (йăвашланса). Еп хĕр мар-çке ха çав

Л а р и в а н (ыталаса). Каларĕ! Сан пек тĕрекли, ĕçре писçни йалĕпе те пĕр хĕрарăм çук. Йепле сан пилĕк, хулпуççи, кăкăр тавраш, йе тата пит-куç — писçе çитнĕ чей çырли пек.

П р а с к и. Кайăк сăхнă çырла пек пулĕ çав?

Л а р и в а н. Кайăк сăхни мар — Лариван çырли есĕ. Çырлана çиме ӳстереççĕ — ес ман вађђи ӳссе писçнĕ чей çырли, савнă Праски... Ех, Праски, йурататăп та-çке епĕ сана.. манран ытла сана никам савас çук. (Вăрттăнтарах çĕре туртса илсе вĕрин ыталат).

П р а с к и. Апла еппин... есĕ леш... Улиттана йуратмастăн-и?

Л а р и в а н. Йепле ес хуна çав-тери начарах шутлатăн... Улитта сан çăпата кантри тӳллев хакне тăмаст вĕт! Сан вырăнта пулсан епĕ, хама çавăн пек комсомолкăпа танлаштарса намăса та кĕместĕп.

П р а с к и. Еппин ес мана пăрахмастăн, ĕлĕкхи пекех саватăн, Лариван?

Л а р и в а н (тапер хут çывăхчен сыхланса ыталаса чуптăват). Ех, кам пур ман Праски пекки!.. Йурататăп еп сана! (Ыталаннă вăхăтра Ахванисре ашшĕ молотилкăна йусаса пĕтереççĕ, кусем сасăсене илтсен, васкаса уйăрлаççĕ).

Кустăрма Паљукĕ. Ахванис, ăçта кайрĕ пирĕн бригадир. Çынсене тăратас, машинăна хута ярса пăхар. (Ахванис хăвăрт молотилка тăрне хăпарса халăта каннă çĕртен тăратат).

Ахванис. Виççĕмĕш бригадă! Тапранăр. Машинă хатĕр! (Çынсем молотилкă тавра пуçтарăнаççĕ).

Прамун. Ай-та уксак Паљук, ай-та уксак! Каларăм вĕт — Паљук пире колхозра пит кирлĕ çын терĕм: вăл урапа çеç мар, молотилкăна та йусама пĕлет.

Паљук. Унта йусамали те нумайах пулман: алисем вырăнтан сиксе пĕтнĕ те, барабанне ытла айала антарса лартнă... Тыр пĕрчи ванат теççĕ, молотилкă кирлĕ мар теççĕ — машинне тытма пĕлмеççĕ те, мологилкăна айăпласçĕ.. А вор пĕр шăлтăрмине такам йурийех кăларса илнĕ пулмала. Нийеплен тухса ÿкмеле мар çĕртен хăпăтса илнĕ. Йурат, Улитта Канашран тупса килсе пачĕ.

Ахванис. Тавайăр кĕлте, пробăвăт туса пăхар. (Хăшĕ-пĕрисем кĕлте йăтса пыраççĕ, хăшĕ çыххине çурлапа касса Ахванисе параççĕ. Паљук вĕрентсе тăрат. Машин йерипен ĕçлеме тапранат).

Лариван. (Паљук патне пырса). Маттур, старик! Йусарăн еппин?

Паљук. Йусамасан йурамаст... Халăх укçипе илнĕ машин вĕт, пĕр пуслăх йапала мар — пин тенкĕлĕх машин... усăсăр лартас мар.

Лариван. Çапла, çапла, Паљук пичче. (Айккинеле пирус турткаласа утса кайат). Шуйттан старикки, каллех йусарĕ.

Ахванис. Ей, Лариван, мĕн тапак туртса çÿрен: вут тивме пулгарат.

Лариван. Иш, йепле начаљник тупăннă?.. Еп хам бригадир, сансăр пуçнех лайăх пĕлетĕп.

Ахванис. Пĕлместĕн çав. çавăнпа туртатăн.

Лариван Ан вĕрентсе тăр, упăте! (Тухса кайат).

4-мĕш курăнни.

Савăнăç ă кашкăраша колхозниксем молотилкăна ĕçе йараççĕ Ĕçлеме пуçтарăвна вачăтра 3 мĕшпе 2-мĕш бригадăри çамрăксем „Ударниксен маршне" пĕр куплетне йурласа иваççĕ. Улитта хаçат-журналсемпе хыпаланса килет. Сасартăк молотилкăна еçленине курса савăнса тăрат.

Улитта. Тÿрлетнĕ. Ех, савăнăçлă ĕç те! 65 урапа çапрăмăр пайан машинăсăр! Йе машинă ванман пулсан, 120 çитереттĕмĕрех. (Çамрăксем „Ударниксен маршне" малала йурлаççе).

Сулмасерен катмакăм —
Ударлă ĕç!
Тăшман вăйне ватат вăл —
Ударлă ĕç!
Кивви çĕрет, кивви ÿкет...
Çĕнни çĕнет, куллен ÿсет!

Никам çĕнми тĕнчешĕн
Халь вĕрет çак ĕç,
Илемле пурнăçшăн çак ĕç.
Пур вайпа, пур вайпа
Илйич програмне туптарар!
Атăр! Атăр! Атăр!

Улитта (сасартăк кĕлтесем çинче Ларивансăн ĕçкунĕсем хутне курса). Ку мĕнле хут тата? (Вулат). „Ĕçкунĕсем"... Е-е... куна Лариван манса хăварнă.

5-мĕш курăнни.

Пĕрремĕш бригадăра ĕçлекен Прамун старик кĕрет.

Улитта. Маттур, Паљук пичче, машина йусанă. (Ун хыççăн Прамуна). Ну, мĕнле-ха, Прамун пичче? Аван вĕт колхозра ĕçлеме?

Ес кӗресшӗн марччӗ. Ӗҫкунӗсем сан чылай пуҫтаранчӗҫ пулӗ?

Прамун. Кам пӗлет ӑна? Лариванран миҫе хут ыйтрӑм ӗнтӗ ҫавна, нихӑҫан та йӗркипе каласа памаст. Халӗ анчах ыйтрӑм, ыран шутласа паратӑп терӗ. Ыран та ыран теҫҫӗ, ыран та ыран — тек ӗҫлеместӗп. Ларатӑп та ҫакӑнта, чӗлӗме паккаса ирттеретӗп вӑхӑта... Пурпӗрех ытлашши ӗҫлесе спаҫибӑ илтес ҫук.

Улитта. Йепле апла? Сан ӗҫ кӗнеки пур пулӗ.

Прамун. Кӗнеки пур та, унга мана нимӗн те ҫырса паман... Йе вӑхӑт ҫук теҫҫӗ, йе шутламан-ха теҫҫӗ. Ним йӗрки те ҫук ку колхозра. Авӑнне ҫапса пӗтерсен тек колхозра ӗҫлесе пулмаст: хам килте, хам ирӗккӗн ӗҫленинчен ырри пулас ҫук. Ху ӗҫлетӗн — хӑвах ҫийетӗн; кунта такам валӗҫи ӗҫлетӗн, такам ҫийет — спаҫибӑ та калакан ҫук. Мӗн хай каласси пур вара сирӗн ҫамрӑксен саккунӗпе пурӑнсан — выҫӑ вилнинчен ырӑ курас ҫук пулӗ, хӗрӗм.

Улитта. Прамун пичче, ес пиг апла ан пӑшӑрхан-ха: ҫӗнӗ ӗҫ кирек-хӑҫан та малтан йӑвӑр пек туйӑнат. Ӗмӗртенпе пӗччен-пӗччен ӗҫлесе пурӑннӑ та епӗр, ушкӑнпа ӗҫленин уссипе ҫӑмӑллӑхне тӑруках тавҫарса илейместпӗр. Унтах тата пирӗн хушӑра чӑрман-таракансем те нумай. Сан ӗҫленӗ кунсем сайа кайас ҫук, вӗсене кунта пӗтӗмпех ҫырса пынӑ пулас пулат. (Прамун йатне шыраса тупса калат). Акӑ сан йат... Ес мӗн пурӗ... 75 кун ӗҫленӗ.

Прамун. Ҫитмӗл пиллӗк?!. Унта пӗр выӗӑх пӑхни ман шутпа аллӑ кунсем пулмала, ес мӗн пурӗ ҫитмӗл пиллӗк тетӗн.

Улитта. Епӗ пӗлместӗп, кунта ҫапла ҫырнӑ.

Прамун. Ҫапла ҫав есӗр: пӑртак ҫырма вӗреннӗ те, пире ухмахсене чике тӑршши лартатӑр. Пайанах колхозран тухатӑп, тавайӑр манӑн лашана кайала. Карчӑка иглемерӗм вӑхӑтӗнче, каларӗ — „ухмаха ан йер“, — терӗ. „Колхоза кӗрсен хутаҫ ҫакса ҫӳрӗпӗр ак“, — терӗ.

Шахторӑв (хыттӑн кӑшкӑрса). Чарӑнӑр! Ремен вӗҫерӗннӗ!

Палӗук. Ек-кой-ха! Пушӑрах пулнӑ пулас.

Ахванис (молотилкӑ ҫинчен сиксе анат). Йусас часрах! (Ашшепе иккӗшӗ, Римӑ, Шахторӑв т. ыт йусама тытӑнаҫҫӗ).

6-мӗш курӑнни.

Улиттапа Прамуна колхозниксем хупӑрлаҫҫӗ.

Ҫитӑр кум. Мӗн ҫитмен тата Прамунпа Улиттана? Мӗн пулнӑ?

Прамун. Мӗн ҫитмен. Манӑн ӗҫкунӗсене Лариван хут ҫине ӳкермен. Пуринчен ытла ӗҫлетӗн — ӗҫкунӗ пуринчен сахал. Хӑйӗн мӗнчул-ши унӑн?

Улитта (шыраса тупса). Хӑйӗн... 270 кун.

Прамун. Ӑҫтан ун чухлӗ пултӑр унӑн? Хӑйӗн унӑн 75 пулӗ, манӑн мар!

Сухал Ваҫлейӗ (Ҫитӑр кумӗпе пӑшӑлтатса илет те, йӑвашшӑн калат). Тӑвансем, мӗн ахалтенех шавлатӑр есӗр: вӑйӑран вӑкӑр тухасси те инҫе мар вӑл. (Улиттаран хутне илсе пӑхкалат). Кам пирӗн бригадир: Улитта-и йе Лариван?

Улитта. Кирек-кам пултăр та, ĕçкунĕсен шучĕ тĕрĕс пулмала. Сирĕн бригадир хăйне 270 кун лартнă, ыттисене чакарса пынă. Ун пек хăтланакансене революцилĕ саккун умне тăратмала: вăл хăйĕн ĕçĕпе пирĕн колхоза пĕтересшĕн.

Сасăсем. Тĕрĕс! Ларивана хăйне чĕнес!

Сухал Ваçлейĕ (Çитăр кумне). Кайса систер: леш „камсамурĕ" пĕтерме шут тытнă... Лариванĕ те çав: мĕнле манса хăварнă-ха çав хутне. (Çитăр кум кайма хатĕрленнĕ вăхăтра, Лариван васкаса пырса кĕрет).

7-мĕш курăнни.

Сасăсем хытă шавлаççĕ. Ларивач Улитта çине сиввĕн чарăнса пăхса илет те, тÿрех Ваçлей патне пырат. Леш темскер шăппăн калама ĕлкĕрет.

Ларивач. Мĕн çĕмĕрлетĕр есĕр кунта? Мĕн çитмен сана, Прамун пичче?

Прамун. Мĕн çитмен! Еçкунĕ çитмест: епĕ мĕн пур 150 кунсем ĕçленĕ пулас кирлĕ, мана пирĕн бригадирсем пурте пĕлсе тăраççĕ, есĕ манăнне 75 ĕçкунĕ çеç шутланă... Пайанах колхозран тухатăп, тавайăр манăн лашана!

Ларивач. Колхозĕнчен тухасси вăл санăн ирĕк: сана ирĕксĕр колхозра никам та тытса тăмаст... Анчах санăн 75 кун çеç шутланнине ăçтан пĕлетен ес?

Прамун. Ав сан ĕçкунĕсен шучĕ — Ваçлейре. Каласса — мана Улитта каласа пачĕ.

Улитта. Чейе пулас тенĕ те, хутне тĕплĕрех пуçтарайман — кĕлтесем çинех пăрахса хăварнă. Ха-ха-х !

Ларивач. Куласса есĕ кулатăн та, анчах хăвăнтан мар-ши? Ĕçлесчĕ хăвăн бригадура, ĕçкунĕсене тĕрĕсрех çырасчĕ, çынăнне пăлхатса çÿреччен. Ăçтан тупнă есĕр манăн ĕçкунĕсен хутне?

Сухал Ваçлейĕ. Кунта вăл, Ларивач, акă. (Хутне парат).

Ларивач (çурса ваклат). Акă вăл сирĕн ĕçкунĕсен шучĕ. Мĕнчул шутланат-ха, Прамун пичче, сан ĕçкунĕ?

Прамун. Пĕр 140 — 150-сем пулас пулат.

Ларивач (кĕсйинчен пĕчĕк кĕнеке кăларса) .. 140 — 150 мар, сан 177 кун шутланат, Прамун пичче... Сана çав комсомолкă аташтарнă пулмала.

Прамун. Е-е-е... Апла пулсан йурат. Каçар, Ларивач ачам, каçар: ахалех пăтраш тартăм йал-йыша.

Улитта. Чим!.. Мĕнле есĕ апла икĕ çĕрте икĕ тĕрлĕ çыратăн? Хăвăн сан миçе кун шутланат? Ес хуна 270 кун çырнă, есĕ ун чухлĕ ĕçлемен.

Ларивач. Ха-ха-ха! Йăнăшатăн, Улитта. Виççĕмĕш бригадирăн çÿçĕ кĕске пулсан та, ăсĕ хĕрарăмăн. Ларивачăн ĕçкунĕ (кĕнекине уçса пăхат) мĕн пурĕ те 63 кун çеç шутланат. Счетовод, санăн сводкă çумра çук-и, пăх-ха?

Услямăв (кĕнекине уçса пăхса). Прамунăн... 177, Ларивачăн — 63.

Ларивач. Ну мĕн калăн „виççĕмĕш номĕр"? Ха-ха ха (Улитта ним калама аптăраса Ахваниçпе Римă патне утат).

Паљук. Прамун, ытла есĕ пĕчĕк ача пек йунтаратăн. Ларивач хамăр çын, ултилама кирлĕ мар.

Лариван. Йулташсем! Камит курма пуҫтаранман вёт кунта: марш ёҫ патне! Пёрремёш бригада, пӑрҫа ҫапма!

Улитта. Ну, чим, Лариван, хӑҫан та пулсан лекён-ха! Пурпёрех йёркине шыраса тупатпӑр.

Римӑ. Усламӑвпа пёрле ёҫлемеҫҫё ши вёсем: йалан пёрле ҫӳреҫҫё.

Улитта. Ес, Римӑ, каҫалапа сводкӑна пӑхса тух-ха, суймарё-и вӑл паҫӑр, Усламӑв.

Римӑ. Пит тӑрӑшса ёҫлет колхозра, ниҫтан айӑп тупмала мар, пётём колхозниксем уншӑн хута кёреҫҫё.

Усламӑв (Лариван патне хыпаланса пырат). Лариван, ес леш хутне ҫурса пӑрахрӑн та, пуҫтаракансем тупӑнма пултараҫҫё. Унпала ырри пулас ҫук.

Лариван. Ех, ӑншӑрт... Чим!.. Праскине хушас. (Иккёш те хыпаланса тухса кайаҫҫё).

Ахваниҫ (Ларивапа Усламӑв ҫине кӑтартса). Ав, мёнле вёсем, иккёш те жуликла куҫлӑ, — пӑхсанах паллӑ. Усламӑвӑн происхожденийё тасах мар, ҫавӑнпа вӑл хӑйне чейерех тытат.

Улитта. Партийачейка ҫук йалта, йӑвӑр ёҫлеме. Икё хут пухӑнса та колхоза тасатаймарӑмӑр, иккёшёнче те район ҫтӑвком представителё ёҫе пӑсрё.

Римӑ. Сахаллӑн епёр, Улитта. Ахваниҫе райком ҫирёплетсен, пирён вӑй хутшӑнат ак. Вара епёр кӑгартӑпӑр.

Улитта (Ахваниҫе). Есё те ку таранччен таҫта пирёнтен пӑрӑнса ҫӳрерён те вара, ыттисем ҫинчен мён каласси пур. Мёне йурӑхла-ха ёнтё ҫав призывниксем йал тӑрӑх ёҫсе ҫапкаланса ҫӳрени? Иалсовет председателё — чарас вырӑнне — хӑй пёрле ёҫет. (Праски ҫав вӑхӑтра ҫурса пӑрахнӑ хут таткисене пуҫтарма пырат).

8-мёш курӑнии.

Ахваниҫ. Политикӑлӑ воҫпитани ҫителёксёр йалта, райкомпа тачӑрах ҫыхӑнмала. (Гемене ашшёпе иккёш терёслесе тухаҫҫё)...

Римӑ (Праскине курса). Улитта, пӑх Праски мён тӑват.

Улитта. Чим, куна Лариван хушнӑ... Значит, ҫурса пӑрахнӑ хут Ларивана кирлёскер: тытса илес пулат. Римӑ, айда! (Римӑпа иккёш Праски патне пыраҫҫё, леш хыпаланса пуҫтарат).

Палук. Ну, халӑх, машина йусанӑ — ёҫлес, вӑхӑта иртерес мар.

Ахваниҫ (молотилкӑ ҫине хӑпарса тӑрса). Виҫҫёмёш бригада, вырӑна!

Шахторав Иккёмёш бригада, улӑм ури патне хӑвӑртрах! (Ёҫлеме тапратаҫҫё; иккёмёш бригадир ҫапнӑ улӑма сенёкпе ывӑтат, Ахваниҫ келтесене молотилкӑ ӑшне йарат).

Улитта (Праскине). Кам хушрё сана ку хут таткисене пуҫтарма?

Праски. Атине тапак туртма йурё тесе пуҫтарас терём, килте пёр хут татки те ҫук та...

Улитта. Тапак туртма хам паратӑп, каҫалапа пырса ил. Куна, пуҫтарнине пире пар-ха.

Римӑ. Тапак аврамалӑх ҫук вёт ку хут таткисем?

Праски (тата хăвăртрах йулашкине арăк çине пуçтарат). Пуçтарнă йапалана парса пулмаст-ха...

Улитта (тытса илесшĕн). Давай, давай. Сана куна пуçтарма Лариван хушнă пулмала. Римă, пулăш! (Улитта тытса илсе, йĕкĕр ывăçепе чăмăртаса Ахванис патнеле чупат).

Праски. Ай-ай!.. Лариван! (Вăл кăшкăрнă çĕре Лариван чупса кĕрет).

9-мĕш курăнни.

Лариван Римана сирпĕтсе йарат те, Улиттаран хут таткисене хăрах аллипе пуçтарса илет. Римă хăвăрт Ахванисе кайса систерет. Улитта Ларивансан хăпмаст, леш молотилкă патнеле чакат Ахванис молотилка çинчен тӳррех Лариван çине сиксе утланат. Улиттапа Римă Ларивансăн пуш аллине тытаççĕ, Ахванис урисемпе йавăнса. тепĕр аллянчен хут таткисене хăвăрт пĕтĕрсе илсе сиксе анат. Пахса таракансем ахăлтатса кулаççĕ.

Улитта. Малала кам çĕнтерĕ,— курăпăр!

Чаршав

ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ.

Призывниксене комиççи тăвакан пӳлĕм. Пысăк хĕрлĕ сукнапа витнĕ сĕтел. Сĕтел умĕнче икĕ тухтăр валҗи пĕчĕк шур сĕтел Çтена çинче урлă каçа Сталин сăмахĕсем: „Ни одной пяди чужой земли не хотим, но и своей, ни одного вершка своей земли не отдадим никому". Унсăр пуçне тĕрле лозунгсем, портретсем.

1-мĕш курăнни.

Сцена çинче çамрăк тухтăрпа ватă тухтăр. Хыçалта оркестр марш калани илтĕнет. Вăл вăхăтра ватă тухтăре халат тăхăнат, çамрăкки кантăкран урамала пахса тăрат.

Çамрăк тухтăрĕ Евгений Степанович! Килсе пăхăр-ха кунта, мĕнчухлĕ халăх пухăннă: хĕрлĕ флагсем йалкăшаççĕ, оркестр выљат. Уй хапхинчен призывниксем йуланутпа тĕрлеттерсе йала кĕреççĕ... Ав пирĕн комиссар хирĕç тухса илет... (Хыçалтан „Смирнă!" тени илтĕнет). Кавалери икĕ рет пулса тăчĕ... Ой, Евгений Степанович, пăх-ха, малти лаша çинчи призывник мĕн пысăкĕш рапарт тытнă.

Ватă тухтăрĕ. Вот вĕт самана йепле улшăнса пырат: револуцичченхи призыв аса килчĕ, Çергей Петрович Пуçтарăначчĕ пин çын ытла, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем аран ура çинче тăратчĕç — ӳсĕр. Хĕрарăмсем чуна касакан сасăпа ӳлетчĕç Епĕр ир пуçласа шăп тĕттĕм пулачченех комиççире ĕçлеттĕмĕр. Халь 50 — 60 çынтан мала пăхмастпăр, организованнă, урă, хĕрлĕ флагсемпе килеççĕ. Вĕсене музăкпа хисеплесе кĕтсе илеççĕ... Халь шухăшласан, ĕлĕкхи йалт тĕлĕкри пек туйăнат.

Ç. тухтăр. Социалисăмла револуци, Евгений Степанович. Пролетариатăн диктатурĕ! Хальхи самана никĕсне çавăнта шырамала. (Музăк „Интернационал" выљат).

В. тухтăрĕ. Вессисене тĕрĕслемен и еçĕр, Сергей Петрович?

Ç. тухтăр. Тĕрĕсленĕ.. Комиссар каласа пĕтерчĕ пулас. (Сĕтел çинчи инструментарине тĕрĕслет).

2-мĕш курăнии.

Военком, унпа перле призыв комиççин членĕсем кĕреççĕ.

Çар комиссарĕ. Маттур ачасем. (Вырнаçса ларат). Призыв комиççин заçеданине уçăлнă шутлатăп. (Тухтăрсене). Весси, тата ытти приборсем тĕрĕс-и?

Ç. тухтăр. Тĕрĕс.

Комиссар. Çилгимер йалсовечĕн предçедатĕлĕпе икĕ призывнике чĕнес (Пĕр членĕ кайса чĕнет).

3-мĕш курăнии.

Çилтимер йалсовечĕн представитĕлĕпе вăлах Çилтимер колхозăн предçедатĕлĕ, икĕ çарамасланнă призывник кĕреççĕ.

Комиссар. Эс Çилтимер çелсовечĕн предçедатĕлĕ пулатăн-и, йулташ?

Колхоз предçедатĕлĕ. Никак нет-с, комиссар йулташ. Предçедатĕл хăй килме пултараймарĕ: колхозниксен сљотне Шупашкара кайнă; çекретарĕ чирленĕ, епĕ çелсовет членĕ пулатăп. Хам епĕ Çилгимер колхозĕн предçедатĕлĕ пулса тăратăп.

Комиссар. „Так точно, никак нет"—ун пек сăмахсене манмала ĕнтĕ, авалхи сăмахсем вĕсем... Лар! Миçе призывник сирĕн йалсоветра?

К. предçедатĕлĕ. 7, комиссар йулташ.

Комиссар. Сассăррисем çук и?

К предçед. Пур пĕрре... Çектант йевĕрлĕскер...

Комиссар. Призыв кампанине мĕнле иртертĕр?

К. предçед. Аван иртерне темеле: призывниксем рапăртпа килчĕç, тата хĕрлĕ пакетпа.

Комиссар. Камра рапăрт?

Ахваниç. Манра.

Комиссар. Призывниксем рапăртланине ӳкерсессен аванччĕ, йулташсем... Фотограф читаљнĕреччĕ.

Ç. тухтăр Чĕнес. (Чĕнме кайит. Ахваниç вăл вахăтра рапăрт вулат).

Ахваниç (вулат). Епĕр, Çилтимер йалсоветĕнчи 1911 çулта çуралнă призывниксем, кăçалхи призыва çак çитĕнӳсемпе килтĕмĕр:

1. Йалхуçалăх налогне 100% тултарнă.
2. Аш-какай планне—95%.
3. Çул йĕр тăвассипе йусассине—230%.
4. Осоавиахим ретĕнче тăма тивĕçлисем—100% çырăннă.
5. Пурте вулама-çырма пĕлеççĕ.
6 „1911 çулта çуралнă призывниксен йачĕпе тăвакан „Йероплан" ваљљи 220 тенкĕ укçа пуçтарнă.
7. Çилтимер çелсовечĕн укçа-тенкĕ пуçтарассин 3-мĕш квартăлĕн планне 105% тултарса, хĕрлĕ пакетпа 7275 тенкĕ илсе килтĕмĕр. (Хĕрлĕ пакечĕпе рапăртне комиссара тыттарат).

4-мĕш курăнии.

Фотографпа çамрăк тухтăр кĕреççĕ. Ахваниç рапăртланине фотограф магниĭ вспышкипе сутатса ӳкерет те, тухса кайат.

Комиссар (призывной картăчкă çине пăхса). Павлăв Афанасий, есĕ пулатăн-и?

Ахваниҫ. Епĕ.

Комиссар. Килте сансăр пуҫне кам-кам пур?

Ахваниҫ. Атте пур.

Комиссар. Тата кам пур?

Ахваниҫ. Урăх никам та ҫук.

Комиссар. Аҫу миҫере?

Ахваниҫ. Утмăл иккĕре. Епĕ љготник, мана љготă кирлĕ мар: епĕ Хĕрлĕ ҫара кайас тетĕп.

Комиссар. Маттур призывник, сан пеккисем Хĕрлĕ ҫара кирлĕ. Комсомолĕс-и ес?

Ахваниҫ. Комсомолĕс, анчах билечĕ ҫумра ҫук. Райком ҫирĕплетнĕ терĕҫ, кайса илме ĕлкĕреймерĕм.

Комиссар. Так, так... Кайса ил пайанах. Колхозник-и?

Ахваниҫ. Колхозник.

Комиссар. Хĕрлĕ ҫара кайасах килет пулсан — „хам ирĕккĕн Хĕрлĕ ҫара кайас тетеп, љготă кирлĕ мар мана“ тесе ҫырса пар. (Ахваниҫ ҫырат). Комсомолĕс.. активист... колхозник—илес пулат... Ултă ҫул вĕреннĕ. Май килсен артиллерине илес... Сергей Петрович, Евгений Степанович, пăхăр. (Тухтăрсем виҫеççĕ, вара пăхаççĕ: малтан ҫиҫелтен ҫавăркаласа пăхаççĕ, вара куҫне таблица тăрăх буквăсем кăтартаççĕ, хăлхине, вара пĕрерĕн-пĕрерĕн ăшчиккине итлесе пăхаççĕ: вăл вахăтра Ҫар комиссарĕ тепĕр призывникпе калаҫат).

Комиссар. Санăн хушамагу мĕнле, йулташ?

Петров. Петров Иван.

Комиссар. Петров Иван... Колхозник-и?

Петров. Колхозник.

Комиссар. Виҫĕнме кай. (Лешне ватă тухтăрĕ виҫет, числисене пер члене калать тăрăх ҫырса пырат, вара осмотăр пуҫланат).

Ҫ. тухтăрĕ (пăхса пĕтерсе). Павлăв Афанасий годен в артиллерию.

Комиссар. Годен в артиллерию. Евгений Степанович, сирĕн заклључени мĕнле?

В. тухтăр. Годен. (Ҫ. тухтăрĕ тепĕр призывникпе пăхат). Иккĕш те Хĕрлĕ ҫара йурăхлă

Комиссар. Павляв Афанасий, есĕ артиллерине йурăхлă. Октабĕрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкара пыратăн, унтан прахутпа ҫурте пĕрле пуҫтарăнса кайатăн. (Ахваниҫ сиккелесе хĕпĕртесе тухса кайат. Хыҫалтан „годен“ — тени илтĕнет).

Ҫ. тухтăр. Петров Иван пехотăна йурăхлă!

Петров „Годен“ еппин! Вот спаҫибă, йулташсем: Хĕрлĕ кă мандир пулмасăр таврăнмастăп, комиссар йулташ.

Комиссар. Молодец, Петров. Санăн Шупашкара октабĕрĕн 22-мĕшĕнче ирхине тăхăр сехетре пымала. (Призывник хĕпĕртесе тухса кайат; малала йалсовет представителĕ калат). Кун пекех пулсан Ҫилтимер призывникĕсем маттур.

К пред. Ой, маттур пулмасăр. Настоящий гвардейский салтаксем.

Комиссар (тўрлетсе). Салтаксем мар, красноармейцăсем.

К. пред. Виноват с, товарищ комиссар, пĕлеймерĕм.

В. тухтăрĕ. Годнăйсем кăçал 60—70%-сем тупăнмала. А вĕт ĕлĕк 10—12% аран тупаттăмăр ку районта: ыттисем йе трахомлă, йе начар ӳпкелĕччĕ.

Ç. тухтăр. Кăçал трахомлисен шучĕ 10% мала пулас çук, трахом пункчĕсем вăйлă ĕçленĕ.

Комиссар. Пожалуй.. 1928 мĕш çулта кунти призывниксем хушшинче трахомлисем 45% пулнă, пĕлтĕр—19, кăçал—ман шутпа та 10—12%-ран мала пулма кирлĕ м р.

5-мĕш курăнни.

Пĕр призывник чывăнмансккр: кутамкапа, пуртăпа—ĕçрен таврăннă пек кĕрет.

Комиссар. Йулташ, салтăнса кĕрес пулат, мĕн кирлĕ сана?

Пушкин. А, вот, комиссар йулташ, ман вырăна такам кĕрсе тухса кайнă кунта. Епĕ Атăл лешйенче вăрманта ĕçре пулнă, çавăнпа вăхăтра çитеймерĕм. Пайан комиççине тăрас тесе килтĕм; ман призкартă çине „отсрочкă" тесе çырнă. 29-мĕш статйа панă.

Комиссар (вырăнтан тăрат). Айта-ха канцелярине кайса пăхар. (Алăк патне çитсен, Çилтимĕр представителĕне). Сирĕн çелсоветран мар-и ку призывник?

К. предçед. Ку ача пирĕн мар, урăх çелсоветран.

Комиссар. Аха... (Алăк патне çитсен). Тепĕр иккĕшне кӳртĕр.

6-мĕш курăнни.

Икĕ призывник кĕреççĕ. Пĕри çектант Александăрĕ, кăçатпа, пысăк тăхлан хĕреспе, сылтăм урине хутлатмасăр айккинелле сарса утат; çынна кусран пăхмаст, пуçне уснă, çӳçне кăшăлласа каснă, йывăç çупа сĕрсе тураса йакатнă. Сăмса йухса аптăранă пек нăшлаттарса тăрат. Тепри хулхасăр пек хăтланат.

Районĕçтăвком представителĕ (çектант Александăрне). Сан хушамату мĕнле?

Çектант Ал-рĕ (пăхмасăр). Пĕлместĕп.

Рĕк представит. Ну, мĕн йатлă еппин?

Çектант Ал-рĕ. Лександăр.

Рĕк представит. Ашу йачĕ мĕнле?

Çектант Ал-рĕ. Пĕлместĕп.

К. предçед. Йăван йатлă ашшĕ.

Рĕк представит. Ав, сирĕн представителĕ, Иван йатлă, тет тĕрĕс-и?

Çектант Ал-рĕ. Пĕлместĕп.

Ç. тухтăр. Çӳçна мĕншĕн кастарман есĕ?

Çектант Ал-рĕ. Кассассăн пуç ыратат.

Ç. тухтăр. Пуç пăсăк пулъ еппин сан, çĕре пуçламан-и? (Тыткаласа пăхат).

Çектант Ал-рĕ. Пуç шăмми сурат ман.

Ç. тухтăр. Сурат... Аха... (Аллине çупа варалаел). И-и, мĕн сĕрнĕ ес пуçна? (Аллине çума кайат. Çектант Ал-рĕ нимĕн те чĕнмесĕр мăшлатса тăрат).

7-мĕш курăнни.

Çар комиссарĕ кĕрет.

Комиссар (çектант Александăрне). Ес ăçтан килнĕ тата?... Марш, çӳçна кайса кастар!.. Кăçатуна хыв! (Патнерех пырса хĕрессине курса). А-а-а... Ав кам ес?

К. предçед. Лександăр, хĕресе хыв, йулташсенчен намăс мар-и сана?

Комиссар. Вăхăт çитсен хыват ак... Начар ĕçлетĕр йалта: политикăлă воçпитани çук... Мĕне йурăхлă-ха ĕнтĕ ку? Октабĕр револђуци пулни 15 çул иртнĕ. çапах ку таранччен çамрăксем хушшинче „çветуйсем“ пĕтмен... А ну-ка, „йулташ“, кайса çӳçна кастар... (Çавăтат, леш туртăнат, кайасшăн мар).

Çектант Ал-рĕ (макăрса). Кастармастăп, пуç ыратат.

Ç. тухтăр. Çӳç вăрăмран ыратат вăл, кастарас пулат.

Комиссар. Ну, ну!. часрах!

Çектант Алрĕ (хыттăн макрат, пурте кулаççĕ). Кастармастăп... Пуç ыратат...

Комиссар (алăкран). Ну-ка, парикмахер йулташ, çаккăн çӳçне хырса йар. (Кайала таврăнат). Сан хушамату мĕнле, йулташ?

Кушаков (хыттăн). Кушаков Петр.

Комиссар. Вот маттур, Кушаков Петр. (Колхоз председателне). Сирĕн йалсем-и ку?

К. предçед. Пирĕн йалсем. Аван ача. Пит веçолăйскер.

В тухтăрĕ. Ну мĕн ыратат-ха сан, Кушаков?

Кушаков. Хăлха илтмест, куç слабăй.

В. тухтăр. Хăш хăлхи илтмест-ха сан?

Кушаков. Иккĕш те начар илтеççĕ... Сылтăмми вуçех илтмест.

В. тухтăр (айаккарах илсе кайса хăрах хăлхине хуплат).

Ç. тухтăр. Еп мĕн каланине игле: (шăппăн) çи-рĕм-пиллĕк. (Хыттăн). Мĕн терĕм?

Кушаков. Илтеймерĕм.

Ç. тухтăр (хыттăн). Вăтăр-саккăр!

В. тухтăрĕ. Мĕн терĕ?

Кушаков. Илтместĕп.

В. тухтăр (хăй калат). Хĕрĕх саккăр!

Кушаков. Сакăрвунпиллĕк.

Комиссар. Кушаков, асту, суйма йурамаст, улталанăшăн суда параççĕ.

Кушаков. Суймастăп вернăй та. Ман хăлхана шыв кĕнĕччĕ пĕчĕк чухне, çавăнтанпа илтми пулчĕ.

Ç. тухтăр (шăппăн комиссара). Наверное женился недавно, ну и притворяется глухим.

Кушаков. Шенился, та-та, шена прӳхаттăй вот... Љготă пулмала мана .. (Пурте кулса йараççĕ).

Комиссар. Ах, Кушаков, Кушаков. Вон мĕншĕн илтместĕн ес: çамрăк арăм килте йулат.

Кушаков. Хăлхи ман вернăй та витĕрех илтмест, но только епĕ љготник пулмала...

В. тухтăр (хăлхине вєркăпа пăхса). Хăлхи чиперех... Перепонкă таса.

Комиссар. Куç та курмаст терĕн-и-ха есĕ, Кушаков йулташ?

Кушаков. Сылтăм куç ман вуçех курмаст.

Ç. тухтăр (куç таблицине кăтартат). Çак мĕнле буквă?

Кушаков. Ăш-шă.

Ç. тухтăр. Чипертерех пăх!

Кушаков. Ăп-пă.

Комиссар. Ан суй, йулташ.

Кушаков. Курмастăп вернăй та.

Ç. тухтăр (таблица патнерех илсе пырса). Çак мĕнле буквă?

Кушаков. Тĕтреллĕ кăтартат: ăн-нă пулмала... Вернăй та курмастăп.

В. тухтăр (икĕ пÿрнине кăтартса). Кушаков, пăх-ха кунта: миçе пÿрне?

Кушаков. Тăваттă.

Комиссар. Кушаков, миçе çул вĕреннĕ есĕ?

Кушаков. Мĕн?

Комиссар. Мĕнле образовани сан?

Кушаков. Средней

В. тухтăр. Со средним образованием человек и так симулирует!

Комиссар. Миçе çул вĕреннĕ ес?

Кушаков. Икĕ çул ытларах. (Пурте кулаççе).

Комиссар. Тĕрĕс, тĕрĕс: образовани санăн чăнахах та „среднее“. Ав çав лозунга вуласа пар-ха пире.

Кушаков (стена çинчи лозунга аран вулат) Ăннă... и... Ни...О... Ăттă.. ăннă.. ой... огной.. ăппă... йа... ти.. пйати..

Комиссар. Чипертерех вула.

Кушаков. Пйати... ни... огной... пйати... ч... у... шой... чушой...

Комиссар. Ну, çитет.. Образование сан чăнахах та „среднее“ мĕн. (РЕК членне) Куратăн, райпрос. Халех учета ил те, вĕрентме пуçла. Хĕрле çара ăсатаччен вăхăт çителĕклĕ. (Сĕтел хушшинчен тухса призывник умне пырса тăрат). Вот што, Кушаков йулташ, Хĕрле çара тивĕçлĕ призывник пулма тăрăшмала, сан умĕнхи йулташ пек пулмала мар. Намас! Йулташусем савăнса кайаççĕ, есĕ куç курмаст, хăлха илтмест тесе тăран. Намăс! Хĕрлĕ çара вĕренме кайаççĕ, унтан ес пĕр-пĕр ăстаç, тракторист йе командир пулса таврăнатăн. Чипертерех пăх та, тухтăр мĕн ыйтнине каласа пыр.

Ç. тухтăр. Çак мĕнле буквă, Кушаков?

Кушаков Ку... Ăм-мă... пулмала.

Комиссар. Ну вот!.. Куратăн вĕт? Хаљ мĕнле буква кăтартаççĕ?

Кушаков. ...И... ăк-кă... ăш-шă... ăн-нă...

В. тухтăр. Пит лайăх курат.

Кушаков. Вот... вернăйах та... хаљ еп ничего кура пуçларăм... Паçăр ман куçа темскер ерешмен карти пекки лекрĕ... Но туљкă... ман, верной та.. арăм пĕтĕ. (Пурте кулаççĕ).

Комиссар. Ах, Кушаков, Кушаков! Куç курмаст тет, а хăлхине мĕн кĕнĕ сан?

Кушаков (кулса). Хе-хе! Нимĕн те кĕмен, еп тухтăрсем пĕлмеççĕ пуљ тенĕччĕ... Вернăйах та, ман килте ĕçлекен никам та çук.

Комиссар. Аçу пур, пиччу пур, пĕр йăмăк.

Кушаков. Ну, хăйамата пултăр еппин, доброволҌно кайатăп... арăм киле йулат те, шалкă та вернăй та... (Пурте кулаççĕ).

Комиссар. Ну, как, товарищи врачи и члены призывной комиссии,— годен?

В. тухтăр. Годен.

Ç. тухтăр. Здоров.

Комиссар. Кушаков йулташ, Хĕрлĕ çара кайма йурăхлă есĕ: октабĕрĕн 22-мĕшĕнче Шупашкара пыратăн.

Кушаков, Вернăйах та-и?

Комиссар. Вернăйах та.

Кушаков. Вот ĕнтерес!.. Ха-ха-ха!.. годен?.. И-хик! (Унччен хуйхăрнăскер савăнса хыттăн кулса тухса кайат, пурте кулаççĕ).

8-мĕш курăнни.

Пушкин çарамасланса кĕрет.

Пушкин. Кĕме йурат-и?

Комиссар. Ну-ка, ну-ка... кил-ха кунтарах. Суймастăн-и, ес тепĕр хут кĕместĕн-и? Тем... курнă пек туйăнат.

В. тухтăр. Чимĕр-ха, ес пĕрре кĕрсе тухнăччĕ вĕт?

Пушкин. Кĕмен, ман вырăнне такам урăх çын кĕрсе тухнă.

Ç. тухтăр (ростомер патне чĕнет). Кил-ха кунта (виçет) тўр, тăр, тўр тăр.

Пушкин (курпăнлансарах тăрат). ХаҌ те чиперех тăратăп.

Ç. тухтăр (тўрлетет). 163! Малтан 160 çеçчĕ.

Комиссар. Картăчкă çинче 162.

Ç. тухтăр (Пушкина весси çине тăратса). 58.

Комиссар. Картăчкă çинче „аллă ултă".

Пушкин. Калатăп сире, епĕ пулман тесе.

В. тухтăр (кăкарне виçет). Сакăр вун перре.

Комиссар. Ку тĕрес... 81.

В. тухтăр. Чимĕр-ха, йулташсем! Куна астумастăр-и есĕр? (Хул айĕнчи пысăк родинка çине кăтартат).

Ç. тухтăр. А-а-а... ку йулташ комиççире пулни пилĕк-ултă кун пулат.

Пушкин. Ун пек турпалли ман çеç мар, ыттисен те пулма пултарат.

Комиссар. Пушкин йулташ, ес мĕн комиççине темиçе хут чăрмантарса çўретĕн?

Пушкин. Чăрмантармасгăп.. ман ав вес та пĕркунхипе лармаст, еп пуçласа кĕретĕп.

Комиссар. Пĕр кун ес миçе килограмм тайнăччĕ?

Пушкин. Аллă ултăччĕ. (Пурте кулаççĕ).

Комиссар. Сана хăш тухтăрĕ виçрĕ ун чухне?

Пушкин (вата тухтăр çине кăтартса) Ватти... ав çавă... е е-е... çук... мар, епĕ мĕн... Атăл лешйенче ĕçре пулнă пĕр кун... ман вырăна урăххи кĕрсе тухнă.

Комиссар. Ну, вот что: тухса тумтирна тăхăн та, ăçтан килнĕ — çавăнтах кай.

Пушкин. Еп доброволҌнă кайас тетĕп.—Илĕр!

Комиссар. Сана отсрочкă панă çитес çулччен; лайăхрах тӳрленетĕн те, вара кайатăн, кăçал йурăхлă мар... ӳпке начар... апла улталама йурамаст, суда парассĕ.

Пушкин. Апла епĕ виç пуштав кăвас ĕçсе ахалех укçа сайа йатăм, хăйамат. Манран начаррисене илессĕ, мана хăварассĕ, — это безобрази, товарищи! (Пурте кулассĕ).

Комиссар (ăсатса). Ну-ну... çитес çул кайатăн. Ерех ĕçсе çӳремерĕн пул-çке йалта?

Пушкин. Çук, çук, çук! Рас можнă? Не гулял, товарищ комиссар, йейбох! Ерех тутине те пĕлместĕп, çуралнăранпа сыпса курман. Но, только, вот, намăс мана йала пырса кĕме...

Комиссар. Мĕншĕн апла?

Пушкин (пӳрнипе шутласа). Йысна пĕр шăртан, кукка пĕр шăртан, килтен пĕр шăртан „парса йачĕç"... Хĕрсем 12 алшăлли „пачĕç". Пите кĕççе саплаха кĕлес пулат вĕт ĕнтĕ ман... (Пурте кулассĕ. Комиссар ăсатса кăларат те, çектант Александăрне чĕнсе кĕрет).

9-мĕш курăнии.

Çектант Александăрĕ машлатса макăрса кĕрет. Çӳçне сурăх çăмне илнĕ пек картласа касна.

Комиссар. Вот вам, товарищи, редкоископаемое! Парикмахĕрĕн ун çӳçне каснă чух машинки ванса кайнă: йывăççу сĕрсе çӳçне чăмаклантарса лартнă та, машинка та илеймен... Хачăпа аран картласа йанă. Мĕн пулнă сан уруна?

Çектант Ал-рĕ. Ыратат.

Ç. тухтăр. Пуç та ыратат?

Çектант Ал-рĕ (макăрат). Шăнат çӳççĕр... ыратат. (Пуçне икĕ аллипе тытса макăрат).

Ç. тухтăр (виçме илсе кайат) Уг чипертерех! (Çектант Александăрĕ туртăнса аран уткалат). 166... вес... 62... кăкăр 84...

В. тухтăр. Мĕн пулнă сан уруна?

Çектант Ал-рĕ. Ыратат.

В. Тухтăр. Вырт-ха çакăнта! (Ирĕксĕр çавăтса илсе кайса кушеткă çине вырттарат). Вырт, вырт чипер!.. урине çĕкле!.. урине çĕкле!.. хутлат-ха сылтăм уруна... Хутлат, хутлат... Ек-кей, ха... (Ирĕксĕр хутлатат, лаш ӳлесе йĕрет).

Çектант Ал-рĕ. Ыратат.

Комиссар (колхоз председателне). Йалта та уксаклаччĕ-и вăл сирĕн?

К. председ. Астуман еп ăна, çӳренине те курсах кайман та вĕсене. Çурта пуçтарăнса лараççĕ вĕсем хăш чухне, халăх çине тухмаççĕ, сын çăкрине çимеççĕ.

Ç. тухтăр. Тĕлĕнмеле сынсем: больницăна лексен емел ĕçмеççĕ, апат çимеççĕ... йатне те каламаççĕ: христос йачĕпе пурнатпăр теççĕ... ирĕксĕр сăмсаран çитерме тивет хăш чухне.

В. тухтăр. Своеобразный психоз.

Ç. тухтăр. По моему это, Евгений Степанович, не психоз, а особый вид облачения классового врага.

Комиссар Совершенно с вами согласен, Сергей Петрович. Нам такие смиренные в кавычках для Красной армии не нужны.

В. тухтăр (Çектант Александăрне трупкăпа итлесе пăхат). Аллуна пуç çине хур-ха! (Çектант Александарĕ ват тухтăр пуçĕ çине аллине лаплаттарса хурат). Ек-кей, сапала! (Аллине илсе пăрахат). Нимĕн те ыратмаст сан, Александăр. Суйатăн ес... Çылăх вĕт улталама, турра ĕненетĕн ху... уру сан чиперех... ну, уг чипертерех! (Лаш аран пускаласа утат). Ахаљ те йурăхсăр ес, улталамасăр та. (Куçне пăхат). Сан трахом, тӳрлетес пулат, унсăр куççăр пулатăн.

Ç. тухтăр. Статья 128. Не годен.

Комиссар. Ал пусăр: не годен. Кайах, кирлĕ мар ес, йурăхсăр—трахом сан. Киле кайсан, хĕресне хыв, трахомна тӳрлетме больница çӳре. (Лешĕ уксаклама манса чиперех утса тухса кайат). Ав, ури те чиперех утат. (Пуртте кулаççĕ). Тепĕр иккĕшне чĕнес. (Шăнкăртаттарат).

В. тухтăр. Ну и кун пайан! Кун пек екземпљар ку таранччен пулманччĕ.

10-мĕш курăнни.

Усламăвпа Шахторăв кĕреççĕ.

Комиссар. Усламăв хăшĕ?

Усламăв. Усламăв Иван—епĕ.

Комиссар. Колхозник-и?

Усламăв. Колхозник.

Комиссар. Комсомолта тăман-и?

Усламăв. Тăнăччĕ. Хаљ беспартейный.

Комиссар. Мĕншĕн кăларнă сана комсомолтан?

Усламăв. Механичĕски тухнă,—член укçи тӳлеменшĕн.

Комиссар. Так, так... Хĕрлĕ çара кайас килет-и?

Усламăв. Кайас килет.

Комиссар. Мĕн тума кайас тетĕн ес Хĕрлĕ çара?

Усламăв. Пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн пĕртен-пер республикне алăра хĕçпăшал тытса капиталиссенчен сыхласа хурал тăрас тетĕп.

Комиссар. Хурал тăрас тетĕн еппин. Аçу сан мĕн ĕçлесе пурăнат?

Усламăв. Колхозра ĕçлет.

Комиссар. Виçĕнме кай. (Усламăва ват тухтăрĕ пăха пуçлат). Шахторăв Федăр!

Шахторăв. Есть, товарищ комиссар.

Комиссар. Кунтарах кил. (Приякартăна пăхса). Кандидат партии с рабочим стажем, колхозник.

Шахторăв. Хамăр колхозра иккĕмĕш бригадир.

Комиссар. Аçта ĕçлесе пурăннă?

Шахторăв. Тăватă çул шахтăра ĕçленĕ... Донбассра. Йăвăр ĕçленĕ май, пӳсĕр шăтнипе пăрахса килмеле пулчĕ.

Ç. тухтăр. Мĕн пулнă апла?

Шахторăв. Квапаран пӳсĕр çисе шăтарнă.

Комиссар. Товарищи врачи, освидетельствуйте.

Ç. тухтăр. Есть... Ну-ка! (Çамрăк тухтăрĕ пăха пуçлат).

В. тухтăр. Усламăв Иван пехотăна йурăхлă. (Çамрăк тухтăрĕ хăвăрт пăхкаласа илсе ваттипе килĕшет)

Комиссар. Усламов Иван, сывлăх йенчен есĕ йурăхлă. Кайах. (Тухтăрсем Шахторăва пăхма айаккинелле илсе кайаççĕ).

Усламӑв. Манӑн хӑҫан Шупашкара каймала пулат?

Комиссар. Кайран калӑпӑр, тух. (Усламӑв кайат). Йалсовет представителӗ, калӑр-ха: сирӗн шутпа, Хӗрлӗ ҫара кайма тивӗҫлӗ ҫын-и Усламӑв Иван?

К. предҫед. Йурӑхлӑ пулас кирлӗ. Ашшӗ колхозра ударлӑ ӗҫлет теме те йурат. Хӑй вӑл пирӗн завхоз, счетовод ӗҫне те ҫавах туса пырат. Маттур ача! Хӗрлӗ обозпа йама пуринчен ытла ҫак ача тӑрӑшрӗ. Налога кӑҫал ир парса татрӑмӑр. Пулӑшас пулат совета, тег.

Комиссар. А есӗр ҫелсоветрисем ҫӑвара карсах итлесе ларатӑр ҫавна. Такҫанах колхозран кӑларса сирпӗтмеле, есӗр завхозра тытса усратӑр. Ултӑ ҫул хушши лесопилкӑ тытнӑ, 20-шер деҫетин тара илсе тыр акнӑ ӗлӗк ашшӗ, хаљ „спокойно" колхозра унӑн ывӑлӗ завхоз пулса ларат. Лесопилкӑ пулнӑ и Усламӑвсен?

К. предҫед. Ҫавна тӗрӗссипе каласа пама пултараймастӑп вара епӗ: пуласси пулнӑ та, те хӑйӗн, те...

Комиссар. Е-ех, йулташ, йулташ! Тем тума суйласа лартнӑ сире ҫелсовета. Кулак хаљ урӑхла ӗҫлет, вӑл сире хӗрлӗ обоз та туса парат, налогне те пуринчен малтан тӳлет — ҫав вӑхӑтрах хӑйӗн ӗҫне те манмаст. Чӗнер тепӗр хут Усламӑва! (Усламӑв кӗре

11-мӗш курӑнни.

Комиссар. Усламӑв йулташ, каласа парӑр-ха: аҫу санӑн лесопилкӑ тытнӑ-и?

Усламӑв. Пӗлместӗп.

Комиссар. Йепле пӗлместӗн, улталама йурамаст, тӗрӗссипе кала. Йалсовет представителӗ сирӗн аҫун Чистай патӗнче лесопилкӑ пулнӑ, тег. (Усламӑвпа колхоз председателӗ пӗр-пӗрин ҫинпе тӗлӗнсе пӑхса илеҫҫе).

Усламӑв. Пуласси... пулнӑ теҫҫӗ пулас та, анчах... епӗ ун чухне пӗчиккӗ пулнӑ... астумастӑп. Епӗр Чистайран кайала киле таврӑнни те ӗнтӗ 5 ҫул ытла.

Комиссар. Ака.. ҫапла еппин, йулташ. Можете киле кайма, йулташ. Совет союзӗн чиккисене хурал тӑма тивӗҫлӗ ҫын мар есӗ. Кайах!

К. предҫед. Ак йапала!.. пӗлмен, пӗлмен ун пек — кун пеккине.

Комиссар Кулаксене хӳтӗлетӗр есӗр ҫелсоветра, хӗрхенетӗр. Чистайри лишенцӑсене Силгимерсем колхоза илнӗ Тилхепесене хытӑрах тытас пулат, унсӑр весем ӗрӗхсе кайма пултараҫҫӗ. Против отсева, а думаю возражающих не будет... Ознакомьтесь, члены призывной комиссии, с материалами на призывника Усламова... „От се-ять" Ал пусӑр йулташсем.

В. тухтӑр (ҫамрӑккипе тавлашаҫҫӗ). Ку пӳсӗрпе илме май килмест. Хӑварас.

Комиссар. Йурӑхлӑ мар еппин Шахторӑв? Жаль, жаль.

Ҫ. тухтӑр. Мӗн шутпа, комиссар йулташ, илме йурат.

Шахторӑв (аллипе кӑкрине ҫапса). Мӗн пек тӗреклисене те илмесен вара? Епӗ вӗт, хӑрах алӑпа икӗ пӑтлӑ гирӗ пуканне вӗлтвелт ҫеҫ выљатӑтӑп. Что. есӗр, в самом деле: рабочине, шахтора илместӗр... Пӗлтӗртенпе партин кандидатӗнче тӑратӑп.

Комиссар. Ценный боец... следовало бы принять.

В. тухтăр. Илес пулсан та, пехотăран ытла май килмест, кайала тавăрма пултараççĕ.

Ç. тухтăр. Годен! Кун пек çынна кайала тавăрас çук.

Комиссар. Шанчăклă партиец валли армире кирек-хăçан та вырăн пур. Илес.

В. тухтăр. Апла пулсан илес.

Комиссар. Шахторăв Федăр, годен. Хăçан килмелине повесткăпа систеретпер.

Шахторăв. Вот это да! Шахторăв аллисем винтовкăна кăларса ўкерес çук: Совет союзĕн чи шанчăклă хуралçи пулма сăмах паратăп, комиссар йулташ.

Комиссар (ăсатса). Маттур, Шахторăв йулташ. (Шахторăв хăвăрт çаврăнса тухса кайат; алак патĕнче комиссара такам çыру тыттарат. Комиссар çыруне илет те, нимĕн шарламасăр сĕтел хушшине кайса ларат).

Комиссар (паузă хыççăн) Комиççине пĕр заявлени пур, вулатăп, итлĕр. (Вулат). „Пайан есĕр пирĕн йалти Павлăв Афанаçийе илнĕ. Вăл Хĕрлĕ çарта пулма тивĕçлĕ мар, мĕншĕн тесен, унăн ашшĕ ĕлĕк шыв арман хуçи пулнă, тырăпа сута туса çĕр тара илсе пурăннă. Халĕ те вĕсем урапа тавраш̆ĕпе сутă туса, тырă йўнĕ чухне илсе хаклансан сутса пурăнаççĕ. Спекулянт тавраш̆ĕсем Хĕрлĕ çарта пулма тивĕçлĕ мар.

Илларион Лариванӑв".

К. предçед. (хăй тĕллĕн). Куна Ларивав çырса панă ĕнтĕ.

Комиссар. Ку паçăр рапарт тунă призывник мар-и?

К. предçед. Çавă, çавă. Призывниксем хăйсем суйланă ăна, йалти комсомолсен йачейки те ăна хушнă. Нумай пулмаст ăна хăйне те комсомола илнĕ.

Комиссар. Ашшĕ унăн чăнахах арман хуçи пулни?

К. предçед. Вăт çавна епĕ тĕрĕссипе калама пултараймастăп: арманта пĕр ултă çул ĕлĕкрех ĕçленĕ вăл, анчах, те кампанинче пулнă, те мелникре çех.

Комиссар. Халь колхозник-и вăл?

К. предçед. Точно çапла, урапа тавраш йусат, çĕнĕрен тăват.

Комиссар. Тара тытса ĕçлеттерет-и, çук-и?

К. предçед. Çук, ывăлĕпе иккĕшех ĕçлеççĕ.

Комиссар. Тырăпа сут тунă-и?

К. предçед. Ăна калама пултараймастăп, но, тырăла ĕçлекелет пулас.

Комиссар. Пыр та калаç сирĕнпе: картăчкă çине — „Хĕрлĕ çара кайма тивĕçлĕ" — тесе çырнă халь — унăн ашшĕ арман хуçи пулнă тетĕн... Çакна кам ала пуснă?

К предçед. Пирĕн председател

Комиссар. Лайăх тĕпчеместер — „Хĕрлĕ çара тивĕçлĕ" тесе çыратăр. Кулак халь чейе, вал мĕнле те пулса Хĕрлĕ çара лексе, унта пăлхатасшăн. (Председателне) Тухса чĕн ха, ăçта вăл Павлăв? (Колхоз председателĕ чение кайат).

К. предçед. (алакран). Павлăв çук-и унта, киле кайман-и?

Ахванис (хыçалта) Пур!

К. предçед. Ахванис! Кĕр ха, комиссар чĕнет.

12-мĕш курăнни.

Ахваниç тумтирпе кĕрет.

Комиссар. Павлăв, сан аçу мĕн ĕçлесе пурăнат?

Ахваниç. Алăстаçĕ — колхозник: урапа таврашсем тăват.

Комиссар. Тырăпа сут тумаст и?

Ахваниç. Нихăçан та суг туман, тырри те пирĕн икĕ йедоклăх çех.

Комиссар. Аçу сан арман тытман-и, шыв арманĕ?

Ахваниç. Арман тавраш тытман, анчах 1926-мĕш çулта 6 уйăха йахăн хамăр йалти шыв арманĕнче мелникре пулнă. Унта вăл урине арман чулĕ айне туса çĕмĕрнĕ те, кайран урапа ĕçне тытăннă. Ĕлĕк пирĕн асатте те çав ĕçпе пурăннă, аттене те йалта çавăнпа „Кустăрма Паԓукĕ“ теççĕ.

Комиссар. Çитет, кай. (Леш кайма тăрат). Чим, Павлăв... сана хăçан килме каланăччĕ-ха?

Ахваниç. Октабĕрĕн 25-мĕшĕнче.

Комиссар (ыттисемпе пăшăлтатса илсе). Санăн октабĕрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкара пыма кирлĕ мар.

Ахваниç. Ăçта пымала еппин?

Комиссар. Ниçта та каймастăн, килтех пурăнатăн „пок-ка“.

Ахваниç. Мĕншĕн апла? Çук епĕ доброволԓнă кайасшăн, мана ԓготă кирлĕ мар: атте пĕччен те ĕçлесе пурăнат, вăл хаԓ колхозра.

Комиссар. „Пок-ка“ килтех пурăнатăн.

Ахваниç. Йе есĕр мана Хĕрлĕ çара тивĕçлĕ мар тетĕр? Кулак ачи мар вĕт епĕ?

Комиссар. Кирлĕ пулсан хамăрах чĕнетпĕр, повесткă йаратпăр, хаԓ киле кай.

Ахваниç. Комиссар йулташ, тархасласа тилмĕретĕп: илĕр. Сире кам та пулсан елеклесе панă пуԓ, — епĕ хама Хĕрлĕ çар ĕретĕнче тăма тивĕçлĕ шутлатăп.

Комиссар (хыттăн). Çитет!.. Кай! (Ахваниç пуçне чиксе хуллен утса тухса кайат).

Ç. тухтăр (Ахваниç тухса кайнă чух). Ман шутпа вăл суймаст.

Комиссар (çырат). „Временно отсеять“. Райисполкому выявить на месте политико-моральные качества призывника. (Ыттисене алă пусма парат).

Чаршав.

ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ.

Çилтимĕр колхозăн пухăвĕ. Пуху колхоз анкартинче пулса иртет. Чаршав уçăлаччен сцена çинчен хыттăн шавлани илтĕнет. Вăхăт каça сулăннă.

1-мĕш курăнни.

Пухун президиуме молотилкă çумне вырнаçнă. Колхоз председателĕ çулерех хăпарса тăнă та, шăнкравне шăнкăртаттарат. Римă — секретарĕ, шавлама чарăнма чĕнет. Пухура комсомолсем (Римăсăр пуçне) курăнмаççĕ, иккĕмĕш бригадăран та сахал пынă.

К. председ. (шăнкравĕпе шаккаса). Чимĕр-ха, халăх! Чимĕр!.. Чисткă кирлех, потомуштă колхоза чуждăй елементсем кĕрсе тулнă... примерно каласан, мана комиççире питĕ хытă пăскăртрĕç.

—Што есӗ,—теҫҫӗ,—йалсоветра ларатăн, теҫҫӗ, колхоз председателӗ теҫҫӗ, а вот, теҫҫӗ, Ахваниҫ Павлăв пеккисене колхозра тытса усратăн, теҫҫӗ... Штобы, теҫҫӗ, ыранах твердăй, конкретнăй решени выносить туса, вӗсене колхозран тасатнă, пултăр теҫҫӗ. Военный комиссар, вот тупă та туршăн, сӗтеле чышса каларӗ... „Отсеять" —терӗ те, Ахваниҫе салтака илнӗскере килеле хăваласа йачӗ. Ав вăл хăй те кунтах, илмерӗҫ: кулак ачи вăл, терӗҫ... таҫтан пӗлеҫҫӗ, мурсем; кулака шăршăранах паллаҫҫӗ, мошелниксем.

Ахваниҫ (сиксе тăрса). Есӗ ху елеклесе панă вӗсене!.. Мана кулак шутне хумя, пирӗн йăхра сутă тăвакан пулман, арман тавраш тытман. (Ҫынсем шавлама пуҫлаҫҫӗ).

Римă (шавлание чарса). Йулташсем! Йулташсем!

К. председ. (шăнкравӗпе шаккаса). Чимӗр!. Лăпланăр!.. Капла шавласан ӗҫ пулас ҫук. (Кăшт лăпланаҫҫӗ). Халӗ колхоз ҫекретарне, Римăна, сăмах паратăп. Итлӗр.

Римă (аллине „Канаш" тытнă). Колхоза тасатас тени хăшнехăшне кăмăла килмест, ҫавăнпа вӗсем ку ыйтуна сӳтсе-йавасшăн мар. (Шавлаҫҫӗ).

К. председ. Чарăнăр, йулташсем!

Римă. Акă пайан „Канашра" мӗн ҫыраҫҫӗ:

„Ҫилтимер колхозӗ ыраша пайан кунччен 60% кăна ҫапнă. Тырпула ҫапса пуҫтарас ӗҫе ҫакăн пек кайа хăварса пыни, колхоза кулакла елементсем сырăнса илнинчен килет. Колхозра виҫӗ бригадă ӗҫлет, вӗсенчен пӗррремӗш бригадинче йăлтах ӗлӗкхи хăмла хуҫи Ларивана́в тăванӗсемпе тусӗсем пуҫтарăннă. Вӗсенчен хăшӗ-пӗрисем: подкулачник—Сухал Ваҫлейӗ, арендатăр Усламăв, Лариван Ларивана́в (хăмла хуҫи, Ларивана́в ҫакăн асла́шшӗ пулат), тата ытти ҫавнашкаллисем—правлени членӗсем пулса тăраҫҫӗ. Вӗсем чарса пыниле икӗ ҫул ӗҫлесе те лаша витине туса пӗтермен, вӗсен бригадинче хăшӗ-пӗрисем ӗҫе тухмасăрах ӗҫкувӗсене шутласа пыраҫҫӗ: ҫапнă ыраш уламне валăтра капаиа хывса пымаҫҫӗ, авăн ҫапакан машина икӗ хутчен ватса йусаттарнă. Виҫҫӗмӗш бригадăри комсомолӗсемпе иккӗмӗш бригадăри уйрăм колхозниксем ҫине-тăрса ӗҫленипе кăна, Ҫилтимер колхозӗ тытăнса тăрат. Вери турчкапа хӳтӗртмеле Лариван тавраш ӗсене Ҫилтимер колхозӗнчен.

Вутлă ҫӗлен".

Сасартăк пӗрремӗш бригадăрисем сиксе тăрса кăшкăра пуҫлаҫҫӗ. Виҫҫӗмӗш бригадăрисем „ай-ай, лайăх лекторне", тесе кулаҫҫе.

С. Ваҫлейӗ. Куна есӗр хăвăр ҫырнă, йепе хӳресем. Сире хăвăра колхозран хăваламала. Есӗр йаланах колхоза мутиг туса ҫӳрегӗр. Ваттисем пулмасан, сирӗн колхозу гахҫанах пӗтмеле... Пирӗн кăвакарнă сухалган намăсланасчӗ хут, еп сирӗн асла́ҫу пулма тивӗҫле! Намăс ăҫта сирӗн, йӗпе хӳресем! Намăс ăҫта? Майраля тăхăня пуҫласа, кӗпе айӗнчи намăса ҫухатрăр вӗт. киреметсем! Ҫӗрӗн-кунӗн урнă йытă пек сӗлехӳсене йухтарса ҫӳретӗр йал тăрăх, камсамурсем!

К. председ. Ваҫлей пичче, сана сăмах паман, калас пулсан сăмах ыйт.

Ҫ. Ваҫлейӗ. Мана ҫын сăмахӗ кирлӗ мар, ман хамăн пур... потомуштă, влай, еп бедңак, батрак пулнă ӗмӗртенпе—ман сăмах мялта пулмала: хамăрăн влас, хамăрăн ирӗк! Нечего пире вӗрентесси! Епӗр революци тунă чухне есӗр сăпкара ӗмсе выртнă.

Р и м ă. Васлей пичче, кам çырнипе сан ĕç çук: тĕрĕс сырман пулсан çыраканне хăйне суда параççĕ. Есĕ мана асатте пулма тивĕçлĕ пулсан та, есĕ ĕлĕк авал бедњак пулнă пулсан та, кашни кăвак сухалах социалисăм тăвакансен ретĕнче тăма тивĕçлĕ мар: чăн колхозникпа чăн кулакăн, тулашĕнчен пăхсан, сăнĕсем пĕр уйрăмсăр пек туйăнсан та, ăшĕнчен — вĕççĕр уйрăмлăх.

Л а р и в а н (лăпкăн пуçлат). Мана пĕр-ик сăмах калама парăрха. Васлей пичче, есĕ ахалех Римăна хăртса пĕтертĕн. Конешнă, вăл çырман ăна. Кам çырнине епĕ лайăх пĕлетĕп: пур пирĕн йалта пĕр „йаш ача", çырма маçтăрскер... Колхоза тасатасси кирлех, унсăрăн пирĕн йалан харкашу пулат. Сăмахран, хăçанганпа епĕр пĕр-пĕринпе кĕвĕçе пуçларăмăр? (Сассине антарса) Кустăрма Паљукне колхоза илнĕренпе. (Вĕрилессе кала пуçлат). Çавăн ачи — Ахванис колхоза пĕтересшĕн: малтан ыттисем колхозран тухасса кĕтсе пурăнчĕ, кайран колхоза кĕрсе харкашу кăларса йачĕ, еleклесе Шупашкара çырусем йара пуçларĕ.

А х в а н и ç (сиксе тăрса). Суйатăн!

Р и м ă. Ахванис, ан васка, итле первай. (Леш чарăнат).

Л а р и в а н (кулат). На воре шапка горит! Ха-ха-ха... Çырма есĕр маçтăр та, анчах „ир авăтакан кукукăн пуçĕ çурăлнă", теççĕ ваттисем. Тăвансем, астăвăр-ха, йепле вĕсем (Римăпа Ахванис çине кăтартса) пĕр-пĕриншĕн хута кĕреççĕ. Комсомолка кулакла елементшĕн хута кĕрет! Вăл бедњаксене колхозран кăларасшăн. Васлей пиччене кулак шутне хурат. А Кустăрма Паљукĕ шыв арманĕ тытнине кам пĕлмест? Кам илнĕ-ха ăна колхоза?

А х в а н и ç (сиксе пырасшăн, ăна чараççĕ). Суйатăн, сволăч! Ес ху кулак, çĕр процĕнтлă кулак!

Л а р и в а н. Сан шутпа Ларивам кулак йăхĕ-и? Пултăр: ман асатте суттунă пултăр. За то епĕ тăлăх ÿснĕ, епĕ действитĕљнă батрак шутĕнче пулма тивĕçлĕ, мана есĕ колхозран „вĕри турчкапа" хăвалама пултараймастăн. Ман асатте суттунă пулсан та, йалйыша нихăçан та хирĕç пымен, честнă суттуса халăха пулăшма тăрăшнă: ун пагĕнче ÿркенмечнисем çирĕм-вăтăр тенкĕ уйăха ĕçлесе тупнă, ыттисем хăмла леçме лава çÿренĕ, спаçибă каланă.

П ĕ р р е м ĕ ш б р и г а д á р и с е м. Тĕрĕс калат Ларивам, тĕрĕс.

С. В а ç л е й ĕ. Халь йулашки хăмла сарайне пĕрерĕн-пĕрерĕн сĕтре пуçларĕç. Колхоза ниçтан пĕр пус услам килмест.

Р и м ă. Миçе çын сирĕн патăрта еçлесе чахутка йернĕ, миçе вилнĕ — ăна каламастăн. Талăкра миçе сехет кĕкĕрт йÿççине шăршланă.

Л а р и в а н. Мĕнчул ĕçленĕ — çавăнчул тупнă: сахал тесе никам та каламаст, пурне те çителĕклĕ пулнă А вот, Кустăрма Паљукĕ мĕнчухлĕ шайка çăнăхĕ сăтăрнă халăхран, çавна илтесчĕ ырă çынсенчен? Пăтран виçшер кĕрепенке çăнăх илнĕ те, çав çăнăхах, халăхăн тырă пĕтсен, ик-виç хакпа сутнă. Пĕр пăт çăнăх панă та, вун кĕрепенке кивçен панăшăн илнĕ.

С. В а ç л е й ĕ. Тĕрĕс калат Ларивам. Еп хам чылайĕшне çавăн пек кивçен илнине астăватăп. Ав, Прамун лайăх пĕлмеле.

П р а м у н. Илессе епĕ илкеленĕ те, анчах Паљукран мар, — Йакур хуçаран.

Çваçлейĕ. А кам виççе паратчĕ сана?

Прамун. Виçессе Паљук виçеччĕ те...

Лариван. Чейе çынсем тĕттĕм халăха уталама пĕлнĕ çав. Пурăнасса мелник шутĕнче пурăннă, ĕçлессе Йакур хуçапа çурмала ĕçленĕ. Йакур та çав Паљук пирки пĕтрĕ: „лартрĕ мана, Паљук, лартрĕ... çавах çурри çаратрĕ, хăй таса пулса йулчĕ“,— теччĕ раскулачит тăваччен Вăт кама колхозран хăваламала „вĕри турчкапа“. Лариван таврашĕсене мар. Римăна кулаксене хӯтĕленĕшĕн комсомолтан кăлармала. (Ларат).

Ахваниç. Председатĕл, ес пухуна йĕркелĕ илсе пымастăн, есĕ кулаксем майлă пыратăн.

Предçед. Такам кунта кулак: сана хуна та кулак шутлаççĕ вĕт.

Ахваниç. Ăçта сан „классовое чутье“, чорт побери? Пĕтĕм хура çăхансем пуçтараннă пĕрремĕш бригадăна. Хаçат çине епĕ çырнă. Йулташсем!

Çитăр кум (уннчен шавлама, хăймасăр ларнăскер, сиксе тăрса). Вот мĕнле иртĕнсе кайнă пирĕн кулак ачисем!.. Çавсене ку таранччен епĕр хамăр колхозра тытса усранă! Пĕр хĕрхенмесĕр тытатыта çапас пулат вĕсене, шăрши те ан пултăр, пĕччĕр. выçă вилччĕр, çĕршăтăшăсем! Тӯссе лартăм, хĕрхенсе тăтăм ку таранччен, халĕ çиллĕм тулса çитрĕ, вăйăм çитес пулсан. пĕрерĕн-пĕрерĕн лутăркаса тăкăттăм сире... Е ех! (Чышкисемпе йунат).

Усламăв (ашшĕне пырса лартат). Атте, ытлашши калатăн, лар! (Шăппăвтарах). Миçе хут каланă сана: чĕлхуна çырт, сансăр пуçнех пĕлеççĕ.

Ахваниç. Аллу кĕске, Çитăр Иванччă! Çырма есĕр мана пурпĕрех чарас çук. Мĕн çырнине еп хам лайăх пĕлетĕп. Икĕ çул ĕçлесе те Çилтимер колхозĕ кулакла елементсенчен тасалаймаст, халĕ ĕнтĕ хĕсĕнсе çитрĕç те, мана, ман аттене кулак шутне кӯрте пуçларĕç. Пирĕн йăхра кулак йунĕ çук, ман аттене „Кустăрма Паљукĕ“ тесе ахаљ чĕнмен пуљ. Ав вăл уксак „арман хуçи Кустăрма Паљукĕ“, ыйтса пĕлер хăйĕнчен, ăçта вăл урине çĕмĕрнĕ, камшăн, мĕн пирки чăлах пулса йулнă. Атте, каласа кăтарт ĕçхалăхĕ умĕнче: мĕнле ес уруна çĕмĕрнĕ?

Римă. Паљук пичче, кунтарах кил.

К. Паљукĕ (кăшт малаях пырса). Аван мар перне-пĕри çапла кышлани, халăх, аван мар Ес те, Ахваниç, хаçат çине çырса халăха вăрçтаратăн çеç...

Римă. Кулакпа ĕçхалăхĕ пĕр çемйере нихăçан та килĕшсе пурăнас çук: социализăм тăвас ĕç ăнса пытăр тесен,—кулаксене пирĕн хамăр хушăран хӯтĕртес пулат.

Паљук. Сирĕнне пĕлместĕп еп, анчах тăванпа тăван хуралашни аван мар вăл.

Ахваниç. Сана кулак шутне хуни аван пулĕ?

Паљук. Ăна Лариван çиленнипе каларĕ пулĕ, хаçат çине çырнă пирки: çырмала марччĕ, хуралашасси те пулмастчĕ.

Ахваниç. Ех, атте! Куçна лайăхрах уçса пăх. Пĕлетĕн-и есĕ, мана мĕншĕн Хĕрлĕ çара илмерĕç: „есĕ кулак ачи, арман хуçи ывăлĕ“, терĕç. (Ларивансем кулаççĕ). Кун çинчен епĕ сана каласшăн

марччӗ, тӗрӗслӗх пурпӗрех ҫийеле тухат теттӗм,—халӗ пӗтӗм Ҫилтимер ӗҫхалӑхӗ умӗнче тӗрӗссипе каласа пар: кам есӗ?

Паҧукӗ (хӑраса ӳксе). Кам епӗ?! Ывӑлӗ ашшӗнчен—„кам есӗ“ тесе ыйтат. Епӗ санӑн аҫу, еп сана ҫуратса ӳстернӗ... Анчах ку' таранччен хама нихӑҫан та кулак вырӑнӗнче шутламан. Арман хуҫи пулма ман шӑтӑк йӗмрен урӑх нимӗн те пулман. Сана кулак ывӑлӗ тесе кам та пулсан елеклесе панӑ пуҧ, йал-йыш мана—Кустӑрма Паҧукне мӗн ӗлӗкренпех пӗлет вӗт. Епӗ арманӗнче те ҫур ҫула йахӑн ҫеҫ пулнӑ вӗт, вара урасӑр пулсан ӗҫлемен.

Лариван. Армана есӗр Йакурпа пӗрле ҫурмала тытнӑ.

Паҧук. Ҫылӑха пӗл, Лариван, ҫылӑха пӗ-ӗл!

Лариван. Мӗншӗн есӗ урасӑр пулнӑ: есӗ шайкӑ ҫӑнӑхне сутса пӗтӗм укҫине хӑвӑн ҫумна чике пуҫланӑ вӗт, ҫитменнине Йакур пиччене чут шыва йаман.

Паҧук. Ах, тур-тур-тур! Мӗн калатӑн ес, Лариван? Шайка ҫӑнӑхне сутма мар, вӑл мана ик уйӑх укҫине те парса татмарӗ, ҫитменнине ӗмӗрлӗхе урасӑр туса хӑварчӗ. Чипер арман чулне вӗтетсе тӑнӑ ҫӗртех мана, ӳсӗрскер, хӑйӗн туратлӑ туйипе—„ес вӑрӑ, ман ҫӑнӑха сутса пуйатӑн“—тесе пуҫран ҫапса ангратрӗ. Еп сулӑнса тепӗр арман чулӗ патне кайса ӳкрӗм; леш ҫаврӑннӑ май, ман сӑхман аркипе пӗрле сылтӑм урана пӗтӗрсе илчӗ... Мӗнле кӑларнине астумастӑп... Спаҫибӑ Прамуна, ӗмӗр турра кӗлтӑватӑп уншӑн, ҫавӑ мана вилӗмрен хӑтарчӗ.

С. Ваҫлей. Мӗншӗн есӗ Йакура вӗлерме тӑнӑ?

Паҧук. Вӗлерме мар, шыва пӗрре чӑмтарнӑччӗ... Мӗншӗнни... ҫавӑншӑн, хамӑн урашӑн... Мункун чухне иксӗмӗр те хӗрӗнкӗрех пулнӑ... Вешник ҫинче тӗл пултӑмӑр. „Ҫул пар, еп сан хуҫу пулатӑп“—тет ӳсӗрскер. Епӗ ӗлӗкхине аса илтӗм те: „ак сана, хуҫана—работникрен, мана урасӑр тунӑшӑн“,—тесе арман пӗвине „чӑмпӑр“ тутартӑм.

С. Ваҫлейӗ. Епӗ пулмасан, Йакур кум путаччӗ, аран кӑлартӑм.

Паҧук. Еп... кам кӑларнине пӑхмарӑм: ҫуллӑ пыршӑ пугас ҫук пурпӗрех тесе уттартӑм килеле... (Ҫамрӑксем кулаҫҫӗ).

Лариван. Ав, куратӑр, халӑх, йепле ҫынна епӗр колхоза илнӗ: ҫынна ҫаратни ҫитмен, хуҫине шыва путарма тӑнӑ Вӑл чӑнахах та кулакне войенная комиҫҫинче те пӗлеҫҫе, ҫавӑнпа Ахваниҫе салтака илмен. Йепле ҫавӑн пек ҫынсене епӗр колхоза илнӗха? Халех Ахваниҫпе ашшӗне пирӗн колхозран кӑларас пулат, суйа ҫырнӑшӑн „Вутлӑ ҫӗлене“ суда парас пулат. Пӗтӗм Ҫилтимер йатне ҫӗртеҫҫӗ Паҧук таврашӗсем! (Пуху хыттӑн шавла пуҫлат).

К. предҫед. Чимӗр, халӑх... Ҫарӑнӑр!.

Лариван (хӑй председателпе йунашар хӑпарса тӑрса). Кам Паҧукпа Ахваниҫе колхозран кӑларас тет, алӑсене ҫӗклӗр! (Пӗррешӗш бригадӑрисем ҫӗклеҫҫӗ).

Ахваниҫ. Протестую! Нет такого права!.. Насилие кулаков! (Председател шӑнкравӗпе ҫӗмӗрлет).

Римӑ. Предҫедателӗ, ес йури собранине кулаксем майлӑ йертсе пыратӑн.

Ахваниҫ. Подкулачник ес, предҫедател мар!

Сасӑсем. Долой председателя! Урӑххине суйлас!

Римӑ. Пайанхи пухура иккӗмӗш бригадӑрисем сахал курӑнаҫҫӗ. Виҫҫӗмӗш бригадӑри комсомолӗҫсем те конференцинчен таврӑнман. Ҫавӑнпа голосоват туни тӗрӗс пулмаст.

К. председ. (питӗ хӗрсе). Кто хозяин колхоза?! Чуждӑй елементсене колхозран тасатма мана военнӑй комиссар хушнӑ. Вӑрҫӑ тухат скорӑ, терӗ. Кулаксене пӗтермеле, терӗ. Неччевӑ разнӑй ҫамрӑксене итлеме—пирӗн хамӑрӑн пуҫ пур. Мӗн вӗсем пире мутит тӑваҫҫӗ. Паҙук Ахваниҫӗ, ҫавӑ конешнӑ, колхоза пӗтерес текенни: самӑй активнӑй членсем ҫинчен елеклесе ҫырнӑ. Нимӗн те херхенсе тӑмасӑрах пирӗн пурин те харӑс алӑ ҫӗклесе вӗсене колхозран кӑларса ывӑтмала та, ыранах твердӑй задани памала. Кам Паҙукпа Ахваниҫе колхозран кӑларас тет—ҫӗклӗр аларсене! (Хӑй пуринчен малтан ҫӗклет). Ҫӗклеменнисен йатне протокола ҫырса хурӑпӑр та, ыранах РИК а систерӗпӗр. Ну, ҫӗклӗр... Лариван, шутла!

Лариван (председателе). Вӗсене хайсене собранинчен кӑларса йамала, атту хӑшӗ-пӗрисем хирӗҫ ҫӗклеме хӑраса тӑрӗҫ.

К. председ. Да-да... тӗрӗс.. А, ну-ка, Паҙук, Ахваниҫ, тухӑр-ха!

Римӑ. Еп пурпӗрех алӑ ҫӗклеместӗп, ку собранине законлӑ шутламастӑп. Ку вопроса пур колхозниксем те пуҫтарӑнмасӑр тума йурамаст.

К. председ. Сана епӗр пӗлетпӗр. Ес йаланах колхозра кулаксене хӳтӗлетӗн. Халӑх ҫителеклӗ, голосоват тӑватпӑр

Ахваниҫ. Насилие кулаков! Пурпӗрех ку ӗҫе ахаҙ хӑвармастӑп Шупашкара кайса жалӑбӑ паратӑп, тӗрӗслӗх ҫийелте пулмала.

Лариван. Хӑвалӑр ӑна пухуран! Жалӑбӑ пама—хӳри вараланчӑк: сана пӗркунах Райӗҫтӑвкомра твердӑй задани памала тунӑ. Ха-ха-ха!..

Ахваниҫ. Ата, атте! Ҫӑхансен колхозӗ пире кирлӗ мар. (Ашшӗне ҫавӑтса кайат).

Римӑ. Ав йепле ӗҫлетӗр есӗр? Сирӗн РИК ра та хӑвӑр ҫынсем пур иккен. Пурпӗрех йӗркине шыраса тупатпӑр.

К. председ. (Римӑна итлемесӗр). Ну, кам Паҙукпа ывӑлне колхозран кӑларас, тет, алӑ ҫӗклӗр! (Пурӗ 8 ҫын ҫеҫ ҫӗкл ҫҫӗ). Лариван, шутла! Што есӗр ҫӗклеместӗр? Халӑх!.. Ҫекретар, кам кам ҫӗклеменнине ҫырса пыр!

Римӑ. Ҫырмастӑп, ку пухуна епӗ законлӑ шутламастӑп! (Урӑх ҫӗре кайса ларат).

К. председ. Лариван, ҫекретар пул,—ҫыр! (Лариван ҫырма тытӑнат). Первым долгом Римӑна хӑйне кулаксем майла тесе ҫырса хур. Прамун, ма ҫӗклеместӗн?

Праски (хӑраса ӳкнӗскер). Атте, ҫӗкле, кулак шутне кӗрес тетни-м?

Прамун. Тӗрӗс мар ку йапала. Ӗмӗр пӗрле ӗҫсе-ҫисе ӳснӗ Паҙук кулак пулма пултараймаст.

Праски (ашшӗне шӑппӑнтарах). Атте, мана пӗтеретӗн вӗт есӗ. Ларивана ҫилентерсе, мана пӗтеретӗн. Ҫӗкле аллуна, ҫӗкленӗшӗн татӑлса ӳкес ҫук вӗт сан аллу.

Л а р и в а н. Ну, асту, Прамун пичче, есе ман бригадăра ĕçлетĕн. Кулаксене хӳтĕлекенсене пурпĕрех лектеретпĕр.

П р а м у н. Кирек мĕн тăвăр, епĕ нихăшин майлă та çĕклеместĕп.

К. п р е д ç е д. Кам хирĕç еппин? Çĕклĕр!. Лариван, хирĕççисене протокола çырса пыр. (Хăшĕ-пĕрисем çĕкленискерсем, хăраса аллисене антараççĕ. Çапла вара хирĕç çĕклекен никам та çук).

Л а р и в а н (председателе вăрттăнтарах). Голосоват тума пĕлмерĕн: кам хирĕç темелеччĕ малтанах. Вара „единогласнă“ кăлармала тăзаттăмăр Капла майлă çĕкленисем пит сахал.

К. п р е д ç е д. Халĕ те „единогласнă“ пулат. Çыр: „единогласнă“—те. (Хыттан). Хирĕççисем çук. Еппин Паҫукпа Ахванисçе „единогласнă“ колхозран кăлармала турăмăр. (Сасăсем хытă шавла пусласçĕ, çав вăхăтра председатĕл Ларивана вăрттăн калат). Выпискă ту та, çынсем сисиччен РИК-а вĕçтер. Комсомолĕссем пайан çĕрле таврăнмала, вĕсенчен маларах ĕçе кайса çирĕплетес пулат. Пĕр кăларса пăрахсан, жалăбасем парса кутăн-пусăн чупсах иртгереççĕ. Унччен колхоза хамăра кирлĕ пек „тĕреклетсе“ çитеретпĕр. (Иккĕш те кулаççĕ).

Р и м ă (çиленсе калат). Йурĕ, пурпĕрех епĕр йĕркине шыраса тупатпăр. Пайанхи пухăва епĕ законлă шутламастăп. Пухăва килме иккĕмĕш бригадăрисене чĕнменпе пĕрех, суйласа каласа çӳренĕ. Паҫукпа Ахванисçе колхозран кăлармала туни тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен халăх çителĕклĕ мар. Çавăнпа епĕ алă хирĕç те, майлă та çĕклемерĕм.

К. п р е д ç е д. Çĕклесчĕ те-ха, кулака хӳтĕлени пулат-çке-ха вăл. Паҫук майлă çĕклес, кайран ху та колхоз çекретарĕнчен тухса ӳкетĕн. Ну, лăпланăр... Çапла ĕнтĕ, хаçат çинче çырни тĕрĕс марри курăнсах тăрат. Ăна Ахванис хăйне хӳтĕлеме, хăйĕн çылăхĕсене пытарас тесе ĕçленĕ. Чăвасси шăтăкне пирĕн ваҫҫи чавнă та, хăй кĕрсе ӳкрĕ. Епĕр пулмасан, Çилтимер колхозĕ тахçанах саланса пĕтмеле.

С. В а ç л е й ĕ. Вот хĕрхенсе кӳрт вĕсене колхоза. Каларăм пĕр кунах „кулак тавраш колхозра пулмала мар“—терĕм, вĕсем пире пĕтереççĕ—терĕм. Чăнахах та çапла килсе тухрĕ. Ăшра хаҫ лăшах пулчĕ, аранах ку Ахванис таврашĕсенчен хăтăлтăмăр.

Л а р и в а н (вăрттăн). Ну, е іе карăм.

К. п р е д ç е д. (шăппăн). Ес леш „племеннойне“ кӳл—„Урхамахне“. (Лариван тухса кайат).. Малала... тырă валеçесси çинчен калаçар. Халăх!.. Пĕр кун аванспа валеçнĕ тырра чылайĕшĕ çисе йанă, çавăнпа пайан çĕнĕрен мĕнчулшăр валеçесси çинчен калаçмала пулат.

Ç и т ă р к у м Мĕн ăна ваккăн-тĕвеккĕн темиçе хут валеççе лапартанас—валеçес тӳрех ĕçкунне çуршар пăт. Тырă кăçал тухăçлă.

У с л а м ă в. Атте, миçе хут каланă сана: лар çынсем мĕн каланине итлесе, сансăр пуçнех пĕлекен нумай.

Р и м ă. Йулгашсем, Çитăр пичче каланă пек тума йурамаст. Епĕр хаҫ хамăрăн тырă хатĕрлес плана тултарман: йалхуçалăх налогне парса татнипех çитмест—çемфондпа страхфонда тултарас пулат. Выҫăх апатне те кирлĕ таран уйăрса хуман-ха епĕр. Çавсене тултармасăр тырă валеçесси çинчен калама та кирлĕ мар. Вĕсене пирĕн хăвăртрах тумала.

С. Васлейĕ. Сирĕн часрах леçсе парса пултăр та, уйăрса хурса пултăр, халăх хут те выçă вилтĕр. Уйăрма ĕлкĕрĕпĕр, малтан хамăра çу каçмалăх валеçес те, ытлашшине уйăрса хурас.

Сасăсем. Тĕрĕс!.. Апла йурамаст!

Усламăв. Тăвансем! Ман шутпа, Васлей пиччепе ман атте тĕрĕсех калаймаççĕ. Вĕсем единоличниксем пек шухăшлаççĕ, хăйсен ватăлнă пуçĕсемпе ĕçе тăруках шухăшласа илеймеççĕ. Пирĕн çакна манмала мар: епĕр, колхозниксем, колхоз пуринчен малтан совета пулăшма тăрăшмала. Римă каланă пекех, чи малтан хамăрăн тĕрлĕ заданисене тултармала та, вара тин хамăр çинчен шухăшламала. Пуринчен малтан пулса преми илме тăрăшмала, вара пирĕн колхоз хĕрлĕ хăма çине ӳкет, мухтава тухат.

С. Васлейĕ. Хĕрлĕ хăма—хĕрлĕ хăма. Хĕрлĕ хăмапа хырăм тăранасси пур-и? Йурат пире хĕрлĕ хăмасăр та.

Çитăр кум. Хĕрлĕ хăма вырăнне тупăк хăми хатĕрлемеле ан пултăр. (Кулаççĕ. Çав вăхăтра Шахторăв кĕрет).

2-мĕш курăнни.

Шахторăвпа иккĕмĕш бригадăри колхозниксем кĕреççĕ

Шахторăв (тӳрех председател патне пырса). Председатĕл, мĕншĕн есĕ иккĕмĕш бригадăрисене пуху пухасса систермен?

К. председ. Калама хушнăччĕ пурне те, килте пулман пуль есĕр. Хаљ как раз тырă валљи валеçнĕ çĕре çитрĕр, кайа пулман.

Шахторăв. Валеçеччен малтан ĕçкунĕсене тĕрĕслесе тухас пулат: йăнăш çырса пĕтермен-и хăшĕ-перисем.

К. председ. Тĕрĕслес, как шĕ, тĕрĕслес... Тĕрĕслеме недолгă... Счетовод, хăш бригадăн миçе ĕçкунĕ шутланат, каласа пар-ха!

Усламăв (кĕнеки тăрăх). Иккĕмĕш бригадăн 1928 кун.

К. председ (Шахторăва). Çапла-и иккĕмĕш бригадăн?

Шахторăв. Манăн çапла пулĕ те-ха, ес ыттисене ыйтса пăх-ха.

Усламăв. Виççĕмĕш бригадăн... 2210 кун.

К. председ. Çапла-и, Римă?

Римă. Улитта хăй çук, çаплаччĕ пулас.

Сасăсем. Çапла, çапла!

Шахторăв (счетовода). Есĕ, Усламăв, малтан пĕрремĕш бригадăнне каласа памалаччĕ, кайран пирĕнне.

К. председ. (йĕри-тавра пăхкаласа). Лариван!.. Ларива-ан! . Аçта тухса кайрĕ çав... Нихăçан та пуху вĕçне çитиччен лармаст вара çав... Счетовод пĕлет пуљ те ха...

Счетовод. Ларивансăр пуçне калама пултараймастăп... Ыран валљи шутласа хатĕрлеп, пайан ĕлкĕреймерĕм.

Шахторăв (Усламăвăн кĕнекине хăварт пăхса илсе). А ку мĕн: 2240 кун хăш бригадăн?

Счетовод. Пĕрремĕшĕн... Анчах кунта пĕтĕмпех кĕмен пулмала.. Карандашпа çеç çырнă... Ларивансăр пĕлместĕп.

Шахторăв. Тата пĕтĕмпех кĕмен-и?

Счетовод Тен тĕрĕс шутламан епĕ... Тепĕр хут пăхса тухас пулат. . Лариванпа согласоват тумала.

Римă. Ăçтан ун чухлĕ ĕçлеме пултарна есĕр: машинăсем йусасах иртертĕр вĕт ĕç вăхăтĕнче?

Шахторăв. Ун чухлĕ ĕçлеме пултарайман есĕр, куна Лариван йăнăш шутланă.

С Васлейĕ. Йăнă и пулсан шутласа пăх, ĕçкĕнекисене тĕрĕсле.

Шахторăв. А, ну кă. Васлей пичче, кăтарт кĕнекуна!

С Васлейĕ (çиленсе). Ме-ме-ме! . Пăх çке! (Кĕнекине кăларса кăтартать).

Шахторăв (кĕнекине пăхса). 295 кун! Епĕр виççĕн ĕçлесе те, 250 кун аран тултарнă, есĕр карчăкупа 295 кун ĕçленĕ. Сан карчăку ернере пĕрер тухайни? Пĕрер çĕркунне сана Лариван кивçенлĕ паман ши вара, хăйне сахалтарах кăтартса? А, сан, Прамун пичче мĕнчул?

Прамун Мана кĕнекине те паман-ха. Лариван пĕр кун çырса парап тесе илче те, халь те тусă параймарĕ.

Шахторăв. Ав йепле! Хăвăн сан, председатĕл, мĕнчул?

К. председ. Еп хам нумай ĕçлемен. Мĕн манран ыйтатăн? Ман правленинче ĕç нумай!

Шахторăв. Мĕнчухлĕ ĕçленĕ санăн çемйе, кăтарт?

К. председ. Што ес мана ревизи тăвас терĕн-и? Позволты к..! Собрани иртерме ан чарса тăр.

Шахторăв. Ах, вон как!.. есĕр ĕçхалăхне çапла лартма шуттынă?

3-мĕш курăнни.

Улиттапа ытти комсомолĕссем конференцинчен таврăнаççĕ.

Улитта (председатĕл патне пырса). Председатĕл! Мĕнле вăрттăн пуху туса Паљук піччепе Ахванисçе колхозран кăлармала тунă есĕр?

К. председ. Епĕ мар, весене РИК хушнипе пайанхи собрани кăлармала турĕ.

Римă Суйат!.. Пайанхи пуху законлă мар!

Улитта. РИК кăларма хушман, тĕрĕслеме хушнă: комиççине Ахванис çинчен елеклесе Лариван çырса панă, есĕ хушса лараканни пулнă.

Шахторăв. Ав йепле иккен!.. Колхоза тасатма санран пуçламала мĕн, Паљук пиччерен мар. (Хăпарса туртса антарат). Слезай, довольно!

К. председ. (йуняса). Еп сана куншăн суда паратăп.

Шахторăв. Ах, шампа! (Хуса çитсе тытасшăн, лиш тарат). Ниччево, йулташсем, лăпланăр... Улитта, веди собрание. (Чейсреххисем собранирен шăваççĕ).

Улитта (председатĕл вырăнне улăхса тăрса). Йулташсем! Пайанхи ĕç çинчен ыранах РКИ-не систерес. Пирĕн колхоз правлени — кулаксен ăшă йăви пулнă. Ыранах ревизи тăвас та, правленине салатас, айăплисене революцилĕ закон умне тăратас.

Римă. Хаçатра „Вутлă çĕлен“ кăтартнă кулакла елементсене колхозран пурне те сирпĕтес.

Сасăсем. Тĕрĕс, тĕрĕс!

Ш а х т о р ă в. Чи малтан пирĕн счетоводпа Лариванган пуçламаля: вĕсем ĕçкунĕсемпе сутă тума пуçланă текен сас пур йалта.

У л и т т а. Тĕрĕс калатăн. (Кĕсйинчен çыпăçтарса пĕрлештернĕ хут таткисене кăларат). Акă кунта тепĕр кулаксен докуменчĕ. Ку — Лариван çырса пăрахнă „ĕçкунĕсен хучĕ...“ (Усламăв тухса хуллен шăвасшăн. Çавнчах Шахторав ăна хуса çитсе чарат).

Ш а х т о р ā в. Стой, ăçта таратăн?. Попался!

У с л а м ă в. Ниçта та тармастăп... Тула тухса кĕме те йурамаст-и ĕнтĕ?

Ш а х т о р ă в. Давай кĕнекуня!

У с л а м ă в. По-жа-луй-ста... Жулик вырăнне шутлас тетĕр што-ли?. (Кĕнекине парат те, хай пирус чĕрткелесе, тухса кайат. Улитта, Римă, Шахторăв — виççĕш те счетовод кĕнекине Лариван хучĕпе танлаштарса пăхаççĕ).

П р а м у н (хуйхăрса). Пĕтрĕç ман ĕçкунĕсем, пĕтрĕçех!.. Ех, карчăк, карчăк, итлемерĕм еп сана маларах!.

Ч а р ш а в.

ПИЛЛĔКĔМĔШ ПАЙĔ.

Кустăрма Пађук анкартнйĕ. Ахваниçпе Улитта авăн типĕтеççĕ. Çурçĕр иртнĕ. Алтансем авăтни илтĕнет. Айакра радио музыка йантратат.

1-мĕш к у р ă н н и.

Ахваниçпе Улитта авăн умĕнче.

А х в а н и ç. Ех, Улитта, ес пĕлесчĕ: йепле хавассăн епĕр аттепе ĕçлеме пуçланăччĕ колхозра. А халĕ?.. Халь кунĕ-кунĕпе атте пуçне усса чĕлĕм туртса ларат. Пĕтрĕмĕр, ывăлăм, пĕтрĕмĕр, тет. Ма çыхлантăмăр çав колхозпа, тет. Çук, тек еп йалта пурăнмастăп. Кайатăп хулана, ăçта та пулин вырăн тупатăпах. Жалкă .. Всçетаки жалкă. Колхозра интереснăччĕ ĕçлеме. Пĕтрĕ... Пĕтĕмпех сÿнчĕ манăн шанчăк.

У л и т т а. Нумайях савăнаймĕç, шăпи тулнă вĕсен. Ыран пирĕн колхозăн ĕçне тĕрĕслеме прокурор килет. Завхозăн 120 пăт тухмаст. Суйа счотсем 300 тенкĕ йахăн тупрăмăр. Ревизине пĕтерсенех, правленине урăх çынсене лартатпăр

А х в а н и ç (авăн вучаххине уçса пăхса) Тепĕр каракне пăрахас пулĕ, варя çитĕ. (Кайса карак йăтса килет). Алăкне уç-ха, Улитта. (Улитта уçат, Ахваниç аван вучаххине анса кайат; тĕтĕм тухса пуçлат).

У л и т т а. Чĕрĕрех им вутти? Тĕтĕм тухса пуçларĕ.

А х в а н и ç (авăн вучаххинчен тухат) Фу.. куçа çийет... Йăмра тымарĕ çунасшăн мар, чĕрĕрех

У л и т т а (шаузăхыççăн). Военкоматран хут килмен-и-ха сан?

А х в а н и ç. Çук... Кулак шутнех кÿртрĕç пулĕ.. Ларивапа колхоз председателĕ турĕç çакна.

У л и т т а. Райкомра сан ĕçе çитес ернере пăхатпăр терĕç, сана та ун чухне чĕнеççĕ.

А х в а н и ç. Çынна пĕтересси нимĕн те мар мĕн: пĕри калат, тепри хушат — пулса та ларат.

Улитта. Тасалăх пурпĕрех çиййеле тухать — епĕ шанатăп. Йачейкăра сан ĕçе пăхнă чух пурте сана комсомол ĕретĕнче хăвармала терĕç. Сире колхозран кăлармалине РИК-ра çирĕплетни йăнăш терĕç.

Ахванис. Ех, Улитта! Мĕн пирки маншăн ес çавтерийех тăрăшатăн пур çĕрте те... Тен, епĕ чăнахах та сирĕн ĕретре пулма тивĕçлĕ мар?..

Улитта. Ех, Ахванис, Ахванис! Пĕчĕк ача пек ан йунтар, пуçна ан ус. Комсомолĕса пуçа усни килĕшмест.

Ахванис. Ес ман вырăнга пулса курман. Ман ăшри хĕлхеме пĕлместĕн. Çавăнпа çапла калатăн

Улитта. Пĕлетĕп, Ахванис... Йăвăр... Анчах çĕнтерессе епĕ шанатăп. Епĕр çĕнтеретпĕрех!

Ахванис (ĕненмесĕртерех). Çĕнтеретпĕрех?.. Ей, пурпĕрех — кирек-мĕн пулгăр. Чи çывăхри шанчăк ман сÿнчĕ, тен, епĕ ĕмĕргенпе те тепей курас çук. (Урăх çĕрелле тăрса кайат).

Улитта. Ахванис, мĕн калатăн ес?

Ахванис. Мĕн калатăп? Малашне епĕ саншăн йут пулатăп: ес комсомолка — епĕ... „раскулачĕннăй беднђак".

Улитта. Савнă Ахванис, йепле хăйса калатăн ес çак сăмахсене: санран çывăххи манăн урăх çуккине есĕ пĕлетĕн вĕт, мĕншĕн çапла калатăн?

Ахванис. Çук, Улитта, пирĕн хушăри шырлан ÿссех пырать.

Улитта. Ес йăнăшатăн, Ахванис: ĕлĕк епĕ сана хĕр чĕрипеле, йаш ачана савнă пек йурататтăм, халĕ — еп сана хамăн чи çывăхри тăвана хĕрхеннĕ пек хĕрхенсе, пĕтĕм чунтан ĕлĕкхинчен ытларах йурата пуçларăм. Савнă Ахванис, никам та, нийепле вăй та пире иксемĕре уйăрас çук Кирек-мĕнле инкек пулсан та, еп сана пăрахмастăп.

Ахванис (сасартăк савăнса). Чăнах-и? Есĕ чăн калатăн, Улитта? Еп сана йаланах ĕненнĕ, халђ те ĕненетĕп. Ес суймастăн, Улитта! Суймас ăн вĕт, йурататăн ĕлĕкхи пекех? (Ыталаса). Ех, Улитта. Сан сăмахусем мана çĕнĕрен вăй пачĕç: епĕ те шана пуçларăм. Епĕр çĕнтеретпĕрех!

Улитта. Иксĕмĕр пĕрле пулсан — çĕнтеретпĕрех!

Ахванис. Савнă Улитта! (Чуптăвать).

Улитта. Çитет. (Уйăрăлса утат) Кайас хăвăртрах, вăхăт нумай пулнă.

Ахванис (чарса). Чим, Улитта... Пирĕн кăмакари çĕрулмисем çунсах кайрĕç пулĕ... Мансах кайнă.

Улитта. Ой, чăнах та. (Авăн вучаххи патнелле чупаççĕ). Анса кăлар часрах. (Ахванис авăн вучаххине анса кайат, Улитта a ăкĕнчен пăхать). Картузна çунтарса йаратăн, Ахванис, асту.

Ахванис (картузпа йăтса тухать). Акă тыт, Улитта! Витĕр пиçсе çунсах кайнă.

Улитта (çиме пуçлаççĕ). Çуннине çисен упаран хăрамасть, теççĕ ваттисем.

Ахванис. Не-най...

Улитта. Ай питĕ пĕçерет-çке!.. Ну и тутлă та!.. Авăнта пĕçернĕ çĕрулми раснах тутлă вара. Ой, ес хуппипех çийен мар-и?

Ахваниç. Шуратма, хуппи çунса кайнă вĕт... Хăвах каларăнçке, çуннине çисен кулакран хăрамаст терĕн.

Улитта. Упаран терĕм еп. (айма тăрат). Ну, кăштах ăсатса яр. (Çĕрулми çикелесе утаççĕ).

Ахваниç. Килех çитерсе хăваратăп: хаљ авăн вăйлах çунмаст, астума та питех кирлĕ мар.

2-мĕш курăнни.

Ларивапа Усламăв çатан хыçĕнче сыхласа тăраççĕ.

Ларивак (лешсем кайсан). Кунтан лайăх самант епĕр тупас çук. Ахваниç ăсатса тавăрăннă çĕре пирĕн ĕçе пĕтерес пулат.

Усламăв. Ваçлей пичче хатĕр, систерессе çеç кĕтет... Аттене епĕ Прамунпа калаçса ларма шалаша кўртсе хăвартăм.

Ларивак Чуп! (Малала çавăтса килсе). Чим, чим!.. Кунтан çутă курăнмасăр ан чĕртĕр. Çил колхоз анкарти йенеле вĕрет, никам та йĕррине тупас çук. Ну, вĕçтер!

Усламăв (кайнă чух). Ĕнтĕ ыран пырса тĕрĕслĕр! Растратă пирĕн колхозра çук! (Сиввĕн кулкаласа кайат).

Ларивак (пĕччен). Чупгăвăрах ыгларах, савăнăр, комсомолсем!.. Ха-ха-ха!.. (Усламăва кайнине пăхса). Ех, Усламăв, Усламăв! Ытлашши усламшăн пултăн, чорт! Пăсрăн пĕтĕм ĕçе! Тарсан лайăхрах мар-ши? Çук! Пурпĕрех шыраса тупаççĕ: Усламăв выдават тăватех. Капла, ĕç ăнсан, епĕр айăплисене тупса паратпăр. Васкас... (Хăвăрт авăн вучаххине анса кайат; вăл ансанах Паљук килет).

3-мĕш курăнни.

Паљук. Ахваниç! Ахваниç тетĕп! (Йĕри-тавра пăхкаласа). Вутти аван çунат, хуралçи çук. (Уçă алăка курса). Ек-кей-ха, ку çамрăксемпе: пăрахнă та кайнă. Алăкне те уçах хăварнă, йе авăна вут тивсен..(Аван алăкне хупса çийелтен рогожапа вигет, вара чĕлĕм аврама пуçлат). Е-хе-хе-хе...(Анаслат, çав вăхăтра Ларивак айалтан алăкве тĕртет). Ак йапала, ывăла хупса лартман пуљ-çке епĕ... айалтан тĕртнĕ пекех туйăнчĕ...(Уçса пăхат). Ахваниç!.. Ахваниç тетĕп!.. Мĕн чĕнместĕн есĕ?.. (Ларивак хăвăрт сиксе тухса Паљука пăвса пăрахат. Паљук кăшкăрат).

Паљук. Кравул!. краву... (Тăнсăрланса шăвăрт пулат. Çав вăхăтра кĕлет айăккинчен Праски ыхлат).

4-мĕш курăнни.

Ларивак. Такам шуйган сĕгĕрсе килчĕ сана. Витсех каймарĕ пуљ те... (Тыткаласа пăхат). Паллама ĕлкĕреймерĕ пек туйăнчĕ... Таçта хурас, Ахваниç килсе ан тухгăр... (Йĕри-тавра пăхкалат). Йарас цăтăка... Тĕтĕмпе антраса вилнĕ, теччĕр. Никам та ман çинчен шухăшлас çук. (Паљук пиччене аван вучаххине пăрахат те, алăкне витет). Витсех хăварас (Сасартăк колхоз анкарти йенчен хĕрлĕ çутă ўкет). Ех... Усламăв, шампа! Каларăм, кунтан çутă куранмасăр ан чĕртĕр, терĕм. Пĕтĕм ĕçе пасаççĕ! Капла еп хам та лексе ларма пултаратăп. (Тарасшăн, анчах ун çулне Праски пўлет).

Праски. Тăр! Ăçта таратăн, Ларивак?

Лариван (шарт сиксе). Праски!.. Ес ăçтан килсе тухрăн?

Праски. Кравул кăшкăрнине илтсе. Кала, мĕн турăн ес старике?

Лариван. Кайран!.. Халь васкас пулать. (Тарасшăн).

Праски. Халĕ есĕ пурпĕрех ман алăра, Лариван. Халь пĕтĕм халăха кăшкăрса пуçтаратăп. (Паљук авăнне вут тивсе пуçлать). Ай, ес Ахванисçен авăнне вут чертнĕ! Старике вутта пăрахнă! (Хыттăн кăшкăрать). Пушар!.. (Ана Лариван аллипе хупласа вара кăшкăрма чарать).

Лариван. Ан кăшкăр, Праски!. кăшт та пулсан сана хăвна савакан Ларивана хĕрхен.. Праски, мана çăласси санран килет, пытар хăвăр пата.

Праски. Çук! Кăшкăратăп!.. Ес пĕтĕм халăх тыррине çунтарасшăн, йал-йыша выçă хăваратăн. Пирĕнпе йунашар авăна тĕртсе, пире те çунтарса йарасшăн! Кравул!..

Лариван (пăшалне кĕсйинчен кăларса). Кама та пулин пĕлтерсен, пурпĕрех чĕре йулас çук ес, Праски. Хама тытсан, ыттисем сире пĕтерессех: еп печчен мар. (Тарса йарать).

Праски (хĕрхенсерех). Лариван, Лариван!.. тытаççĕ вĕт сана. Тарса хăтлаймастан: ав иепле çынсем çĕмĕрлеççĕ, пурте кунгала чупаççĕ, пире курнă пуль вĕсем. (Лариван çатан урлă сиксесшĕн, Праски чарать). Ан аташ!.. Ата! (Кайала çавăтать).

Лариван (сасартăк чупса килекен Ахванисçе паллаcа). Ах, чорт, Ахванис кунталла чупать. Пире курнă пулмала, ăçта пытанас?

Праски (кĕлет çине кăтартса). Кĕлет хыçăкне питĕрмен, пăх... (Васкаса кĕлете пытанаççĕ).

5-мĕш курăнни.

Ахванисç питĕ хăраса хыпаланса чупса килет. Анкарти хапхи патĕнче чарăнса хыçалалла пăхать. Пушар вăйланать, сасăсем хытăрах илтĕнеççĕ.

Ахванис. Мĕншĕн ман хыççăн чупаççĕ-ха вĕсем? Ман çине шухăшламаççĕ-ши? (Сасартăк хăйĕн авăнĕ çуннине курса). Ай... пирĕн авăна вут йарса илнĕ! Алтене часрах вăратасчĕ! (Килелле чупать).

6-мĕш курăнни.

Сасăсем çывхараççĕ. Хăшĕ „пушар“ тесе кăшкăраççĕ; хăшĕ „тарать, тытăр“ теççĕ. Прамун пысăк алтуйипе малтан чупса килет.

Прамун. Кунта! Халăх, кунта часрах! Ав тарать, çавă чĕртсе хăварнă, çавă! (Çынсем хăвăрт Ахванисçе тытма чупаççĕ). Лариван пулмала, çавăн чупни пекех туйăнчĕ... Ав, Паљук авăнне те чĕртсе хăварнă... Сÿнтерес хăвăртрах! Шыв йатар! (Витрелисем пит чĕрĕлсех кайман авăна сÿнте ма пуçлаççĕ, кĕлтисене ывăтаççĕ).

7-мĕш курăнни.

Ахванисçе хĕне-хĕне чикелентерсе сĕтĕрсе килеççĕ. Хĕнекенписем Сухал Васçлейĕ, Çитăр кум тата ытти çавсен майлисем.

Ахванис. Халăх, еп айăплă мар!

С. Васçлейе (каласа пĕтеричченех Ахванисçе çапса автратса ÿкерет). Хам куçпа хам куртăм!.. Çавă!.. Ахванис чĕртнĕ!.. Ку ĕçе кулаксем туна! Колхозран кăларнипе, колхоза кураймасăр вут тĕртнĕ...

Хăйне вутта пăрахас, çунччăр,— кулак тавраш пирӗн хушăра ан пултăр!

Прамун (хараса ӳксе). Чимӗр, йал-йыш, Ахванис ӗçӗ мар ку. Епӗ Лариван тесе шухăшланăччĕ.

С. Васлейӗ. Йепле Лариван пултăр, вăл тахçанах килтен пăрахса кайнă... Ку Ахванисе тарнине еп хам лайăх куртăм. (Халăх шавлат).

Çитăр кум. Прамун, ес ху та куртăн вӗт ара: чипер шалашра иксӗмер лараттăмăр, сасартăк пирӗн умма хӗрлӗ çутă ӳкрӗ. Йăпăр йапăр сиксе тухатпăр. Йӗри-тавра пӗр çын та çук. Палюк анкарти йенеле пӗр шур кӗпелӗ çын чуп и курăнах кайрӗ... Ахванис пулмасан, кам пултăр врăх? (Сасăсем нке майлă пулса кăшкăраççӗ; хыçалта пушар сӳнтерме пӗрмайах çынсем чупа-чупа иртсе кайаççӗ).

8-мӗш курăнни.

Улитта тата унпа пӗрле ытти çамрăксем чупса килеççӗ.

Улитта. Васлей пичче, йепле хăйса аллуна çеклерӗн есӗ?

С. Васлейӗ. Пӗлетпӗр çке сире нумайранпа! Есӗр иксӗр пӗрле ӗçленӗ çакна: пӗри, пурпӗрех тырра туртса илеççӗ тесе, авăнне тӗртсе йараканни пулнă, тепри—пире кураймасăр, колхоз капанӗсене вут тӗртнӗ. Иксӗр ӗçленӗ есӗр çакна, иксӗр! Сире иккӗн пӗрле иртсе кайнине еп хам куртăм. Халăх! Мӗн пăхса тăмалли пур: пушар сӳнтернӗ çӗре чупас хăвăртрах... Айăплисене вутта пăрахас! Йăтăр „Вутлă çӗленне!“ (Васлей майлисем Ахванисе сӗтӗреççӗ).

Улитта. Васлей, есӗ ытлашши ӗрехсе кайнă! Йӗркине тупмасăрах халăха пăлхатас мар.

Васлей. Ахванис хыççăн кам йӗртлетсе килчӗ? Ес мар и? Халь вӗсем майлă пула пуçларăн и: иксӗр, виççӗр урапа тырă çунса кайсан, халăх выçă вилесси санăн авантах-и? Начар хурал тăнăшăн сана хуня пӗрле вутта пăрахмалла! Кулаксем хутне кӗретӗн, подкулачник! Нечево кулак йуррине итлеме! Айтăр колхоз анкартине: пӗтӗм халăх, умӗнче суд пултăр! (Ахванисе çавăтаççӗ).

Ахванис (пӗтӗм вăйран кăшкăрат). Тăвансем, епӗ айăплă мар!

Улитта. Ахванис! (Чупса пыраа ыталат). Çунтарма памастăп!.. Йулташсем, урса кайнă кулаксене мăшкăлама парас мар!.. Çăлăр Ахванисе! (Сухал Васлейӗ Улиттана çапса ӳкерет).

9-мӗш курăнни.

Шахторав, Римă тата ыттисем чупса килеççӗ.

Римă (Улитта патне чупса пырат). Ай, Улитта!..

Çамрăксем. Çунтарма памастпăр Ахванисе! Памастпăр!.. Памастпăр! (Ахванисе çăлма теçе чупса пыраççӗ, анчах çав вахăтра Праски хытă кăшкăрса килетрен чупса тухат).

10-мӗш курăнни.

Праски. Халăх! . Ахванис айăплă мар! (Сасăсем шăпăрт пулаççӗ: çав вăхăтра авăн вучаххинчен Палюк сасси илтенет).

Палюк. Хăтарăр!.. Кăларăр!.. Кравул!..

Сасăсем. Ку кам сасси?

Праски (хăй тӗлӗнсе). Ку Палюк пиччен сасси...

Сасăсем (шыраççĕ). Ăçта?.. Кунта... Килĕр... Авăнта... Çăлăр!
Ахваниç (ашшĕ патне чупса пырат). Атте, атте...
Прамун (телĕнсе). Кам.. Кам тунă кăна?
Сасăсем. Кам? Камăн ĕçĕ ку?
Праски (хăвĕнчен хăй ыйтса тавçарат). Кам?...

11-мĕш курăнни.

Шахторăвпа унăн йулташшисем Усламăва çавăтса килеççĕ.

Сасăсем. А, акă вăл!.. Авă кам?.. (Сухал Ваçлейпе Çитăр кум лапчăнса тар ççĕ).

Шахторăв (хыçалтан хуса çитет). Стой!.. Ăçта таратăр, кăвак сухалсем. (Иккĕшне те ĕнси çинчен çаклатса малала илсе килет).

Паљук (шыраса). Чимĕр-ха, тăвансем. Мана пăваканни ăçта?

Ахваниç Пăваканни?.. Кам?

Паљук. Лариван!

Сасăсем (тĕлĕнсе). Лариван?!

Праски (вăлтах тепĕр майлă пулса аллипе тĕллесе кăтартат). Кĕлетре!

Улитта (хăвăрт кĕлет алăкне кайса уçат те, аллипе халăх çине тĕллесе кăтартат). Тук!

12-мĕш курăнни.

Лариван васкамасăр тăвла утса тухат. Улитта умĕнчен иртсе кайнă чух, чалăшшăн пăхса сиввĕн кулса илет.

Праски (Лариван çине кăтартса вичкĕн чĕлхепе калат). Акă вăл — манăн йуратнă Лариван: вуг тĕртнине, Паљук пиччене пăвнине хам куçпа куртăм!

Лариван. Ех, сĕгĕрĕнчĕк! (Пăшалне васкаса кăларат).

Ахваниç (моменталљнă чупса пырса пăшалне тытса илет те, хăйне тĕллесе тăрат). Ут!

Чаршав.

УЙĂП МИШШИ.

ЙУЛАШКИ ШТУРМСЕМ.

ПОЕМА.

МАЛТАНХИ СЫПĂКĔ.

Ата, савни, улаха—
Чун савнине курмашкăн.
Савни пур та, унта мар,
Автосавăт кулалат.

(Ҫĕрпӳ р-чи йурăсенчен).

I.

Митинг пĕтет. Пурте никĕс валђи чавса хунă вырăна куҫаҫҫĕ. Никĕс валђи чавса хунă ансăр ҫĕр хушшине малтан Зимина, Жданав анаҫҫĕ. Весем тахлан пакет ăшне савăт никĕсне хунă пирки сырвă акта чиксе питĕреҫҫе. Унтан ăна чи тĕпне, чи малтанхи чул айне хурса цементпа витсе тултарса лартаҫҫĕ. Ҫапла ҫак савăт никĕсĕн малтанхи чуле ҫав акта ĕмĕр-ĕмĕрлĕх пусса выртса йăлла пулчĕ. Вăл ăна пулас сынсем валђи усрат... Тен, тепер пин ҫултан, ҫак вырăнта, халиччен йăлт урăх, ирĕклĕ телейлĕ ҫынсем ҫав акта тупса вуласа пăхĕҫ те, пайанхи кун ҫакăнта ҫапла чаплă уйав туса, пролетарин малтанхи патшалăхĕнче—Совет Сойуз£нче перремĕш автомобил савăчĕн никĕсне хуни ҫинчен пĕлеҫ...

„Асла пролетари революцийĕн 13-мĕш ҫулĕнче, пин те тăхăр ҫĕр вăтăрăмĕш ҫул, майăн иккĕмĕшĕнче, савăтри ĕҫлекен строителсем, Канавина, Сормăвă, Мускав, Дзержински, Балахна, Чулхула тата ытти районри ĕҫлекенсен делегацийĕсем, парти, профсойузсен тата Чулхула крайĕнчи тĕрлĕрен ытти организацисен представителĕсем умĕнче пулас автогигантăн пĕрремĕш чулне ҫакăнта хунă, ҫавăн ҫинчен ҫак акта ҫырнă“...

Татах чулсем хурса, татах цемĕнт йарса хытараҫҫе. Ҫĕнĕ автогигант никĕсленет. Катара, киве йăвăҫ тункатисене сирпетсе, снарйадсем сике сике кайаҫҫĕ... Тымар татăккисем, ҫер-тăпра тĕпренчĕкĕсем ҫӳлеле вăркăнса ывтăнаҫҫĕ, каллех хыттăн ҫĕре анса ӳкеҫҫĕ...

Кивĕ тункатасем сирпĕнеҫҫĕ. Кивĕ тункатасене сирпĕтес пулат. Вĕсем автогигант тума, ăна хăвăрт, вăхăтра туса пĕтерме чăрмантараҫҫĕ.. Вăхăче нумай мар вет, 15 уйăх!..

Митинг пĕтет. Тавранала халăх саланат. Умлă-хыҫлă автомобилсем халăха тийесе авкаланчăк ҫулсем тăрăх вĕҫтереҫҫĕ... Мотоциклетсем... Велосипедсем.. Халăх пуйăс ҫине сырăнат. Йулашки хут автогигант вырăнне, унăн ҫара уҫланкине пăхса йулатпар... Ку вырăна ун пек тумпала урăх нихăҫан та, нихăҫан та курас ҫук. Ку вырăнта урăх, хурҫăпа цемент тĕнчи ӳссе ҫитĕнĕ...

II.

Йал.
Йем-йешĕл вăрманччĕ.
Хумсем йăвавачćĕҫ
Ока тăрăх.
Ку вырăн ăва халĕ манчĕ.
Ăва ĕҫ аллийĕ хускатрĕ.

Тӳлекчĕ кунта.
Мăнастирччĕ.
Пурчче пуҫа таймали ..
Мĕн пур мăх-пăха халђ сирчĕ
Ĕҫҫынĕн хăватлă алли

Шăппăн утсене ҫеҫ кӳлеччĕҫ
Кунта мужиксем, манахсем.
Халђ пăравуссем ӳлеҫҫĕ,
Кĕрлеҫҫĕ халђ урăх сассем...

Калăр, ҫынсем,
Мĕн тăватăр?
Кам хуса килчĕ сире?
Ĕрлет тăрна-пуҫ—екскаватăр,
Кăшлат тăмла, чулла ҫĕре.

Кăрансем майсене тăскалаҫҫĕ,
Ҫĕклеҫҫе хурăҫ тимĕре.
Ҫынсем хире-хирĕҫ куласҫĕ,
Путаҫҫĕ пăспа тĕтĕмре.

Хăйăр турттараççĕ, кирпĕч...
Хĕп-хĕрлĕ тăм, извĕç, шапшурă.
Пăхма çук пăтравчăк хир пичĕ.
Мĕн çук-ши? Темĕн те пур.

Виçеççĕ, касаççе, шаккаççĕ...
Васкаççĕ, — ан йул, хыçалти!
Килет йерипен шуса касĕ,
Ĕçе пăрахмаст ĕçалли.

Кунне те çĕрне чарăнмасăр
Çĕре чават вăл, çăрат.
Вăрçат хастаррăн, майсăр
Хайăр та чаплă вăрçăра.

Çук, паранас шухăш мар ун
Çак çивĕч фронтра вăрçнă чух.
Парти!
Чакма ес хушмарăн,
Епир кайала чакас çук!

Ей, пуйăссем чупса шăвăр!
Кирлĕ! вас-кав-лă т-е-м-п!
Хăвăрт! Хăварт! Хăвăрт!
Устĕр çĕн гигант, çĕн етем!

Çилĕ! ан шăхăр ес, ан ур!
Пĕлетпĕр сан уссăр шавпа.
Ей, крансем, чăскаланăр
Васкавлăн!
Ыйтат ĕç çавна.

Анăç çунса тăрат ылттăнăн,
Кун ĕçре хăвăрт иртет.
Шаккăр, ĕççынĕсем, хыттăв!
Кĕтет çĕршыв савăт пиртен.

. . . .

Цехсем,
Ах, илемлĕ çке питĕ!
Çап-çут кантăкран палкăшаç.
Курсассăн чĕре таппи те
Васкавлăн хускатрĕăша

Усет гигант!
Вĕрет ĕç хĕрулĕ.
Усет гигант!
Ĕçе йăхăрат.
Цехсем ўссе ларчĕç çулĕ
Вунçичĕ уйăхра.

Ак, кĕтнĕ кунсем çывхараççĕ.
Ĕç йăвăр..
Ан усăр алла!
Хăшши пур:
— Йулмаст пуç...— хăраççĕ.
Чакаççĕ... кайала...

Хăшши пур:
— Пит йăвăр.. —
ахлаççĕ.
Вăсем ĕненмеççĕ мĕн.
Шăппăн кĕтесре йумахлаççĕ
Хайсем хăрана-çемĕн.

— Парти .. ытла та... васкатрĕ...
Шухăшлăр тĕплĕрех хавăр...
Çитмест ĕçлекенсен кадăрĕ...
Çук, çук... тăвайманăр хăвăрт...

— Ак, курăр:
Калатпăр тĕрĕс.
Епир çĕнесси айакра вĕт.
Ăçтан вăхăтра пĕтерес?
Цемĕнт çитмест .
Кирпĕчĕ .. грави.. —
Пуплеççĕ шăппăн кĕтесре.

Пăхаççĕ кайала...
Тухса шăванаççĕ ĕçрен...
Тараç хулана, йала ..

III.

— Кунта ĕç тухмаст.
Кунта ĕç йăвăр.
Савăта туччăр пирĕнсĕрех.
Иглĕр, ачсем, Сережа. ан çывăр,
Тухса шăвăнатпăр кунтан
Кĕçĕрех...

Пире вĕт тарсан та
Нимех тăвас çук.
Часах вырăн тупăпăр
Урăх çĕрте...—
Йалт йалт таврала пăхкалат
те Васук,
Ик-виç ачана шăвăнма хĕтĕртет.

— Хăвах шухăшла-ха:
Мĕне ак тăрат

Таса хут çивчи ĕç —
Пĕр-пĕр кăнчелерте?
Унта таса ĕç, çăмăл ĕç астарат,
Кунта... „рабочи стаж“ илĕртет.

Кунта çывăрма та çук вăхăт.
Куллен
Штурмсем,
Коммунă.
Ударник.
Черет..
Тĕп пултăр пурте!
— Ан кăшкăр, хуллен...
Такам сассисем..
Тахăш кĕрет. —

Вĕсем барака тарса килчĕç ĕçрен.
Алăра арча Хыçра кутамкка.
— Сыв пул, Автосавăт!
Кайран хăт.. çÿçрен
Килме сĕтĕрсен те..
Килместĕп ку тамăка...

IV.

(Кивĕ тĕнче йулашкийĕсем—
Киревсĕр те „илĕртÿле“ кĕтесĕсем...)

„Çап-çут илемлĕ ресторан,
Ытла ес ăшшăн астаран..

„Шап-шурă кăпаклă сăра,
Ăçтан хуйхă сирĕлĕ сансăрах?

„Пыр тăрăх йарăнан ерех,
Ăçтан сансăр савăн ĕмĕре?

„Йал-йăл кулан сĕтĕрĕнчĕк хĕр,
Ма савас мар сана кĕçĕр?

„Ав, музык ..Шуберт та Шоппен.
Хыттăн кĕрлет.. йухат шаппăн.

„Куçа çийет-çке капăрĕ
Чиган хĕрсенĕн... кабарэ...

„Умра пĕчĕк çавра эстрадă...
Курап, курап, ав, ес тăратăн...

„Аллуна чикнĕ кăсйене...
Куçу сан вăрттăн хĕсĕнет...

„Йухат илемлĕ серенадă...
Çук, манмăпăр кĕçĕр ăна та... —

Çавра сĕтел. Шурă çиттипе.
Черкке хыççăн черкке типет...

Йатаç черкке хыççăн черкке...
Ларат хăй ушкăнĕпе Çергей

Хĕрхенсе шурă аллине
Ĕçрен вăл шăвăнчĕ ĕнер.

Арман хуçи ывăлĕпе
Вăл тарса тухрĕ тилĕ пек.

„Ирех ĕçе тухап ыран“,
Тесе суйса мăн савăтран.

Çынсем çунаç хĕрÿ штурмра.
Вĕсен ерех черкки умра...

Çынсем ĕçре хавас тупаç,
Вĕсем ерех ĕçсе супаç.

Урмăш сассисене чăсса
Йурлаç хăйсем сурса, хăсса..

V.

„Ты жива еще, моя старушка?
Жив и я, привет тебе, привет...
—Ну, ĕçер-ха,
Сыпăр-ха пĕр ушкăн,
Çĕр çинче пĕрех пурăнатпăр вĕт..

Çĕр çинче пĕрех хут пурнат çын,
Пĕрех хут асап курса пурăнат...
Йавăр кунсем унне чĕрине ватĕçин,—
Хăйне май çапах телей пур ăна.

Пĕр сыпар-ха хăт мав йатпа йатса!
Хисеп парăр çамрăк ĕмĕре.
„Не такой уж горький я пропойца а-аа...
Чтоб тебя не видя умереть...“

Ах, Йесенин,
Мĕн тесе çырман вăл?

Пуçне çавăрман вăл камăнне?
Кам пĕлет:
— Ăста çŷрет-ши ман ывăл?
Тейĕйсе йĕрет пуљ ман анне. .

Анне, анне,
Ес çуратса ŷстертĕн,
Сахал мар йухтартăн ес куççуљ.
Пурнăçра хăт те мĕн чул
тŷс, — тертĕн
Вĕçĕ ун нихçан тупăнас çук пуљ.

Чун кŷтет.
Çынсем кулаççĕ темшĕн.
Кулливе тутисенчен çакĕç
Кулă мар хаљ пирĕн пек етемшĕн,
Ĕç пулассăн туйăнмаст çак ĕç

Хурçăлатпăр, теççĕ. çĕршыва та,
Çĕнететпĕр теççĕ, тĕнчеве.
Çут тĕнче,
Ес çав çавах-ха вата,
Çĕнетесси пулмĕ темчченех.

Улĕме шанаççĕ,
А жить когда же?
Пурăнмашкăн, савăнма хăçан?
Байанист! Ей, йара парччĕ ташă,
Кĕввŷпе ес кăмăла хуçан...“ —

Йăнăштарчĕ байанист ачашшăн
Пĕр мăн саслăн,
Пĕр вăрах çинçен...
Савăнăç çак виç тāват ачашăн—
Сиккелеççĕ пукансем çинче.

Йе каллех черккесене тытаççĕ,
Пуçсенче ташлат ерех сăра;
Йе пĕр харăс шаккаса йăтаççĕ:
Ĕçĕр, савăнăр, пулмĕ уссăрах!

Ну, сыпар тепре,
Ман йатпа йатса...
Хисеплер çак фамрăк ĕмĕре.
„Не такой уж горький я
пропойца,
Чтоб тебя не видя умереть ..“ —

Çынсем çунаç хĕрŷ штурмра,
Кусен ерех черкки умра.

Çынсем ĕçре хавас тупаç,
Кусем ерех ĕççе супаç.

Урмăш сассисене тăсса
Йурлаç хăйсем сурса, хăсса...

VI.

Çунат ĕç.
Еç мар, çапăçу ку.
Кунта ĕççынни çапăçат.
Никам та пиртен шеллес çуккă
Вăйа,
пĕлĕве те пуçа.

Писет шăранса çĕн етем
Пулин ĕç пысăк, ĕç йăвăр,
Ударник ыйтат ав темп:
Хăвăрт, хăвăрт,
хăвăрт!

Америк инженерĕ Стен
Кулса ĕнсине ав хыçат.
— Çук, ан кул,
Мĕн тăвас тен.
Сире хăваратпăр хыçа?

Йалтан килнĕ хĕр Марина.
Парат рекорд хыççăн рекорд.
— Авто пулĕ хамăрăнах!
Пире çитес çук сирĕн Форд.

Çулла питсенчен тар йухат. .
Çăмрийĕ касат-çке пите...
Васка, йулашки уйăха!
Васка, вара ĕç те пĕтет!

Çук, çук, ĕç пĕтмест.
Еç анчах
Пуçланĕ – пулсан савăчĕ хатĕр...
Штурмла, пролетари,
Ан чак.
Ĕçе хăвăрт-хăвăрт васкатăр!

VII.

Приказ: кĕскe те,
тŷрĕ те
Ывтăнчĕ ламран лама:
— Автогиганта, пурте,
Ĕçсене штурмлама!

Çисĕм пек çивĕчĕ сасă.
Чĕрийĕ хусканчĕ кашнин.
Приказ ку —
    парти приказĕ.
Саккун пирĕн —
    парти хушни.

Час хатĕр пулат автосавăт.
Ку — парти приказĕ — ĕçре.
Ун çулĕ çинче çирĕп тăрса вĕт,
Хĕрӳлĕ ĕçре вăл пиçрĕ.

Тин çеç ке унта апла марччĕ,
Тин çеç-ке унта пушă хирччĕ.
Мĕн пек мăн цехсем ӳссе ларчĕç,
Мĕн пек ĕççынни ĕçе хирчĕ!

Унта хаљ çунаççĕ пиншер çын
Хĕрӳлĕ ĕçĕн вуттинче
Курат ăна Сормăвă,
    Дзержинск,
Курат ман çĕршывăм, тĕнче.

Пит анлă Атланти урлă,
Детройт,
    Нйу-Йорк ĕçлекенĕсем, —
Пулин унта выçă, хурлăх, —
Ĕçлеççĕ гигантшăн пикенсех.

VIII.

Ир.
Калама çук ир иккен.
Тĕттĕм. Сулхам. Кĕр.
Çӳлте уйăх çеç хăйне ирĕккĕн
Шуса
    шухăшлат
        темскер.

Ир.
Калама çук ириç.
Ав. шуçăмран илт хыпара...
Вăл каталнă уйăха хирĕç
Сап-суттăн çиççе
Хăпарат...

— Смирно!
Ударниксем фул тăрăх
Виççĕн, виç утăм мала!
Есир пайан хисеплĕ пултăр, —
Йалавпала сирĕн тăмала!

Тухрĕç ударниксем виççĕн,
Йалавĕ вĕсен аллинче.
Пайан музыкин те кĕвви çĕнĕ, —
Хусканчĕ тавралăх инçе.

Ир.
Калама çук ир мĕн.
Мĕншĕн-ха сулхăм еппин?
Çĕрĕн, çĕрвуннăн, çĕрçирĕмĕн
Пухăнчĕç темиçе пин...

Вĕсемшĕн
Кĕр çуррăн çунĕ,
Вĕсемшĕн кĕр пулĕ
Ăшă май ..
Утаççĕ пиншер ĕççынĕ
Автогиганта пулăшма.

Ешалон-ешалонăн, вĕççĕр
Килет пролетари кунта...
Кĕрлет çĕнелме тивĕç çĕр,
Кĕрлет штурмлă шавлă кун та.

Çунат ĕç, ĕç мар,
Çапăçу ку.
Кунта ĕççынни çапăçат.
Никам та пиртен шеллес сукка
Вăйа,
    пĕлĕве те пуçа.

Ей, кам йулат?
Намăс вĕт,
Çавăтăр!
Кĕрешĕр хускалнă çĕрпе!
Ир — хĕрĕх пин.
Каçă — вăтăр,
Штурмлаç ĕçсене çĕрĕпе.

Çĕршер шăтăксем алтаççĕ,
Çĕршер шăтăксем тултараç.
Хăшпи пур: шăппăн ал тытаççĕ:
— Кам хăтăлат, — хăтăл... —
Тараç.
— Пур таркăна тапăттăмăрччĕ! —
Тесе ылханаç вĕсене.
...Карта тулли хăйăр-тăмччĕ,
Пайан вăл тасалчĕ тинех.

Тасалчĕ карта йăх-йахран.
Цехра ăпăр-тапăр пушанчĕ...
Тата тепĕр ик уйăхран
Савăт ĕçе кайĕ. Пур шанчăк...

Ир.
Калама çук ир иккен...
Тĕттĕм.
Сулхăм.
Кĕр.
Çўлте
уйăх çеç хăйне ирĕккен
Шуса
шухăшлат
темскер ..

Ир.
Калама çук ирис ..
Çут тухăç çунса чечекленет.
Хĕрўлĕ ĕçлĕ куна хирĕç
Мухтавлă çĕршыв çĕкленет ..

IX.

Кас.
Ĕçрен таварăннă халăх.
Таçтан илтĕн т айкашни.
Пурах кун касса ывăнмалăх.
Ай-ай, хыт ĕшеннĕ кашни...

Çут уйăх тўпе тĕпне кусрĕ,
Çут уйăх чупса хăпарах.
Бавса саламлат пуљ ку сире?
Шавла та пуçларĕ барак.

Барак лăпчăнат, лутра та вăрăм.
Вĕсем йĕркипе лăпчăнаç.
Çапла ĕшенсе ĕçрен таврăн —
Вăл ним мар ача-пăчана.

Пулин ĕшептернĕ йăвăр ĕç сире,
Çут уйăх вĕçсĕр хураллат.
Каç
Çăлтăрсен шучĕ вĕçсĕр,
Тăраç чўхенсе шăнкăравла.

Тăраç чўхенсе шутсăр, шутсăр...
Вĕсем асгараç пуљ йури?
Ăстан çамрăксем йурăсăр утчĕр?
Хăйех шăранат-çке йурри...

Çав вăхăтра пўртрен тух-ха:
Çамрăкланĕ тепĕр ват.
„Прясть-то надо туго, туго
И не обрывать..."

Каç.
Çăлтăрсен шучĕ çуккă.
Çăлтăр хĕр пек,
Куç пăват...
„Молодого друга, друга
Любить...
Не забывать..."

Вăраммăн, вăраммăн, уççăн
Сасă йухат каçхине.
Кам тунсăхлат çамрăк пуççăн?
Çак ĕç савăнмашкăн чĕнет...

Чĕнет савăнма, савмашкăн,
Çак ĕç йыпне, савнине...
Уйăх, ан кул, ан ашкăн!
Ан кур епир савăннине...

Лере .. çĕкленеççĕ çўлĕ
Вăрăм те пысăк цехсем.
Шухăшла-ха: ĕçленĕ мĕн чулĕ?
Çавна чĕрўпе ес сиссем..

Цехсем инçетре çĕкленнĕ.
Çĕкленнĕ лере соцхула.
Пиншер çутăпа чечекленнĕ
Каç тĕттĕмне пула.

Електричĕствă вĕççĕр, вĕççĕр...
Çиçеç чўхенсе шăнкăравла.
Пулин, çăлтăрсем те кĕвĕçчĕр —
Пире хамăр çутă хураллат...

Пулин. çапăçман пултăр епĕр
Хăрушă траншейсенче.
Хаљ çапăçатпăр, кĕрешетпĕр
Çĕршывăн мухтавлă ĕçĕнче.

Пулин, ўлĕмĕн пуљă хăрушшăн
Пирĕн пуçсем тăрринче.
Хаљ çапăçатпăр уншăн,
Тăватпăр çĕнĕ çутă тĕнче...

Мĕн пек çĕкленеççĕ çўлĕ
Вăрăм та пысăк цехсем!
Шухăшла-ха, ĕçленĕ мĕн чулĕ?
Çавна чĕрўпе ес сиссем.

Вĕт епĕр ĕçленĕ пурне те,
Вĕт хьмăр, çак алăпа:
Йурла, тивĕçпе йуррине те
Хастарлă вăй-халпа...

„Прясть-то надо туго, туго
И... не обрывать...
Молодого друга, друга
Любить, не забывать..“

Пăхатăн:
Ĕç куç тулли.
Йуррийĕ çĕклет кăмăла.
Пăхатăн: савнийĕн кулли...
Ăбтан тупнă ес ку мула?

Мул кирлĕ мар-çке пире.
Мулĕ те хамăр епир.
Савар пурнăçри шеп ире,
Телейлĕ çамраклăх — ир.

Сиксе шăранат-çке йурă,
Пулин касĕ тĕıтĕм, хура...
Йурлар!
Пирĕн пурнăç мĕн пурĕ —
Ĕçре те... йурăра...

Пире революци çуратнă
Парти пăхса ўстерет.
Хастарлă ĕççамрăк, куратна:
Савма, кĕрешме пирĕн черет...

... Пулин, ĕшентернĕ йăвăр ĕç сире —
Пире уйăх çеç хураллат...
Каç...
Йурăсем йухаç вĕççĕр...
Чĕтреççĕ сассем шăвкăравла...

X.

Çамрăк ĕçре савăнат.
Çамрăк —
Хавасла йышра.
Ех, пĕр савасчĕ çавна!—
.. Хура куçлă хĕр шухăшра...

Ех, пĕр савасчĕ ăна!—
Çырла пек пиçен илемĕшĕн.—
Вăл тыткăнларĕ чуна,
Вăл тыткăнларĕ темшĕн...

Ех, савасчĕ çавна, —
Тăрат вăл купăççăпа.
Курсан ăна чўн савăнат,
Йунăм вĕрийĕн чупат...

Çавă вăл—пирĕн бригадир.
Çавă — хастарлă чĕре.
Харăс пурне тăратат ир,
Вăл никамран ир ĕçре.

Çавă вăл килсеччĕ хиртен,
Хăйусăрччĕ, чĕнместчĕ.
Ĕçре ирттеретчĕ пиртен.
Пирĕн... йулас килместчĕ...

Ĕçлеттĕмĕр тимлĕн пĕрле,
Умрах ак, çĕклевчĕ савăт.
Пĕрлех кантăрла йе çĕрле
Штурмлаччĕ ĕçе — вăл çавă.

Ўсет çĕнĕ пурнăç çурчĕ.
Хастарлăх ыйгат сынсенчен.
Çавă вăл лодаре сурчĕ:
— Тăшман ес! тесе
Куçĕнчев.

Çавă вăл —
Манăн чуна
Хыт тыткăнларĕ темшĕн...
Ех, пĕр савасчĕ ăна
Хĕрўлĕ хастаршăн,
Илемшĕн...

Ех, пĕр савасчĕ ăна,
Вĕри-çке пит увăн чĕрийĕ.
Курсан ăна чун савăнат,
Йунăм чупат вĕрийĕн...

Çамрăклăх — пурнăç çурĕ.
Пурнăçри шеп ир.
Пурнăç пирĕн — йурă,
Хамăр та — йурă епир.

Кам халĕ вăл йурра мантăр,
Кам ăна йурлавă хаљччен?
Никам вăл йурра йурламантăр.
Епир çĕр çине килеччен!

Çамрăклăх — пурнăç çурĕ.
Пурнăçри шеп ир.
Пурнăç пирĕн — йурă
Хамăр та —
Йурă епир.

Çамрăк
Еçре савăнат.
Мĕн пек йанăрат йурриĕ...
Ех, пĕр савасчĕ çавна,
Ех пĕр савасчĕ
Вĕрийĕн...

XI.

Ах, уйăхĕ, уйăхĕ, уйăхĕ!
Вăл çуттăн çиççе тăнă чух,
Ăçтан халĕ шăпчăкĕ çуйăхĕ?
Вал вăрмана вăратас çук...

Çут уйăх тўпе тĕпне кусрĕ.
Çут уйăх, чупса хăпарах!
Савса саламлат пуђ ку сире,
Унпа йăпанат ав, барак.

Барак лăпчăнат лутра та вăрăм.
Вĕсем йĕркипе лăпчăнаç.
Çапла ĕшенсе ĕçрен таврăн —
Вал ним мар ача-пăчана.

Хăйусăр
Йалтан килнĕ халăх.
Хăйусăр пулмашкăн килменччĕ.
Хађ пур-çке ĕçре хăнăхмалăх.
Çухалнă хăйусăр.
Именчĕк

Кашни малганах кăрккаччĕ.
Хађ... Çĕр саслă барак тулли—
Барак тулли çамрăк хĕр-каччă,
Барак тулли хĕр-каччă кулли.

Ĕççамрăкĕн çывăх йулташĕ
Сас пачĕ, ав —купăс çинçен.
Шăмшак хăй ныйтат пуђ ташă?
Хĕрет йун ура тĕпĕнчен.

Ачасен куçĕсем хĕмĕн çиçрĕç.
Хĕрĕсем —
Хĕрў халăх. Хастар.
Кăнтăрла —
Алсенче çунса пиçрĕ ĕç.
Каччуна хађ хĕр куçĕ астар.

Çухăр, купăс!
Çиçет çамрăк кăмăл.
Çухăр, купăс!
Савнин пек сассу.

Тухрĕ Петĕр.
Ури-алли çăмăл.
Ех, ташлат,
Урай те пур, те çук...

Тухрĕ Петĕр —
Кĕтўçĕ, батрак.
Ташăсти çав, — пулин хăй çук
çын.
— Ак çапла ташлаç пирĕн пат-
ра! —
Тет батрак, — автосавăт хуçи.

Таврара —
Çамрăксем кăшăллавнă.
Пичĕсем çутăлаççĕ кашнин.
Купăççин пичĕсем шăрçаланнă.
Хăлхара—хавас йыш айкашни.

Йара пар!
Шăмшакку, Петĕр, çăмăл!
Йара пар, çамрăк йун хĕрнĕ чух!
Çухăр, купăс!
Çиçет çамрăк кăмăл.
Çухăр купăс!
Савнин пек сассу...

XII.

„Ей, тухмала,
Çи-тăр кум-мал-ла!
Каçпултттипе сиккипе,
Ыраш пусси хĕррипе.

„Айта, инке, вăрмана
Хура çырла пуçтарма.
Хура çырла пыл пекех,
Пирĕн инке чун пекех.

„Пирĕн инке пулмасан,
Кăмалу та тулмĕ сан.
Айну! Йара пар'
Айну, Айну!
Айну!

Ташша илет Петĕр ман.
Вăл нихçан та ыйттарман.
Ей, ташла!
Ей, йурла!
Ўсĕрле мар, уралла!

Урӑ ҫыннӑн ури те
Ташша тимлӗн тӗпретет.
Тӑпӑртатса шурӗ те:
— Манпа тухӑр тепри! — тет.

Тапӑр, тапӑр ташшине—
Ташлама шеп ҫӑмӑлла!
— Пӗр чӗнесчӗ тахшине,
Кам-ши мана кӑмӑллат?

Атӑл хӑви авӑнат те
Ҫилӗ вӑш вӑш вӗрнипе.
Каччӑ чӗри савӑнат те
Ури-алли хӗрнипе.

Ҫӑлтӑр ҫуттӑн ҫуталат
Ҫутӑ уйӑх савнипе.
Хӗрӗн куҫӗ ҫутӑлат
Каччи хыт савӑннипе.

Петӗр, Петӗр кускалат,
Урай хӑми чӗтренет.
Савни тути йӑл кулат,
Ирӗлтерет чӗрене...

Петӗр таврат ҫаннине:
— Хӑшӗ сават? Килӗр! — тет.
Хӑй йуратнӑ савнине
Куҫа хӗссе илӗртет.

Петӗр тапат урине:
Хӗрнӗ йунне чараймаст.
Савни куҫӗ хурине
Чӗрипе ытараймаст..

Ури урлӑ пускалат,
Урай хӑми чӗтренет.
Савни тути йӑл кулат —
Ирӗлтерет чӗрене..

— Кармӑш-касси Карачӑм
Ҫичӗ пиние пуйнӑ тет.
Манӑн мӗнле пуйас-ши?
Ҫак кармуҥпе пуйас-им?
Ата, карчӑк, йара пар!
Уру сан, ҫӑпату — ман...

...Чӑтаймарӗ купӑса —
Тӑчӗ Ҫӳлӗ-Ту хӗрӗ.
Вӗттӑн-вӗттӗн ку пусса
Йӑкӑртатса тухрӗ.

— Пӳрт пур, хампар пур,
Тватҫӗр ҫурӑм кантӑр пур.
Кайас терӗм каччине,
Илекенӗ пулмарӗ
Йурӗ пире Муш-касси те
Ҫапах арӑм пулӑпӑр.

Кӗр-кӗр! кулат кӗрлесе
Хӗр-каччийӗ харӑссӑн.
Ан кӗт ташӑ сӳрлессе —
Чупса кӗрсе тӑрӑсӑн.

Картлӑ купӑсӑн миххи
Карӑнат те пӗрӗнет.
Хӗрӗн хитре ик ҫӑмхи
Куҫа пӑват пирӗнне.

Пичӗ пиҫӗ те тулли...
Ҫырла пиҫсе пулнӑ пек.
Ех, илемлӗ-ҫке кулли!
Пит хитре хӗр кулнипе.

Хитре хӗрӗ хӑва пек
Таш ҫеммипе тайӑлат.
Тайӑл! Ҫылӑх-сӑвапӗ
Пурте хамӑрта йулат.

Епӗр тытнӑ ӗҫсене
Тӗплӗ, тимлӗ ӗҫлеме.
Епӗр тухнӑ ташшине
Пуҫа тайса вӗҫлеме.

Ай-ну штолӗ!
Пултараймаҫ штолӗ?
Атӑл хӗрне ансассӑн та
Пул тытаймӗҫ штолӗ?

XIII.

Сасартӑк уҫӑлчӗ алӑк,
Кӗчӗ пӗри чупса.
— Ей, хаваслӑ халӑх,
Пӑрахӑр-ха купӑса!

Ташша ташлама кайа йулмӗ.
А-ну! Йунсем сивӗниччен!
...Пӗр ҫын пек шӑпах мӗн пур
пӳлӗмӗ.
Пӗри ҫеҫ калат — пӗр пӗччен.

Çил хумсене хускатрĕ.
Ока тулхăрса тулăнат.
Хумсем йăванаççĕ Ока тăрăх,
Хăват парат Атăл ăна.

Шывĕ çӳлĕрен çӳлĕ...
Шывпа витĕнет-çке сыран.
Гавăңре пурлăх мĕн чулĕ?
Кирлĕ ĕçре кĕç ыран...

Ăна ирччен шыв витĕ,
Айтăр çавна çăлма!—
...Чарăвчĕ купăс кĕвви те.
Сӳнтерчĕ чĕрери çулăма

Çук, сӳнтермен, сӳнтермен!
Пурте каларĕç:
— Атăр!
Хăçан епĕр мĕне çĕнтермен?
Йалан çапăçмашкăн хатĕр!

А -ну! Кам чĕри хĕрӳлĕ,
Камшăн ĕç асап-хурлăх мар,
Ман хыççăн!
Найавни йулĕ.—

...Авчах, пĕр никам та йулмарĕ.
Камсем çак пайан ĕçрен тарĕç
Пите çĕлесе кĕççе?
— Ей, купăсне йурлаттар ес,
Хаваслăн тухмашкан ĕçе!

XIV. Ĕç маршĕ.

Утăмсем хăвăрт та çирĕп,
Çирĕплĕх — хурçăла.
Пурĕпĕр пирĕншĕн каç, ирĕ,
Сивĕ хĕл, çур,
çулла.

Пирĕншĕн
Пур вăхăт та пĕр.
Питсенчен тар-и сăн?
Хытăрах, хытăрах тапăр,
Харăссăн, харăссăн!

Пирĕн хастарлăх хĕрӳвĕ
Питсенчен сирпĕнтĕр.
Кашни утăм — çĕнтерӳ вĕт,
Епĕр чăн çирĕпрен-тĕр.

Сирĕппĕн, çирĕппĕн утăр,
Сулăмлăн сулса
алла.
Çăмăр та, йурĕ те çутăр,—
Ан пăхăр к а й-а л-л а!

Ан пулăр вăйсăр, хăйусăр,
Хăйулă, хастар пулмала.
Харăссăн, харăссăн пусăр,
Харăссăн — малала!

Кам кайа йулнă — çавă'г,
Ан уак, ан йул хыçа.
Хамăр кунта хуçа вĕт,
Хамăр кунта — хуçа.

Вăхăт кун пек çеç-и пулнă?
Вăхăтсем пулнă хĕрӳ.
Сисетĕп: хаҌ санăн та тулнă
Çав хастарпа чĕрӳ.

Сисетĕп: кăвар пек есĕ.
Хĕрӳ йун ăшра куçат.
Çак ир пуçăма пĕкес-и?
Çак ир усас-си пуçа?

Музыкă уççăн, кĕмĕл саслăн,
Хускатрĕ тӳлек шăп ире.
Пинĕн, пинĕн, хавассăн
Харăс утмашкăн пире.

Утаççĕ иншер пролетари,
Курма та çук хамăр вĕçе.
Çапла вăл тухат еççарĕ,
Çапла вăл тухат ĕçе

Утăмсем хăвăрт та çирĕп.
Çирĕплĕх — хурçăла.
Пурĕпĕр пирĕншен каç-ирĕ,
Сивĕ хĕл, çур, çулла.

Пирĕншĕн пур вăхăт та пĕр:
Питсенчен тарĕ-и сăн?
Хытăрах, хытăрах тапăр,
Харăссăн, харăссăн!

Епир çак тĕнче хуçи мар-ши?
Пирĕнте мар-ши унăн шăпи?
Хыттан йанрат ĕç маршĕ:
Епир, çĕр хуçисем, епир!

Кам ĕненмест — курсамăр:
Епир вĕт пĕр йыш, пĕр чĕре.
Ĕçре çĕнететпĕр хамăр,
Ĕçре çĕнететпĕр çĕре!

XV.

Ой, ĕçри кунсем!
Кам савмаст сире?
Хĕрÿлĕ ĕçсем —
Пирĕн пурнăç пек.
Çĕнтерет, ÿсет,
Чăрмава сирет,
Кур, ак ĕççыввни,
Ес мĕн турăн ĕçпе?

Ой, ĕçри кунсем!
Кам манĕ сире?
Хĕрÿ кунсене
Камсем манччĕр-ши?
Çур Европипе,
Инçе Азире
Ĕç симфонийĕпе
Кĕрлет ман çĕршыв.

Çур Йевропипе,
Инçе Азире —
Етем пурнăçне
Сăвăлан ÿсĕм...
Вăйлăн кисретсе
Сарлака çĕре
Ав, утаç, утаç
Ĕç колоннисем...

Ав, утаç, утаç.
Çĕнтерсе пурне.
Килчĕ çĕр çине
Тивĕçлĕ хуçи.
Кĕрешÿ йурриве,
Çĕнтерÿ йурриве
Йавратаç инçе.
Йурă — вутпуççи.

Вăл кăвар сапат
Кашнин чĕриве.
Вăл çĕклет пуçа,
Çурат тĕвчене.
Мĕн пур пусмăра — —
Пур тенчериве
Пĕтерме хушат
Çунтарма чĕнет..

Ока, чуп, хумхан,
Шавла, сĕм вăрман!
Ут, хастарлă йыш,
Пиç хĕрÿ ĕçре!
Кам пуçне пайан
Çак ĕç çавăрман?
Кам уншăн савмаст
Çак сулхăм çĕре?

Сулхăм çĕр. Тĕттĕм.
Тĕттĕм те хура
Сасартăк çурат
Тĕттĕме çиçĕм...
Çамрăк çар утат.
Йавратат йурра
Кунта — хĕр-качча
Йурăсăр кичем.—

Йурлаç харăссăн —
Кăтартса вăйа:
Çĕмĕрес вăрмана,
Сĕм тĕттĕм уйа.
„Ей-ей, Дуня,
Дуня-я-а!
Дунька красная моя-я-а...“

Питсенче çиçет.
Чĕрери хастар.
Чĕрери хастар
Питсенче çиçет.
Йурă, йанăра!
Тĕнчене кастар!
Кăмăла çĕкле
Утнă чух ĕçе!

Йурă, йанăра,
Вăрмана вăрат.
Вăрмана вăрат,
Йурă йанăра.
Çамрăк сасăпа
Хусканат тавра
Сиксе çурăлат
Йан та йан,— „урра!“

Сиксе çурăлат
Йан та йан „урра“.
Сиксе çурăлат
Çĕршер çăвартан.
Сăмăллăн утат
Сулăмлă ура,

Чӗре — ӳтрен мар,
Вӗри кӑвартан...

Кам ҫак ушкӑнра —
Телейлӗ шӑпа,
Ушкӑнра телей.
Тунсӑхлан пӗччен.
Йура йанӑрат
Ҫӗршер сасӑпа.
Уҫӑ сассисем
Ҫамрӑк та чечен...

Хӗрӳлӗ ёҫре
Ҫамрӑклӑх вӗрет.
Ҫивӗч кӗрешӳ
Хурҫӑлат ӑна.
Тимӗр-хурҫӑлӑ
Музык кӗвӗре
Ман ҫӗршыв ӳсни
Хӑпартат чуна.

Ой, ёҫри кунсем!
Кам манӗ сире?
Вӗри кунсене
Камсем манччӗр-ши?
Большевиксем ав,
Ҫӗнетеҫ ҫӗре.
Еҫ ҫимфонийӗпе
Кӗрлет ман ҫӗршыв...

Чулхула — Шупашкар.
1931—1933 ҫ. ҫ.

Е. ЕЛЛИЙЁВ.

ЙЫШРАН УЙРĂЛСАССĂН.

КАЛАВ.

I.

Çын çынахчĕ пирĕн Питтай. Йал хушшинче, чăнах, пит пысăк хисеппех пурăнмастчĕ ĕнтĕ, пурте ырă сунса хисеплесси çукчĕ, анчах пурте ăна ăслă, тăнлă çын тесе шутлаччĕç, йăваш çын тесе кураччĕç. Чăнах, вăл хăй те йăваш çын пекехчĕ: çынпа вăрçнине, харкашнине, пули-пулмишĕн тилĕрсе кайнине никам та унтан халђччен илтмен. Ĕçкĕре те, ĕçре те, халăх хушшинче те çынпа урлă пулма йуратмастчĕ вăл, çукшăнах нихăçан та сиксе тавлашмастчĕ, çукшăнах сăмах тавăрмастчĕ Калаçас пулсан та, малтан йăл-л! кулса илеччĕ, калăн, калатчĕ: „епĕ сана усал тумастăп, есĕ те манпа ырă пул". Анчах йăвăрччĕ темшĕн вăл кулнă чух ун çине пăхма. Йаланах вăл çапла: хăш çын хăй куллипе туртат, каçхи хĕвел пек çемçетет, илĕртет сынна, хăш çын вара, мĕн тĕрлĕ ăшшăн кулас тесен те, тартат çынна, çыхăймаст хăйĕн çумне, вăрçнă пекех пистерет, илĕртмест, — сивĕтет. Çапла ĕнтĕ кулатчĕ Питтай. Вăл мĕн тĕрлĕ култарас тесе калаçсан та, никам та кулмастчĕ, кулнă пек тусан та, ирĕксĕрри, кулас килменни палăратчĕ. Чейе, ăслă çынсен, ăшĕнче урăх шухăш пур çынсен кăна, кулу çапла тухат пуђ. Питтай та çав ăслă çын пекехчĕ, сăнĕ-пусĕ те ăслă çыннăнни пекехчĕ: икĕ пĕчĕккĕ хĕсĕк куç сарлака çамка айĕнче, — çын çине вара сахал пăхатчĕç вĕсем; ушкăнга калаçнă чух кăна, йе пĕр итлекен çине, йе тепĕр итлекен çине кĕскен тĕлленсе чарăнатчĕç. Унтан тата таратчĕç вĕсем час çын калаçма пуçласан, йе çын пĕр-пĕр йапалапа мухтанма пуçласан, унчух вара тэм парсан та, çын çине пăхмастчĕç. Сăмси сăмса пекех ĕнтĕ, хăлхи те, тутисем кăна хулăнђахчĕ пăртак, тата măйĕ тавра йаланах тутăр çӳретчĕ, — йухат тетчĕç-и çав унăн мăйне?

Тӳррипех каласан, çав йалсовет председателне кĕриччен, ăна халăх астусах та кайман. Питтай! Питтай! Мĕн-ха унăн астумали? Çĕрме пуйан мар вăл, йал куштанĕ мар. Йал хушшинче нумай-çке-ха вăл: пĕр-пĕр вырăна кĕриччен курмастăн та вĕсене астумастăн та... Çитмĕнвине тата Питтай çынпа паллашма йурататчĕ çын ун патне хăй малтан пырсан çеç, çын ăна ăшшăн чысласа чĕнсен çеç. Ахаљ, çынна начаљник мар çынна, паллах, апла чĕнекен çук çавна кура Питтай çынсенчен, пуринчен ытла аслăрах, вырăнти çынсенчен пăрăнарах çӳреччĕ. Çавăнпах-тăр тата вăл нихăçан та, нимле праçникре те çынпа пĕрле пĕрлешсе, кампани туса ĕçсе çӳреместчĕ.

— Ҫын йеверлӗ ҫын-и ара вӑл? Ӗҫет-и сана ҫын пек,— теттӗҫ вара Михалу ӗҫкисевче Питтай урӑх килӗпче ларнине курсан. Хӑш чухне кӳршисем ирӗксӗр ҫавӑтса кӳртсе ӗҫтерсен, вара каҫсах кайатчӗ, ҫавӑнтах хӑйӗн патне илсе кайса икӗ хут, виҫӗ хут ытларах ӗҫтеретчӗ. Кӑмӑлӗ унчухне унӑн ҫав тӗрлӗ ҫемҫелеччӗ ӗнтӗ; унчухне ҫын мухтаннине те йарӑнсах итлеччӗ. ҫын калаҫнине тӑнлаччӗ – мӑнкӑмӑллӑхне пӗтӗмпех манатчӗ вара. Хӑй мухтаннине курман.

Ахаль чухне ҫынпа пит калаҫмастчӗ ҫав. Калаҫма тӗлӗ те питех ҫукчӗ. Ҫынна нимӗнпе те йалӑнман вӑл. Ҫими унӑн йаланах ҫитсе пыраччӗ. Вӑл пӗлмен римисла ҫукчӗ. Пӳртри тавраш-и, тултине-и,— пурне те хӑй йусаса, хӑй туса, хӑй ӗлкӗртсе пыраччӗ. „Ҫавна туса пар-ха“ тесе ҫын патне нихҫан та кайман. Мӗн пурне пултаракан етемччӗ ӗнтӗ.

Унта тата тепӗр йапала илтнӗччӗ еп ун ҫинчеп. Тырӑ вырнӑ чухне, имӗш, вӑл вырма тытӑниччене хӑйӗн ҫемйинчи кашни ҫынна уйрӑм-уйрӑм виҫсе параччӗ, тет. Пысӑккине те, пӗчӗккине те пӗр виҫе.

— Пурпӗрех ҫӑкӑр ҫийеҫҫӗ — ӗҫлеччӗр!— тетчӗ тет вара тӗмерсе арӑмӗ пӗчӗккисен хутне кӗрсен. Унтан вара урӑх нимӗн те чӗнместчӗ, тет. Унтан вара, кам та пулсан малтан вырса тухсан, йе хӑй тухсан, никама та пулӑштармастчӗ тет, хӑй те пулӑшмастчӗ, тет. Ҫемйи унчухне унӑн пысӑкчӗ, йӑмӑкӗсем пурччӗ. Халӗ йӑмӑкӗсем качча тухса пӗтрӗҫ. Пурӑнатчӗҫ вӗсем арӑмӗпе, Чакакпа, иккӗшӗ анчах. Ача тавраш ҫукчӗ вӗсен. Пӗр ре пулнӑ тетчӗҫ те, вӑл та вилӗ ҫуралнӑ пулнӑ.

II.

Тенепле ҫав ҫын лекрӗ председателе, „кӑмиссара“ — пирӗн йал етеммисем каларӑшне. Суйласса, тӗрӗс, ӑна хыпалансах суйламан. Малтан исполнителе вӑл кӗнӗ Паллах ӗнтӗ, ун пек ҫын — лайӑх исполнитӗл: пурне те вӑл тӗплӗ тунӑ, хушнине итленӗ, ҫынна та итлеттерме пӗлнӗ Ҫавӑн пирки ӑна йалсовет члене туса хунӑ. Унчухне те вӑл ӗҫе йарӑнса ӗҫленӗ, тумалине тунӑ, пуҫтармалине пуҫтарнӑ, мӗн пур ӗҫе йӗркелӗ илсе пынӑ. Ҫав хушӑра йалсовет председатӗлне растратӑ тунӑ пирки суд аллине пачӗҫ. Кам пулат-ха ун вырӑнне? Пур пек партийцӑсем шатах ытти ӗҫре. Йе колхоз председатӗлӗ, йе урӑххи... Камаха суйламала? Пурте час килӗшрӗҫ: суйласа хумала Питтайа — вӑл ӗҫлеме пултарат, ӗҫе пӗлет... Тата мӗн кирлӗ?

Председателе кӗрсен те, тен, ҫаплах пӗрмай ӗҫленӗ пулӗччӗ хашпӗр етем. Анчах Питтай хӑйне пер тӗрлӗ етем пулнӑ ҫав. Тӳрех каламала, хӑш ҫынна вӗт тӳрех ҫӳле лартсан, темскерле пӑсӑлат вӑл пӗр авкана Пуҫӗ ҫаврӑнат темеле и унӑн аларри ирӗкпе йе хӑйне тытма вӗренсе ҫитеймест-и, мӗнле-тӗр — ӑна-кӑна пӗлместӗп, анчах пит лайӑх пӗлетӗп: ҫавӑн пек чир, ҫавӑн пек „головокружение“ пулкалат тӑтӑшах. Хӑшӗ вӑл вӑхӑта аҫаплах иртттермест, кӑшт „чирлет“ те, иртет унӑн. Сисеймеҫҫӗ те ӑна ыттисем. Ун хыҫҫӑн вара ҫав пуҫлӑх тата авангарах ӗҫлекен пулса кайат. Анчах хӑш пуҫлӑх вара вӑйлӑ

чирлет, вăраха кайат унăн чирĕ. Çын тўрлетмесĕр, операцисĕр тўрленме те пăхмасть. Çавăн пек тамаша пулчĕ те пирĕн Питтайпа.

Председателе кĕрсен, пĕр-ик ерне вăл ытла лайăх ĕçлерĕ. Унчухне-ха, çĕнĕле, ăна пурте ырă сунса, йăпатса чĕннĕ, унчухне-ха хăй те хăйĕн ним уйрăмлăхне те туйман, ĕлĕкхи Питтай пекех хăй çине пăхнă. Мăнкăмăлланман, туман... Ха! йури пуринпе те ăшшăнтарах, йăпатарах калаçнă, имĕш, манас çук вăл ăна чысласа пуçлăха, „кăмиссара“ суйланиве... Пĕрре те вăрçман, хăтăрман...

Тепĕр йенчен, тен, çав пĕтерчĕ-тĕр те. Пурçке-ха пирĕн авалтан йулнă киревсĕр йала: пуçлăхсем çине вĕт епĕр хайарлăх кĕтсе пăхатпăр Пуçлăх. иккен, — пултăр вăл тĕпĕртеттерекен, хытă тытакан етем. Урăхлине епĕр хисеплеместпĕр Мĕн тĕлĕнмели пур унта: паллах, пуçлăх çавна курса пăсăлат, епĕр кĕтнĕ пек пулса кайат. Тытăнат тилĕрме, урма...

— Ну, ку алла илет! Ку чăн-чăн пуçлăх, - тетпĕр вара епĕр унчух Ха, ăна хăшĕ-пĕри тем тĕрлĕ саванса калат. Пурччĕ пирĕн Йакамас — йалсовет ченĕ. Йала килекен уполномоченнăй кăшкăрса, вăрçса калаçмасан, ĕçне аванах илсе пырсан та: „Кунтаа пулма т. Йăваш ытла ку!“ — тесе тиркесе калаçаччĕ. Итлеместчĕ те вара ăна. Тепрев уполномоченнăй вара сĕтеле шакка-шакка вăрçсан, урнă пек кăшкăрсан, тилерсен, хупса хурассипе хăратсан, — каçсах кайаччĕ вара.

— Ей, кĕçĕр алла илмерĕ-и мана, ача! Тўссе кăна тăр! — тесе шăппăн хĕпĕртесе каласа паратчĕ.

Мĕн хĕпĕртемели пур-тăр — пĕлместĕп. Те çăмăл ĕçлеме вăл çын пĕрмай хайаррăн хистесе тăрсан, те унчухне пуçлăх пек туйăнат, те чăнах пире кам та пулсан тилĕрекенни кирлĕ, — мĕншĕн-тĕр анчах йурататпăр вĕт-ха епĕр çавна.

III.

Пирĕн йал активисĕсем те, активис маррисем те хăйне пĕр тĕрлĕрех. Кашни йалăн хăйĕн тĕсĕ пур. Кашни йал çыннин хăйĕн уйрăмлăхĕ пур. Çавăн пек пирĕн йал çыннисем хăйсене пĕр тĕслĕ. Вĕсем пурте ăслăн курăнма тăрашаççĕ, пĕр-пĕрне итлемеççĕ, пĕр пĕрне хисеплемеççĕ. Пуринчен ытла çавăн пек йапала активиссем хушшинче. Иртнĕ çулсенчех, Питтай председателе кĕриччен ех, палăркапаччĕ активиссен хушшинче вăрттăн кĕрешни. Анчах унчухне парти йачейки çыруçи лайăх организацилеме пĕлеччĕ, тĕрлĕ çĕре турттаракан вăйсене алла илме, чăмăртама, пĕрлештерме тытăнатчĕ. Активиссем пĕр-пĕрне кураймасан та, пурте хисеплетчĕç йачейкă çыруçине, ун сăмахĕнчен иртиййех сисĕнместчĕ. Çавăнпа пысăк харкашусемех пулман вăл вăхăтра. Анчах Питтай кĕриччен пĕр-ик уйăх малтан йачейкă секретарне района илчĕç. Унăн заместителĕ бўро ченĕ вĕренме кайрĕ Ун вырăнне çав йалти комунисăх, усăк тутала пĕчĕк Тимрĕçе суйласа хучĕç. Тимрĕçе, — те çав йалсемех пулнипе, те вăл ытти активиссенчен ни пĕлĕмлĕхпе, ни пултарулăхпа уйрăлса тăманнипе, — чăн малтанах тўртĕнтерех пăхрĕç, тиркенĕ пек те пулчĕç. Кайран вара кăшт лăпланчĕç.

Итлетчӗҫ те, ӗҫлетчӗҫ те, анчах ҫекретар ҫук чухне малтанхи ҫекретаре мухтаса калаҫкалатчӗҫ:

— Лешӗ пулсассӑн, вот тӑваччӗ те, тӑваччӗ ӗнтӗ ку ӗҫе, — текелеччӗҫ вара, — ку кӑшт мӗнтерех ҫав—тесе, пуҫӗсене пӑрса, хуллентерех вӗҫлетчӗҫ.

Ҫавӑн пек вӑхӑтра кӗчӗ те ӗнтӗ пирӗн Питтай председателе. Ку ҫӗнӗ йапала хӑшпӗр активиссене тата пушшех кӗвӗҫтерчӗ. Мӗншӗн-ха Питтайа? Ӑна мар... Мӗнпе ытларах вара Питтай вӗсенчен? Йепле-ха ӑна пӑхӑнмала?

Чӑн малтанах, чӑнах, нимскер те вӑл-ку палӑрмарӗ. Питех нимӗскер те пулман пек туса, йалсовет членӗсем ӗҫе ӗлӗкхи пекех илсе пычӗҫ. Ҫапла мӗнпе мӗнпур тӳлевсене: сӗт, ҫу, ҫӑм, ҫӑмарта пухас ӗҫсене малак йаначчӗ. Йал та хисеплӗ вырӑнтах тӑраччӗ. Анчах вӗт татах тамаша! Питтай преми илесси пулчӗ. Пӗр хӗлле тӑхӑнмали пиншак илнӗччӗ ҫав? Тӗлӗнмеле вӗт: ҫирӗп чӑмӑртаннӑ актив ҫук йалта, преми илни те ӗҫе пӑсса йама пултарат. Пӑсса йачӗ те вӗт пирӗн йалта. Тата ҫине-тӑрса тӑрӑшас вырӑнне, йалсовет членӗсем сӑмсисене пӑрчӗҫ, ӗҫсене йапӑх илсе пыра пуҫларӗҫ. Хуллен-хуллен ҫапла темӗскер сисӗнкӗсӗр ҫемҫелчӗ, прушинасем пушанчӗҫ, йалсовет халсӑрланчӗ кайрӗ.

— Пирӗн хӳтӗпе преми илет. Хӑй ӗҫлесе илинччӗ ӑна,— текеле пуҫларӗҫ вӑрттӑн. Унтан итленӗ йали ҫеҫ тӑва пуҫларӗҫ, ӗҫӗсене тума пӑрахрӗҫ, Питтай ҫине пӗрмай темӗскер кӗтерех пӑха пуҫларӗҫ.

Преми илнӗ ҫын, чунтан ӗҫлеме пикеннӗскер, Питтай ҫавна курсан, малтанах ним тума аптрарӗ, унтан, премине пӑртак хӑйулӑн илнӗскер, пӑртак кӑшкӑрашма та пуҫларӗ. Пӗрне пӗрре кӑшкӑрса пӑрахрӗ, теприне пӑртак хыттӑн чӗнчӗ, — ҫак ҫитрӗ те йалсовет членсене тата ытларах кутӑнлашма. Вӗт вӗсене Питтай ӗмӗр тав тумала. Вӗсем ӑна „кӑмиссара“ лартнӑ. Вӗсем пуррипе преми илнӗ. Йепле хӑйайат-ха вӑл вӗсене кӑшкӑрма? Йалсовет членӗ Савтей хӑйне пӑртак хытӑ чӗннӗренпе йалсоветне пыма та пӑрахрӗ. Уҥар ытларах та машкӑлласа пӑха пуҫларӗ. Исмулла сӑмса тӑрӑх ҫеҫ пӑха пуҫларӗ. Ӗҫсем начарланнӑ-ҫем начарланчӗҫ. Ӗҫсем йапӑха кайсан, йалсовет членӗсем пушшех итлеми пулчӗҫ Питтайа. Кайрӗ вара кутӑнлӑх кустӑрми. Тен, Питтай парти йачейкипе ҫирӗпрех ҫыхӑннӑ пулсан, ҫынна хӑй хыҫҫӑн йертме пӗлнӗ пулсан, нимӗскер те пулман пулӗччӗ, пурте иртӗччӗ мелӗпе. Анчах пирӗн Питтай хӑйӗн мӑнкӑмӑллӑхӗпе, парти йачейки ҫекретарӗпе нимӗн те калаҫмарӗ, никама хӑй йенне ҫавӑрма тӑрӑшмарӗ, массӑпа лайӑхрах ҫыхӑнса актива организацилес темерӗ, йалт хӑй вӑйӗ ҫине шанчӗ, хӑй власӗ ҫине.

Шанчӗ теме те килмест ӗнтӗ: темскерле хытрӗ етем; хупӑнчӗ, пытарчӗ хӑйне ҫынсенчен.

IV.

Тӗрлӗ шухӑш кӗрет ҫынна ҫавӑн пек чухне. Питтай та пирӗн нумай шухӑшларӗ. Мӗнле-ха, калаӑшне, хӑна ху тытмала? Хаҥченхи пек йулташла, ҫемҫе тыткаласан, пархатар курас

çукки пăхсах паллă, йăвашран вĕт вĕсем çапла мăшкăлаççĕ. Пуçлăх иккенне систермелех. Унсăр май килмест. Анчах мĕнле систермеле? Систерĕн те: — пăхăнтарас вырăнне култарăн. Анчах мĕнле пулсан та, хăратмалах. Унсăр май килмест. Анчах мĕнле хăратмала? Хăратăн та:—хăратас вырăнне култарăн.

Тĕттĕмччĕнех, никампа пĕр сăмах хушмасăр шухăшласа ларнă Питтай. Кăнцелерте пĕчĕк лампă чалăшшăн çутатнă, çтена çинчи Сталинпа Ленин мĕлки лампă çутипе тата çивĕчĕрех курăннă. Шăлман урай, темле лозунгсем, хĕрлĕпе хура хăма,—пурте тăлăххăн курăннă пайан Питтайа. Вăл темĕскерле кĕнеке алла тытса, кĕнеки çине пăхмасăрах шухăшласа, вăхăт-вăхăт ассăн сывланă.

Питтайсăр пуçне кăнцелерте тата виççĕн ларнă. Пĕри, пысăк куçлă, шăрши куçлă, Çерçи йатлăскер, парти членĕ, районти хаçата вуланă. Ыттисем итлевĕ. Йĕрленĕ финплан сводкине.

— Да... — вăра-аххăн тăснă Çерçи. Куçне мăч-мăч хупнă та, пуçланă:—Мĕнле-ха капла пулса кайрĕ,—кайа йултăмăр? Преми илнĕ йалсовечĕ..

Шухăшне йури, нумайа пĕлтерсе, пăт татнă. Питтай çине пăхман. Питтай та илтмĕш пулчĕ.

— Та-ак! —ассăн сывласа йачĕ тепри, вĕсемпе пĕрле ларакканни, Шăпчăк йатлă, çут çамкалă, чейе пиг-куçлă чăваш.— Начар ĕçлетпĕр... Капла пире.. Ытла кайа йулнă... Иртнĕ сводкăра кăна виççĕмĕш вырăнтаччĕ!—Вăл та Питтай çине пăхмарĕ.

— Йулмасăр хал çук унта! — хыпаланса хутăштарса хунă шĕвĕр йанахлă, савăл йеверлĕ пит-куçли, Уҥар йатли, — вăл сăмаха ĕмĕрне тӳремрен персе йарат. — Йулан çав ĕнтĕ... Йулмасăр хал çук..

Ку кăшт çеç Питтай çине куçне çĕклерĕ.

Илтмĕш пулса ларакан Питтай ăшĕнче Уҥар каласа пĕтермен сăмахсене те туйрĕ; вĕсем: „предçедатĕл çавăн йышши-тăк! Предçедатĕл çавăн йышши-тăк! Предçедатĕл çавăн йышшитăк!" йанранă ун хăлхивче. Акă мĕскер! Акă мĕн калаçа пуçларĕç ун çинчен. Камсем? Активиссем, комуниссем те. Хăйсем çын авторитетне хăпартассишĕн тăрăшмалисем.

Питтайа çавхатер кӳрентернĕ вĕсен кăмăлĕ. Мĕскерле-ха вăл? Çынсем ответлăха пĕр çын çине йавалантарма йуратаççĕ. Вĕт вĕсем те комунис. Вĕсем те кашни пĕчĕк ĕçшĕн, кашни шăйрăкшăн ответлă. Мĕншĕн-ха епĕ кăна? Мĕншĕн çиеççĕ пĕр-пĕрне?

Ответ тупăнман. Ответ пăхса та курăнман. Ирĕксĕрех йăвăр шухăшсем пуç çине купаланнă.

„Бӳрократсем, пуринчен ытла чăвашран тухнисем, çавăнпа мăнкăмăллă хăйсене тытаççĕ те,—шухăшланă вăл кĕнеке ухтарнă май.— Пĕлсе тăваççĕ çав вĕсем. Ҵирĕн чăваша урăхла тытма мел çук. Урăхла тытсан, çын пек тытсан, сана вăл ним вырăнне те хумаст..." Çавăн пек шухăшсем хуллен çитĕннĕ Питтай пуçĕнче.

Калаçса ларакансем тухса кайнă. Лампă та ытла хĕрлĕн çутата пуçланă. Плакатсем, хутсем, портретсем ытларах пуснă пек туйăннă.

— Так!—тенӗ вӑл ӑшӗнче.—Мана курайманҫҫӗ.. Такӑнтарасшӑн, пӗтересшӗн.. Мана мӗн-ха? Епӗ йурасшӑн тӑрӑшмапа-и вӗсене? - Тула тухрӗ. Айакра ача-пӑчасем выльарӗ. Купӑс сасси чӗтренӗ аслӑ урамра. Пурте таҫта айакра, пурте Питтайшӑн мар, пурте Питтайа пӑхӑнмасӑр... Хӑйсен ирӗккипе... Влаҫ пуррине пӗри те туймаҫҫӗ, пӗри те асӑнмаҫҫӗ те пуҫ „кӑмиссара", Питтай „кӑмиссар" иккенне...

Чӗре тулса ҫитнӗ.

Тӑкӑрлӑкпа ӑна хирӗҫ икӗ ҫын каласса килнӗ. Мӗн мӑкӑртатни паллӑ пулман, анчах „Питтай" тенӗ пек пӗррехинче илтӗннӗ.

Вӑл вӑрттӑн тепӗр тӑкӑрлӑка куҫнӑ. Курас килмен унӑн пӗр ҫынна та. Вӑл хӑйӗнчен хӑй вӑтана пуҫларӗ. Мӗншӗн-ха вӑл хаьччен ҫынсемпе ырӑ пулнӑ? Ухмах! Кам сана хаьччен ырӑ тунӑ? Пайан Ҫерҫипе ирхине йӑпӑлтататӑн. Унпа калаҫатӑн. Вет кулнӑ вӑл манран Хаь те акӑ кулчӗ Кам пур ҫак тӗнчере ҫынна ырӑн куракан ҫын!

Сасартӑк темскер татӑлнӑ пек туйӑннӑ. Татӑлнӑ пек пулнӑ халӑхпа активпа ҫыхса тӑракан ҫыхӑ.

Пӗр йенчен, ҫӑмӑллӑн пулнӑ. Ҫынна хисеплемели ҫук. Сума суса тавӑрмали ҫук. Пурте сана курайманҫҫӗ-тӗк, мана та ирӗк ӗнтӗ вӗсен ҫине сурма...

Тепӗр йенчен. малашнехи темле сиввӗн туйӑннӑ. Ҫын ӑшшиӗ, хӗрӳсӗр... Пӗччен, пӗтӗмпех пӗччен.. Темӗскер кӗвӗлнӗ кӑкӑр айӗнче, темӗскер ӗмнӗ..

— Тӳнк! тӳнк!—таҫта темле кайӑк тӳнклетнӗ.

V.

Килне пырса кӗчӗ Питтай хайар, хаӗар... Хайар куҫа ӗлӗк астуманни те куранат. Пӳрт ӑшчикӗ тирпейленмен пулнӑ Урай варринчех витре шыв сӑрхӑнтарса ларнӑ. Тин салтнӑ чӑлха ҫавӑнтах саркаланса выртнӑ.

Арӑмӗ темскер ҫӗлесе ларнӑ. Пуҫне те ҫӗклемен Питтай пырса кӗрсен. Темле пир пӗшкӗнсе ҫӗлесе ларнӑ. Ун ҫумӗнче ларакан кушакки те Питтайа тӗлӗнерех куҫланӑ. Те вӑл та палламӗш пулнӑ.

Чакак. Питтай арамӗ, ахаь те пит йаппар ҫынах пулман Ҫынна йӑпатма, кулкала... йӗркеленсе кӑмӑлне ҫавӑрма пӗлмен те, пӗлесшӗн те пулман.

Лутрарахскер, мӑнтӑр питҫӑмартиллӗ, кӑшт курнусрахскерӗн, икӗ ҫӗмӗрт хура куҫӗ йалтранӑ хура куҫ харши айӗнче сиввӗн, сиввӗн.. Ҫавӑн пек куҫ—вӗтлӗх вӑрман хушшинчи тӗпсӗр ҫӑлкуҫӗ пек. Илӗртет те вӑл, шиклентерет те...

Ӗлӗксенче-ха Питтай ҫапла пырса кӗрсессӗн, хӑй чӗнеччӗ те, хӑй ҫавраччӗ Чакак кӑмӑлне. „Ҫиме паратни мана, Чакак!—тетчӗ вара. Ӗмӗр кӗверсе, хирӗҫсе ҫӳрекен Чакак унчухне чӗнмесӗр-тумасар хатӗрлекелесе параччӗ те, каллех хӑй ӗҫне тытӑнатчӗ.

Йуратасса йуратнӑ та пулӗ вӑл Питтайа, анчах чӑваш хӗрарӑмӗ пек: йӑпӑлтатмасӑр. Кӑмӑлӗ те ҫавӑн йышши пулнӑ: „хура

йун", пирĕн йенчи чăвашсем каларăшне. Никама та вăл хаҕччен ырран чĕнсе курман. Çитменнине тата вăл пуйан Пулуш хĕрĕччĕ. Пулунĕ Питтай салтакра чухне Чакакне пÿрт çĕнетме те пулăшнăччĕ, куран. Çавăнпа та пит мăнкăмăлланаччĕ, куран. Ашшĕсем тахçан пĕтнĕ пулсан та, хăй ге виççĕмĕш упăшкана çитнĕ пулсан та, Питтай умĕнче те, çынсем умĕнче те хăй „ырă çын" хĕрĕ пулнине манман. Çынсене „кĕлĕмçĕ" теме йуратнă. Хирĕçсен пушшех тилĕрсе кайнă. Кĕлĕмçĕрен „тухайман вара Питтай".

Ун кăмăлне пĕлсе çитнĕ Питтай, хаҕхи вăхăтчен тÿснĕ, ун самахĕ айĕнчен тухайман. „Ухмахпа мĕн калаçмала", тесе, шăлне çыртса та пулин тÿснĕ. Ўсĕрпе кăна кăшт тустарма хайнă.

Анчах председатĕле кĕрсен, ĕç пĕтĕмпех пăсăлса кайнă. Халăха пăхăнтарма вĕреннĕскерĕн, арăма килте пăхăнас килмен. Йалан темскерле хисеплемен пек туйăнса çÿренĕ. „Йепле те пулсан пĕрре систермелех" шухăшланă вăл хаҕччен. Анчах „систермели" сăлтав тупайман-ха

Чакак, пăхăнма йуратманскер, пĕтĕмпех урăхла шухăшланă. Вал: „епĕ ун арамĕ пулнипе ăна вăл выранă суйларĕç; çавăнпа вăл „çын ăшне", етел шутне кĕчĕ тесе, Питтайа пуçлăх тесе астума та шухăшламан.

Питтай пырса кĕрсен, арăмĕ çапла пĕр хеперсĕр ĕçлесе ларнине курсан, унччен те хирĕçнĕскер, пĕтĕмпех тăвăнса çитнĕ. Арăмĕ те, йалти çынсем те, никам та ăна пуçлăх выранне хурасшăн мар пек туйăннă. Ăш тулса çитнĕ, чĕлхе темскерле çыхланнă пуçланă, çан-çурăм сăрăлтата пуçланă.

Хăçан та пулин, кампа та пулин пĕрре чăркăшса каймали арăмĕ тĕлнех пулнă. Арăмĕ мĕн те пулин чĕнессе кĕтсе, вăл чашкăрсах ыйтрĕ:

— Çиме хатерленĕ-и? Çук-и?

Арамĕ пуçне те çĕклемен. Чĕнмен те. Ку шăп тултарнă тÿсĕм чашкине.

— Сана калаççĕ-и, çук-и?

Хăй сассинчен хăй хараса кайнă Питтай, — çавхатер хайар тухнă. Ку ытлашширех пулнине хăй те туйнă Питтай, кун хыççан ырлах кĕтмели суккине пит лайăх сиснĕ, анчах кайран пулнă çав Чакак сиксе тăнă, унтан калле ларнă, хĕрелсе кайнă, шуралса кайнă. Хура куçĕ чалăшшăн хура хĕлхемпе чышсан,— Питтай хайарлăхĕ пĕтĕмпех пĕтнĕ

— Мĕн-ха есĕ пит кăшкăратăн? Хв! Етсемĕрсем! Тилĕрсех кайнă. Елле уртăн-и? Аçа çаптăр етеммÿне-е...—Пуринчен ытла сасă лăпкалăхĕ хăратнă Питтайа. Калăн, ĕмĕрне те вăл шухăшламан Питтайран çавна илтессе... Питтай пĕтĕмпех ним тăва пĕлмен. Анчах çапах пуçланинчен чакас килмен.

— Нумай калаçса тăратни-ха? Калана сана,—хатĕрле! Хатĕрле!

Çук çав ĕнтĕ сасăра пaçăрхи хăватлăх; туйат ăна Питтай хăй те туйат ăна Чакак та.

— Пăх-ха есĕ ăна... Кăмиссар пулнă та,— каçнă кайнă! Чĕрĕле çиме пуçларĕ ку! Ак тамаша!

— Ҫитӗ, тенӗ сана!

Астумарӗ, куран, Питтай: хирӗҫнӗ арӑмшӑн „ҫитӗ тени" — „вӑййӑрах ҫаптар" тенипе пурпӗрех. Мавнӑ пулас Питтай: хирӗҫнӗ Чакакшӑн хӑт ырӑ кала, хӑт усал кала,—пурпӗрех вӑл тилӗрме пулӑшат. Ҫавӑнпа вӑл йакатса йама шухӑшларӗ.

— Ара, ҫилӗ килет! Кунӗ-кунӗпе йӑтӑ пек супатӑн. Киле килсен те сана йӑтӑ пек пӑхаҫҫӗ. Ҫимели ҫук, мӗн ҫук... Сынсен арӑмӗсем арҫын килнӗ ҫӗре...

Ывӑннӑ пек ларчӗ сӗтел хушшине. Кӗтсе пахрӗ Чакак кусӗнчен: „Мирлешӗ-ши? Мирлешмӗ-ши?"

Мирлешмерӗ Чакак.

— Сынсен арӑмӗсем! Сынсен арӑмӗсем лайӑх пулсан, вӗсем патне кай! Мӗншӗн-ха манрав ҫимели ыйтса ларатӑн? Те кунта вӑл пӗр-пӗр тарҫӑ курнӑ... Кунӗ-кунӗпе киле килсе кӗмест... Пурне те пӗччен: арҫыншӑн та, хӑвӑншӑн та.. Вӑл килет те татах... Пӑхаҫҫӗ ӑна хӑна ху! Тытаҫҫӗ те пӗҫереҫҫӗ..

Ҫиллипе ӗҫне те пӑрахрӗ. Ҫумӗнчи мӑрӑлтатса ларакан кушаккине те тӗртсе антарчӗ. Пӳлӗме кӗчӗ те, кутӑн тӑчӗ. Унтан тухрӗ, урай варривчи витриве тӗпеле илсе кӗчӗ, шӑпӑр тытрӗ.

Питтай ӑшӗнче темӗскер хытти пӗтӗмпех ирӗлсе пӗтмен ха.

— Есӗ мӗншӗн ара? Йашка та пӗҫермесев... Санпа мӗн? Картинкӑ вырӑнне уерамала-им? Чакак тесе ним ӗҫ те хушмала мар-им ӗнтӗ? Ак ес калан...

— И-и-и, чарӑна та пӗлмерӗ ку! — хайар лӑпкӑлӑхпа тытӑнчӗ Чакак. Пӗлет Питтай: — ку сасӑпа тытӑнсан, пархатар ан кӗт вара. Ҫавӑнпа те вӑл турӑх илчӗ та, уйран тума пикенчӗ. Чакак хаљ ҫийелте ӗнтӗ.

— Ак пӗтрӗмӗр! Хм! Усрат иккен вӑл мана. Ха! ырӑ сын туйаннӑ. Усрат тесе ман сана чӑмласа памала мар-и? Ҫупӑрласа вырттарас мар-и? Ах, кӗлӗмҫӗ, кӗлӗмҫӗ! Кӑшкӑрма ҫитнӗ-ха! Навус! Тилӗрнӗ кайнӑ та! Тахшин санпа пурӑнасшӑн ҫунат. Ха! Вӗт ылттӑн упӑшка тупӑннӑ! Тух та кай! пурӑвассу килмесен. Сан ҫурту мар. Никам та сана кӑкарса хуман! Вӑт хӑратма тупвӑ.

Питтай уйран ҫисе тӑранчӗ Вырӑн саркаласа пӑрахрӗ.

Выртрӗ. Хӑлха патӗнче каллех йантрарӗ:

— Ах, кӗлӗмҫӗ! Кӗлӗмҫӗ! Ак тупӑнчӗ ман пуҫ ҫине. Камиссар пулнӑ та..

Питтай сӑхманне хӑлха ҫинерех витрӗ.

Ҫав каҫ Чакак хӑй тӳшекки ҫинче хӑй пӗччевех ҫӗр каҫрӗ.

VI.

Ваттисем калаиӑ: чашкӑ-тиркӗ ҫунӑ чухне шӑлтӑртатмасӑр пулмаст; кил хушшинче вӑрҫусӑр пулмаст, тенӗ. Ҫавӑн пек, Чакакпа Питтай хушшинче те ун пек хирӗҫӳсем пулкаланӑ. Анчах майлашна хӑвӑрт. Ҫилӗ вӑраха ка йман. Хирӗҫсе ҫӳресен ҫӳресен тӗрлӗ сӑлтавпа килӗшсе кайнӑ. Хӑшчухне хирӗҫсе чӗнмесӗр ҫӳренӗ вӑхӑтрах, пӗри астумасӑр пӗр-пӗр йапала ыйтат те, — каласса кайаҫҫӗ вара. Хӑшчухне сын умӗнче, сын пулнипе,

çынна пĕлтерес мар тесе калаçса кайаччĕç. Хăшчухне вырăн çинче. Вырăн çинче арçын кăмăлĕ çемçелет вĕт. Тĕрлĕ сăлтавпа килĕшетчĕç. Анчах халĕ апла пулмарĕ. Питтай председатĕл пулни ĕçе пĕтĕмпех пăсса йачĕ. Пуçлăх пула тăркачă Чакака çине-тăрсах йăлăнас килмерĕ. Чакакăн каллех çавăн пек: вăл хăйĕн айăпне курмарĕ. Çавăнпа Питтай, хăйĕн çилли тахçанах иртнĕ пулсан та, каçармала мар кӳреннĕ пек туса çӳреме шухăш тытрĕ. Ирхине тăчĕ те, пĕр чĕнмесĕр-тумасăр тумланчĕ, çăкăр çыртмаларĕ те, йала тухса кайрĕ.

Чакак пӳртре пĕччен йулсан, хăй айапĕпе улăшки айăпне танлаштарса пăхрĕ, виçрĕ, шутларĕ вара: „Питтай пĕтĕмпех айăплă. Анчах хăй малтан пырса йăлăнсан, каçарма та пулат, хăй вара мăртăхса çӳресен: „епĕ те,—терĕ вăл,—чĕнми йăлана тытма пултаратăп. Хăйех вăл çаврăнат .. Акă вăл хăйех йăлăнат. Арçын çилли вĕт вăл каçчен кăна... Курăп, епех çĕнтермеле. астутарăп-ха ăна“, шутларĕ вăл ăшĕнче.

Анчах каç пулчĕ, Питтай таврăнчĕ, çирĕ, выртрĕ... Ир те пулчĕ. Чакак шухăшласа хуни пĕри те пулмарĕ. Арçын çилли çаврăнмарĕ.

Хирĕçрĕç çапла икĕ çын; ăнсăртранах, кĕтмен çĕртенех хирĕçрĕç. Хирĕçсенех, тен, пĕри те шухăшламан пулĕ хирĕçӳ вăраха кайасса. Анчах веç мĕн пулса кайрĕ-ха! Чăнах, вугпа ан выља çав!

VII.

Питтай хăйне пĕр тĕрлĕ етем пулнă çав. Мăнкăмăллă тесен, ытла мăнкăмăллă та мар вăл, вĕçкĕн тесен, каллех вĕçкĕнех мар. Аптратăп епĕ ун çинчен калама та. Пĕр йенчен, ăна каламала çавхатер „принциплă“ çын тесе. Палланă çынна курсан, çĕлĕк илес йе сăмах хушас тĕлĕшрен Питтай ытларах „принцип“ тытнă: нихăçан та çĕлĕкне малтан илмен. Пуринчен ытла вырăнта ларакан ĕлĕкхи йулташсем умĕнче хăйне пит мăнкăмăллă тытнă. Вăл çын сăмах пырса чĕнмесĕр, хăй пĕрре те пырса чĕнмен. Ăна епĕ пит лайăх пĕлетĕп, ун пекки хампа та пулкаланă. Епĕ ун кăмăлне пĕлсе пĕр-ик хутчен хам çĕлĕк малтан илкелерĕм, йăпатса сăмах та малтан хушкаларăм. Каçсах кайрĕ вара. Кайран: курсан-тусан хăй малтан çĕлĕкне илсе чупса пыраччĕ. Ахаљ йулташ унпа епĕр пит лайăхчĕ. Ун пек çынна вĕт малтан пуçне шăл, унтан вăл мунчала: мĕн йавас тетĕн, çавна йаватăн. Пысăк ĕçсенче „принцип“ çук вĕсен, пĕчĕккисенче кăна. Çигменнине тата епĕр унпа граждăн вăрçинче пĕрле пулнă. Окопсенче те пĕрле пулкаланă. Асăнса калаçкалаттăмăр та ĕлĕкхи çинчен. Ун çинчен, вăрçă çинчен, сĕре йурататчĕ Питтай калаçма.

Пĕрре çапла калаçса кайрăмăр Хĕрлĕ çарти йулташсем çинчен. Калама маннă-ха: пурччĕ пирĕн иксĕмĕр те йуратнă пĕр сывăх йулташ. Шупашкар йенчисемччĕ. Чăвашчĕ. Çавна тенепле аса илсе епĕ каларăм:

— Пирĕн Çергей йепле пурнат-ши?

— Орлов-и? Чим-ха! Куртăм вĕт епĕ ăна... кăçал Хусанта,—терĕ Питтай туртăнса, темскерле йăвăр йапалана аса илсе çӳсеннĕ пек.

— Ну?! — епĕ савансах кайрăм. — Мĕнле пуранат? Хаҫ те ҫапла мăр-мăр мăр туса калаҫат-и? Выранта-тăр-ха вăл. Ҫырăва аван пĕлеччĕ.

— Темĕн... Калаҫман епĕ унпа! — тăрринчен татса парахрĕ Питтай.

— Мĕншĕн? Патне пырайман-им ара? — ăнланаймасăр ыйта-тăп епĕ.

— Ҫук, пĕр вагунтах ларса килчĕ. Ак санпа ларнă пекех.

— Ну, мĕнле-ха паллашмарăн? — тарăхатăп епĕ.— Йе вăл мар-тăр тесе шухăшларăн-и?

— Пит йака тумланнăччĕ. Ахăрнех служит тăват пуҫ. Пăхрĕ, пăхрĕ мана. Те палламĕш пулчĕ, темскер? Вăл чĕнмесен, мана тата мĕн питех кирлĕ? Епĕ те палламĕш пултăм...

— Е-ех!— темели кăна йулчĕ манăн. Мĕскер ку? Мăнкăмăл-лăх-и? принцип-и? Ирĕксĕрех пуҫа усрăм

Сисрĕ, курах, Питтай та ман шухăша, тен, хăй те ҫавнах шухăшланă пуҫ,—етем вĕт ҫапах.

— Ҫук! чăнах!—шўглĕ хутăш сасăпа пуҫларĕ вăл епĕ чĕн-меннине кура.—Епĕ асли пулсан, ҫавăн йышши йĕрке кăларăт-тăм: ҫĕлĕксене илес йĕрке черетленсе пытăр штобă. Пĕррехин-че есĕ ил, тепрехинче вăл илтĕр. Ун чухне, иҫмасса, ўкĕнĕҫĕ пуҫмĕччĕ. Атту тĕл пулатăн паллана ҫынна: санăн та илес кил-мест ҫĕлĕке, унăн та... „Мĕншĕн-ха вара манăнах илмеле?"— шухăшлап вара Вăт асап, ача! Хăшчухне манăҫса астумасăр ҫĕлĕке илсен,—кунĕпе вара пăшăрханатăн.

Мĕн калăн-ха? Тен, Питтайа айăпламали те ҫук-тăр. Тен, хамах та ҫавăн пек-тĕр ..

Пăхрĕ Питтай ман ҫине тинкерсе. Пĕлчĕ, сисрĕ шухăша. Ăҫтан сисместĕн-ха ара?

— Ҫук, ача! Чăнах!—ăшшăн вăл тытăнчĕ.—Асаплă ĕҫ вăл! Ай асаплă! Ҫула тухсан ак... лашапа, тертленсе, чĕтресе кăна пыратăн: „ку, хирĕҫ пыраканни, пăрăнмĕ,—ман пăрăнмала пулĕ. Пуйан тутар тавраш̆ĕ, сутăҫă, паллах, пăрăнмаст. Пĕр-пĕр пу-шăлла лава малтан пăранса иртрĕн иккен,—пĕтрĕ вара ҫулăн мĕн пур савăнăҫĕ, кăсăкĕ... Ҫул тăрăх вара тертленсе, асаплан-са пыратăн: мĕншĕн-ха пăрăнтăм?. Унăн пăрăнмалаччĕ, тесе... Ҫапла, ача, темскерле кăмăл ман?".— Ҫапла пĕтерчĕ те, пуҫне сенкрĕ, аран-аран ала паче те тухса кайрĕ.

Ку — нумай пулат ĕнтĕ, Питтай председателе кĕричченех. Увтан вара еиĕр унпа калаҫман тесеп те йурат. Кураймин пек те пулчĕ вăл мана ун хыҫҫăн. Те вăтанчĕ чĕрине уҫнăшăн. Кам пĕлет?!

Председателе кĕриччен ҫавăн пек чыса йуратакан кăмăл, йепле каласан та, лапчăннăччĕ-ха: палăрмастчĕ. Питтай хăйне обча ăнланман, хак паман ҫын вырăнне хуратчĕ. Хурланнă ҫын пек ҫўретчĕ. Унăн йулташĕсем, ҫав йалсемех, выранта тăнине курса, ҫўлĕрен ҫўле кайнине сăнаса, вăл пайтах ĕнтĕ кĕвĕҫнĕ. Анчах хăйне лăплантарма пĕлнĕ. Аслинчен пуҫласа кĕҫĕннине ҫитиччене—пурне те—вăл ун чухне „ухмах" тесе питлеччĕ. Калас: ăна, ҫавăн пек ăслă ҫынна, курмаҫҫĕ, хаҫчен вырăна

хумаҫҫӗ, — „ухмах" вӑл халӑх, ухмахсем вӗсем, аслисем: мӗн вӗсем ҫын суйлама пӗлеҫҫӗ? Райопта кам ларать унта? Пӗр ӑслӑ ҫын пур-и? Ав Ҫашуха. Аҫука, унӑн йулташӗсене вырӑна кӳртсе пӗтерчӗҫ. Мӗн пур-ха вӗсен пуҫӗнче? Пӗр калаҫма пӗлеҫҫӗ. Чӗлхепе кӑна йурама пӗлеҫҫӗ. Ахӑрпех, ҫынсем ухмах марррине пӗлнӗ ӗнтӗ вӑл пӗлессе, хӑшӗ-пӗри унтан аслине те туйнӑ пуҫ, анчах „ухмах" тесен, хӑйне-хӑй умӗнче те, ҫын умӗнче те хӳтӗлеме аван пулвӑ. Ху ниме йурӑхсӑр пулсан та, ун чухне йавалавтаратӑн „ухмах" ҫине. Лайӑх хӗҫпӑшал вӑл хуна йапатма.

Председатӗле кӗрсен, вӑл пӗр тапхарх йыш ҫумне ҫыпҫӑнчӗ. Йышпа, халӑхпа, активпа ҫыхӑнсан, „ухмах" теме те пӑрӑхрӗ; ӑслӑ ҫынсене те курах кайрӗ. Паллах, председателе суйльҫҫӗ иккен, пур пулат ӗнтӗ пӑртак вӗсен пуҫӗнче; сисеҫҫӗ пулат Питтай хакне, вӑл ӗҫлеме пултарнине. Ҫапла, Питтай председатӗле кӗрсен, пӗр тапхӑра ӗҫ пит аван пычӗ. Анчах .. Пӗр тапхӑра кӑна ҫав.

Халӑха, мӗн пур халӑха, актива, мӗн пур актива йурама хӗн. Паллах, кам та пулсан сана курайманах. Пуриччен ытла Питтай пек уйрӑмӑн ӗҫлесен, парти йачейкипе ҫирӗп ҫыхӑнмасан, ун пулӑшуне йышӑнмасан. Питтай ҫапла турӗ те. Пурне те хӑй пуҫ тӗлӗшпе, никампа канашламасӑр, никам сӑмахне итлемесӗр ӗҫлеме пуҫларӗ вӑл. Ха, хӑш чухне ҫаван пек ӗҫсем те пулкалаччӗҫ: пӗр-пӗр ӗҫе сӳтсе-йавнӑ чухне йачейкӑ секретарӗ тем тӗрлӗ хаклӑ, усӑлӑ, кирлӗ кӑтарту парат. Питтай ӑна хӑй те сисет, анчах хӑй ӑслине палӑртас тесе кӑна, ҫынпа пит часах килӗшменнине кӑтартас тесе кӑва килӗшмесӗр пайтахчен чӑрмантарса тӑрат Хӑш чухне урахла тата: пӗр-пӗр килмен йапалана, никам кӑмӑлне каймам йапалана, сине-тӑрсах тӗккелет. Итлемест те никама та: „ҫапла тумала—ӗҫ те пӗтрӗ".

Ҫавӑн пирки часах унтан пурте писрӗҫ. Темскерле нӑвӑрччӗ ларма вӑл тунӑ з ҫеданисенче. Пурин ҫине те Питтай сывлӑшӗ пусаччӗ. Пурне те —кирлине те, кирлӗ маррине те ирӗксӗр пек йышӑнтаратчӗ Ҫав ырлӑхпа йалсовет членӗсем те хӗрсе ӗҫлеме пӑрахрӗҫ, ӗҫли-ӗҫлеми туса кӑна ҫӳреме тытӑнчӗҫ Ҫав ырлӑхпа ӗҫсем те йапӑха кайрӗҫ.

Йулашки заҫеданисенче йал мӗн пур кампанисене тултарас ӗҫпе кайа йулнине кӑтартса, ҫавӑ мӗнтен килнине тишкерсе, йачейкӑ ҫыруҫи пайтах каларӗ. Самокритикӑна аса илсе ыттисем те калаҫма пуҫланӑччӗ, анчах Питтай нимӗскер те, пӗр сӑмах та чӗвмерӗ. Темскер шухӑшласа ларчӗ. Заҫеданийе ҫапла нимскер пӗллӗ решенисӗрех хупрӗ. Хурланчӗ пулӗ, тетӗп вара аптраса. Епӗ,— терӗ пулӗ,— вӗсене числаса хисеплеме тытантӑм, ҫывӑх кура пуҫларӑм, вӗсем—веҫ мӗн хӑтланаҫҫӗ, мана кӑтартма ҫитнӗ.: Хисеплеми пулчӗҫ. . Ҫук,—тепӗ ӗнтӗ вӑл,—хытӑлӑх, ҫӑварпах кирлӗ халӑха. Ухмахсем вӗт вӗсем. Вӗсене вӗт мӗн кирлӗ? Вӗсене нукайкӑ кирлӗ. Сан ырӑ сӑмахва тӑнлаҫҫӗ-им вара вӗсем?

Кам пӗлет: тен, ҫав заҫеданинче татӑлчӗ-тӗр те Питтайан халӑхпа, активпа ҫыхӑннӑ йулашки ҫыххи. Ыгла ниҫе ыткӑнса

кайрӗ ҫав Питтай та ҫав ҫыхӑ татӑлсан... Чим-ха, еппин йӗркерен калас-ха...

VIII.

Виҫӗ кун иртнӗ ӗнтӗ Питтай арӑмӗпе хирӗҫни. Майлашас тесе пӗри те шухӑшламан-ха. Питтай кӗтнӗ арӑмӗ йӑпӑлтатасса, Чакак кӗтнӗ упӑшки пырса йӑлӑнасса. Анчах, каллех калатӑп: хӗрарӑмӑн упӑшкана пӑхӑнтармали мелсем нумай Чакак та: апат-ҫимӗҫ хатӗрлесе пами пулнӑ, кӗпине те ҫуса паман, ха, ҫумри кӗпене туртса илме хатӗр пулнӑ (ӑна Питтай пӗлнӗ). Тухнӑ, кӗнӗ, ҫӳренӗ—виҫ кун хушшинче пӗри пӗр сӑмах хушман.

Питтай кунӗпе килте пулман. Ҫӗрле анчах таврӑннӑ. Ҫывсем патӗнче ҫикеле пуҫланӑ: кӗтнӗ пӗрмай Чакак ҫаврӑнасса.

Шӑматкув, каҫхине, Питтай кӑнцелертен каҫа йулмасӑрах, мунчана, киле таврӑннӑ. „Тен, мунча хутнӑ пулӗ-ха,—тесе вӑл ӑшӗнче шухӑшланӑ,—мунча хутнӑ пулсан, килӗшнине пӗлтерет вара". Тен, чӗнӗ-ха хӑй мунчана .. Пӗр сӑмах кӑна Чакак чӗнесси. . Унта кайат вара.

Анчах хурланмала пулнӑ киле ҫитсен. Питтай килне пынӑ ҫӗре пӳрте питӗрнӗ пулнӑ, ҫӑраҫҫи те ӗлӗк хуракан вырӑнта пулман. Мунча хутма кайман-и тесе, мунчанала уттарнӑ. „Тен, ҫӑраҫҫи ыйтнӑ чух, майлашса кайӑпӑр", тесе вӑл каллех ӑшӗнче ӗмӗтленнӗ. Ҫитнӗ, кӗрсе пӑхнӑ мунчана: сивӗ мунча... Сивӗнсе кайнӑ кӑмӑл та пӗтӗмпех. Мӗн тумала? Ӗҫ шала кайнӑ-ҫем кайат. Майлашасси пӑхса та курӑнмаст. Малашне вӗт вӑл пӳрте те кӳртмӗ! Мӗн тӑвас? Хӑйне ҫапах Питтай айӑпламан.

Сасартӑк аса илнӗ вӑл: пӗлтӗр пӗрре ҫапла хирӗҫнӗ вӑхӑтра, вӑл чейелӗхпе, йури Чӗкеҫ патне кайнӑ пек тукаланӑ. Пӗлнӗ вӑл Чакак кӳлешме йуратнине. Чакак ун чух темшӗн часах майлашнӑ; майлашнӑ хыҫҫӑн тата ытларах, ӗлӗкхинчен те хӗрӳрех савма пуҫланӑ.

Савма, чанах, кӑмӑлӗ пулсан, пӗлнӗ Чакак.

Ҫавна астусан, сасартӑк ун пуҫӗрче шухӑш ҫуралнӑ: „Ман кайас-ха кӗҫӗр Чӗкеҫ патне,—шухӑшланӑ вӑл,—халӗччен каймантa, кӑмиссара хӑваласах кӑлармӗ-ха! Унта мӗн пулсан пулат... вӗрептем-ха Чакака. Хӗрарӑма ӑна кӳлештерме те пӗлмеле. Кӳлеше пуҫласан, вӑл хӑйех астуса илет".

Шухӑшланӑ та, утнӑ та... Каламалах: виҫ каҫ вӗт ӗнтӗ Питтай арӑмӗнчен уйрӑм, сивӗ вырӑн ҫинче выртат. Паллах, тунсӑхлатӑн хӗрарам ӑшшине, ҫепӗҫ сӑмаха, тата ыттине те.

Тӳррипех каласан, Питтай тен ӑна-кӑна ӗмӗтленмен-тӗр те, Питтай вӑл-ку тӗлӗшрен, йут хӗрарӑмсем патне ҫӳрес тӗлӗшрен, хӑйне-хӑй сапайлӑ тытнӑ.

Тӗрлӗ сӑлтав пулнӑ ӗнтӗ... Пурне те пӗлсе те ҫитерес ҫук. Етем хӑй те час-часах пӗлмест мӗншӗн ҫапла тунине.

Татах калас пулат: тен, пӑртак шухӑшласа тӑнӑ пулсан, Питтай кайман та пулӗччӗ. Анчах увӑн ҫавӑн пек йӑла пулнӑ: пӗр шухӑша йышӑнсан, вӑл вара ӑна пӑрахман. Хӑвартрах, сивӗниччен тӑвас тесе тӑрӑшнӑ. Халӗ те ҫаплах: хӑвартрах, хирӗҫ шухӑшсем, иккӗленӳсем сиксе тухаччен кайас-ха тесе, вӑл ҫаврӑннӑ та „вашлаттарнӑ" Чӗкеҫ ҫурчӗ йенеле.

IX.

Чӗкӗҫ ҫурчӗ айалти касра. Пӗр пӗчӗк ҫеҫ мунчаран туса лартнӑ ҫурт. Ҫурт ҫумӗнче ҫуртӗнчен ҫӳлӗ ларакан кӗлет, унтан темскер хушӑ пекки.. Урӑх ним те ҫук. Вӑл ҫурт темскерле пӗчӗккӗ ланчашка кӗлетке пек ларат. Урӑх ҫуртсен хушшинче хӑйӗн пӗчӗклӗхӗпе хурланса мар, мухтанса ларнӑ пек ларат.

Халӑх ҫӑварне чараймӑн. Тем те калаҫаччӗҫ Чӗкеҫ синчен. Пурте ун ҫине ҫиӗелерехрен пӑхнӑ. Ӑна курсан, пӗри те чӗнмесӗр иртмест, шӑл йӗрмесӗр йулмаст. Хӑш хӗрарӑм ҫапла пулат ӗнтӗ: сӑмаха ҫӑмӑл ҫӗклет, шӳт тунине пӗлет. Хӑй те пӳт тума йуратат. Арҫын тени ӑна курсассӑн, шапӑлтатмасӑр иртмест ӗнтӗ. Ҫавӑнпах-тӑр та хӗрарӑмсем ӑна хыпса ҫӑтма хатӗрччӗ. Йалта увпа кӳлешмен арӑм ҫук тесен те йурат ӗнтӗ. Пурте кӳлешеччӗҫ. Пуринчен ытла активиссен арӑмӗсем.

Упӑшки унӑн, Кашук, вӑрҫӑра пачах ҫухалнӑ. Упӑшки ҫухалсан тата пӗр-ик ҫултан пирӗн йалта пушар пулчӗ, ун чухне вӗсен ҫурчӗ тӗпӗ-йӗрӗпех ҫунса кайрӗ. Чӗкеҫ вара тенепле мунчаран пӳрт тукаласа лартрӗ те, хӑй пӗччен пурӑна пуҫларӗ. Пурччӗ унӑн пӗр ача, Симулла йатлӑскер, вӑл та выҫлӑх ҫул Мускаврa ҫӳренӗ чух, темле прийута лекнӗ те, савӑнта ҫухалнӑ. Пӗр суккӑр карчӑкпа пурӑначчӗҫ вӗсем. Аккӑшӗ тетчӗҫ-и ҫавна? Инкӗшӗ тетчӗҫ-и? „Арҫынсем, ытла пӗччен пулсан, пусмӑрлаҫҫӗ, ҫавӑнпа усратӑп“,— тетчӗ вӑл аккӑшӗ ҫинчен ыйтсан. Качча кайма шухӑш тытман. Ҫӳрекелетчӗҫ ун патне хусах арҫынсем качча илес тесе... Кайма туман, куран.

Пӗр вӑтӑртискер, ҫамрӑкчӗ-ха вӑл, хӗр пекех. Икӗ чечек йевӗрлӗ кӑвак куҫӗсем ытла ҫамрӑклӑн чечекленетчӗҫ. Нӳрлӗскерсем, темле илӗртӳлӗччӗ вӗсем, хут те хӑш арҫын ҫине те хапсӑнса пӑхаччӗҫ. Елле, вӑл упӑшкасӑр арӑмсен куҫӗсем каш ниннех ҫапла? Чӑнах! Ун пек хӗрарам куҫӗ вӑл чӗрӗ, пӗрмай выљат, вӑтанмаст; сан ҫине темскер, санӑн мӗн пур шухӑшна пӗлнӗ пекех пӑхат. Куҫӗпех калат: „есӗ арҫын, арҫынна епӗ пӗлетӗп“.

Упӑшкалӑ арӑм пӗртте апла пӑхмаст вӗт. Увӑн куҫӗ апла выљамаст. Аран-аран куҫне ҫавӑрат вӑл,— сан ҫине тӑм кӗлетке ҫине пӑхнӑ пек.

Хитре ӗнтӗ, ай, хитре Чӗкеҫ Хитрипех хитре. Ҫавраках питлӗ, тӳрӗ сӑмсалӑ, тӑпӑл-тӑпӑл йанахлӑ, тата мӗн? Ҫӳхе туталӑ еппин, шурӑрах ӳтлӗ, йӗтӗв ҫӳҫлӗ.

Ҫавраках питлисем, ҫӳхе туталисем татах та пуртӑр ха вӗсем те, анчах Чӗкеҫ пеккийех пулас ҫук ӗнтӗ. Хитрелӗхӗ те унӑн леш, хӗр хитрелӗхӗ мар, арӑм хитрелӗхӗ, тулли, пиҫсе ҫитнӗ хитрелӗх.

Калаҫасса вара вӑтанса туса калаҫмаст. Йара парат ҫав. Намӑс сӑмах-и, вӑтантаракан сӑмах-и — уншӑн пур сӑмах та пӗр хаклӑ. Анчах тӗлӗнмеле вӗт-ха: мӗнле ирсӗр сӑмах та ун ҫӑварӗнчен йӗрӗнмелех мар, астармала мар тухаччӗ. Калӑн, ун ҫӳхе тути ирсӗр сӑмахсен ирсӗр ҫине сӳсе, сӑмаха сӑмах

илеменě кăна кăларат, ирсěр хуппине ывăтса хăварат. Калаçăвě те уйăн — çу та çу ěнтě. Тутине кăшт тăсат вара, чěлхе вěçě кěмеле лекнě пек çинçе çепěç, çемçе сăмахсем кăларат. Сăмахсем мар, шерпетсем тухаççě, тейěн. Çавхатер ыра итлеме

Темшěн ун çинчен аскăн арăм тесе чап сарнă. Ахаљ пěр сынтан та Чěкеçпе лачă йавăçнă тесе илтмен. Ўсěрпе-мěнпе пыркалакансем пулнă пуљ ěнтě. Анчах нимěнсěрех кайнă Çав, сăмсисене тавăрнă арçынсем ним тăвайман йевне сарнă пулě те çав ирсěр халлапсене. Тепěр çын вěт вăл çапла. Хăйěн ěç тухмасан, усал сăмах сарса та пулин хăйне лăплантарат.

Пурне те тěплěн калаймастăп, ун пек арăм çинчен пит хěн калама. Сăмагонкă вахăтěнче ун патěнчен кунěн-çěрěн çын таталмастчě. Халě те-ха вăл, хамăр йалта ерех çуккипе, йут йалтан ерех илсе сутат, тет. Çавăн пирки тахаш çынпа та паллашна. Начаљниксем те ун патěнче пулкаланă, кулаксем те ун патěнчен туха пěлмен. Пурне те вăл йышăннă, пурин ваљљи те сăмах тупнă.

X.

Чěкеç патне каймa пикеннěскер, Питтай нимскер те-ха тěплěн шухăшламан. „Кайатап иккен, кайатăп! Мěн ха унта килменни? Курше кайса ларатăн-çке“. Çапла хăйне хăй лăплантарса пынă вăл çулпа.

Тěттěм пулна. Каçхи сывлăм ўке пуçланă. Чěкеç пўрчě тăрринчех çакăнса тăнă йапшар уйăх. Чěкеç пекех вăл ăпшăн пăхнă. Çырма хěрринче, инçетре, шăпчăк чěриклетнě. Темшěн çавăн пек чухне тăлăххăн хăна ху туйатăн.

— Чěкеçěн тўлемели те пур тăр-ха, — шухăшланă вăл сăлтав шыраса, — ыран пырса тўле, тейěп те, пăртак ларăп та, тухса кайăп. Мěн-ха унта апла-капли?

Çавăнтах шаптан хăпарнă сивěтекен шухăш: „йурат-и ара, кăмиссар пула-тăркачă Чěкеç пеккисем патне çўреме? Çын мěн калě?“

— Çын мěн калě? — тахшинчен вăл хирěçсе ыйтнă, — çын мěн каланинчен хăрамала-и? Хăрамастăп: йури ак кěретěп.

Пулат вěт: пуç шухăшласа татаймаст, — урасем çине шанатăн. Ата! ăçта илсе кайат ура! Çавăн пек Питтай та темскерле халсăрланса кайна, сапаланнă шухăшне пуçтарайман.

Хирěç ура сасси илтěнне, шăхарни, унтан йăтă вěрнě, пěрин хапхи чăррик! тунă.

— Мěн-ха епě капла йупа пек тăратăп! Мěн сыхлат ку, т йěç. Утас...

Хыпалавса утма пуçлавă. Йури, çул вăрăмрах пултăр тесе кайри каспа çавранса кайна.

Çаплах, сисмесěрех, шухăшсем пěр тěвве çитичченех, Чěкеç пўрчě патне çитсе те тăнă.

Кунта тин вăл хăйěн чăрсăрлăхне туйса илнě. Патне çитсен тин хавшаса ўкьě.

„Мěнле кěрěп-ха епě унта? Калле кайас мар-и?“

Урасем çаврăнма пуçланаччĕ, анчах татах кӳршĕн хапхи шанклатрĕ, шăхăрнă сасă уççăнах илтĕнчĕ, Чĕкеç чӳречивчен те тахшин пăхвă пек туйăнчĕ.

— Курчĕç! Хыçалтан та тахшин килет. Халь тин тарма çук ĕнтĕ...—терĕ те вăл, мĕн пур çĕкленекен иккĕленеве татса, вăр-вар уткаласа, шăхăрнă пек пулса, Чĕкеç патне кĕрсе кайрĕ.

Чĕкеç вăл кĕнĕ вăхăтра чашкă-тиркĕ çуса тăнă пулнă. Таврăнă çанăпа, сара уран, кĕпине кăштах çĕклесе хĕстернĕ, чăвашла çыхнă писев тутăрпа,—пăхрĕ те, уçă куçне сарса, сасартăк палласа, илĕртекен кулăшпе кулса йачĕ.

— Ха, хăва килет. Ак шухăшлама-ан! Ата, ирт тĕпелеле!

„Мĕн шухăшлат-ши ĕнтĕ ку ман çинчен? Пĕр-пĕр ĕçпе килнĕ тет-тĕр-ха? Ах, аван та мар Мĕн калас-ха!“— иртсе кайреç пуç ра пĕр-пĕрве хăваласа. Анчах ăçта унта тĕплĕн шухăшлама. Ним тума та вăхăт çук. Ата кала мĕн те пулсан.

— Те выртма та хатĕрленнĕ?—тэмскер кулат ăшра. „Мĕн сӳпĕлтетететĕв-ха? Паллах, выртмала ĕнтĕ... Мĕн пур çын выртса пĕтнĕ те...“

— Çук-ха. . Тин çисе тăрантăм та.. Каçа йулаççĕ саççим! Пăртак иртерех пăрахтармала та вĕт ĕçе...

Чашкине тĕпеле кайса хучĕ, сĕтеле шăла пуçларĕ.

— Да... —Питтай чĕнмели урăх тупмарĕ. Çапах, çĕлĕкне йăта çине çакрĕ, ларчĕ.

Чĕкеç те шăлса пĕтерсе алливе кĕпе аркипе шăлчĕ, пĕшкĕнсе, унтан кĕтерех пăхрĕ Питтай куçĕнчен: „Кала,— мĕн каламаливе“, тенĕ пек.

— Чакак мĕн ĕçлет? Пайан ĕçе тухманччĕ нийак? Хирĕçнĕ темерĕс-и-ха сире?

— Кам каларĕ сана? — тĕлĕнчĕ Питтай.

— Илтрĕм!. — терĕ Чĕкеç, кăвак куçне илемлĕн сарса. Унтан, пăртак тăрсан, ахăрнех, Питтай ним чĕнменрен, татах йăл кулчĕ те тапратрĕ

— Кам-ха каларĕ çавна? Пайан хирте калаçрĕç нийак Айслу каларĕ-и çавна? Сана йашка та пĕçерсе памаст, тет нийак? Чăнах-и вăл?

„Вот тăк председатĕл! — шухăшларĕ Питтай,— председатĕле арăмĕ йашка та пĕçерсе памаст: ăна мĕн пур йал пĕлет! Ак тамаша! Çук, куçарас, куçарас ку ырă мар калаçăва, куçарас урăх йапала çине! Анчах мĕн калаçас-ха? А .. чим-ха!“

— Чĕкеç! Сан ерех çук-тăр?

— Те пур, ара?! — тĕллерех пăхрĕ Чĕкеç Питтай куçĕнчен. — Сэна пама та хăрамала та-ха...

— Ата, кус! Илсе кĕр! — пăрахрĕ Питтай ирĕксĕр.

Кăçатă тăхăнчĕ, тăхăннă чух, кĕлетки авăнса илчĕ, йалтрарĕ ури. Кĕпи варкăшрĕ. Тухрĕ кĕлете.

— Ой! ну, чăнах хитре! Анчах, мĕншĕн-ха, ухмах, ерех ыйтрăм? Ех, кам хушрĕ-ха мана кунта килме. Мĕн тăвăп-ха епĕ вăл ерехпе? Илес те, тухас та кайас... Ех... кăмиссар, те ĕнтĕ...

— Акă пур! йулашки кăна йулнă иккен сан телейпе.

Курат Питтай çур литр ерех. Çутă вăл, тăрă: кăсăхтарат кун пек чухне. Ун витĕр çӳçентерсе йалтрат çӳхе тута, Чĕкеç пит-куçĕ кулли... Çывăх вăл, упăшкасăр: ерех пекех кăсăхтарат. Вăл та ерехех вĕт!

Акă пуçра пимĕнле шухăш та çук: Чакак та, çын сăмахĕ те, финплан та, ним те, ним те...

„Кăмиссар пулнă çын, каларăшне, хăшĕ ĕçменни пур-тăр ĕнтĕ. Ĕçес-ха пĕрре — асăнмалăх хăт пулĕ“.

Çавăнтах пурте килĕшӳлĕ пек туйăнат. Чакак инçе. Йуратман, аса та илмен арăм пек: пурри те сисĕнмест. Умра пĕр ерех те Чĕкеç çеç! Чĕкеç!

„Тен, ĕçсен!.. Пĕрле ларса ĕçсен...“

— Ĕçетпĕр-и, Чĕкеç?!

— Ата, ĕç ху!

— Мĕн ĕçĕ... Пĕрле ĕнтĕ ăна! Туп-ха черкке!

Черкке тупрĕ, çакăр, шăрттан... Вырăн çине кайса тайăлчĕ. Илĕртет, вĕт, илĕртет арçынна.

— Асту, Питтай! Ĕçессе ĕç те, — ан ӳсрĕл! Асăхса ан кай! Ан çыхлана хур мана. Ун чухне вара арăму килне те кӳртмĕ.

Çийĕнчен тата куç хĕссе-кулу.

Сивĕтрĕ ку сăмах Питтайа, анчах черкке хĕртрĕ.

— Сурап епĕ арăм çине... Есĕ „арăму“ тесе ан тăр-ха. Кил-ха кунта! Ĕç!

— Суртарĕ вăл.. — шухăшлă сасăпа тăсрĕ Чĕкеç.

— Есĕ харатни вара Чакакран? Чĕкеç! Чĕкеç, тетĕп. Кил-ха кунтарах! Ĕçетни-ха? Тыт!

— Ĕçместĕп! Ху ĕç.

Хĕрарăм йăли. Питтай пĕлет: ĕçесшĕн. Ытларах сĕнтересшĕн кăна

— Ей, мĕн тата калаçмали пур. Тыт, тенĕ сана!

— Ну, пар еппин!

Хĕрарăм пекех мелле мар тытрĕ черккене, ĕçрĕ, çӳçенсе пуçне силлерĕ, куçне хĕсрĕ.

— Ай-йай! Хăвытлă! Ме, тыт! Урăх ĕçместĕп.

— Ĕçместĕн-и, Чĕкеç?! Ан тăр-ха, ан тăр! Лар-ха ак кунта... Ну-у... ĕнтĕ.

Туртрĕ, вăйпа лартрĕ сумма, ыталарĕ.

— Ну, ĕнтĕ, Чĕкеç!

— Чим-ха, кай! Тахшин килет.

Ахаль кăна каларĕ пулас Чĕкеç, хатăласшăн кăна. Анчах калани тĕрĕс те пулса кайрĕ. Хапхана тахшин уçса хупрĕ.

Питтай черккери ерехе хăвăрттăн йăвантарчĕ те, кĕленчине кĕтессе пытарчĕ.

Алăк уçăлчĕ, кĕчĕ Куçук Чĕкеç хăтăшĕ, йал пуйанĕ.

— Чипер ларатри?

— Ата, кил! — терĕ хирĕç Чĕкеç.

Куçука Питтай куркаланă ĕлĕк те. Анчах кăмиссара кĕриччен пĕр-пĕрне астуман. Питтай хăйĕн мăнкăмăллăхĕпе, Куçукĕ

татах: Питтай пек çынсемпе сахал калаçнă. Куçук йатлă çын пулнă ĕнтĕ. Ăна такам та пĕлнĕ, такам та унпа паллашасшăн пулнă. Тен, çавăнпах кăва Питтай ăна курайман. Салтакран килвĕренпе пĕр сăмах çурри унпа калаçман. Курсан тусан та, чĕнмесĕр, çĕлĕк илмесĕр иртнĕ. Çавăнпах-тăр та вăл пĕтĕмпех çемçелнĕ, каççах кайнă Куçук ăна хăлхинче çемçен, ăшшăн, хисеплесе чĕннинчен. Куçук вара чăнах пĕлнĕ етеме йăпатса хăй йевне çавăрма. Хаҙ те вăл Питтай кунта пулниччев пĕрре те тĕлĕнмен пек пулса, вăл пĕтĕмпех ăна ăнланнă пек туса, йăвашшăн чĕннĕ:

— Питтай та кунта иккен... Мĕнле ĕçсем, Питтай?

— Ĕçсем, пыраççĕ-ха!—хуллен сасă панă Питтай.

— Ере...—пĕлсе чарăннă Куçук. Унтан шелленĕ пек сасăпа.— Санăн та ĕç нумай çав... Ку чухне пукуй çук пĕрне те.

— Ĕç нумай! -ним шухăшламасăрах тăснă Питтай.

— Ара, куратпăр ĕнтĕ, куратпăр... Мĕн каламали пур ĕнтĕ. Куçлă вĕт епĕр çапах,—çавхатер лайăх ăнланнă пек, Питтайа çывăх курса шапăлтата пуçланă Куçук.— Епĕ пĕлетĕп ăна: халăх хушшинчи ĕçе. Хам старăста пулса курнă çын. Ха, ун чухне мĕскер? Ĕç те çук. Халĕ вĕт.. ĕç çине ĕç, кампани çине кампави... Куҙи ăнланмастпăр епĕр.

— Да... ĕç нумай!—Куçук çемçе сăмахĕпе Питтай, ўсĕртерехскер, пĕтĕмпех мăкалчĕ. Темскер пуçран çупăрланă пек. Çăмăл, çĕклентерекен шухăшсем кăмăла саваççĕ.

„Чăвах,—тет Питтай ăшĕнче,—çакăн пек йатлă çынсем кăна çынна хисеплеме пĕлеççĕ, çынна хакласçĕ...“

Куçук пăртак чарăнчĕ, сухалне шăлкаларĕ, унтан сасартăк:

— Чĕкеç кив! Пар-ха ара есĕ çур литр! Мĕн ара ахаҙ ларатпăр. Йĕпетер кăшт пыра! Питтай та ывăннă пулĕ-ха...

Нимскер те шухашламарĕ Питтай: йурат-ши, йурамаст-ши тесе те, килĕшет-ши, килĕшмест-ши тесе те... Мăнкăмăллă çынсен çавăн пек инкек пур: йăпатрăн иккен вĕсеве, чыс турăн малтанлăха,—унтан пĕтеççĕ вара вĕсем: манаççĕ мăнкăмăллăхне те, пăхăвтарас шухăша та. Халĕ те Питтай петĕмпех манăçса кайрĕ. Çавхатер ăна çемçетрĕ калти йатлă çын çапла чыс туни.

— Ара, те пур ĕнте..—иккĕленерех пăхрĕ Чĕкеç Питтай куçĕнчен.

Питтай куçне те çĕклемерĕ, нимпе те палăртмарĕ вăл ăна, ерех ĕçессине хирĕç иккенне.

Çапла, ерех черккипех сĕтел çине ларăнчĕ. Куçук кĕрсе ларчĕ.

Тытрĕ черкке, тав турĕ Питтайа. Ĕçрĕ. Тултарчĕ çĕнĕрен, пачĕ.

— Ме-ха!

— Ĕçес мар-тăр, Куçук пичче!

— Ата, пĕрне ĕçсе пар-ха. Хăçан-ха епĕр санпа ĕçес? Есĕ вĕт-ха тăван та пулатăв. Манăн аннепе сан асаннў пĕр тăванах... Есĕ ăна пĕлмен-тĕр те-ха?

— Илтнĕччĕ, Куçук пичче, илтнĕччĕ!—терĕ пĕтĕмпех ирĕлсе Питтай.

— Ну, вот: илтнĕ пулсан, ĕç. Йут çын мар вĕт ĕçтерет!

Питтай тыгса ёçсе пачĕ, пăрттан патне кармашрĕ.

— Çавна калап, Питтай,— пуçларĕ Куçук каллех сухалне шăлкаласа.—Сана, тăван тесе кăна та-ха! Вăн, эпе, мана виç-çĕмĕш группа хунă та-ха Ну, мавăн пĕр лаша тейĕпĕр, пĕр ĕне, виç-тăват сурăх... Тĕрĕс мар хунă-тăр вĕт ана, епĕ шухăшлатап.

— Ăна манчченех хувă, Куçук пичче,— хăварттăн пăрахрĕ Питтай

— Санчченех ара, санчченех... Çавăнпа сана калатăп та... Есĕ мар ĕнтĕ унта.. Ыттисем ăна.. Ну, тав-ха сана!

— Çитет-тĕр, Куçук пичче!

— Мĕн çитмели çур литр икĕ' сынна! Ме-ха... Çавна каласшăнччĕ-ха, Питтай Килнех пырас тенĕччĕ те-ха... Хăйаймасăп вĕт: ырă мар темĕскерле. Ĕçлĕ çын патне сасартăк пыма!

— Ей, мĕн унта, Куçук пичче!

— Мĕн мар, Питтай! Епĕр те вĕт чухлатпăр... Пĕлетпĕр епĕр те.. Çавна каласшăнччĕ-ха, Питтай: ăна, ача, калле тусан йурамаст-шим ара? Иккĕмĕш группа кзлле куçарсан... Вĕт, ху пĕлеп, мĕнле ĕнгĕ епĕ кулак. Ĕмĕре çак влаçшăн тăрăшса ирттеретĕп. Пурте пĕлеççĕ вĕт епĕ мĕнле пурăнние..

— Курăпăр унта, Куçук пичче, курăпăр,— шантарса пăхрĕ Питтай Куçук куçĕнчен. Ăшĕнче шухăшларĕ: „Мĕнле кулак, каларăшне, çын, çын. Пирĕн пекех. Так... тупмала кама та пулсан тулама".

— Ну, апла та пулсан, ĕç те пĕтрĕ. Çапла, Питтай, тăвана манас пулмаст. Чĕкеç! Тепĕр çур литр ерех тупса кил-ха... Питтай, ме-ха!

...Ыттисем пурт' тăлĕкне хугăш пулса иртнĕ Астумаст, вĕсене пурне те Питтай. Астават кăшт Куçука çарăмĕ çинчен тĕплĕн каласа панине, унтан тухнине, унтан Куçук патне кăнĕ (ăна аставаймастăп! тет хăй Питтай), унта ĕçнĕ, унтан Куçукпа килне кайма тухнă Куçук килне çитернĕ те, кайнă. Питтай алăк умне пырсан, вал питĕрĕнние курсан, пĕтĕмпех халран кайнă.

Сенксе тăвă Питтай алăк умĕнче. Çуçра сĕрĕмлĕ. Йĕри-тавра тĕттĕм. Йытă çеç таçта тăлаххăн, ахăрпех, уйăха пăхса, уланă. Ирĕксĕр ун чухне хупĕнченлĕхне ытларах туйатăн Ирĕксĕр пуçа кичемрен кичем шухăшсем кĕреççĕ.

— Уйрăлса кайнă! Хăварнă мана пĕчченех! — сĕнксе тăна Питтай питĕрнĕ алăк умĕнче. Умра тĕрĕленнĕ пĕччен пурнăç, пуша пÿрт, сивĕ вырăн, шăлман урай... Халăх куçне йепле курăнмалла? Хусах арçын! Хисепсер, ниçталлисĕр вырăн!

Çăмăр пĕрĕххеле пуçланă. Улакан йыта та чарăнвă, кангăр ăшĕнче карăш карклата пуçланă.

„Пĕр чĕрĕ чун асăнат-ши мана çак вăхăтра? Йе никамăн та, ним ĕç те çук-ши ман çумра? Пĕри пăрахса тухса кайат, теприсем пăхăнмаççĕ, хăрамаççĕ... Мĕншĕн-ха капла пулса кайрĕ?"

Мĕншĕнне пĕлес тесен, хăна пĕлмеле, хăвăн айăпна курмала, хăна вăрçмала... Анчах Питтай нихăçан та хăйĕн айăпне курман, йалан çын айăпне кăна курнă.

Урасем ҫавӑнса утнӑ. Пӳрт умӗнче темскере таканнӑ, тӑнӑ, татах утнӑ. Мӗншӗн-тӗр, мӗне кӗтсе-тӗр (ӑна хӑй те пӗлмест) пынӑ тӑнӑ каллех Чӗкеҫ ҫурчӗ патне.

„Ҫитнине, чӳречинчен шакканине астӑватӑп, урӑх нимскер те астумастӑп“, тесе калаҫа пачӗ вӑл мана кайран.

Чӗкеҫ ӳсӗр ҫынна кӳртмен. Урсах кайнӑ вара Питтай хӑйне чи хурланнӑ ҫын вырӑнне хурса, мӗн пур айӑпа Чӗкеҫре пек курса, ҫавӑнтах рычаг илнӗ те, Чӗкеҫ пӳрчӗн чӳречисене пӗрерӗн-пӗрерӗн ватса тухнӑ.

Мӗншӗн Чӗкеҫӗн чӳречисем айӑплӑ пулнӑ? Ӑна хаҌччен епӗ те, Питтай хӑй те калама пултараймаст.

Тен, астуса илнӗ пулӗ вӑл ҫав вӑхӑтра ҫынсем ҫапла арӑмсем кӳртмесен, чӳрече ватса хӑварнине? Тен урӑх сӑлтав пулнӑ? Ним те калама пултараймастӑп.

Тӗрлӗ халлапсем ҫӳрерӗҫ йал ҫинче ҫав ӗҫсем ҫинчен. Часах ҫав паллӑ йапала тӗтреленчӗ, палӑрми пулчӗ, пӗлсе пӗтерейменкаласа пӗтерес ҫук ирсӗр хыпар пулса сарӑлчӗ йал ҫине.

Питтайа пурте хурларӗҫ: ӑна хӳтӗлесе калаҫакан пӗр ҫын та пулмарӗ. Куҫук та шӑлне шӑрт ҫыртрӗ. Хай тенӗ ҫынсемпе кӑна калаҫнӑ, тет: „ан тивӗр, хӑт те мӗн хатлантӑр... Пирӗн ӗҫ ҫук“,—тесе пӗрле ӗҫви ҫинчен шарламан, Чӗкеҫе те калама хушман.

Парти йачейки каллех темӗн шутланӑ. Питтай пурпӗрех вӗсен сӑмахне вырӑна хурас ҫуккине пӗлсе, хӑйсен вӑйӗ ҫине кӑна шанмасӑр пек йӑнӑш-мӗн тӑвас тесе пулӗ-и, ӗҫ ҫинчен РКИ-йе пӗлме панӑ.

Унтан тата ҫӗнӗ хыпарсем сарӑла пуҫларӗҫ. Тахшин сӑмах кӑларса йачӗ: Питтай ӗҫнӗ чухне 1000 тенкӗ укҫа ҫухатнӑ, тет, унтан тырӑ тухмаст, тейе пуҫларӗҫ Куп ҫинчен Куҫук ертелли те пит шавла пуҫларӗ. Ҫапла... Часах Питтай мӗн пур йытӑ ҫулӑхнӑ ст м пекех пулса тӑчӗ. Питтай ӑна хӑй те туйнӑ, анчах нимскер тӗлмен пек хайне тытм тӑрӑшнӑ.

Чӗкеҫпе Чакак ҫинчен икӗ тӗрлӗ сӑмах ҫӳрерӗ. Пӗрисем: Чӗкеҫе хӳтӗлесе Чакака вӑрҫатчӗҫ, теприсем: Чакака тивмесӗр Чӗкеҫе ҫийеччӗҫ. Анчах ролӗсемпе улшӑнатчӗҫ час-часах. Пӗр ҫӗрте Чакака вӑрҫакаини, тепӗр ҫӗре ҫитсен, унга та вӑрҫакан пулсан, шеллесе калаҫма пуҫлатчӗ вара

— Ара... ара... пырсан, хӑваласа кӑлараймастӑн ӗнтӗ.. Чӗкеҫе те, талӑхскере, мӑшкӑллама пӑхаҫҫӗ ҫав.

Тепӗр ҫӗртре, Чӗкеҫе ытла мухтаҫҫӗ пулсан, ҫав арӑмах тарӑха пуҫлатчӗ.

— Чӗкеҫӗ те ҫа-а-ав! Иртӗнпӗ ӗнтӗ. Мӗн пур йал арҫыннине астарат!

Часах вӗсем ҫинчен пӗтӗмпех калаҫма пӑрахрӗҫ; пӗр Питтай кӑна пурин чӗлхи ҫинче те вӑраххӑн ӑшаланчӗ.

XI.

Сӑнчӑра веренмен йытӑ сӑнчӑртан хӑтӑлсан, сирпӗнет айаккине ним курмасӑр, ним пӗлмесӗр... Сирпӗнет пӗр тарас шухӑшпа кӑна. Ҫавӑн пекех Питтай та ҫак ӗҫсем хыҫҫӑн ыгкӑнчӗ

таçта айаккинеле, пăхмарĕ пĕрин çине те, итлемерĕ пĕрне те... Еçле пуçларĕ ним курмасăр, ним астумасăр, пĕр хăйне кăтартас, хăйĕн вăйне палăртас шухăшпа кăна.

Мăнкăмăллă çыннăн йали çапла: çынсем ăна пурте тўртĕн пăха пуçласан, вăрттăн çисе калаççан, мăнкăмăллă çын ун чухне тата ытларах мăнкăмăлланса кайат; пĕлми, астуми, калаçми пулат. Мăнкăмăллăха пĕртен-пĕр хĕçпăшала умне тăратса, пурин çине те: „Есĕр мана тăмастăр, хăт те мĕн ман çинчен калаçăр, суратăп епĕ сирĕн çине, сирĕн сăмахăр çине...“ —тесе пăхма пуçлат. Мăнкăмăллăх, ман шухăшпа, вăл чăн йулашки хĕçпăшал; урăх хĕçпăшал, урăх вăй пулманнипе кăна усă куракан хĕçпăшал.

Ирхине йалсоветне Питтай пырса кĕрсенех, унăн тĕсне курсанах, пурте шăпăрт пулчĕç. Пĕр йавăнса тăракан тĕтĕм çеç Питтайа пăхăнмасăр хăй çулĕпе йарăмланчĕ. Унтан вăл та хытрĕ.

Чĕлĕмсем урлă, çамкасем тăрăх, куçсем витĕр вуларĕ Питтай:

„Ну, мĕн хăтланатăн-ха?“

Питтай кĕчĕ, ларчĕ, никампа сăмах чĕнмерĕ. Хут кăларчĕ, тем çырчĕ.

— Улак! кус, йалсовет членĕсене пуçтарса кил. Заçедани пулат.

Пурте, пўртрисем, çăмăллăн сывларĕç. Капланнă пĕве çапах уçăлчĕ. Тенкел çинче ларакан Шăпчăк чĕнмерĕ. Кĕтесри Çерçи тĕллерĕ хĕсĕк куçне Питтай çине:

— Мĕнле ыйтусем пайан заçеданинче?

— Пур!—Питтай урăх чĕнмерĕ. Пĕчĕк кĕнеке çине тем çырчĕ те, куçне тем шухăшпа хытарчĕ.

— Халех килччĕр-и? — астутарчĕ исполнитĕл Улак. Йури йăваш сассине, пĕлнине палăртасшăн мар сулса каларчĕ.

— Халех!— пуçне çĕклемесĕр пăрахрĕ Питтай.

...Тата пĕр çур сехетрен пуринчен малтан персе çитрĕ Уђар, хайхи „председатĕл çавăн йышши-тĕк“ теекенни.

Хăйаккăн куçлă вăл, пĕр куçĕ çине ўт йатăнса аннă, хуплат ăна; пăхнă чухне арлан шăтăкран пăхнă пекех пăхат. Мăкраç тути айалти тутине витеймесĕр тарат, сайра кулат. Ку пытармаст Питтай çине тăрăхларах пăхнине, пытарасшăн та мар. Тен, çавăнпа вăл маларах персе çитрĕ та пуле.

— Мĕн? ытла ир пуçтаратăн! Елле патне çитрĕ-и?

Питтай виçсе пăхрĕ.

— Патне çитрĕ çавă. Çитрĕ! Сирĕнне çитмен-им-ха? Укçатенкĕ нумай пуçтартăн-и? Еçу ăçта? Есĕр пуçлăха хурлама пĕлетĕр!

Çĕркĕ мĕн пулнине пурне те пĕлекен, тата çитменнине ахаљ те чăркаш Уђар Питтайа тўрех такăнтарас терĕ, куран.

— Есĕ, ара пайан... лешĕн хыççăн, сулахай урупа тăтăн-и! Сĕре кăшкăратăн...

Пурте, пўртре пуррисем, Уђар çине, уппа килĕшнĕ пек пăхрĕç. Уђар хăй те, Питтай сăмахĕ ниме те тăмаст пек туса,

йури манкине пӗшкӗнсе шӑнкарчӗ, сӑхман аркипе шӑлчӗ, халлӑ уттипе тӗпеле иртсе ларчӗ.

— Тимрӗҫе чӗнсе килем-и? — чӗнчӗ хӑравҫӑ, хӑйне вырӑн тупаймасӑр тапӑртатса тӑракан Улак.

— Кирлӗ мар! — татса пӑрахрӗ Питтай. — Сӑмахпа вӗсем пурте чӗрӗ: куна тумала, лешне тумала! Тӑвас патне ҫитсен пӗри те ҫук! Йачейкӑ ҫекретарӗ пулнӑ та, каҫса кайнӑ. Хушса кӑна лармала. Миҫе ак кашнине каланӑ: хӑвӑр районти парӑмсене пӗтерӗр, пӗтерӗр тесе... Пӗри, пӗри нимӗскер ӗҫлесшӗн мар.

— Раз, пуҫлӑх ҫапла ӗҫлет-тӗк! Пирӗншӗн елле? — туса пӗтернӗ пируска тӗпне татса, сурса кӑларчӗ Уӈар. — Арӑмсем патне сахалтарах ҫӳреҫҫӗ ӑна.

Шӑрпӑк кӑларчӗ, тивертрӗ. Пӑртак именчӗ пулас хӑй те. Анчах палӑртмарӗ

Питтайшӑн чи хӑрушӑ тапхӑр ҫитрӗ: хаЂ Уӈар сӑмахӗ айне пулсан, пӗтрӗн вара. Пурте сан куҫна сурма пуҫлӗҫ. Ҫавӑнпа вӑл сасартӑк хӑпартат сассине:

— Епӗ арӑмсем патне ҫӳревипе ҫӳременнинче сан ӗҫӳ ҫук. Кала есӗ мӗн чухлӗ пуҫтартӑн? А-а! Мӗншӗн чи кайра? Есӗр вӗт мана лартас тесе йури ӗҫлеместӗр! Унтан кайран хӑвӑрах! Вон, халех хӑвӑн участкува! Каҫчен пӗр тенкӗ хӑварнӑ ан пултӑр!

Капла сӑмах ҫаврӑнасса кӗтмен пулӗ Уӈар та. Чӑнах та, начар ӗҫлекенскере—„есӗр йури ӗҫлеместӗр“ тени шалтах пӗтерчӗ. Ҫитмевнине, Питтай капла кӑшкӑрнине вихӑҫан та илтмен.

— Ну?! — Питтай кӗтсе тӑчӗ. — Марш!!! Каҫчен тултарнӑ пултӑр! Тултармасан каҫхинех ӑсататӑп.

Уӈар хуҫкаланса тӑчӗ-тӑчӗ, ним тума аптӑрарӗ: тилӗрсен — ҫӗнтерес ҫук. Итлесен — йепле итлемеле!

— Мӗн ара, есӗ мана кӑна куратӑн? Епӗ кӑна мар вӗт! Ыттисем нумай тултарнӑ-и-ха?

— Пурне те тивӗ! Улаттар! — кӗскен, пӑхмасӑр пӑрахрӗ Питтай.— Ил веҫ хупала пӗрле Сантиреке. Кайӑр!

— Есӗ те, Мӑрса,— кӑшкӑрчӗ вӑл ҫырса ларакан ҫекретаре,— халех ҫыр приказ: йалсовет членӗсем пӗри йулмиччен тухчӗр йалсем тӑрӑх, каҫчен м'н пур задани тулнӑ пултӑр. Спискӑсем туса пар! Хам, епӗ виҫҫӗмӗш района кайатӑп.

Уӈарпа Сантирек тухса кайрӗҫ. Вӗсен хыҫҫӑн Уӈартан уйралса, утрӗ Питтай.

Пӳртре йулна ҫынсем пӗри те пӗр тапхӑра чӗнмерӗҫ. Унтан Йакамас, пер сарӑ ҫӳҫлӗ, курнусрах, чалӑш тутала чӑваш Питтай куҫран ҫухаласса кӗтсе илчӗ те:

— Кӑна партак лекнӗ, куран.. Пит чӗрӗлнӗ. Тахҫанах ҫапла кирлӗ,—терӗ.

Ана хирӗҫ пӗр ҫын те чӗнмерӗ.

...Приказсемпе кӑна шарлаттара пуҫларӗ ҫавӑн хыҫҫӑн Питтай. Йалсовет заҫеданисем тума пӑрахрӗ, никампа канашлами пулчӗ. Парти йачейкине пӗтӗмпех астуми пулчӗ. Комуниссене, комсомолӗссене-ха уйрӑмах хытӑ тыткала пуҫларӗ. Ҫырса фақат ҫеҫ приказ, вуласа парсан—парат, вуламасан — ҫаплах.

Каççерен çеç пĕрерĕн-пĕрерĕн хĕртегчĕ кашнине. Хĕртмели мелсем хăйне йурăхлисене шухăшласа кăларнăччĕ.

Калăпăр, пырат ун патне пĕр-пĕр йалсовет членĕ, хăйай-маст-ха чĕнме, Питтай пуçне çĕклемесĕр.

Йулашкинчен, Питтай пуçне çĕклет, палламан çын çине пăхва пек, пăхат йăвăç куçпа:

— Ну, мĕнле?!

— Пит шепех мар! Укçа çук, теççĕ.

Питтай итлемесĕр çаплах сивĕ йăвăç куçпа пăхат те:

— Мĕншĕн, ача, тÿрринех каламастăн? Сăтăр тăватăп, те; мана совет влаçĕ кирлĕ мар, те; сире çакса вĕлерĕпĕр, те; кив самана кăна çаврăнтăр, те... Çапла калаççĕ ăва... Мĕн ман умра йĕкехÿреленсе тăмала! Пĕлетĕп вĕт енĕ.

Сасси те вĕт ха унăн шантармали сасă. Шÿт пек те мар вăл, мăшкăлли пек те мар.

Ăнтан кайна член, увтала-кунтала пăхкалат, мăк-мак тукалат: ним чĕнеймест. Питтай татах чĕрене хăйăрса чÿклет:

— Çапла ача, тÿрех калас пулат ăна! Сана — темеле санăн,— тĕрмене!.. Сана тĕрмене ăсатасшăн тăрăшатăп; кампанисене — темеле санăн, — срыват тума тăрăшатăп... Çапла-и?

Каласа пĕтеричченех пĕрре кулин хăт. Аптăранă член аран-аран хăталат те, çĕмĕрмест-и йал хушшинче? Чăтса кăна тăр! Кулак-и унта, чухăн-и, ватам-и — пурне те пĕр турапа турат. Хăшне ăсатат, хăшне хунса хурат, хăшин ĕнине, сурăхне, лашине илсе тухат.

Тĕлĕнмеле ĕççем пулса иртрĕç çав вăхăтра пирĕн йалта Вĕт, кайран, Питтай председателрен тухсан, районтан йури килчĕç перегибсене тÿрлетме. Пĕр кун кунĕпе йал çыннисен жалăбисене пухрĕç. Шухашласан, хаяр çÿç-пуç виреле тăрат. Вĕт, лапасса, апла хăтланмасан та ĕçлеме пулаччĕ. Парти йачейкипе лайах çыхăнса, актива чăмăртанă пулсан, массă хушшинче тĕшшипе ăнлавтарна пулсан, — нимĕскер те çавăн пекки пулмастчĕ.

Сехерлентерсе çитерчĕ çавă Питтай та йала пĕр-ик кун хушшинче. Ăçта вал Питтайа хирĕç пĕр сăмах чĕнме? Ун умĕнче кулма мар, ытлашши каласма та хăймаççĕ. Пĕр Уңар кăна тепĕр кун отчотпа пынă та, хăй хăйулăхпе темскер уççăвтарах каланă.

— Ну? — тер Питтай йатне каламасăрах ун çине пăхса.— Пĕр пус та çук! — йури, куласшăн пек пулса, каласа пачĕ Уңар.

— Пĕр пус та çук еппив! — сассине чÿкленинчен çÿлерех çĕклерĕ Питтай.

Пĕр сасă та çук пÿртре. Хут татăке ÿкрĕ сĕтел çинчен—вăл та илтĕнчĕ.

Сасартăк, тахçан Уңар ĕçне пĕлсе, вăл мĕн хăтлавасса кĕт-се тăнă пек:

— Ăсатаймастăн вĕт, ача, мана тĕрмене! Йе ăсатас тесех шухăшлатви?

— Ей! тахшин сана тĕрмепе ăсатасшăн. Тахшине кирлĕ!

Питтай илтмерĕ те вăл сăмахсене. — Çук, хуптараймăн, ача!— Унтан сасартăк сассине хайаррăн кăларса: — Хуна ăсатăпăр!

Сăтăрçă. Пурне те пĕлетпĕр: мана вĕлерес тесе кампа калаçрăн? Кала-ха çавна? Вĕлерттермĕç кусем! Улак! илсе кайса хупăр! Урамри кĕлете! Питĕрĕр!

Тĕлĕнмерĕç те пĕри те... Шўт çуккине те пурте сисрĕç. Уļþар хупăннине те пур те ĕненчĕç Уļþар хăй те ĕненчĕ пулас: тухса кайма пикенчĕ. Анчах Улак çавăнтах ĕлкĕрчĕ тытрĕ хулпуççинчен. Уļþар турткаланма пуçланчĕ, анчах каллех тепĕр хулĕнчен Йакамас çавăрса илчĕ.

Илсе кайрĕç мĕскĕне, кĕлете. Пĕр виç-тăват кун хушшинче ташлаттарма пуçларĕ пĕтĕм йала пирĕн Питтай. Етемсем каллĕ-маллĕ пăркаланса ĕлкĕриччен, пĕрне туртрĕ, теприне каçартрĕ, пĕрве çанрĕ, теприне йарса илчĕ. Пĕр виç-кун иртрĕ-и?—туртăнчĕç вĕт пурте. Сасартăк пуçлăх пур иккенне ĕнсе çинче туйрĕç.

Шава пуçларĕ пурте хăвăрттăн: кĕске вăхăтрах тўлевсем пайтах пуçтарăнчĕç; тĕрлĕ заданисем: çăм, çăмарта, çу тата ыттисем те тулăха пыра пуçларĕç.

Ним пĕлми антарса кайрĕç пĕр тапхăра йалти çынсем: ни вырăнлине, ни вырăнлă маррине пĕлмерĕç; ни вăрçма, ни харкашма, ни хирĕç тăма, килĕшме пĕлмерĕç.

Çавăн пек тапхăр хăшпĕр çĕртре пулатех. Нумайа пымаст вăл, анчах пулатех. Халăх шухăшне пуçтарса çитереймен вăхăт вăл. Кам пĕлет? Тен, çавăн пек „ахăрсамана“ пĕр-ик ернене пынă пулсан, парти йачейки вăхăтла чарман пулсан, темле тискер пăлхану та тухса кайнă пулĕччĕ. Пурте пулма пултарат.

Питтай пĕр-ик-виç кунтан ана хăй те сисрĕ пулас. Паллах, сиснĕ: çапла ĕмĕрех пыраймаççине. Паллах, туйнă: хăçан та пулсан, пĕр пĕр кăлтăк сиксе тухсанах—пурте унтан писессине, тарассине, хирĕç тăрассине. Ун чухне вара урăх çĕкленес çуккине те лайăх пĕлве. Унтан тата хай те çав кунсем хушшинче калама çук ывăннă. Калама кăна çамăл: вĕт пĕрмай хĕрсе çўренĕ, хĕлĕх пек карăнса тăнă. Вăл пĕр вăйсăрах пулмаст. Çавăнпа Уļþара хупнă хыççăн вăл сасартăк çемçелнĕ, урăх кашкăр-кăшкăра пăрахайман. Кайрав-кайран чўклеме те пăрахнă. Чĕнмесĕр кăна çўретчĕ.

Ыйтĕç: парти йачейки ăçта тăнă? Мĕн ĕçленĕ вăл вăхăтра? Мĕнле курман çав ирсĕр перегибсене? Актив, комсомол йачейки мĕн кĕтнĕ? Тата ытти ыйтусем те пулма пултараççĕ.

Мĕн кĕтвĕ? Чăнах кĕтнĕ весем. Темскер кĕтнĕ. Пĕр йенчен— парти членĕсен йышĕ сахалтарах пулнă та, ĕçлессе те начартарах ĕçленĕ. Чылайĕшĕ килти ĕçсенчен уйрăлаймаст. Ĕç çине кене. Тыра вырма тухса кайиччен кўршĕсем те авă пўртçуртри кăпăр-капăра пуçтараççĕ, тирпейлеççĕ. Активисăн та харпăрла туртамсем çук мар. Çуртйĕр хуçи вĕт, хуçалăх пуçĕ...

Тепĕр йенчен тата пасăрах каласа хăварнăччĕ. Пирĕн çĕнĕ секретар пит вăр-вар етемех марччĕ. Калаçас пулсан та, установкăсем парас пулсав та заçеданисенче çеç паратчĕ Заçеданп иртсен, унпăн хăт пуç-хĕрлĕ. Халĕ те çавах пулнă: „Калаçăпăр-ха заçеданинче... Курăпăр-ха“, тесе тăнă весем. „Ĕнер ака хатĕрĕсемпе вăхăт иртрĕ... Пайан тислĕк тăкса çитермеле. Ыранпайанах утга, тыр вырма... Пуххи тармĕ-ха“, текенсем те пулнă.

Питтайӗ йусавасса та шанса тӑнӑ, куран, хӑшпӗрисем. Заседанийе пӗр кунтан тепӗр куна хӑварнӑ. Сапла, хайхи вис-тватӑ кун иртсе те кайнӑ. Районтан ЁХИ инспекторӗ персе ситсен кӑна пурте ураланчӗс.

Килчӗ районтан инструктӑр, чӑвашах: пӗр сут самкалӑ, хулӑнрах тутала кӑвак кусла ансӑр питлӗ етем

Вӑл инструктӑр вумай курнӑ пулас хӑй ӗмринче, тӗрлӗ ирсӗр ӗспе паллашнӑ пулас. Вӑл пит ӑслӑ сын пулнипе, айаплакан сынна сасартӑках айӑпласа пӑрахман. Вӑл мӗнпур ӗсшӗн хӑйне ответлӑ пек туйнӑ. Калас, пирӗн йалта акӑ ирсӗр ӗссем пулса иртрӗс. Унта вӑл сын айапсенчен малтан хӑйӗн айапне курарах панӑ. Мӗншӗн-ха вӑл ӗлӗкрех ку йала килсе саврӑнман? Мӗншӗн маларах сисмен йалсоветпе парти йачейки хушшинчи хирӗсӳсене? Савӑнпа вӑл ӗсе пит тӗплӗ пӑхса тухса, йачейкӑ секретарӗпе сӑмах татса, касхине партийцӑсене пухса каласма, унтан актив пуххипе пӗрле пленум тума шут тытрӗ

Касхине вара пустарӑнчӗс йалти мӗн пур партийцӑсем, комсомолӗссем, активиссем.

Активиссем пирӗн йалта (тен, урӑх йалта та саплах-тӑр вӑл) пустарӑнса тӑрассӗ икӗ тӳпе тавра, икӗ ӑслӑ, чейе сынсем тавра.

Хӑвӑр та пӗлетӗр пулӗ: икӗ ӑслӑ сын хӑсан та пулсан килӗштерни пур-и йалсен хушшинче? Темшӗн савӑн пек тавраш пур сав тепӗр сӗрте—халҫхи вӑхӑтра та килӗштерейместӗ,— мӗн тӑвӑн-ха. Мӗншӗн килӗштерейместӗ?—Никам та пӗлмест. Пӗри калат: вӑл мана пӗтересшӗн; тепри калат: вӑл хӑй мана путарасшӑн. Вӑт кай та туп вӗсне.

Тӗлӗнмеле сав вӑл сынсенчен: пухура-мӗнте.. тем тӗрлӗ тусла пек каласассӗ ӗнтӗ, шӑлассӗ кӑна; пахӑсӑн: кашни ӑшӗнче хатӗрленет йалмак.

Пирӗн йалта савӑн пек сынсем Питтайпа Серси ӗнтӗ.

Пӗри чейе, тепри тата чейерех, лешӗн чейелӗхне витӗр курат. Тепри каллех ку йепле пӑркаланнине витӗр пӗлет. Куслӑх пек пӗр-пӗрне курассӗ: паллах, пӗр-пӗрне кураймассӗ.

Серси вӑл: шӑши кусла, лутра, хулӑм чӑваш. Сын каласвине вӑл тӗпӗ-йӗрӗпе итлет: пит сын майлӑ етем. Анчах, вӑл хӗсӗк кусӗпе каласакан сине пӑхсан, сын нумай каласаймаст вара: темскер пӑтратат те, пӗтӗркелет те—пӗтерет. Хӑй каласнӑ чухне ансӑр самкине пӗрет, сӳсӗ мӗнпур ӳттирӗпе сӗкленет; ун чух вара тӑватӑ йӗр расах палӑрат самки синче.

Сӑмах шыранӑ чухне кусне тӗллет (таста тӗллет!), сулмаклӑн вара сӑмах кӑларат.

Вӑл пирӗн колхоз счетоводӗ. Партийцӑ. Питтайпа вӗсем те хирӗснӗ хӑсан та пулсан куса-кусӑн, те пӗр хирӗсмесӗрех пӗрпӗрне тӳсейместӗ. Савна халҫчен хам та пӗлместӗп. Авторитет тени Серсийӗн Питтайӗнчен ытларахчӗ. Хӑт те хӑсан та ун майлисем пулатчӗсех.

Тен, Питтай, майлисем те пулнӑ пулӗччӗс, хӑй пӑртак сын йевӗрлӗ хӑйне тытнӑ пулсан. Анчах, вӗт вӑл хӑй ыттисем сине ытӑ сине пӑхнӑ пек пӑха пуслярӗ, никама пӑхӑнмарӗ, никампа

канашламарӗ. Пӑллах, вӑл пухура (ӑна унта чӗнтерчӗҫ) кӗтӳ-рен уйрӑлнӑ сурӑх пек ларчӗ. Уйрӑммӑн ӑна, чӑнах, никам-ран та хӑрамастӑв, пуринчен те мӑнкӑмӑллӑхпа хӳтӗленсе ирте-тӗв, анчах ҫав ҫынсем пурте пӗр ҫӗре пуҫтарӑнсан, пӗр шухӑш-па килсен, унчух шикленет такам та. Ҫавӑнпа-тӑр вӑл мӗн пур вӑйне, мӗн пур чӗрнисене кӑларса кӗтсе ларчӗ малти кӗтесре.

„Мӗн пулат?"

Пухура, Питтай пынӑ хыҫҫӑн, кирлӗ-кирлӗ мар ҫинчен, илт-ни ҫинчен, курни ҫинчен шакӑлтатма пуҫларӗҫ. Никамӑн та тӳрех Питтай ӗҫӗ ҫине куҫас килмерӗ.

Тӑсӑлса ҫӗклевекен инструктӑр ӑна чарчӗ, куҫне аран аран ҫӗклесе, темӗскер астуса, пуринчен те йӑлӑннӑ ҫын пек, хӗ-рӳсӗр сасӑпа пуҫларӗ.

Чӑн малтанах вӑл йалта пулса иртнӗ ирсӗр ӗҫсене. пере-гибсене ҫутатса пачӗ, тӳрлетмели мелсем ҫине кӑтартрӗ, йулашкинчен ҫеҫ Питтай ҫине куҫрӗ. Питтайа вӑл ытла айӑп-ламалах та айӑпламарӗ. Тен, ҫавӑнпа ана Питтай пит тӑнласа итлерӗ. Инструктӑрӑн йулашки сӑмахӗсенче:

— Час-часах етемсем ӗҫе пӗччен илсе пыратӑп тесе шухаш-лаҫҫӗ. Тӗрӗс мар вӑл: етем ӗҫӗ массӑ ӗмӗчӗпе килӗшмесен, хӑй тӗллӗн кӑна тӑвакан ӗҫ ҫеҫ пулсан, — йаланах типет, хӑрат, мӗншӗн тесен ӑна ӳстерекен сӗткен пулмаст. Сӗткен тени йала-нах массӑра, унан ҫулпуҫӗнче — партире. Питтайа илсен те...

Сӗре лайӑх каласа пачӗ ҫав инструктӑрӗ те. Чӑнах, Питтай ӗҫӗ чул ҫинче шӑтакан вӑрлӑх пекех паларчӗ: вӑл шӑтрӗ, ик-виҫ ҫулҫӑ кӑларчӗ, виҫ-тӑват кун пурӑнчӗ унтан... хӑрчӗ... хӑрчӗ... мӗншӗн тесен варлӑх ӑшӗнчи сӗткен кӑна...

Инструктӑр каласа пӗтерсен, пайтахчен никам та чӗнмерӗ. Пӗтӗм пӳрт темле тӑкӑсланчӗ, калӑн, чӑн туллийех сухӑрлӑ шу-хаш тулчӗ.

— Парӑр-ха мана сӑмах! — терӗ сасартӑк Ҫерҫи. Вӑл калаҫма туманччӗ кӗҫӗр. Питтайа мӗн пулассине тахҫанах пӗлет, анчах ларат веҫ инструктар. Мӗнле пулсан та ӑса кӑтартмалах. Ан шухӑшлатӑр кунта „там кунтисем" кӑна лараҫҫӗ тесе

— Вӑл, ак ҫапла пулат ӗнтӗ, йулташсем!—ансӑр ҫамки пӗ-рӗнчӗ, темӗскер йӑвӑр шухӑш кӗтрӗ. Те сасартӑк калас мар-ха тесе, тӑхтаса тӑчӗ.

Пурте ун куҫӗ ҫине пӑхрӗҫ, чӑтӑмлӑ итле пуҫларӗҫ (Ҫерҫи калаҫма пуҫласан вӑрах калаҫат) Исмулла алӑк ҫинех кайса ларчӗ, чӗлӗмне кӑларчӗ. Кӑштӑркки мелевсе тайӗнчӗ чӳрече йанаххи ҫине. Уҥар, секретар вырӗнче лараканскер, ун куҫӗнчен тилмӗрсе пӑхрӗ Пер Питтай кӑна Ҫерҫи кала пуҫласан, ҫине-тӑрсах плакатсем вулама пикенчӗ.

— Вӑл, ак ҫапла пулат ӗнтӗ, йулташсем! Питтай ерех ӗҫнӗ пулат Ну, кампа ӗҫнӗ, ӑна каламӑпар.. Чӳрече ҫӗмӗрнӗ, ти-йепӗр. Чӗкеҫпе мӗн те пулсан пулнӑ-и, пулман-и вӗсен... Перегиб-сем туса пӗтерчӗ Ҫавна ытас пулат пирен, йулташсем. Мӗн-шӗн-ха ӗҫнӗ Питтай? Арӑмӗпе хирӗҫнӗ. Ку — пӗрре пулчӗ-и? Арӑмпа хирӗҫӳ пит пысӑк йапала йулташсем. Кунта тепӗр

ыйту сиксе тухат: ăçтан тупнă вăл ерех? Хупах çук-çке-ха пирӗн йалта! Кам панă? Ну, Чӗкеç панă, тийӗпӗр. Чӗкеç пулса тăчӗ пирӗн—шинкар. Шинкар! Пур пирӗн йалта, йулташсем. Чăтма пултарайатпăр-и епӗр, йулташсем, çавăн пек ирсӗрлӗхе? Çук! Чăтма пултараймастпăр. Пирӗн мобилизацилемеле мӗн пур актива... На борьбу с шинкарством! Да! Икӗ куйана хăваласа пӗринсӗр те йулан, тенӗ ваттисем. Епӗ калатăп: иккӗшне хăваласа виççӗ те тытма пулат. Пултар кăна Çерçийӗнни пек чейелӗх!—пурте пулат. Акă, ара, Çерçи вăрçат шинкарсене. Вăрçат сынна мар—ирсӗрлӗхе. Вăрç ăна, кашкăрса вăрç! Мӗн тӗрлӗ вăрçсан та, вӗт вăл сана тавраймаст. Уп чухне икӗ куйан хайхи тытатăн: активис выранне те шутлаççӗ, сынна та кўрентерместӗн. Тепӗр йенчен, сăмах майӗпе, Питтайа та тӗртмелех, тӗртетӗп... Систӗр те, ан ченейтӗр! (чăннипе, ăна хўтӗлен вӗт),— ку—виççӗмӗш куйан. Çапла калаçаççӗ ăна калаçма пӗлекенсем.

— Çитӗ-ши?—шухăшларӗ Çерçи ăшӗнче. Анчах ытла хӗрсе кайнă: чарăнма çук. Инструктарӗ те ытла йăпатса пăхат. Асне илет Çерçи: Питтай председатӗлрен тухмала; мӗн-ха унпа чăрмавса тăмала. Çаванпа вал çӗнӗрен çамкине пӗрет.

— Кунта курăнат!—тет вал каллех куçне çутçавталáка тӗллесе.—Да.. Çавна каламала, йултащсем. Пур-и Питтайшан йалсовет членӗсем? Çук! Пур-и парти йачейки? Çук! Халӗччен пӗрре те пулсан йачейка сыруçипе ӗретлӗ килсе калаçна-и? Çу-ук! Уншăн парти çукпа пӗрех Ку мӗн пулса тăрат-ха, йулташсем? Кăна калаççӗ: „диктаторствă“, теççӗ; кăна калаççӗ: „бўрократствă“, теççӗ; кăна калаççӗ: „самоуправствă“, теççӗ.

Ку сăмах выранлă маррине хăй те Çерçи сисрӗ, анчах „пырӗха“ тесе çамкине антарчӗ те, куçне çемçетрӗ. Пел вара: вăл хăй сăмахне пӗлтернӗ, вывăд тума ун пек чух йуратмаст вăл. Вывăд тума Çерçи кăна мар, ытисем те пӗтӗмпех хăймарӗç. Тӗмскерле хăйне пӗр тӗрлӗ йăла пур пирӗн. Собранисенче етемсем хăйсене урăхла тытма йуратни вăл.

Çерçи те веç... хăйӗн ăшӗнчи шухăшнех каламарӗ-ха; секретарӗ те çавах. Айăплан пекки турӗ те, унтан хутне кӗрӗ пуçларӗ. Йаланах телӗнтерет мана çавăн пек собрани. Хашпӗр активиссем ӗçшӗн мар чис-часах тăрăшаççӗ, чăн малтан хăйсене йепле тытмали çинчен шухăшлаççӗ. Калăн, пуху вăл спектакăль: пӗри пӗр рольне выльат иккен, пӗр тӗрлӗ самахсем калаçат иккен,—тепри вара, ӗç мӗнле пулсан та, урăхла калаçмала Çавăнпа, Çерçи хытăрах калана пулсан, çекретар ăна пăртак çемçетрӗ, çавăнпах Уйар кашкăраша пуçласан, çын умӗнче капла килӗшмест тесе, чарчӗç. Уйарӗ хăй те чарни выранлă тесе шутларӗ.

Халӗ ӗнтӗ Питтайпа вăрçнă хыççăн, Питтай ўпкелешўлӗ кӗвӗ хăйӗн сăмахӗнче килӗшерех нарӗ тесе шутларӗ. Вăл чăтма çук хурланнă çын пек мăч-мăч хупрӗ куçне, унтан тўрем кăна хытарчӗ, калаçма тытăнмарӗ-и, леш—çынна ниçта вырнаçтарма пӗлмев, хускатакан, шеллеттерекен сасăпа.

— Апла тăк! Кăларăр председатӗлтен! Мӗнех пит те! Епӗ малтанах кӗресшӗн марччӗ вӗтӗ. Мӗне пӗлсе суйларăр-ха мана

пленумра. Кунӗ-кунӗпе йытӑ пек чупатӑн: ыйтӑр-ха акӑ: килте хӑçан та пулсан пулатӑп-и? Итлемеççӗ сана, тарӑхтараççӗ. Çинчен тата кунта та вӑрçаççӗ. Апла тӑк, лучча кӑларӑр председательрен, суда парӑр, тӗрмене лартӑр...

— Ну, ну, ӗнтӗ... суда парас тесе калаçмаççӗ вӗт-ха! Мӗн сӗре калаçмала!

Хуçалланчӗç, пӑркаланчӗç, йӑпатнӑ пек те пулчӗç Йулашкинчен чарӑнчӗç.

Ыйту пӗтсен, Питтай йӑнӑшӗсем тӑрӑх резолюци йышӑнчӗç. Ыйтӑва пленумра тӗплӗн çутатса парас, терӗç. Вырӑнтан кӑларасси çинчен калаçмарӗç-ха.

Пленумра выгӑвӑр пачӗç. Перегибсене халех тӳрлетме хушрӗç. Саккунсӑр илнӗ ӗнесене тавӑрмала турӗç, сурӑхсене те çаплах. Ĕçе майлаштарса йама пӗр-ик куна инструктӑр хӑй те йулмала пулчӗ.

Тепри пулсан ӗнтӗ çавӑн хыççӑн, йыш çумне çыпçӑнарах парӗччӗ, партипе активпа пӗрле ӗçлеме тытӑнӗччӗ. Анчах пирӗн Питтай мӑнкӑмӑллӑхӗ кунта та чарчӗ. Вӑл хаљ ӗнтӗ урӑх ним ӗçлесшӗн пулмарӗ.

Ĕлӗк ха вӑл çынсем çине йепле пӑхмалине пӗлмен, вӗсемпе йепле калаçмалине пӗлмен Халӗ ӗнтӗ, выгӑвӑр панӑ хыççӑн, пӗтӗмпех, пӗтӗмпех паллӑ пулнӑ.

„Вӗсем мана хур турӗç (тӗрӗслӗхпе-и? тӗрӗслӗхсӗр-и? пурӗпӗрех): епӗ хаљ хурланнӑ çын пек хама тытма пултаратӑп, тытатӑп та..."

Çапла шухӑшласа тухрӗ вӑл пленум хыççӑн канцелертен.

Çутӑ уйар каç пулнӑ. Пӗлӗт çивче ӑшаланакан çӑлтӑрсем пайан ытларах айакра пек стемрен инçе пек туйӑннӑ. Çав инçелӗх темшӗн пӑртак лаплантарнӑ. Шӑмшак çӑмӑлланса кайнӑ. Ашра темӗскер сӳрӗлтерсе, ӗмсе тӑнӑ пулсан та, çапах пурте уççан, паллӑ курӑннӑ.

Пытана пуçланӑ уйӑх, шӑрана пуçланӑ вут пуççи пек, тӑлӑххӑн аннӑ Вӑл пушшех лаплантарнӑ.

Хайне-хӑй питлӳ, хӑйне-хӑй тарӑху, кӳренӳ пачах пӗтнӗ.

Хӑйне тупнӑ пек, тӗреклӗ выран тупнӑ пек, лӑпкӑн сывланӑ çав каç, хурланнӑ Питтай.

Çиленмели тӗл тупсан, çамӑл етеме.

XIII.

Чакака та çав каç тем чӗмери пулнӑ: кӑмӑлӗ çемçелнӗ. Çын кӑмӑлӗ çын çине куçат, теççӗ те. Çавӑнпа пӗрех туйӑнат тепӗр чухне. Çаплах тӳр килнӗ вӗт-ха вӑл. Питтай кӑмӑлӗ те çав каç çемçелнӗ, Чакакан та. Мирлешсе каймали çеç йулнӑ ӗнтӗ. Анчах пурнӑçра темӗскер те сиксе тухма пултарат. Сиксе тухрӗ вӗт çав каç та.

Чим-ха, мӗн пулнине каласа параччен паллаштарас-ха сире Чакакпа тӗплӗрех.

Чӑвашӑн çавх тер ӑслӑ сӑмах пур: „çупçине хупӑлчи тупӑнатех" теççӗ. Мӗнле тупӑнат-тӑр вӑл, анчах тупӑнатех. Арӑмӗ

мĕнле, упăшки те çапла пулат. Икĕ тумлам пек: кăмăлĕ, шухăшĕ, чĕри...

Санĕ те-ха. Горйки калат: „Етемсем нумай пĕрле пурăнсан, сăнĕсем те пĕрпеклешеççĕ", тет. Çапла: санĕ те-ха арăмĕпе арçынăн пĕр пек пулат.

Чакакпа Питтай та çапла пĕр пеккисем тупăнчĕ: икĕ мăнкăмăллă, икĕ пăхăнтарма йуратакан, икĕ вушăр çынсем.

Питтай ăспа мухтаннă пулсан, Чакак „ырă çын" хĕрĕ пулнипе мухтаннă. Питтай курнипе, илтнипе, пĕлнипе мăнкăмăлланнă пулсан, Чакак ним курманнипе, ним пĕлменнипе, пĕлни те кирли çуккипе мăнкăмăлланнă. Питтай кăмиссар пулнипе йăлăнтарнă пулсан, Чакакĕ, вăл председатĕл пулнине кура, пĕр сăлтавсăрах мăнкăмăлланнă.

Хирĕçсен те çав мăнкăмăллăхпа кăна мирлешмен.

Питтай кĕтнĕ: Чакак пырса йăлăнасса, йăпăлтатасса, мĕншĕн тесен, вăл кăмиссар — ку пĕрре; хирĕçÿ пуçланса кайнă Чакак айăпĕпе — ку иккĕ; йулашкинчен мĕнле каласан та, Чакак вăççĕмĕш упăшкана çитнĕ: упăшкана паха тама вĕренме вăхăт ĕнте.

Чакак кăшт урăхларах шухăшланă. Ун шухăшĕпе, Питтай малтан чĕнмеле пулнă. Мĕншĕнне-мĕнне вăл шухăшламан, парăнманнине кăна кăтартасшăн пулнă.

„Председатĕл пулнипе хăйне тăсса кайса ан хывгăр", тенĕ вăл ăшĕнче. Çимме тĕлĕшĕнчен айăпне хăйĕнне сиснĕ, анчах айăпне снснипе пушшех мăнкăмăлланса кайнă; ан шухăшлатăр, имĕш, Чакак хăрат тесе. Хăш çын вĕт, айăпне кура мăнкăмăллават. Çавăн пек çын ĕнтĕ пулнă Чакак.

Питтайĕ те çавнашкал пулнă: Чĕкеçпе истори тухсан, хăйĕн айăпне куçлă-кĕретех курсан, Чакак мăшкăлĕнчен сыхланма мăнкăмăллăхпа хĕçпăш лланнă.

Çав собрани пулнă каç ĕнтĕ, Питтайа выгăвăр панă каç, пасарах каларăмăр, Чакакăн кăмăлĕ çемçелнĕ тесе. Чакакĕ чĕринче Питтайа йуратнă. Тен, çаваппах-тăр та вăл тĕттĕм пулсан, сасартăк, пăшăрхана пуçланă; тек пĕччен кун иртерес килмен. Тунсăхланă тата арçын ăшшине те, ун пек пулатах ĕнтĕ, паллах.

— Кĕçĕр мирлештерес-тĕр-ха,— вăл кĕтсе шухăшланă.— Чăн малтан хам чĕнсен мирлешет ĕнтĕ вăл

Пайтахчен вăл çапла ĕмĕтленсе выртнă. Анчах пĕр сехет те иртнĕ, иккĕ те иртнĕ, урамри сасă-чĕвĕ те чарăнна, уйăх та ахăрнех ана пуçланă — Питтай çапах таврăнман.

Çуллахи тăнăç çĕр темскер те шухăшлаттарат. Темшĕн унчух шухăшсем выљамалах выљаççĕ. Çавăн пек Чакакăн сасартăк чĕри çурăлса кайнă:

— Епĕ кунта тем пек тĕмсĕлсе, мирлешес тесе выртатăп. Кайман-ши вăл каллех Чĕкеç патне?

Чĕкеç, çынсем каланă пек, аскăн маррине Чакак пĕлнĕ (хĕрарăм хĕрарăма пĕлет вăл), анчах шанса та кайман (хĕрарăм хĕрарăма шанмаст те тата вăл темшĕн).

Ырă шухăш вăл час çухалат, хайар шухăш пĕр кĕрсен, малтан выљамала çеç кÿртсен те, хăпа пĕлмест.

— Ей, кайин тата.. Ҫав кӗвӗлеҫӗшӗн пӑшӑрханса вырт. Ҫаврӑнӗ-ха кирлӗ пулсан.

Анчах ун пек сӑмахсем хирӗҫсен кашкӑрса вӑрҫма лайӑх. Халӗ ха хупа ху тавлашнӑ вӑхӑтра, чун пӗчченлӗхпе тулнӑ вӑхӑтра, ӑшра ҫывна вӑрҫни лӑпланма пулӑшаймаст.

Ҫулла каҫхине, ҫывӑрмасан, тӗттӗм куҫпе тӗллесе пӑхсан, кичем-кичем туйӑнат. Тахшин патне кайас килет, калаҫас килет. Ҫитменнине тата, пӑшӑрханмали пулсан, пӗлменни пулсан, чӑтаймастӑн вара: кайса татас килет, кайса пӗтерес килет. Ҫавӑн пек йапала пулчӗ, куран, Чакакпа та. Сиксе тӑчӗ вӑл, тумланчӗ, ӑҫта каймалине пӗлмесӗрех, ӑҫта та пулсан каймалине ҫеҫ сиссе, урама тухрӗ.

Ҫавхатер мӑнкӑмӑллӑ, ҫынна пӑхӑнтарма йуратакан арӑм ҫапла сасартӑк арҫын хыҫҫӑн кайма тупинче сӗрре те тӗлӗнмели ҫук. Чӑн малтанах: Чакакӗ вӑрттӑн, шӑтӑкран итлесе ҫеҫ пӗлес терӗ Питтай ӑҫтине, мӗн ӗҫленине Ҫын ӑва курмасан мӗнех-ха унта?

Калама-ха мавнӑ: Чакак чӳречерен итлеме пиг йуратат, тесе сӑмах сӳретчӗ йал ҫинче. Пӗр урама тухсан хӑй ҫилевнӗ, хӑйне ҫиленнӗ ҫынсен чӳречисенчен итлеччех тет. Ахӑрнех, тӗрӗс пулнӑ ҫав. Ҫав каҫ та Чакак, ҫав хӑй йӑлине тытса килӗрен итлесе сӳрепӗ пулас.

Малтан йалсовет канцелерне кайнӑ, чӳречинчен вӑрттӑн пӑхнӑ: унта йачейкӑ ҫекретарӗ кӑна темскер хутсемпе муталаннӑ: вӑл та ҫӗкленсе тухма тытӑннӑ.

Унтан тӳрех Чекеҫ патне кайма тӑнӑ, анчах, ҫул ҫинче тепӗр тӑлӑх арӑм пурӑннине астуса, унта та итлесе пӑхас терӗ. Унта нимӗн те илтӗнмерӗ. Пурте ҫывӑрса кайнӑ пулас.

— Ҫакӑнтах ҫулмата... Урах ӑҫта кайат вал!—тесе вӑл Чӗкеҫ чӳречи умне итлесе лӑпчӑннӑ.

Пӳртре шӑпах пулнӑ. Тӗттӗм. Пӗр сас-чӗвӗ ҫук. Шӑрчӑк кӑна чӑрр! чӑрр! чӑрр! кӑшкӑрнӑ.

Пӗр минут пулӗ иртнӗ.

Кравата ҫинче темскер шатӑртатнӑ. Ахарнех, Чӗкеҫ ҫаврӑнса выртнӑ Каллех шӑп.

Кравать ҫинче татах ҫатӑртатнӑ, тахшин анаслани илтӗнчӗ. Пӑртак тӑрсан татах темскер сасси илтӗннӗ.

— Ҫаканта! — шухӑшласа илчӗ Чакак. Ӑнтӑхса кайса сывлӑш ҫавармасӑр итле пуҫларӗ.

Ҫав вӑхатрах ура сасси илтӗннӗ пек пулче Чӗре те вӑйлӑ тапа пуҫларӗ. Сывлӑш та кӑкӑрта питӗрӗнчӗ. Хӑлха та, куйан хӑлхи пек, пурне те ирттерсе илте пуҫларӗ, ҫук сасса, ҫук сывлӑша тӑнла пуҫларӗ

Нимӗскер те хӑлха уйӑрми пулчӗ, пуҫӗнче пӗр вӗҫсӗр, сыпӑксӑр шав кӑна илтӗне пуҫларӗ.

Ним пӗлмийех пулса кайрӗ Чакак.

— У-у! сӗтрӗнчӗк! Аскӑн йытӑ! Ан ҫывӑр ман упӑшкапа! Йӑлӑхтарчӗ-ҫим ытгисем, ман упӑшкана хапсӑнатан!?.

Тахшин кравать ҫинчен анчӗ, темскере такӑнчӗ, ӳкрӗ, тӑчӗ, чӳрече патне карӑнчӗ: те Питтай, те Чӗкеҫ?

„Ата! Хӑт те кам пултӑр!“

— Кӑлар ман арҫынна! Намӑссӑр! Ҫитмерӗ-ҫим сапа йалти арҫынсем? Кӗҫҫе пит!

Чӗкеҫ иккен: ака унӑп усӑ, ҫепӗҫ сасси:

— Мӗн? Ухмаха есӗ йертӗн-им? Мӗн сын чӳречи патӗнче ахӑрса тӑратӑн!?. Ӗретлӗ пул!

„Каппа лӑпкӑ калат так, паллах, Питтай кувта. Ҫаванпа хӑрамаст те“.

— Ҫӑварна карса ан тӑр! Кӑлар Питтайа луччӑ! Лешӗ ӑҫта кайрӗ-ха? Хӑрат-им, чӗнместӗн?!

— Есӗ, ере, нумай ҫын култарса тӑратни!? — ҫӗкленсе кайрӗ Чӗкеҫ.—Кай луччӑ! Тухсан кӗвевтепе ислетсе йаратӑп. Тахшине кирлӗ сан упӑшку!

Чакак хӗрсе кайна кайнӑ; вӑл хаљ харкашу мӗнтен пуҫланнине те маннӑ. Сӑмах калана-ҫем хӗрет, ылханнӑ ҫем—сӑмах тупат. Мӗн пур упӑшкиве савма пухнӑ вӑй, калама пулнӑ сӑмах сасартӑк капланса тӗлсӗр пӗрхӗнет

— Акӑ сӗтӗ ӗнчӗк ӑҫта ва? Пӗркун та ахаљ кӑна кӳртмӗш пулнӑ иккен Сӑмах пӗтерсе тунӑ пуљ-ха есӗр. У-у! намӑссӑрсем!

— Луччӑ нумай тилӗрсе тӑратӑн-и?—ҫавӑнтах сикрӗ тухрӗ Чӗкеҫ, кӗвентепе пӗрре ҫапрӗ. Чакак та ҫаврӑнса ҫитуничен тытрӗ, нимӗскер пӗлмесӗр, астумасӑр кӑшкӑрче.

— Вӗлер! Вӗлер! Мана вӗлерсе есӗ ху ӑна качча кайасшӑн!

Калӑн, хӗрарӑм мар Чӗкеҫе тапӑннӑ, тапӑннӑ кӑшкӑр ҫивчӗ шӑлӗпе; тапӑвнӑ кушак — ҫивчӗ чӗрнипе; тапӑннӑ хур — вӑйлӑ ҫунаҫӗпе.

Анчах вӗт Чӗкеҫӗн те шӑлӗ те пур, чӗрни те пур, аллисем те, ҫӑвар та пур кӑшкӑрма.

— Кампа тытрӑн есе мана? Кампа тытрӑн?

— Расбуй! Вӗлерет!—ҫухӑрат Чакак

Тахӑшӗ тахашне вӗлерет, нимӗн те курӑнмаст; йӑваланат пӗр чамӑркка ҫӗрте... Чӑрмакланат, ҫухӑрат, мӗкӗрет...

Акӑ халӑх пухана пуҫларӗ. Кулнӑ сасӑсем илтӗне пуҫларӗҫ:

— Ата, Чӗкеҫ! Тӑрӑвтар! Тепӗр йенчен, тепӗр йенчен ҫавӑрса тыт!

— Ҫӳҫӗнчен, ҫӳҫӗнчен, Чакак! Сӑтӗр ак ҫапла!

Мӗкӗрет тӑват алӑпа, тӑват уралӑ икӗ пуҫлӑ темскер:

— Намӑссӑр!

— Есӗ ху намӑссӑр! Кӗҫҫе пит:

Питтай та чупса ҫитрӗ Вӑл килнех кайнӑ пулнӑ иккен. Анчах курман Чакака.

— Ака Питтай та ҫитрӗ...—ахӑлтатса йачӗҫ ҫынсем.—Ата, чар арӑмусене.

— Мӗскер ес вӗсене тыткалаймастӑн?

Ку—шут-и? Кулу-и? Каларӑшве, мӗн тумала-ха? Ним тӑва пӗлмесӗр, чарас тесе Питтай Чӗкеҫе тытат; ҫав вӑхӑтрах тытнӑ Чӗкеҫе Чакак, хур ами пек, ҫыртса туртат. Чӗкеҫ ҫухӑрса йарат:

— Йар! Тытсах хӗнеттерес тетӗн-и?

Питтай Чĕкеçе йарат те, Чакака тытат. Хăпăтат çеç Чĕкеç капăлтатса пырса çуçрен илет.

— Вĕлереççĕ!—çухăрат Чакак.—Йерĕшкипе иккĕшĕ вĕлереççĕ! Çăлăр!

Пăхса т чĕ-тăчĕ пирĕн Питтай, выгăвăр хыççăн ахаљ те çăмăлланса кайнăск-р, итлашши шухăшлам-рĕ, тумарĕ, Чĕкеç илсе тухнă кĕвентене илчĕ те, пĕрне те çапат çемçе çĕртрен, теприне те çапат. Ни кулмаст, ни вăрçмаст—пĕрмай çапат.

Çухăраççĕ лешсем ылханаççĕ, -ку çаплах çаптарат. Кăшнине çапла пĕр пилĕкшер хут çапса илчĕ те, пăрахрĕ те кайрĕ. Ним те чĕнмерĕ. Вăл кайсан ыттисем те саланчĕç.

Ирхине Питтай йалсоветне каймарĕ. Улак чĕнме килсен ăна хирĕç Питтай: „Еçлеместеп, епĕ йурăхсăр, йурăхлине тупчăр“, тесе кăларса йачĕ. Урăх килекен пулмарĕ. Тепĕр кун каллех чĕнме йачĕç, каллех к-ймарĕ Темскерле кĕнеке тупрĕ вырăн çине тайанса вырт-рĕ те, вулат те вулат... Чакак та мăкăрлат-ат тĕпелте, ылхана та илет (çĕр-и хыççăн ун кăмăлĕ лачă уçăлнă), хура куçĕпе те çунгарса йарас пек пăхат—çук, выргат пирĕн Питтай, хăнкт! та тумаст.

Те икĕ кун йĕркерев пĕрле пулнине, те пăртак лекнипе, Чакак пĕтĕмпех çемçелнĕ пулнă пирĕн. Çеркĕ упăшки пĕрле выртасса кăсăхса выртнă хыççăн, çапах Питтай пыманнипе вăл пăртак шикленнĕ. Питтай, хăйне тĕртсе йарасран хăрас пымаст пуљ тесе, топ-р ирхине тарсанах ĕç хушрĕ.

— Кус! вутă йатса кĕр! Килте чухне пăртак ĕçлесен те йурат-тăр.

Сисрĕ Питтай: Чакак м-йлашат. Сăмахпа вăрçа пуçласан, унта вара тата пĕр-ик кун; ун чухне йапăлтатмах пуçл-т.

Çапах Питтай чĕнмерĕ, тумарĕ, тухрĕ, вутă çĕк-есе кĕч .

Чан малтанах, йалсоветне каймасан, унсăр пуçне пĕтĕм сын ăнтан кай-а ĕмĕтленнĕ Питтай. Пурне те пăтратса пĕтерсе, пуринпе те кайа йуласса, акăш-макăш йапал- сиксе тухасса, районтан пăхма килессе, хăйне вара тÿрлетме турă пек йăлăнасса, çавна пурне те ĕметленнĕ Питтай. Хайсĕр пуçне путлĕ ĕç тăвасса шухăшламан та вăл.

Тĕрлĕ шухăшсем кĕре-кĕре тухнă ун пуçĕнчен.

..Акă унсăр пуçне к-лама çук пысăк йапăш тăваççĕ, центăртан килеççĕ тĕрĕслеме, Питтайа тÿрре кăларса выгав-р пăраканисене тĕрмене илсе кайаççĕ.

Акă Питтайсăр пуçне севĕк вăрçи сиксе тухат, лешсем ним тăва пĕлмесĕр тарса пытанаççĕ; унтан вара Питтай тилĕрне халăха пĕрре кăшкăрса чарат те, хăвартрах килесеве саланма хушат: пурте ана итлеççĕ.

Не нимсĕрех Питтайа центăра илсе кайса пысăк вырăна лартаççĕ: ун чухне вара вăл куç хĕррипе те пăхмаст йалтисем çине; Чакака çеç ун чух, ырă çывăн хывса, хăйпе пĕрле илсе кайат.

Йулашкинчен, Питтай чирленĕ тесе тăракан йалсовет членĕсем, виççĕмĕш кун каллех йачĕç чĕнтерме. Каллех çав Улаках килчĕ.

Те йăлăнтарви виçи тулчĕ тесе, те вырта-вырта йăлăхтарнипе, халӗхинче Питтай кайрĕ йалсоветне. Пырса кĕрсевех, Питтай çĕнĕрен çилĕпе тулчĕ: пурте ĕлĕкхи пекех пыви, унăн ĕçĕсене тӳрлетнин пĕтĕмпех ăна уртарчĕ. Ĕнесене сăмаварсене калле павишĕв питех кĕвĕçмерĕ, ахалӗ çĕнĕ ĕçсене варя: тĕрĕс-и вăл, тĕрĕс мар-и; вырăнлă-и, вырăнла мар-и — пурне те чарчĕ, пурне те „отменит" турĕ.

Тырă задани салатма пулнă (август задани) спискине те чĕрсе пăрахрĕ Питтай, шкул вуттине илсе килме çав кун хăвалаттарнă, ăна та чарчĕ Питтай, лашана килекенсене пĕтĕмпех киле йачĕ.

Мĕнишĕв аплине пĕлме пынă учитлĕпе пĕр шăлçурри те чĕнмерĕ, лешĕ виç-тăват хут ыйтнă пулин те.

Тухса кайрĕ вара учитлĕ.

Вал тухса кайсан, темскерле уполномочĕнийĕ пырса кĕчĕ: кооперациревчĕ-и çав, пыл тĕлĕшпе çӳрекенни-и пулнă-ччĕ пулас. Вăл лав ыйтрĕ района кайма.

Пĕр сăмах та чĕнмерĕ Питтай. Пычĕ йерипен, алă тытма пынă пек, çаврăнчĕ кăна, икĕ аллипе ик хулпуççинчен тытрĕ, алака уçрĕ те, уполномочĕннăй мĕн пулас иккенне пĕличчен, кутĕнчен чĕркуççипе тапса сирпĕтсех йачĕ.

Лешĕ тăрса, кăшкăрашса калле кĕме пуçланăччĕ, анчах сăмси умĕнчех алака хупса питĕрсе илчĕ. Вара уполномочĕннăй пайтахчен калле-малле пăхкаласа, тумтирне шăлкаларĕ те, çуран уттарчĕ.

Пĕр çын та йалсоветĕнче кунтан кулмарĕ. Пурте ассăн сывларĕç те, чĕлĕмсене кăларчĕç.

XIV.

Çавхатер шăрăх. Хумханса ларакан ыраш, ун пуçĕвчи çаран, айакри вăрман — пурте шăрăхпа сулнă пек ларассĕ. Ун пек чух кайăксем те таçта пытанаççĕ, вылӑхсем чĕтлăха пĕрхĕнсе кĕреççĕ.

Çыхатпăр ыраш. Тип кăна-ха вырма тухнă. Пĕр пилĕк арăм, Чакак та çавăнтах, тата пĕр-ик-виç çамрăк ача епĕр пĕрле пĕр ушкăнтаччĕ.

Чакак çитсенех пĕр-ик минут пĕр чĕнмесĕр çыхрĕ кĕлте. Тăват кĕлте çыххи мăн кăна, çыхат, ыватат те йарат таçта çитех—те кĕлти йăаллă уншăн. Пĕр-ик кунтан-ха вăл, çав Чĕкеçпе çапăçнă кaç хыççăн.

Чакак ĕнтĕ вăл колхоза та йурăхлă çын пулман та, лекнĕ çав улăшкипе. Пире, колхозниксене, пĕртте вăл çын вырăнне картмастчĕ. Ахалӗ те пирĕн колхоза пуçтарăннăччĕ пĕр йышшисем ытларах: ĕлĕк тарçаран, кĕтӳçĕрен тухаймаскерсем, çуртсăр-йĕрсĕрсем..

„Пĕр ĕретлĕ çын та çук вĕт-ха унта!" тетчĕç пирĕн колхоз çинчен, варăмрах чĕлхелисем Çавăнпа Чакак та хăй колхоза кĕнипе пире хăйне чыс тунă çын пек пăхатчĕ. Хăрамасан та, пăртак шикленетчĕç çав унтан арăмсем. Чĕнмен ĕнтĕ... Кăшт чĕнессĕн, тилĕрсех кайат.

— Пĕттĕр вăл сирĕн колхозăр! Ĕçлеместĕп акă... Ĕçлĕр,—колхозу, пулив...

Чăнах та ĕçлеме тухмастчĕ. Упăшкипе хирĕçнĕрен вара пĕрре хире тухса курман.

Колхозниксем калаçа пуçларĕç. Собрани тӳса пĕр пилĕк кунне чакарас та, терĕç курнат хайхи.

Тилĕрсех кайрĕ вара пирĕн Чакак. Хирĕçме, харкашма йĕк кăна шыраса çӳре пуçларĕ. Пурившĕн те пирĕн колхоз айăплă пулса йулчĕ вара: ун ышшĕне раскулачит турăшăн та, упăшкипе ĕретлĕ пурăнмавшăн та, хăй „ирĕкре" марришĕн те..

Колхозран кăларас тесе те калаçкалатчĕç те, пĕр тапхăра чарăнса тăчĕç

Ĕç çинче, хирти хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче пăтратас мар терĕç, куран.

Кăнтăрла ситег. Кăнтăрла çитерехпе те ывăннипе вăл, те шарăхпа супнипе, тарăхас килет. Тарăхас шухăш кашнин пуçĕнчех пулнă-тăр ахăр, вăл арăмсем сĕре йанкăртатма йурататчĕç, анчах пайан Чакак килни вĕсене уççăнах калаçма кансĕрлерĕ. Чĕпмест вĕт Чакак, нимĕскер те чĕнмест. Ушкăнта пĕрин кăмăлĕ вачар пулсан, паллах, сăмах килĕшмест.

Те Чакак кăмăлне çаварас тесе, Минеслу, хулăм кăна, йаштака арăм, калаçу пуçласа йараканни, тарăхмали тĕл тупса пачĕ.

— Мĕн темеççĕ-и?—пуçлат вăл.—Чĕкеç ударнике çырăнпă темеççĕ-и? Ударник теççе-и-ха?

— Мĕн тесе калат, тет-ха вăл, ђ ђп?-хыпаланса кӳртсе хурат Ервеслу, çамрăк, хитре арăм Вăл калаçнă чух çĕнетсе, интереслентерсе пыраканни

— Амăртăва чĕнет, тет.. Темскерле догăвăр тумала, тет. Еçе тухмасăр хатĕрленет, куран.

— Амăртса çын арçыннине астарми-и? Намăссăр! Ей арăм та, арăм ĕнтĕ... — пуçлат тарăхса Айслу Чакак çине пăхса. Ку арăм хăй ĕмĕрĕвче çын çинчен пĕр ырă сăмах каламан пулĕ. Ыттисем лăпкă калаçнă чух, вăл йӳçĕтсе, питлесе пыраканни çеç

Чĕкеçе кураймасăр мар, ударниксене кураймасăр та мар, Чакак кăмăлĕшĕн кăна хускатрĕç вĕсем ку сăмаха Мĕн калат ха Чакак? Мĕвле йышăнат вĕсен сăмахне?

Анчах Чакак чĕнмест. Те сисет сăмах уншăн çеç пуçлавине, те мĕн те пулсан ураххине шухашлат.

Тата пĕр авка чепмесĕр сыхаççĕ.

Пĕр ывçи хыçала йулат,—Чакакпа Айслу хушшинче. Чакак çаврăнса пăхат, курат, чĕнмест

Капла тухмарĕ сăмах, Чакак чĕнмерĕ. Çавăнпа Минеслу татах мĕн те пулсан ыйтасшăн.

— Пурмăссене ӳстермеле темеççĕ-и? Сахал сыхаççĕ тесе калаççĕ, тет, имĕш!

— Епĕ те илтрĕм-ха йна,—пуçлат йĕркерен калама йуратакан Силтени.

— Хаљ ĕвтĕ виççĕн пĕр гектар сыхса пĕтермеле, тет. Унтан тин пĕр еçкуне параççĕ, тет.

— Вӗсен мӗн ӗҫ пур, ере... Ҫавна кӑна шухӑшласа ларӑҫҫӗ вӗт вӗсем!—татах тарӑхса пуҫлат Айслу.—Хӑйсем ҫыхаҫҫӗ-им вӗсем? Вӗсемпӗн килте ларнӑ ҫӗрте сахал пек туйӑнат ӗнтӗ вӑл ..

— Ӗҫлӗр! Колхозӗ сирӗн вӗт!—сасартӑк хар! кӑшкӑрса пӑрахрӗ Чакак —Ҫапла та ӗҫлеттермесен сире .. Мӗн ӗҫ пур сирӗн! Сире-ха ҫӗрӗн-кунӗн ӗҫлеттермеле. Ҫинчен тата выртгтара-выртгтара хулӑпа хӗнемле! Ҫавӑ пулӗ те, ха... ҫав пулмали кӑна йулчӗ ӗнтӗ . Есӗр вӗт „колхоз, колхоз“ тесе ҫӳрерӗр. Хаљ ырӑ мар-им ӗнӗ..

Ним калама аптӑрарӗҫ пирӗн колхозниксем; ахӑрнех сӑмахне хускатнӑшӑн та ӳкӗнчӗҫ пулӗ. Ҫавӑн пек кӑревсӗр йӑла пур ҫава пирӗн хӑшпӗр колхозниксен хушшинче: пӗр тӗлсӗр, пӗр ҫилӗ килмесӗр, калаҫасшӑн кӑна колхоз ҫинчен, тем те пӗр калаҫаҫҫӗ. Кашни ҫӗнӗ ӗҫ: ӑмӑрту, ударлӑх, ҫӗнӗ ӗҫ норми пӗр хирӗҫле калаҫмасӑр иртмест; ашесенче, хӑйсенӗн, хирӗҫӳ ҫук пулсан та, пурӗ-пӗрех мӗн те пулсан тупаҫҫех калаҫма Те вӑл чӑнах хурлама ҫамалтарах мухтавинчен?

Пайан та ҫав йӑлапа, тата Чакака калаҫтарас тесе, ҫав сӑмахсене хускатрӗҫ те пулас вӗсем Анчах Чакак ахарвех пӗк шырама кӑва килнӗ пайан. Йӗк шырасан, тупатӑнах ӗнтӗ.. Ҫивӗ ҫӗре тата пӗр уполномоченнӑй пырсе ҫитрӗ. Ахӑрнех уполномоченнӑй вырнине курас тесе килнӗ. Хӑйне пӗрле Питтайа та йертсе пычӗ

Ҫиӗнӗ вӑхӑтра ҫав уполномоченнӑй тырӑ йепле кӑҫал валеҫессине каласа панӑ чухне, сиксе тухрӗ те хайхи пирӗн Чакак ваљъи Ӗӗк.

Апат пӗҫерекен Мерийамал, ӑна-кӑна пӗлмесӗр, пӗр чашка йашка тултарнӑ та Чакак умне пырса лартнӑ. Кашнин умне ҫапла пырса лартнӑ ӗнтӗ вӑл

Унчен те пулмаст, пирӗн Чакак тӑрат, чашкане тытат те пӗтӗмпех Мерийамал ҫине сирпӗтсе йарат. Хаљ те кӳҫӗнчен лекмерӗ, мӗскене

— Кӳп ху! Машкӑласа ан ҫӳре кунта!

Ним тӑва пӗлмен Мерийамал, пӗр хулӑн кӑна пуклак арӑм, ҫӑвӑрне карнӑ та, ним чӗнме пелмест Чакак ҫухарат те ҫухарат.

— Сирӗн хырӑмна кӗтӗр ҫын выљӑхӗ. Епӗ ҫын выљӑхне ҫиме сӗрех халљчен пурӑнӑ. Кӳпӗр хавӑр! Хырӑмӑр кӳпӗнмӗ-и-ха? Ҫисе пӗтеретӗр ӗнтӗ мен пур ипл выљӑхне..

Калама манна иккен-ха: вӑл кун пуснӑ пулнӑ иккен Чакак ашшӗн сурӑхне—раскулачит тусан, сурӑхӗсем колхоза йулнӑ унӑн ; ӑна Чакак таҫтан пӗлнӗ.

Калаҫма кӑна пуҫлана уполномоченнӑй куҫне мӑчӑ мӑчӑ хупкаларе те, шӑппан ыйтрӗ:

— Кам-ха ара есӗ? Колхозницӑ-и?

Чакак сасартӑках чӗнмерӗ Питтай та, айаккинче тӑраканскер, нимӗскер те сасӑ памарӗ.

— Ма-ха есӗ апла калаҫатӑн? – ыйтрӗ шӑппӑн уполномоченнӑй.

— Калаҫмасӑр ара!—вӗтеленсе кайрӗ Чакак каллех —Елле сантан хӑраса тӑрӗҫ-и? Мана хӑратаймӑн, ача! Ҫиместӗп епӗ ҫын ашне! Мана кирлӗ те мар!

Уполномоченӑй те пӗр вӑхӑта сӑмах тупаймарӗ. Питтай ӗлӗкхи пекех: питкуҫӗ хытнӑ, чӗнесшӗн мар ним те.

Никам та чӗнменнине кура, Чакак ирӗккӗн йанратат:

— Пӗтвӗ чунсем Кӑлӑмҫесем! Ата чыхӑр! Атту хӑҫан курас-ха есӗр аш! Ҫисе йулӑр хаӑ пуйансенне!

Чун тӑвӑнса ҫитет ҫавӑн лек чухне: вӗренмен-ха епӗр хамӑр колхоза хӳтӗлеме. Темскерле, колхоза вӑрҫакан ҫын умӗнче епӗр пӗр тапхӑра тӗссӗрленетпӗр, ним калама пелместпӗр. Ирӗк вара вӑрҫакана

Ирӗк пулчӗ ҫапла Чакакшӑн та.

— Мӗн пурӗ, мӗн пурӗ сире ҫитмест. Ҫын выҫӑхӗ, ҫын лаши, ҫын урапи, ҫын хӑмӑчӗ... Каҫса кайаҫҫӗ вӗт-ха вӗсем ҫын йапалишӗн Хӑҫан кӑна тӑранӑр?

— Апла пулсан, тахҫанах тухмала та каймала колхозран,— тахшин аран аран хушрӗ, арӑмсемчен пулас.

— Кӑлармала та ҫапмала акӑ! —хӑйса кӑшкӑрчӗ Айслу.—Мӗн пӑхса тӑмала унта?

— Ах, туррӑм, хӑратрӗҫ!—мӑшкӑласа йури сассине антарчӗ Чакак —Пӗтерчӗҫӗ. Выҫӑ вилетӗп ӗнтӗ сирӗн колхозсӑр!!!

Питтай пирӗн тӑрат: пӗр сӑмах чӗнин Айслу ҫине кӑна сиввӗн пӑхрӗ.

Халӑх пушшех Питтай пулнӑран ним чӗнме хӑйаймаст. Тем шухӑшлат-ха вӑл? Тен, арӑмӗпе килӗшет пулӗ. Чакак та, тен, туйат пулӗ Питтай шухӑшне: кам пӗлет?

— Кӑларӑр! Кӑларӑр! Тархасшӑн кӑларӑр! Йӑлӑнатӑп,—кӑларӑр! Макӑратӑп тупата, макӑратӑп. Хаҕчен мана колхоз тӑрантнӑ! Ӑҫтан пурӑнан колхозсӑр? Ӑҫта, тур ҫырлах!

Сывлаш ҫавӑрнӑ уполномоченӑй аран-аран сӑмах тупрӗ:

— Мӗн ҫсӗ пит хӑрататӑн тухаспа? Пайанах кӑларса ҫапатпӑр акӑ!

Вӑл пӗлмен, куран-ха Чакак Питтай арӑмне..

— Кӑларӑр. Пайанах кӑларӑр! Тавай мана лашана, урапана, хӑмата... Ҫитӗ! Нумай сарӑлтарчӗ ман лаша.

— Лашана, терӗ-ха!—шӑл витӗр ӑсрӗ кутесрэ ларакан колхозник.

— Йепле ха кун пеккине колхозра усратӑр?—тин хӑйне туйса илчӗ уполномоченӑй —Тахҫанах ӑна кӑларса йамала. Тавай, халех кай та,—ан кил ҫсламе... Лаша ха сава... ӑсатмала акӑ хун та... лашапа!

Питтай ек те мек те чӗнмест; хӗрелмест те, шурамаст те... Те ҫавӑнпа пушшех хӗрӳленсе кайрӗ Чакак:

— Ӑсатса хӑратас терӗн-и? Ӑсатса хӑратас терӗн и? Ӑсатаймӑн, ӑсатаймӑн... Хам лашана сирех парса тӑру пулмӗ! Ана луччӑ каласмастӑп та.. Тытрӑм, карӑм. Сирӗн пек кӗл мҫӗсене лаша хӑварсан,—мӑвтӑр пулар!

— Илсе кайса пӑх-ха!—терӗҫ харӑс ик-виҫ колхозник. Ку харӑс калапи пӑртак шиклентерчӗ те пулас Чакака.

— Хӑраса тӑрӗҫ-и сиртен? Хӑраса тӑрӗҫ и? Хӑвӑр тӑвӑр малтан ҫын лашине иличчен. Сиртен вӗт ла на тӑвасси те пулас ҫук.

— Есĕ нумай бузиг тăватни? — сиксе тăчĕ уполномоченнăй.— Тавай ăсатап халех.. Кӳлсе килĕр лаша. Питтай... района ăсататăп... Что за безобразие вăл? Мĕнле хушамату?

Чупса пычĕ, хулĕнчен тытрĕ, анчах çынсем пыманран каллех йачĕ.

— Мĕнле-ха увăн хушамачĕ? Калăр?—ушкăнтан вăл ыйтрĕ.

— Питтай арăмĕ вĕт ара вăл, Питтай арăмĕ...—персе йачĕ Минеслу.

— Санăн та çавхагерех арăм и? — ыйтрĕ уполномоченнăй Питтайран.—Мĕнле чараймастап ара?

— Епĕ ăна чарасшăн та мар, - шăл витĕр тăсрĕ Питтай.— Ирĕк хăйĕнче Мĕн тăвас тет, çавна тăват.

Пĕр танхăр никам та пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Чакак та пĕр вырăна тăчĕ те, хытрĕ

— Ну, мĕн-ха тăратăн! Кай!—терĕ ăна уполномоченнăй.— Кĕçĕр калаçратпăр сана пурĕпĕр..

— Кăларăр!—ирсĕр сăмах çине ирсĕр сăмах хушса таплаттарса пăрахса кайрĕ Чакак.

Питтай йĕри-тавра пăхрĕ. Тен, мĕн пурĕн куçĕсене вуларĕ. Пĕр-ик утăм утрĕ, унтан каллех çав вырăна тăчĕ Ахăрнех, хăй майлă куç пĕрне те хăт тупаймарĕ. Çаврăнчĕ те утрĕ Чакак хыççăн тĕрексĕр утипе

Çавхатер шелленĕччĕ епĕ ăна çав вăхăтра. Ăçта кайат вĕт етем? Аçта кайат? Ăçта кайса кăна ху лăплантарăн? Кам сана шеллĕ? Кам сапатĕ? Есĕ вилтĕн вĕт ĕнтĕ! Ăçтан тупăн есĕ чĕрĕлĕх? Ушкăнтан уйрăлтăн? Ăçтан тупăн ес савăнăç? Кам парĕ сана савăнăç ушкăнтан пуçне? Ăçтан тупан ес вăй ыранхи кун пурăнма? Кам парĕ сана вăй ушкăнтан пуçне? Сем вăрмана вĕт, сем вăрмана кайатăн! Пĕр йавăç та пулсан анланĕ-и сана?

Тен, есĕ пире, колхозниксене йышăнмарăн, тен, есĕ тепĕр ушкăн пур-ха тесе пире пăрахрăн Чăнах, йалта вĕт-ха кулак пур, ун ушкăнĕ пур. Вăл ушкăн, тен, пурăнăç парĕ, тетĕн? Курăпăр! Мĕнле йышăнĕ вăл сана!

Çак сăмахсене хăйнех каласшăнччĕ епĕ, хăваласа çитсех каласшăнччĕ, анчах вĕт... Питтай вĕт вăл!

Чарăнтăм вара...

Каçхине килле килсен пĕлтĕм: Чакак чăнах та хăйсен лашине витерен кăларса кайнă. Конђухсем вăл вăхатра картишĕнче пулман. Кайарах ун патне кайна лашана илме тесе, анчах Чакак тимĕр сенĕкпе тăвă. Йахăн та йаман. Калле килнĕ вара...

XV.

Çапла... Питтай вим те чĕнмерĕ, арăмĕ çавхатер тилĕрсе, кăшкăрса колхозран тухса кайсан та

Мĕншĕн чĕнмерĕ? Мĕншĕн-ха çавхатер киревсĕр, йурăхсăр, контрреволђуцилĕ ĕçе кура тăркачă, йалсовет председателĕ, активис пулнăскер, совет влаçĕшĕн çапăçнă етем,— çавăнпа килĕшнĕ пек пулса, Чакакпа пĕр шухăшла пулна пек пулса, пĕр сăмах та хушса каламарĕ.

Мӗншӗн?

Кам калама пултарӗ мӗншӗнне? Етем чӗри вӗт вӑл, мӗнле каламала, ытларах та майлӑ йапала, ҫӗр хуҫана итлет, ҫӗр йапала ӑна пӑхӑнтарса тӑрат.

Кам пӗлет? Ӑҫтан пӗлен ҫыннӑвне! Кунта епӗ хам шухӑша анчах калама пултаратӑп. Ман шухӑшпа, Питтай пек ҫынсем клас сисӗмне ытларах та час ҫухатаҫҫӗ. Вӗсем йалан хӑйсен кӑмӑлне тултарас тесе ҫӳренипе часах хӑйсен клас тӑшманьне те курми пулаҫҫӗ, вӗсен ӗҫӗсене те туйми пулаҫҫӗ. Ун пек ҫынсемшӗн мӑнкӑмӑллӑха чыслани паха. Кам чыслат: кулак-и? чухӑн-и?—вӗсемшӗн пурпӗрех. Ҫавӑнпа час-часах вӗсем тӗп пролетар ҫулйӗрӗнчен пӑрӑнаҫҫӗ те.

Ман шухӑшпа, Питтай хӑйне хӑй „хурланна" ҫын, ҫынсем кӳрентернине тӳсекен ҫын вырӑнне шутласа ҫӳренӗ. Хурланнӑ пулса вара вӑл ӗлӗк ҫывӑх курнӑ организацисене те пӗтме суна пуҫланӑ, колхоза та курайми пулнӑ, мӗншӗн тесен унӑн пуҫлӑхӗ Питтайа выгӑвӑр парса хурлавтарнӑ етем, унтан иртсе кайнӑ етем.

Ҫавӑнпа колхозӑн кашни йӑвӑшӗ, кашни промӑхӗ, кашни мӗнпе те пулсан пӑлхатакан йапала—чӗрене савӑнтара пуҫлавӑ. Ӑспа вӑл колхоз пуҫлӑхӗн ӗҫӗсене тӳрре те кӑларнӑ, ҫапах мӗн те пулсан киревсӗр ӗҫ тухсан, колхозниксен хушшинче харкашу хускалсан-тусан, кам та пулсан колхозран тухсан,—хӗпӗртенӗ пек пулнӑ.

Халӗ те акӑ: Чакак колхоза пӑтӑрмах туни, кӑшт пулсан та инкек кӳни—темшӗн пӑртак ҫӗкленӗ.

— Мӗн тавӑҫ-ха акӑ!—тенӗ вӑл ӑшӗнче—Мана хыпаланса выгӑвӑр пачӗҫ. Мана выгӑвӑр паман пулсан, вӑл пулас та ҫукчӗ-ха. Ан тив-ха, пӑртак калле-малле шухӑшлаччӗр Епӗ хаӗ хӗрринче... Ӗҫлеччӗр хӑйсем пӗлнӗ пек.

Каллех, активиссем ҫакна курса пӗтӗмпех сӑмсисене ан таварччӗр тесе, вӑл хӑй малтан систерес терӗ: вӑл вӗсем ҫине сурнине Пуринчен те усал сӑмах, хирӗҫ сӑмах илтме тӑрса, Питтай пурин ҫине те тӑшмансем ҫине пӑхнӑ пек пӑхрӗ. Малтавах хатӗрленсе шӑлне хӑйраса хучӗ.

Чӑн малтанах ҫынсем „арӑмне чараймаст" тесе ан кулччӗр тесе, йепле те пулсан ҫынна урлӑ пулас тесе, ҫав каҫах арӑмӗ патне йӑпшӑнса пычӗ. ыталарӗ. Манчӗҫ хирӗҫнине, чӗнмесӗр ҫӳренине, пурне те, пусне те..

— Ан тив,—шухӑшларӗ вӑл,—хӑй те арӑмӗ майлӑ тесе шухӑшлаччӗр ҫывсем. Арӑмепе пӗр чун вӑл, теччӗр

Темшӗн ҫакна калаттарас кильӗ. Мӗншӗн-ха? Хӑй те пӗлмест.

Пӗр-икӗ кун хушшинче вӑл каччӑ хӗре йуратнӑ пекех йурата пуҫлавӑ. Калӑн, тарӑху ыйҫӑн темле кӑмӑл вучӗ ӑва шӑрантарнӑ, ҫилӗ, хурлану таҫта хӑпса ӳкнӗ, мӗн пур ун урлӑ пулнӑ асап таҫта кайса ҫухалнӑ. Мӑнкӑмӑлла етем вӗт вӑл ӗмӗрне ҫапла: мансан манат пӗтӗмпех, манмасан ӗмӗрне ӑшра ӳсет упӑн хирӗҫӳ.

Ҫав шухӑшпа кӑн, йепле те пулсан ҫынпа урлӑ пулас тесе кӑна, вӑл тата тепӗр ҫавхатер йурӑхсӑр ӗҫ тума хӑтланчӗ.

Тырă хатĕрлев задани килчĕ йал çине. Август уйăхĕнче тултармали задани. Нумай та марччĕ. Пĕр пин пăт анчах. Йалшăн ним те мар ĕнтĕ.

Анчах Питтай çав тĕлĕшпе тунă заçеданивче хирĕç сиксе тавлаша пуçларĕ.

— Мĕн леçмеле халех! Ĕлкĕрессĕн сунмаççĕ-и? Хачăх хĕрсе тырă вырат, авăн çапат... Ăна чарса тырă леçме тытăнмала иккев! Кирле мар! Акă, тата пĕр уйăхран...

Ăвлантарма та пахат уполвомочĕннăй, каласа тя парат— мĕншĕн тырă леçме хыпалланмаливе, — çук, тăна кĕмест Питтай. Пахмаст та çынсем çине, пĕлессшĕн те мар вĕсен шухăшне, пĕр шухăш тытнă та, перет те перет хăйĕнне.

— Йышăвмастпăр — бастă! — хытнă питкуçпа кăшкăрат вăл.— Лайăх вĕсене, рикра заданисем валеçсе ларма. Тырă пуçтарас кампаниййе срыват тусан, — каллех вет мана айăпласçĕ. Вĕсем увта, центăр умĕнче ырă йата тухасшăн, чапа тухасшăн тăрăшаççĕ, çавăнпа хыпаланаççĕ. Ан тăрăшчăр пирĕн ĕвсепе мухтава тухма!—Вăрçса та пахат пирĕн уполвомочĕннай райкомпа та хăратса пăхат, – çук, асне те илмест пирĕн Питтай.

Йулашкиечен уполномочĕннăй ним тăваймап йенве кăшкăрса парсăре.

— Есĕ мĕн пит кăшкăратăн?—тилĕрсе кайма пикенчĕ Питтай —Еллс хăратса йышантарас тетĕн-и?

Парт.к чарăвчĕ. Сывлăш çавăрчĕ. Лăпланчĕ. Темскер шухăшларĕ.

— Пуçтарассу килет пулсан, хăвăр тытăр та пуçтарăр... Я не разрешаю и за перегиб не отвечаю.. – терĕ вăл пĕтĕмпех лăпланса

.. Нисçе пăрăнса кайрĕ Питтай, ăна вал хăй те сисрĕ.

Малтав: „выгăвăр парса ачана нăçрăмăр“ тесе калаччĕр, тесе пуçласа, вăл астумасăрах хĕрсе кайса ытлашшипе те каласа пăрахрĕ Пăрахрĕ те туйрĕ: тен, ку ахаљ чăхăмçăлании кăна пулчĕ, вăйсăр чăхамçăлании... Увшăн лашана хĕртеççĕ, етеме пăрахса хăвараççĕ... Чăнах та: акă парахса хăварчĕç Пăрахса хăварчĕç, çавранса та пăхмарĕç.

Питтай урăх чĕнмерĕ. Унсăр пуçнех сӳгсе йаврĕç, йышăнчĕç, пĕрремĕш çентабĕре тултарма пулчĕç.

Иулче Питтай. Сисрĕ: пуçлах мар вăл урăх — пукане çеç. Леш йармăнкари хĕрле çĕлĕклĕ, кукăр сăмсалă, хайар сасăпа кăшкăракан пукане. Вăл кăшкăру халăха култарат кăна вĕт!

Тин сисрĕ Питтай: урăх вăл мĕн хăтланса та, мĕнле кăшкăрсан та, мĕнле хăратсан та, — унтан никам те хăрас çук, никам та вырăна хурас çук.

Çавăнпа вал сасартăк тĕшрĕлчĕ, ĕшевчĕ.

Заçедани пĕтсен, аран-аран урисене сĕтĕрсе тухнă Питтай урамала. Ашра тĕрек пĕтсен, урасенче те тĕрек пĕтнĕ. Усăннă пуç, пуçнăççăр йăвăç куç—уйăх çине те пахма вал хăйаймап. Уйăхĕ çутатнă çаплах тĕлĕнсе, хытса. Ĕлĕкхи пекех, виçĕм çулхи пекех. Пин çул малтанхи пекех. Çав уйăх умĕнче пĕр пытармасăр каласа парас килнĕ. Пĕр уйăх çеç ăна, тен, ăнланĕ!

Урӑххи кам ӑнланӗ? Урнӑ йытӑ ачашланма пырсан та вӗт хӑраса тараҫҫӗ. Вӗт мана мӗн пур йал урнӑ йытӑ пе ех курат пулӗ...

Сасартӑк вӑл чарӑннӑ. Мӗн пур ҫанҫурӑм тӑрӑх халтӑртатса сивӗ пӑр иртсе кайнӑ, питкуҫ туртӑньӑ, чӗре асаплӑн чӑмӑртаннӑ.

Анчах, пурӑлӗрех вӑл иртнӗ йӑнӑшсене астуман. Темӗскер капланнӑ пек кӑва туйӑннӑ. Ӑшра сӑпан тулса ҫитнӗ пек. туйӑннӑ Акӑ вӑл туртат, хаҙ ак йухмала, шӑтмала. Ун чухне вӗт ахлататӑн киленсе ахлататӑн! Курайместӑн, ҫиленетӗн ҫӑпана, анчах ҫавӑнтах ачашлатӑн, сӑтӑркалатӑн Иртнӗ йӑнӑшсем те ҫаплах.. Вӗсене курайместӑн, анчах вӗсене ачашлатӑн. Ҫӑпан мар темӗскер айӑплӑ! Йӑнӑшсем мар асаплантараҫҫӗ — ҫынсем, ҫав ӑна курайман, усал тӑвас тесе ҫӳрекен ҫынсем... Каллех-ха Питтай пурве те ҫынсем ҫине йӑвалантарнӑ. Урасем утнӑ. Киле кайас килмен. Таҫта утнӑ урасем...

Хӑй сисмесӗрех вӑл Чӗкеҫ хапхи патне ҫитнӗ тӑнӑ Мӗнлеха? Мӗншӗн кунта килнӗ?

Тин вӑл тӑна кӗнӗ. Чӗкеҫ ҫуртӗнчен сасӑ илтӗнсе кайнӑ. Тахшин мӑн сасӑпа калаҫнӑ

Кашни ет м сӑмахӗ уншӑн халӗ паха пулнӑ. Пӗксӗр итлеме вӑл пуҫланӑ. Пӳртре, — мӗнле тӳр килнӗ-тӗр,—Питтай ҫинчен калаҫнӑ.

— Иртӗвчӗ ҫав ӗнтӗ Питтай та..—мӑн сасӑра Питтай паллачӑ Куҫука. Илтсенех ув сассине вӑл савӑннӑ. Вӗт вӑл ӑна нимӗн те усал туман. Куҫук ӑслӑ ҫын... унпа калаҫас пӗрех хутчен. Анчах итлеиӗ-ҫем вал чӗтре пуҫланӑ

— Иртӗнҫҫӗ—калама т сук! Ҫав пурте пӗтессе сиснӗ те-ха вӗсем Хамӑра пӗтериччен, пурне те пӗтерсе хӑварас теҫҫӗ ӗнтӗ вӗсем!

Пӗр тапхӑр шӑп пулнӑ. Черкке сасси илтӗннӗ

— Апла калимаҫҫӗ-тӗр те-ха вӗсем. — хушнӑ Чӗкеҫ те хӑйӗн уҫӑ сассипе,— Ҫӳлтисем ыйтаҫҫӗ-тӗк, ӗҫлеҫҫӗ ӗнтӗ.. Мӗн ыйтнине тумалах.

— Ҫӳлтисем —Питтайсем мар-им ара вӗсем? – хӑпартнӑ сассине Куҫук.—Пурте вӗсем пӗр пек, пуриншӗн те вӗсемшӗн йалмак макрат те-ха! Ҫавна сиснӗ вӗсем! Пумайах пыраймӗ—ырасса! Унччен анчах чӑтасси хӗн. Ун чухне социалисӑмне лачӑ кӑтартӑттамӑр . Пит курасшӑн сунаҫҫӗ-ха!

Унтан татах черкке сасси илтӗвчӗ „Ах!“ тени илтӗнсе кайрӗ.

— Питтай та ҫавна кӗтессе кӗтет-ха! Ахаҙ! пӗркун пулатчех тӗр-ха та... Халӑх пит шавла пуҫланӑччӗ.. килсе ӗлкӗрчӗҫ районтан.

Питтай урӑх тӑраймарӗ. Ахаҙ те лӗштӗртетнӗ етем хаҙ ӗнтӗ пӗтӗмпех ӑнтан кайрӗ

Вара мӗншӗн-ха? ҫак сӑмахсене илтнӗ хыҫҫӑн чӗрере ним хайарлану та, кӳренӳ те сук.. Ӗлӗк апла калаҫнине илтсен, хайарлахпа ҫӗр тепӗр май ҫаврӑнса ларӗччӗ! Халӗ мӗн? Пушӑ ӑшра, пӗтӗмпех оушӑ!

Ӑҫта тӗрек? Ӑҫта тайанмала? Лешсемпе, малтисемпе, хирӗҫнӗ чух, кусем, Куҫуксем, йышӑнасса ӑшра шаннӑ. Халӑх вӑл уншӑн

тăрăшнине ăнланĕ, тенĕ. Çавăнпа тырă заданине хирĕç пулнă. Çавăнпа... Халĕ ăçта? Кампа?

...Ушкăнишăн пĕр çын нимех те мар, ушкăн етеме, килмен етеме вăркăтас тесен сĕре инçе ыватат, шелемесĕрех ыватат. Нимĕнле ĕç те, вал ĕç ушкăн ĕмĕчĕпе çыхăнман пулсан, етеме çăлаймаст.

Çавăн пек Питтай хакĕ те сасартăк çухалчĕ. Пурте астурĕç: йепле-ха чăтнă хаљччен çавна? Мĕнле курман?

Председатĕлрен иртнĕ заçеданирех кăлармала турĕç. Тепĕр заçеданире йалсовет членĕнчен те кăларчĕç. Чакакне колхозран кăларнă чух, Питтайа та пĕрмай кăларас тесе шухашласа хăварчĕç те, анчах темĕскер пĕр авкана чарăнса тăчĕç.

Заçедани иртсен, пĕр икĕ кунтан чĕнгерчĕç милици, вара пĕр пилĕк-ултă çын Чакак илсе кайнă лашана илме кайрĕç.

Унччен те темиçе хут пынăччĕ пирĕн колхозниксем вăл лашана илме, анчах Чакак йаланах турчкапа хирĕç тăнипе, ĕçе милицийа панăччĕ.

Халĕ ĕнтĕ, Питтайа председатĕлрен кăларсан,именсе тăмарĕç, тÿрех кайрĕç илме.

Картишне кĕнĕ-кĕменех, каллех Чакак турчăка йăтса тилĕрсе тухат. Анчах милицийе курнипе турчкипе никама та хăмсараймарĕ. Сăмахпа кăна тилĕре пуçларĕ:

— Хапсăнтăр ĕнтĕ, хапсăнтăр! Илĕр! ата илĕр! Пырна лартăр! Ман куççуљ ахаљ ан пултăр. Манăнах лаша пулĕ-ха... Сире ĕмĕрае те çитес çук! Тĕнче йулашкисем!

Тем те калат ĕнтĕ, тем те калат Илме пынă çын сăмаха пăхса тăмаст ĕнтĕ. Тытрĕ аран-аран Уљар лашана: лаши тыттармасăр тарăхтарчĕ тата... Шалтах ăнтан кайрĕç. Тилкепене аран тытрĕç.

Питтай мĕн лашапа асапланнă вăхăта пĕр чĕнмесĕр иртгерчĕ. Ларнă та чÿрече умне, тайăннă, пăхнă та чÿрече витĕр: ни—ну! ни—ме! Ним те чĕнмерĕ.

Ун йенне йури никам та пахмаст Пурте кутăн çаврăнса тăраççĕ

Лашана тытса хапхана уçрĕç. Илсе кайасси кăна йулчĕ ĕнтĕ. Уласа макăрса йамарĕ-и пирĕн Чакак

— Илсе кайаççе ĕнтĕ лашана-а-а! Пĕтеретĕр ĕнтĕ есĕр ăна... Пĕтере-тĕ-ĕр! Пирĕн лашапа усă курмала ан пултăр! Ман куççуљ çĕре ан ÿктĕр!

Лашана çавăтса тухрĕç Лаши те, кăнкăвак, чăмăр лаша, утасшăн мар, темскер хирĕçнĕ. Уљар çапрĕ лашана хулăпа.

—Но! Но!

Епĕр, етемсем, пĕр йенчен çавхатер айван. Хамăр кăмăл çемçелнĕ пулсан, çынсен те пирĕнни пек те‧е шутлатпăр. Хамăр ăшра çавхатер ырă, ăшă сăмах пулсан, ăна çынсем ăнланĕçех тесе шутлатпăр

Питтай та шухăшларĕ пулас çав çынсен кăмăлĕсене çаврăп тесе Сиксе тухрĕ те пÿртрен, йăлăна пуçларĕ.

— Ну, мĕн тăватăр ĕнтĕ çав лашапа? Сире епĕ, пит кирлĕ пулсан, урăх лаша илсе парăп. Уљар, йар! Ку хамăр лашана вĕреннĕ ĕнтĕ вăл. Ан макăрт!

Мӗншӗн лашана хӑварасшӑн пулнӑ,—ӑна епӗ халиччен те тӗплӗ пӗлместӗп. Тен, хӑй те колхозран тухас тесе шутланӑ пулӗ, тен, арамне шеллесе кӑна .. Темшӗн?

Чӑнах, йулташсем! Ну, мӗн сире! Пурпӗрех лаша вӗт! Ну, Уҫҫар! Ӗлӗкхи пуҫлӑх хавалӗпе ҫӑмӑллӑн пырса чӗлпӗртен тытрӗ.

Никам та пӗр сӑмах та чӗнмерӗ. Питтай лашине калле тургма ҫеҫ пуҫлавӑччӗ, Уҫҫар ҫаврӑнчӗ, Питтайран чӗлпӗре карт! туртса илчӗ, вӑйпа тӗртсе йачӗ.

Питтай тайкаланчӗ, тӗрек ҫухатрӗ, темскер ҫине такӑнчӗ те, кӗрӗслетсе кайса ӳкрӗ.

Пурте хыпаланса тухса кайрӗҫ. Лаша та кайрӗ.

Питтай тӑчӗ, пуҫне чикрӗ, хуллен кӗчӗ пӳрте.

— Мӗн ку? Хирӗҫместте чӗре? Ҫилӗ те ҫук! Ҫавхатерех пултӑм-и? терӗ вӑл хайне.

..Тепӗр кун ирех вӑл пӑртак пуҫтарӑнкаларӗ те, вӗҫтерчӗ Иванӑвӑна.

XVI.

Икӗ ҫул ҫӳрерӗ Питтай йут ҫӗрте. Икӗ ҫул хушши никам патне те пӗр ҫыру татӑкӗ йаман. Илтӗнкелетчӗ ҫеҫ: пӗрре Донбассра, тепре Иванӑвӑра тетчӗҫ ун ҫинчен. Унтан Сталинградран таврӑнна Тӑхтамӑш: епӗ Питтайа Сталинградра куртӑм, анчах курмаш пулса пӑранса кайрӗ тесе пӗлтерчӗ.

Унтан пӗр авкана пӗтӗмпех каласма пӑрахрӗҫ.

Питтай килте тени те сасартӑк сарӑлчӗ. „Вӑл пӗр ерне ӗнтӗ килте ниҫта тухса ҫӳремест“, тейе пуҫларӗҫ. Ӑва илтсен, хам та кайса курас тенӗ шухӑш тытнӑччӗ. Темле вӑхӑт тупаймарӑм ҫапла.

Пӗр ӑшӑ кӗрхи кун, ӗҫ пӗтсен, епӗ садра аппаланнӑ чухне, ман пата хайхи Питтай килчӗ ҫитрӗ. Епӗ те савӑнтӑм ӗнтӗ (вӗт вӑл ман пата председателе кӗнӗрене пырса кӗмен); вал та тем тӗрле ҫывӑх курса пынӑ, куран: ӑшшӑн йӑпатса пӑхат; вырӑнла та, вырансӑр та кулат; калаҫат пӗрех ..

Мана тӗлӗнтерчӗ пирвайхи упӑн куҫӗ. Ӗлӗк ҫын ҫине пӑхман куҫ, халӗ тӗллесе, тӗллесе пахат; калӑн, виҫет, хаклат ҫын хакне, хӑйне танлаштарат.

Сӑмахӗ те, сӑмах ҫаврӑнӑҫӗ те каллех улшӑннӑ пек туйӑнчӗ. Халӗ ӗлӗкхи пек сӑмах ҫийӗнчен кӑна калаҫмаст, сӑмахшӑн кӑна та калаҫмаст, темскер, калаҫнӑ хушӑрах: „Да... Тӗнче! ..“ йе: „Пур, ача, етемсем тӗнчере“; йе тата: „Ҫитет етем ӑсӗ те“ тесе кӳрте-кӳрте хурат.

Курӑнат: каласшӑн темӗскер тин хӑй тупнӑ йапалана, хӑй пӗлсе итнине, туйнине ..

Тен, курнӑ пулӗ вӑл: тӗнче Питтайсӑр тӑма пултарат иккен; Питтай халӗччен: „Епӗ пулмасан, йал ӳпне-питне кайӗ“ текенскер, сисрӗ пулас: тӗнчешӗн вӑл кӑна мар, мӗн пур вӗсен йалӗ те мар...

Татах курнӑ пулас Питтай: мӗн тӗрлӗ етем ӑслӑ, ҫавӑн тӗрлӗ вӑл йапшар, хӑйне йуне хурат, ҫынна, ҫын ӑсне хисепларех парат.

Мăнкăмаллăх—вăл ухмахлăх, айванлăх гумтирри. Ăшра хăвăл çуккине кăтартас мар тесе кана çынсем мăнкăмалланма пăхаççĕ иккен. Çавна та пит лайăх сиснĕ пулас Питтай.

Туирĕ пулас татах Питтай: хăва ху ăслă тесе, мĕн тĕрлĕ ăслă пулсан та, мухтанмали çук, мĕншĕн тесен: ес ăслă пулсан, сантан ăсли тата пур... Апла пулсан, тĕнчери çынтан пуринчен те ăслă пулмасан, мĕне тăрат сан мăнкăмăллăх? Мĕн чухлĕ çын нумайтарах паллашат тĕнчепе, çавăн чухлĕ вăл хăйне курма вĕренет.

Çакна пурне те пĕлсе çитнĕ пулас Питтай икĕ çул хушшинче. Çапла çынна хисеплеме вĕренчĕ вăл.

Çав кунах иксĕмĕр кайрăмăр колхоз правленине. Питтайа, ăшшăн алă тытакансскере, пурте ĕлĕкхине манса ытла ырă кăмăлларĕç. Епĕ çавăн чухне тата тепĕр йапала сăнарăм: Питтай мăнкăмăллăхне тивертес мар тесе, çынсем ăна ан астуччĕр тесе, йури хăй малтан ыррăн, ăшшăн чĕнме йăла тытнă. Вĕт ыррăн чĕнекен çынна,—кам та лайăх пĕлет,--ырă сăмахпах тавăраççĕ.

Епĕр пырса кĕнĕ вăхăтра коҫухсем сиччен калаçнă иккен. Алă тытсан, ыйткаласан ăçта пулнине, мĕн тунине,—сăмах пиве çитрĕ те, Шăпчăк, колхоз председателĕ, каллех пуçларĕ ĕлĕкхи сăмахне:

— Кама-ха коҫуха хурар? Коҫух кирлех! Марсан ури ыратат, тет. Коҫухран кăларма ыйтат те-ха...—вăл ăшшăн Питтай çине пăхрĕ — Палантайа хурсан ĕнтĕ...

— Тавай-ха, йулташсем, мана хурăр коҫуха!—сасартăк, хăйса çитеймен сасăпа, çапах тĕкеллесе ыйтрĕ Питтай. —Ман ĕçкувĕ пурĕпĕрех çук! Пăртак çимелĕх ĕçлес!

Пĕр тапхăра пĕри те ним те чĕнмерĕ Ахăрнех, пурте Питтай коҫух пулнине курасшăн. Егем вĕт çавăн пек вăл: председательтен сасартăк коҫух пулни упшăм кăсăк

Председатель те, Шăпчăк, так çапла йăлишĕн кăна каланă пек каларĕ:

— Тупăпăр сансăр пуçне те... Сан ваҫҫи урăх ĕç те тупăнĕ.

— Мĕн тата тупăпăр! Кĕретĕп те, ĕç те пĕтрĕ. Тавай! Миçе лаша? Пайанах илетĕп!—çине-тăрсах тĕкелет Питтай.—Елле шанмастăр-и?

Хирĕç кам пултăр! Никам та пулмарĕ. Çав кунтан пуçласа хайхи вара пирĕн Питтай пулчĕ тăчĕ коҫух

Пĕр çулталăк иртрĕ—Питтай коҫухран тухман-ха. Вăл хушăра вăл икĕ хутчен те премипе илчĕ, районтан килнĕ агроном та унăн лашисене мухтарĕ, колхозниксем те, пуçлăхсем те ăна пурте йуратаççĕ.

Пĕрре кăва пăртак хĕрнĕ Уҫар çын умĕнче Питтайа питлеме тытăнчĕ:

— Есĕ те тахшин пулнăччĕ. Турă, патша пулначчĕ. Мана сивĕ кĕлете хупрăн...

Анчах çавăнтах мĕн пур халăх кăшкăрса пăрахрĕ Уҫара.
— Ĕлĕкхине мĕн асăнмала ĕнтĕ!

— Тивӗҫлипе хупнӑ та!

— Пулвӑ — иртнӗ иккен

— Сан ҫӑвар кармали тӗлӗ те ҫук унта!

Вӑтаннӑ Уҥар, ҫавӑнтах чарӑнчӗ, „епӗ ара сӑмахран кӑна“ текелесе ҫынсен хыҫне кайса тӑчӗ.

Ҫемҫелчӗ пулас Питтай кӑмӑлӗ те. Пулат ҫавӑн пек вӑхӑт: ҫын йури хӑйне асаплантарасшӑн. хӑйне вӑтантарасшӑн йӳҫӗ сӑмахсем калат. Мӑнкӑмӑллӑ Питтай та, хирӗҫ шухӑшне хуплаcа вӑтанарах пуҫларӗ.

— Иртӗнвӗ ӗнтӗ ун чухне — мӗн калаҫмали пур... Чӑнах! ҫынна курма вӗресмеле ҫав! Епӗр курмастпӑр ҫынна... Ухмах тетпӗр ҫынна — хамӑр ухмах иккен. Пултараймаст, тетпӗр, — пахӑсан: чӑн пултаракан ҫынсем ҫумӗнче хамӑр та вите те тӑмастпӑр. Чӑн-чӑн пултараканни-ха вӑл хӑйне ним вырӑнне те хумаст. Ҫавӑн пирки мӗн чухлӗ йӑнӑш епӗр тӑватпӑр! Ех!

— Да! — тӑсрӗ Шӑпчӑк, пӑркаланчӗ, темӗскер ухтарчӗ, — ырӑ мар темшӗн кун пек сӑмахсене итлеме Темӗскер куҫкӗретех питленӗ пек.

— Ну, — терӗ Ҫерҫи те. — Есӗ, Шӑпчӑк, паҫӑр каланине ту-ха! Кайса кил лере .. — хӑй тухса кайрӗ.

— Епӗ ҫав урапасене тӳрлетем еппин,— тухса кайрӗ Исмулла.

Пӗр Уҥар кӑва ӑшшӑн пахрӗ Питтай ҫине.

— Тӗрӗс калатӑн есӗ вӑл самахсене. Епӗ хам та ҫапла шухӑшлатӑп!—терӗ те, алӑк патнеле сулӑвчӗ. Ӑна чӗнсе илчӗ Шӑпчӑк, иккӗшӗ тем ҫинчен калаҫа пуҫларӗҫ. Питтай хӗпӗртенӗ. Кайран, каҫхине, вырӑн ҫинче хӑй сӑмахӗсемшӗн хӑй вӑтанасса пӗлнӗ пулсан та, халӗ ытла ҫӑмаллӑн туйнӑ!

Тахҫан каламали самаха каласан, ӗмӗрне ҫапла.

Сӗнчел, 1933 ҫ.

В. И. КРАСНОВ.

ТӐВАЛЛА.

РОМАН[1].

Иккӗмӗш кӗнекин малали сыпӑкӗсем.

Вӑрман йурри.

Кӗркуҫпа Саҥук тата Кипекрен ҫитнӗ. Вӗсем станцӑра пулманни пайтах пулат. Ҫавӑнпа та пулас, кӑшт васкарах районри колхоз сйезне пуринчен малтан ҫитнӗ.

Кӗркуҫпа Саҥук станцӑна килсе РИК умне чарӑнсанах, „Ескетен" колхозӗнчен килнӗскерпе паллашрӗҫ.

Кӗркуҫ Хӗрлӗ ҫарта пӗрле пурӑннӑ йулташне палларӗ. Ҫапла вара Кӗркуҫпа Саҥук „Ескетен" колхозникӗсемпе пӗрлешсе халиччен палламан Мӑрси патне хваттере кайнӑ.

Мӑрси станцӑ историне лайӑх пӗлет. Йепле-ха вӑл ан пӗлтӗр, вӑл малтанах кунта килсе ларнӑ вӗт. Ӗлӗк чугунҫул тӑваччен Мӑрсин пӳрчӗ пӗр пӗччен вӑрман шавне итлесе ларнӑ.

Вӑрман кашланӑ, кайӑк-кӗшӗк йурланӑ, туратран турата пакша сикнӗ, упа-кашкӑр ӳхӗрнӗ...

Пыра-киле Мӑрси пек хӑраманнисем тата та тупӑннӑ. Вӗсем те кунта ҫурт лартса пурӑнма пуҫланӑ. Каҫ пулна пулманах питӗрӗнсе выртнӑ. Чӑн малтан пуҫласа килнӗ Мӑрси халӗ те кунтах пурӑнат. Унтан тӗпчесе пӗлтсан вӑл сана, ҫӗр ҫывӑрмасӑр тевӗ пек станцӑ ӑҫтан, йепле пуҫланса кайни ҫинчен каласа парӗ.

Унӑн вӑтӑр хӗлӗхлӗ чӑваш кӗслипе хӑйӗн авалхи йуратнӑ йуррисем пур. Ватӑ Мӑрси йекки кайсан йурлат. Халҥхи ҫӗнӗ пурнаҫа ӗлӗкхипе танлаштарса виҫсе тӗлӗнет...

Марсин хӑнисем хӗрсе калаҫаҫҫӗ. Пуринчен ытла йал мӗнле улшӑнни ҫинчен, станцӑра ҫӗнӗ савӑт, шахтӑсем уҫӑлни ҫинчен нумайччен вӗсем сӳтсе йавреҫҫӗ

Ватӑ Мӑрси айакри йалсенчен килвӗ ҫынсем калаҫнине нумайччен пӗр шарламасӑр итлерӗ.

Кӗркуҫ хайсен йалӗнчи хыпарсене каласа пачӗ. Ун хыҫҫӑн Саҥук Кулине историне каласа парса тӗлӗнтерчӗ. Ватӑ Мӑрси ларсан-ларсан пӗр кана ӳсӗрчӗ. Унтан:

— Да-а, йе ачам тесен те ҫылӑхах пулас ҫук, пурнӑҫ улшӑнат, ачам, куратни, мӗн калама ҫав, — терӗ вӑл Кӗркуҫ ҫине пӑхса.

— Вӑт, ҫапла ҫав, ҫавӑншӑн кӗрешрӗмӗр те...

— Ҫак поҫолӑк ман куҫӑм умӗнче ӳсрӗ вӗт..

— Миҫе ҫул ӗнтӗ есӗр ҫак вырӑнта пурӑнма пуҫлани?—тесе ыйтрӗ пӗри.

---

[1] Пуҫламӗшӗ «Трактарӑн» 4—5—6—7-меш кӗнекисенче.

Ватă Мăрси вăрăм шуралнă çӳсне йакатам пек турĕ.

— 40 çул ытла ĕнтĕ, шутне те тулкăм каласа парас çук тепри, — терĕ Мăрси, сухалĕсене чĕгретсе

— Апла кунта пурнăç мĕнле тапранса кайнине есĕр пит те аван пĕлетĕр...

— А, нитукмăштă пĕлместĕп, вара, хам ĕмĕре çакăнта иртернĕ вĕт...

Мăрси калаçма тытăнчĕ:

— Ĕлĕк, 20 — 30 çул кайала, çак вăрманта сĕм-тĕттĕм вăрманччĕ. Çак вăрман варрипе Нурăс сывăхĕнче икĕ çырма йухса выртатчĕ. Епĕ варманта пурăнма вĕреннĕ, епĕ „вăрман кайăкĕ“ вĕт,— тет Мăрси.

— Апла есĕр чугунçул тăвачченех çак вырăна килсе ларнă?—терĕ Кĕркуç.

— Пĕр çын та çукчĕ епĕ килнĕ чух. Калатăп вĕт, вунпилĕк çухрăм вăрман ăшне кĕрсе пурăнма пуçларăм.

— Мĕншĕн-ха есĕ çав-терийех вăрманта пурăнма йуратса кайрăн? Ухутаçă пулва пулас? — тесе ыйтрĕ Саҥук.

— Хĕ-ĕ, ухутаçă тăватчĕç ĕлĕк. Ей, куртăмăр ĕнтĕ. Ухутаçă мар, хамăр кайăксем пек тарса пурăнмала çуралнăччĕ, — терĕ старик.

Старикăн çамки картланчĕ Сухалĕсем чĕтрерĕç. Чĕтрекен аллисемпе, кĕсле каланăн, сĕтел çинче выҗаттарса илчĕ.

Старик самахне итлесе лаpакансем пĕр-пĕрин çине тĕлĕнсе кайса пăхса илчĕç

Кĕркуç кивĕ пурнăçа, сахал курнă пулсан та, курнă, анчах авала ытла таран, тĕплен астумаст. Ун çинчен вал çапла пурăнса тутаннă çынсен сăмахĕсене шăртланса итлесе ларат. Вал 1914-мĕш çула лайăх астават 1905 çулта революцилĕ пăлхавсене те тĕлĕкри пек астават. Граждăн вăрçи хураненче хай вĕресе пиçĕхет.

Вăтăр-хĕрĕх çул кайали пурнăç çулĕ ăна тĕлĕнтермест. Вăл чăн-чăнах та çапла пулнине хай астунисенченех ăнланса илет.

Ватă старик, вăрмана меншĕн тарма тӳрĕ килни çинчен каласа панă хыççăн, варăмăн сывласа сывлаш çаварчĕ те каллех вăрман пурнăçĕ çинчен калаçма пуçларĕ. Кĕркуç пуринчен ытла уредниксенчен тарни çинчен, пуйан Ахпалатпа тавлашса Ахпăлат вĕлерме тани çинчен тишкĕресшĕн пулчĕ. Анчах Ескетенрен килнисем вăрман пурнăçĕ çинчен каласа пама тытанчĕç те, вĕсене вал пулмерĕ.

— Мана кашкăрсем те паллаччĕç пулĕ, çĕрле тухса шăхăраттăм кăна. Ӳлеме те чаранна пек туйăнатче хама. Çул иртекенсем, каçа йулсан, кунта выртма кĕреччĕç Вĕсем кунта пĕр печчен суртпа пураннине курсан пĕтемпех тĕлĕнеччĕç. Вара: ыра çын, йепле-ха есĕ çак сĕм-тĕттĕм вăрманта пуранма харамастăн? Епĕр иртнĕ чух, ик-виçĕ кашкăр, шур шăлĕсене шаккаса, пĕр халаç пек тукмак хӳрисене тăсса пирен умранах çул урлă каçса кайрĕçĕ. Тукмак хӳре! Тукмак хӳре! тесе кăшкартăмăр. Çапла кăшкарсан çеç варман ăшне кĕрсе çухалчĕçĕ.—теттчĕçĕ вара иртен-çӳренсем. Епĕ вăрман çынниех пулнă çав.

Йепле-ха ҫав вӑрмана йуратас мар? Кам мӗнле хӑнӑхат вӗт, ҫавӑнтан килет вӑл.

Мӑрси аллине кӗсле илчӗ. Чӑнах та Мӑрси вӑрман ҫынни пулнӑ. Халӗ те вӑл, вӑйӗ чакнӑ пулсан та,—„вӑрман кайӑкӗ“ йеверлех

Кӗслине калама пуҫличчен хулӑн сасӑпа пӗрре:

„Хӗлле вӑрманта“ тет те, кӗслине выљантарат

.. Йӑвӑҫсем шурӑ пӗркенчӗкпе витӗннӗ Пӗчӗкҫӗ йӑвӑҫсем купаланнӑ шурӑ йура аран-аран ҫеҫ мекӗрленсе йӑтса лараҫҫӗ. Авӑннӑ.. Ҫӗр тӗслӗ мӗлкесем: ҫын йеверли, лаша пекки те, армак-чармакӑн кармашӑнса тӑраҫҫӗ.

Тӳлек, ним сас-чӗв те ҫук.

Пӗлӗт ҫинчи шурӑ сывлӑш витӗр пӑхакан ирхи ҫутӑ хӗвел хӑрах куҫне хӗссе, пӑрланнӑ туратсене хыпашлат.

Мӑрсин пӗр чӳречелӗ пӗчӗк пӳрчӗн мӑрйинчен шурӑ тӗтӗм ҫӗлен пек авкаланса тухса, лӑпкӑ ҫанталӑкри сывлӑша тӗтӗрет.

Мӑрси ухутаран ывӑнса пӗр чӳречелӗ пӗчӗк пӳртне таврӑнат.

Пайан-ыран тӑранма ҫимӗҫ пур,—икӗ мулкач тытнӑ вӑл. Кӑмакара ҫирӗп йуман вутти сунат.

Мӑрси хушӗ пек пӳртне ӑшӑтат... Вӑрман тӑрри йеверлӗ те, тӗрлӗ чечексемпе тӗрленнӗ пӗчӗкҫӗ чӳречен куҫӗсем ирӗлсе анаҫҫӗ. Вӑрман урлӑ пӑхакан сарӑ шупка хӗвел ирӗлекен чӳрече витӗр ачашшӑн пӑхат. Мӑрси ӑшӑнчӗ, канчӗ.

Каллех тӗттӗм пулаччен йӗр йӗрлеме, капкӑн хума вӑрмана уттарчӗ, чӑштӑр-чаштӑр йӗлтӗрӗ шӑват. Йарӑнат вӑл кертсем урлӑ

Пысӑк хӑвӑл ҫӗрӗк йуман..

Вӑрӑмсӑмса шалт-шалт! шаккат ҫӗрӗк йумана, вӑратат ӑшӑ ыйхӑран сӑсара. Вӑранат тӑмана, лӑс-лӑс вӗҫет айакка, тӑк-тӑк улакайӑк шаккат, систерет ыгти кайӑксене.

Тахӑшне ихик-ихик! виртлет кӑвак пӗсехелӗ сӑнчас.

Мӑрси итлет, хӑшпӗр кайӑк-кӗшӗк виртленипе кӳренет те.

Тупӑш пулсан, хӗпӗртенипе, шик-шик шӑхӑрса утат. Утсан-утсан вӑрман капланине чарӑнса итлет. Тарпа йӗпеннӗ ӗнсине типӗтет.

Каҫ пулат. Хӗвел ырӑнне уйах тухат Лапкӑ-лӑпкӑ ҫемҫе шурӑ тӑмав вӗлтӗр-вӗлтӗр вӗҫсе сӑсар кайӑк, тилӗ йӗрсене тикеслет.

Вӑштӑр вӑштӑр суралнӑ тӑман хускалат, кӗрт тӑват. Мӑрси капкӑнне хуплат. Йай-йай! „сил ачи“ Мӑрси чӳречи хуппине шаккат.

Калӑн вӑл Мӑрсийе кутсӑр-пуҫсӑр тӑман тухасса систерет.

Мӑрси ӑшӑ пӳртре сивӗ шухӑш шуглат: „Ах ҫанталӑк, татах кутсӑр-пуҫсӑр тӑман“.

Аташса йур айӗнче ашса тӑманпа чӑнгӑхнӑ ҫынсем те пур пулђ. тесе шухӑшлат

Тула тухат, вичкӗн хӑлхине сывлама чарӑнса ҫын сассипе итлет...

Сӗм-вӑрман шав-шав кашласа кайӑк-кӗшӗксене хӑратат, Ҫӗрӗк хӑвӑл йӑвӑҫсем ӑшне армак-чармак пысӑк тымарсем

хушшине кайăксем пытаннă. Тискер тăманпа тилĕрен хăраса чĕтресе выртаççĕ.

Çутăлат...

Çĕрĕпе кашласа ывăннă сĕм-вăрман шăп лăпланса канат. Чĕркуççи таран мамăк пек çеп-çемçе йур. Йĕрсем хупланнă. Марси çĕнĕ йĕр тухасса кĕтет, капкăнсене шырат... Çапла иртнĕ Мăрсин сĕм-вăрманта пурнăçĕ.

* * *

Мăрси кĕсливе йухăнтарат. Куçне хупат пусне çӳлеле çĕклет, пӳрвисем кĕсле çинче чупаççĕ. Ватă Мăрсин сăн-пичĕ кивĕ кĕсле кĕввипе хĕллехи вăрман пурнăçне каласа панă хыççăн, йур пек шуралчĕ.

Мăрси каласа пĕтерчĕ те, вăрăм чăпăклă, пăхарланă чĕлĕмне тивертрĕ.

— Ах, аван пĕлетĕн-çке ес вăрман пурнăçне! — терĕ Кĕркуç нимĕн калама аптăрса.

— Йепле пĕлес мар, хам пурнăçа çакăнта ирттернĕ вĕт,—терĕ те, чĕлĕмне çăварне хыпса вăрăмăн сывласа илчĕ.

— Çулла вармаңта тата та хăрушăрах пулĕ?—терĕ пĕри.

Мăрси нимĕн те шарламарĕ. Сухал айĕнчен кăшт кулса илчĕ те, авалхи чăваш кĕслине каллех алла тытрĕ.

— Хĕллехи илем хăйне, çуллахи расна, анчах вăрманта хĕлле те, çулла та хӳхĕм. Ак итлĕр-ха еппин, калам урăх йурă,— терĕ те, сарлака кăтра сухалпа виттĕннĕ çăварне тăп тытса, кĕслине ĕнерчĕ...

— „Ç у л л а в ă р м а н т а“, — терĕ вăл.

Мăрсин пысăк çуркаланнă аллисем кĕсле хĕлĕхĕ çинче тĕрлĕ сасă шыраса чупаççĕ. Тĕрлĕ сасăран пухăнакан кĕвĕ çурхи вăрман пурнăçне сарлат

...Çутă, хĕртсе пĕçертекен итем пек пысăк хĕвел пӳрт тăррипче нумай вăхăт чаранса тăрат. Лăтăрт-латăрт шурă тăкăска йур хавшанчĕ. Унта кунта таншывĕ йухса тухрĕ, чĕлтĕр-чĕлтĕр чĕнтер витĕр çурхи шыв аплăмсене йейĕлчĕ.

Хăрнă шупка-симĕс курак йăваннă, тислĕк пулнă, хĕрлĕ кăчакă йăваçсем сарă çеçкисене сарса çуркуннехи сывлăша ырă шăршăпа тултараççĕ.

Капан пек тăраланнă чăраш, ĕçкĕрт пек сарăлнă пихтă хăйсен симĕс тумтирне хĕлле те, çулла та хывмаççĕ. Вĕсен хушшинчех кайăк-кĕшĕксене хĕрлĕ туналă сарă чечеклĕ кăчакă йываççи ырă шăршă кăларса кăчăк туртат.

Чĕпĕл-чĕпĕл сар-кайăк турат çинчен турат çине сиксе йурлат, — мухтат ăшă хĕвеле. Йурласа ырĕ типсен, симĕс шупка курак çинче кĕмĕл пек çуталса выртакан шывран кĕске майне çӳлеле çĕклесе пĕр-ик çăвар çăтса ырве йепегег.

Уйхир тулли шурă халăх çураки тăват.

Сухаласа хуратнă çĕр пек, хура куракcем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна лап-лап вĕçсе ӳкеççĕ.

— Тăр-тăр-тăр!—тăри симĕс калча çинче савăнса йурлат. Уйхир, йалсем, çурхи шывпа тулнă çырмасем, кĕр-кĕр кĕрлекен

авăрсене курса, ăшă йенчи кайăкхурсем карталанса вĕççе çитрĕç. Чарăнчĕç çывăх кÿл хĕрне, хăлаçланчĕç, кантарчĕç çунатсене.

Йăва тупрĕç, кашни пĕрер çăмарта туса пусма ларчĕç.

Ĕçхалăх мĕкĕрленет. Ĕçхалăх çанталăк ырлăхне курмаст. Куланайшăн нухайкка выљанат. Çĕр сахал. Сухапуçпе ĕçлени тухăçлăх памаст. Мĕн тĕрлĕ ĕçлесен те — выçă Киреметсене пуççапаççĕ. чук, учук, сĕрен тăваççĕ.

Мăрси вармаита. Вăл веçех йăвăр, мăшкăл пурнăçран вăрмана тарса хăтăласшăн.

Çуркунне иртрĕ, çулла пулчĕ.

Чăрăш, пихтă, хыр йăвăçĕсем халĕ расна палăрса лармаççĕ. Халĕ çара пуçлă, шурă пилĕклĕ хурăнсем, кăвак туналă ăвăссем чĕлтĕртетсе савăнаççĕ

Станцă çывăхĕнчи кÿлĕ куçкĕски пек çутăлнă. Кăшт хумханса йăвăç мĕлкисене силлентерет.

Мăрси хăйĕн вĕллехурт çемйисемпе йăпанса пурăнат.

Анчах ăна ухутана килнĕ улпутсем çавтеои кансĕрлеççĕ.

Мăрси персе ÿкерне кайăк-кĕшĕксене те сахал мар туртса илеççĕ. Çапах та ăна йалтинчен ирĕклĕрех пек.

Мăрси пурнăçĕ: хĕлле — ухута, çулла — утарта. Унăн вăрманти чăн усал тăшманĕ — упа.

Упа чейе. Мăрсийе улталасшăн çывăрмаст.

Сĕм тĕттĕм çĕр. .

Вăрман улат... упа тайкаланса утара утат.. Кăшт выртса итлет, пыл симе хатĕрленсе ывăç тупанĕсене çулат.

Ывăнна Мăрси ăйăха туртат. .

Чейе упа хăй ĕçне тăват. .

Ирпелен йăвăç мелкисене кĕскетсе, хĕвел пĕлĕт тÿпине хăпарат. Утар кĕрлет. Амăшне çухатнă хуртсем Мăрси çумне пырса перĕнеççĕ. Мăрси чĕри вут пек çунат... Курат вăл: вĕлле йăванна, карассем çĕмĕрĕлнĕ, унта-кунта саланса выртаççĕ. Мĕскĕн, ĕçлеме йуратакан пылхурчĕсем нимĕн тума пелмеççĕ.

Кантарлана суланчĕ, хĕртсе пĕçерекен çутă хĕвеле мантăр шурă пĕлĕтсем хупăрлама пуçларĕç. Çил тухрĕ, лăстăр ластăр йăвăççене силлет. Пĕрĕхме пуçланă çамăр пылхуртсене йăвисене тартрĕ.

Мăрси вĕлле хуртсемпелен мĕн тумалине пĕлет. Ачашласа çăка пăтавкка çине пухрĕ.

Каç та пулчĕ...

Шав-шав варман кашларĕ, йăлтăр-йалтăр çуталчĕ вутлă чăпăркка шăтăр-шăтăр-шат! турĕ аслати.

Мăрсин пысăк хуйхă. Вăл нумайччен çывăрмасăр сисĕм çуттине, пĕчĕк чÿрече витĕр сăр-сăр сăрлакан вĕллисем çине пăхса выртрĕ.

Тепĕр кун ирхине ирех Мăрси уçланкара...

Çанталăк калама та çук уçă. Лапсăркка пысăк çăка ыра шăрша каларса пылхурчĕсене илĕртет. Кăвак чакăр пĕлĕт сиччи пĕр пĕччен шăвакан хĕвел хĕртсе пĕçертет.

Йешĕл курăк çинчи çĕр тĕслĕ çеçкесем ырă шăршă кăларса, чакăр куççене чалт сарса хĕрĕнтереççĕ шăнасене. Вĕлтĕр-вĕлтĕр лĕпĕшсем хăпа пĕлмеççĕ чечексенчен.

Еç хускалчĕ. Пылхурчĕ, кăткă, çĕлен-калти, кӳлĕри пулăсем — пурте ĕçре.

Куккук сиксе авăтат, сĕнксе ларакан тăманана вăратат. Саркайăк йурлат, Мăрсин чĕрине йăпатат.

— Пайан çанталăк калама та çук аван! — тет Мăрси хуртсем çăвăр уйăрасса кĕтсе, хурама пушăтĕнчен вуниккĕле çăпата хуçат... Упки тулли таса сывлăш сывлат, хурчĕсемпе йăпанат...

...Мăрси авалхи кĕслипе иртнĕ пурнăç кĕввине каласа пĕтерчĕ.

— Манăн йуррăм пĕтрĕ, урăх пĕлместĕп, — терĕ. Чĕлĕмне тивертсе çăварне хыпрĕ.

— Ну, ватă мучи, мĕнле?!.

— Мĕн мĕнле?

— Хăш пурвăç лайăх пек?

— Епĕр ватă, мĕн пĕлетпĕр!..

— Йепле-ха, есĕр пурнăç улшăнннине курмастăр-им?

— Пурнăçĕ улшанат те-ха вăл, — терĕ те, калас сăмахне каламарĕ; Марсин вăрăм тăраткаланнă куçхаршисем куç хупаххи çиве анчĕç, кăвакарнă чукмар пек чышкипе шывланнă куçне сăтăрчĕ.

— Мăрси мучи, мĕн пулчĕ сана? — терĕ пĕри ăна тинкĕрсех питĕнчен.

Мăрси нимĕн те чĕнмерĕ. Шăп...

— Ах, ачамсем, ман çуçĕм йур пек шуралчĕ вĕт, самай пурăнмали вахăтра вилес пулат. Ех! çамрăк чухнехи вăйпитти, мĕнле еп хаљ ĕçленĕ пулăттăм! — терĕ те, ĕсĕклесех пĕчĕк ача пек йĕме тапратрĕ.

— Есĕ хаљ çамрăк сывран та çамрăк-ха! — терĕ Кĕркуç.

— Çук, хавшакланнă ĕнтĕ. Ех! кĕлеткем йăвăрланчĕ. Чĕрем çавăнпа хыт çунат. Мĕн чухлĕ ĕç, хам та сахал мар ĕçленĕ, пурте вĕт ман куç умĕнче ӳссе çитĕнеççĕ.

— Çав Уравăш шахтисене кайса кур-ха пĕрре, хаљ унта халиччен пулман йапаласем пула пуçланă, — терĕ пĕри.

— Хе... Ватăлтам ĕнтĕ, ытла вăш-ваш çӳрейместĕп. Çапах та кăçал çав „Волонтор“ комувне кайса куртăм-ха. Кинаша автобус, çилçуна килнĕ, тет, тĕллĕн чупакан пӳрт, тет. Тата çавна кайса курасшăн та-ха, тепле...

— Ватă мучи, комунă камăлна карĕ-и? — тĕпчерĕ Кĕркуç.

— Е-е-е-ей... Мĕн калатăн, йепле-ха ăна йуратас мар „Пĕр çын сурнă — типнĕ тет, çĕр çын сурнă — кӳлĕ пулнă“, тенĕ сăмаха авалхисем ахалтен мар çав каланă. Комунă ĕçне курсан, çак сăмахсем ман пуçа килсе кĕчĕç. Еп хам куçпа куртăм вĕт, йепле-ха хĕпĕртес мар. Ĕлĕк унта нимĕн те пулман, вăл вырăнта епĕ ухутара та нумай çӳренĕ, чугунçул айĕнчен çул туса тухнă шывран пуçне урах нимĕн те çукчĕ. Пилĕк çул хушшинче вармăн уçланкипе комунă ӳссе ларнă. Шап-шур катан пир тăхăннă чăваш хĕрарăмĕсем, çапата сырнă чăвашсемех

çăпата йурри йурласа йешĕл утă таварнине куртăм. Йурри те çĕнĕ, халиччен илтмен, ĕçĕ те çĕнĕ. Пилĕк таран ўснĕ чавкапуçне типĕтеççĕ. Выљăх-чĕрлĕхсем пĕрлех, карта тулли, 49 ĕне, пурте пĕр тĕслĕ, хĕрлĕ, пăлан пек, ăратлă ĕнесем. Ачи-пăчисен хăйсен пўрт, унта вĕсене пăхаççĕ, шанчăклă, хăйăр купи çивче выљаççĕ Ах! пурнăç, çĕнĕ пурнăç шавлат, пур йенчен те чĕре хĕпĕртет. Анчах... — терĕ те Мăрси, пуçне çĕреле чикрĕ.

Мăрси ватă, вăл нумай хурлăх курнă Ахаљрен мар ун чĕри ват кăшăлпа кăнмаст, вăйларан вăйлă тапат, çĕнĕ кашлакан пурнăçпа пĕрле кашланат. Унăн пур хурлăхĕ те çакăнта çеç. Ватă.

Ларсан-ларсан Мăрси чĕтрекен сассине кăларчĕ.

— Ах, çак пурнăç пĕр 40 çул малтарах пулнă пулсан, йепле ĕçленĕ пулăттăм. Ĕлĕк вĕт халăх мăшкăл пулса пурăннă. Çак вăрманта пурăнма та çав уредникрен хăтăлас тесе çеç чан малтан тапратрăм. Тĕрĕс, вăрманта пĕччен пурăнма ирĕкрех пек, анчах вăл та вăраха пымарĕ, хуçасем ситрĕç Халĕ, пукка, пурнăçра йăвăрлăхсем пур пулсан та, ирĕккен сывлама сывлăш пур. Епĕ çак влаçа йуратăтăп, вăрманта та упа пек ахаљтен пурăнман еп, — терĕ те, хăй сăмахне пĕтерчĕ.

Кĕркуç кун пек çивĕч старике сайра курнă. Пуринчен ытла вал Мăрси кĕсле каланинчен, унăн вăта пўрнисем тĕрлĕ сасăсенчен хăватлă çемĕ туса кăларни çинчен чарăнса пăхса тăчĕ.

Чăх куç пек йăмăхакан пĕчĕкçĕ лампă çути пўртре йавăнакан тĕтĕмпе кĕрешет. Тĕрлĕ тĕле сапаланса ларнă çынсем, калăн, ăна курмаççĕ. Кутник çине Кĕркуç тăсăлса выртнă. Саљук çăка хулăм сĕтел умне ларнă. „Ескетен“ колхоз çыннисем çунисем çинчен урайĕнче выртма илсе кĕрсе пăрахнă сĕлĕ улăм çине тăсăлса выртнă. Марси киве, анчах йăнравлă кĕслине кальса пĕтерсен, пĕри те пĕр сăмах чĕнмерĕçĕ, калăн, вĕсем пурте иртнĕ пурнăçпа пайанхи пурнăçа танлаштарса виçме пуçларĕçĕ.

— Аван калатăн, салхулăх нумай, — терĕ Саљук.

— Вăрман йурри, унăн кĕвви çапла пулнă ĕлĕк, — терĕ Мăрси.

— Мĕнле халљхи вăрман пурнăçĕ çинчен йурлама пулат, — терĕ Кĕркуç.

Старик пўлĕнсе ларчĕ. Пуçне хыçса илчĕ, темскер пуçне каçăртса шухăшларĕ.

— Пиçăрах каларăм, темĕн тĕрлĕ йурласчĕ. Темĕн тĕрлĕ йатарласа ĕçлесчĕ. Ватăлтăм...

— Халĕ есĕ ĕçлеместĕн-им?

— Мĕн вал, ĕçлени-им?.. Ĕçлетĕп, пĕр прагул та туман. Пенçи илетĕп пулсан та, тарман спĕ. Ĕççĕр ларма пĕлместĕп. Вуниккĕмĕш çул çине кусрĕ ĕнтĕ вăрман хуçалахĕнче складра ĕçлеме пуçлани Вăй чакат. Ват çакă ыгла куљантарат, — терĕ те Мăрси, ударнике çырни çинчен каласа пĕлтерчĕ.

Çĕрĕ вăрăма тасăлчĕ. Урамри пĕчĕкçĕ чан вуниккĕ çапрĕ. Вăрăм çул килнĕ çынсем тутлă айха путрĕç.

Пысăк пусăм.

Ĕç ĕнерхинчен, виçĕм кунхинчен те нумай. Акă районри колхозсен 1-мĕш сĕезĕ пуçланмалла. РИК çурчĕ умĕнче чăваш ĕççынни çаврака пĕкĕлĕ лашисем мăшлатса канаççĕ.

Чаппан, тăла пиншак, тăлăп тăхăннă çынсем калла-малла уткаласа çÿреççĕ.

Ăçта мĕнле ĕç пыни çинчен калаçни илтĕнет. Кÿпшек питне ик хут туртса çыхнă инкесем те, хĕрсем те килнĕ иккен. Паллашнă, йăл! кулса калаçаççĕ.

Мăрси патĕнче выртнисемваскаса килсе çитрĕçĕ

— Демонстраци пулмала тет, — терĕ Кĕркуç хăйĕн йулташне.

Кĕркуç пайан темĕскерле ытла та савăнăçлă. Йепле-ха ара пурте саванна вăхăтра савăнас мар!

— Фосфорит савăчĕ уçăлмала тет, çавăн пирки пуљ ĕнтĕ, — терĕ Саљук.

Кĕркуç иртнĕ каç хваттер хуçи Мăрси сĕеза килнĕ çынсене каласа панине астуса илчĕ. Вăл тата та хĕпертерĕ.

— Да! çакна ăнланман çынсене мунчала туса пăрахас килет. Йепле-ха вĕсем ăнланмаççĕ? — Вăт! Çак пирĕн тĕттĕмлĕх, çав ĕнтĕ пире хытă кансĕрлет!

Унăн кăварланса вĕрекен шухăшĕсем пĕр самантрах Кипекри Ухăљван çине кайса ÿкрĕç. Хырăмпа Çĕрек çинчен шутларĕ. „Хăçан пĕтĕ-ши çав куçран ÿкес мар тени, çав пире пĕтерет те". – Малттин сăмаххисене астурĕ. Унтан Александров çинче чарăнса тăчĕ, тата темĕн çинчен шутлама пуçларĕ, анчах ун питĕрĕннĕ хăлхине йанравлă сасă килсе кĕчĕ.

— Делегатсем! урама!

— Хĕрлĕ йалав айне!.

Кĕркуçпа Саљук йалавпа хупланнă халăх ăшне кĕрсе çухалчĕç.

Малттин те персе çитме ĕлкĕрнĕ 20-мĕш числара колхозсен пĕрремĕш сĕезĕ пулмали çинчен вал Саљук çырăвĕ тарăх пĕлнĕ. Пере вĕренмелисем нум й пулсан та, ун вĕчĕлтетекен чĕри чăтман. Виç кунлăха та пулин Мускаври университетран кунта персе çитнĕ Ĕрете тăрса тухнă делегатсем хушшинчен Кипек-Касси колхоз делегачĕсене чупса шыраса çÿрет.

Ĕрете кĕрсе тăнă Кĕркуç ĕрет тулашĕнчи Малттин кармашса пăхса танине курчĕ. Ун патне чупас терĕç ун урисем, Саљука Малттин килни çинчен систерчĕ. Çав хушăрах: Районăн 1-мĕш колхоз сĕезĕ, шагоом марш! тени илтĕнчĕ.

— Малттин! Ваљкка! — Кĕркуç кăшкăрчĕ.

Икçĕн сакăрвуна çынран тăсăлнă пысăк ĕрет хĕрринче тăракан Малттин Кĕркуç сассине илларĕ.

Малттин колхозниксен ретĕнче. Кĕркуçпа Саљук хушшинче фосфорит савăт йенеле утат.

— Ну калăр, ĕçсем мĕнле пыраççĕ?

— Есĕ çукки хытă палăрат. Хытă, — терĕ Саљук.

Малттин кăшт хĕрелнĕ пек пулчĕ. Ун пуçĕнче йал пурнăçĕ пăлхана пуçларĕ.

— Кĕçтук мĕнле ĕçлет!?

— Вал аван ĕçлет те-ха,—маххă памаст.

— Çĕрĕкпе Хырăм хаљ те çавах-и?

— Çапларахах-ха, анчах пăртак пусăрăнчĕç пулас. Тасатмалисем пур-ха унта. Паљука кăларма йышăнтăмăр. Ун вырăнне хĕрарăм лартатпăр.

— Н-да, ну ладнă, тĕплĕрех кайран калаçăпăр.

Демонстраци йурра тăсрĕ.

Малттин йурламаст, унăн хăвăрт вĕçекен шухăшсем Мускава та çитсе ўкрĕç, хăйпе пĕрле вĕренекен йулташсене асне илчĕ. „Пурнăç çакăн пек хăватлă вĕренĕ вăхăтра кĕнеке çинче ларас пулат, чорт побери, вĕренме пăрахас, халех пăрахас" терĕ ун вĕресе тулнă пĕр шухăшĕ. Çĕнĕрен-çĕнĕ шухăшсем ун пуçĕнче йухаççĕ... Практика ĕçĕсем ун куç умне сиксе тухрĕç. Çак пысăк ĕçре ăслăлăх кăтартнă тăрăх ĕçлесси питĕ кирлĕ. Парти кадăр хатĕрлес ыйтăва нихăçан та манманнине астуса илчĕ... „Çук, вĕренмеле! Анчах хăвăртрах, ударно!" Пайан кун ун йулташĕсем тăвата çул вĕренес срука виçĕ çул хушшинче пĕтерме çамкисене тарлатса вĕреннине астурĕ.

— Да! çакăн пек пулмала та вăл!..

Демонстраци колонни çумне пĕтĕм районран пухăннă пур учитĕлсен конференцийĕ хутшăнчĕ.

Колоннă кĕрлесе, сарăлса, ţăсăлса пырат.

Акă тата шахторсем, групком делегачĕсем, аллă сын, чăваш шахторĕсем — хастарлă йурă йурласа хăватлă йухăма хутшăнчĕç.

Вăрман касакан рабочисем, шахторсем, колхозниксем, учитĕлсем, пур служăшчисем те вĕçĕ-хĕри куранми демонстраци йухăмĕ пулса, вăрман ăшне, çĕнĕрен ўссе ларнă фосфорит савăт умне килсе чарăнчĕç. Савăт умĕнче трибунă чăрăш-хырă симĕс çулçисемпе, тĕрлĕ тĕслĕ хут чечекĕсемпе тĕрленнĕ.

Трибунăран инçех те мар фосфорит савăтĕнче ĕçлекен рабочисем тăсăлнă. Пушарни тружинă майлах вĕсен тумĕ—ĕç тумтирĕ, ĕç алси тăхăннă.

— Сывă пултăр колхозниксемпе рабочисен сыхăнăвĕ!—тесе саламланă сăмах çынсен чĕрисене кастарчĕ

— Урраaa!

— Урраaa!!.—тенĕ сасă çут хĕвел айĕнче йăмăхса ларакан чăрăш, хырă вăрман çиве кашласа кайса çухалчĕ.

Çанталăк лăпкă Ашă хĕвел хăйĕн вичкĕн йĕпписемпе çемçе шурă йура хăйраса кристал кĕленчи пек сутатат.

Çичĕ уйăх хушшинче çĕтĕк, хапарса тухнă рабочи аллисемпе ўссе ларнă фосфорит савăчĕн вăрам мăрйинчен кăшт тĕтĕм кăтраланса тухат. Ĕçлемест-ха вăл. Савăт çумне тăсса кўнĕ çĕнĕ чугунçул тăрăх иквиç вагун фосфорит çăнăхне тултарма хатĕрленсе килсе ларнă.

Райкомăн куљтпроп пуçлăхĕ Осипов йулташ çинçе, йанраклă сассипе митинг уçрĕ.

Интернационал йурри пурин чĕрисене те йарса илчĕ.

Трибунă çинче, сарă, çуланса кайнă кĕрĕк-пиншак тăхăн-нăскер, совăт директăрĕ Богомолăв улăхса тăчĕ. Вăл пĕчĕкренпех рабочи пулса ĕçленĕ, халĕ савăт пуçлăхĕ. Вăл хăйĕн рабочи чĕлхипе пурне те ăнланмала Чăваш республике чаплă ĕç туни çинчен каласа пĕлтерет.

Райком çекретарĕ Виккăв та кунтах.

Йепле-ха çак чаплă историлĕ куна асăрхас мар. Вăл пĕтĕм чăваш ĕçхалăхĕн паллă ĕçĕ. Ахальрен мар çак трибуна çинче Чăваш совнаркомĕн предçедатĕлĕ Самарин йулташ, хăйĕн пĕчĕкçĕ куçлахне тасатса, пинлесе пуçтарăннă халăха Обком парти йачĕпе саламлама хатĕрленет.

Çекретар вĕри чĕрипе чăвашла-вырăсла шăрантарчĕ.

Парти райкомĕ йачĕпе саламланă хыççăн, Обкомран килнĕ йулташ мала тухрĕ

— Хаклă йулташсем! çакăнта пуçтарăннă колхозниксене, рабочисене, Обком йачĕпе большевикла хастарлă салам!

Пĕр сас-чĕвĕсĕр итлекен пĕтĕм районран пуçтарăнна колхозниксем, рабочисем, шахторсем алă çупса йачĕç. Пин сасăран хăватлă сас туса, Интернационал кĕрлерĕ.

Интернационал йуррине йурласа чараннă çынсем çулăмлă сăмахсене çăтаççĕ.

— Пĕтĕм Совет сойузĕнчи комуниссен парти йертсе пынипе, хальхи вăхатра чаплă, историлĕ тапхăр хускалса кайрĕ. Пролетари ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, индустри ĕçне хăпартса, йалхуçалăхĕн никĕсне машинлатса çĕнĕ пурнăç тăвасшăн кĕрешет. Ĕçхресченсем те чаплă ĕç пуçласа йачĕç. Пĕтĕм рабочисем, ĕçхресченсем авăрланса ĕçленипе пилĕкçуллах плана тăват çулта пĕтеретпер.

Пĕтĕм тĕнчери империалисăмла буржуази çакна курса, тискер-кайăк пек йунлă шăлĕсене шаккат.

Вал пире хăратас çук! Унтан хăрас пулсан, ĕçхалăхĕ влаçа хăй аллине илмен те пулĕччĕ.

Епĕр вайлă!

Пĕтĕм вăй-хăват ĕçхалăх[illegible]!

Сывă пултăр пирĕн хăватлă, чаплă ĕç!

Сывă пултăр колхозниксемпе рабочисен çыхăнăвĕ!

Сыва пултăр пĕтĕм Совет сойузĕнчи комуниссен партийĕ, тата ăна йертсе пыракан çулпуç Сталин йулташ!

— Урраа!..

— Урра а!..

Кунтан нисех те мар утмал вагун çаклатнă пăравус хашлатса Мускавала сĕтĕрет. Виçе хутчен вăрăммăн тăстарса митингри халăха саламларĕ.

Трибунă çине кавак сухаллă ватă чăваш колхознике улăхрĕ. Савăнса хĕпĕртенипе увăн куççулĕсем хĕсĕнсе тухаççĕ. Йепле хĕпертес мар. Пах-ха, есĕ,—пирĕн куç умĕнче пурнăç чĕри йепле тапат. Ватам пÿллĕ, çине сăкман тахăннă, çавăрс касна кăвак çÿçне арпаштарса пуçĕнчи çаралнă çĕлĕкне хыврĕ.

Салтаксем пек ретĕн тăрса тухнă рабочисенчен пĕри чăтаймарĕ, куран:

— Сывă пултăр чăваш колхозникĕ!—тесе сăмах вăркăтрĕ.
— Шăтăр-шăтăр! алă çупрĕç.
— Уррра!
— Уррра! тевĕ сасă рабочин вичкĕн сассине хупларĕ.
Халăх лăпланчĕ. Шăп. Колхозник каласса кĕтеççĕ.
Вată колхозникĕн çуркаланнă питçăмарти кăшт чĕтрет.
Васкамасăр калаçма пуçларĕ вăл:
— Тăвансем! Ман сăмах кĕске. Нумай епĕр йăвăр пурнăçпа тăрмăшса пурăнтăмăр. Çакăн чухлĕ пурăнни те пире çитĕ, малашне çĕнĕ пурнăçа куçма шутлатпăр. Совет влаçĕ пире ырă тăвасшăн тăрашнине епĕр лайăх пĕлетпĕр. Епĕр ăна шанатпăр. Вăл йертнĕ çулпа малала хăвăрт утасси паллах!
Сывă пултăр кулкус!
Сывă пултар канаш ирĕкĕ!.
Митинг кĕрлерĕ, старик сăмахне хапăл турĕ.
Ак тата йулашки оратăр. Чăваш, вунă çул батрак пулса ĕмĕрве иртернĕскер. Çине çуланнă сарă пир пиншак тăхăннă, çуланнă аллисемпе трибунă хĕррине тытса калаçма пуçларĕ.
— Чăваш ĕççынни социалисăм тăват. Епĕр кунта, есĕр йалта, пĕр ĕç тусан,—епĕр темĕвле йăвăрлаха та пĕтеретпĕр. Комуниссен парти йертсе пынипе, епĕр—рабочисемпе хресченсем—кулаксене ватса çĕмĕрсе, халиччен пулман çĕнĕ ĕçе пуçларăмăр
Сывă пултăр савăтпа колхоз çыхăнăвĕ! .
Рабочисен ячĕпе колхозниксене хĕрӳлĕ салам!..
Йалтан килнĕ колхозниксевчен пĕри халăх йенне çавранса:
— Рабочисене колхозла салам!—тесе ответлерĕ Шăп итлесе тăракан халăх тинĕс пек хумханса кĕрлерĕ. Савăт директăрĕ трибунă хĕррине тухса савăт ĕçлеме пуçласси çинчен ăнлантарче.
— Чăваш республикĕ тăхăр çул тултарнине асанса партнă савăт пайанран вара хута кайнă шутлатпăр!—терĕ те, кĕрĕк пиншак кĕсйинчен свисток кăларса çатаррр! кăшкăртрĕ.
— По местам!
— Машина в ход!..
Салтаксем пек икĕ ĕрет пулса тăнă рабочисем чăл-пар саланса, пысăк ӳсе ларнă савăт ăшчикне кĕрсе çухалчĕç.
Савăт выçĕ хутчен свисток пачĕ.
Интернационал йурри йанрарĕ..
Вăрăм, каçăрăлса ларнă мăрйерен кашт авкаланса тухакан тĕтĕм вырăнне хура тетĕм палкаса тухса, кăвак чатăр пелĕте саланма пуçларĕ
Савăтăн вăйлă чĕри хăвăрттăн тапма пуçларĕ. Пысăк ӳпки шура сывлăш каларса, ахлатса, вăрăмăн сывларĕ. Пысăк маховик кĕрлетсе çавранчĕ.
Чăваш ĕççынни тунă савăт хускалчĕ.
Качагар вут хурат, машинис машин чĕри мĕнле тапнине вяçет, рабочисем типĕтнĕ фосфорит чулне тусан синче мĕкĕрленсе йатаççĕ
Çĕнĕ саватăн вичкĕн шăлĕсем пысăк чулсене кышласа çăвăх тума пуçларĕç.

Савăт ĕçлет.

Рабочисем кашни хăй вырăнĕнче.

Трибунă тавра сăрăннă халăх, колхозниксем савăт ĕçне курма тĕрли тĕрлĕ çĕре сапаланчĕçĕ

Кĕркуçпа Саңук та кунтах, машин пӳлĕмне кĕнĕ.

Кĕркуç Малттин аллине тытрĕ те:

— Çак йапала миçе пин пăт туртса çавăрат! Вот вăй!—терĕ.

Малттинăн савăнвипе кулса тăракан пит сăпачĕ хĕвел пек çуталнă.

— Çапла çав. Иксĕр аллă лаша вăйĕ вĕт. Çакăн пек вăйлă машинăсем малашне йалта та пулма пултараççĕ. Ех, тĕттĕмлĕх, çав пирĕн тĕттĕмлĕх ал-урасене тăлласа тăрат. Хăçан-ха тĕттĕмлĕхе пĕтерĕпĕр-ши? Мĕн чухлĕ вăл пурнăçра сийен тумаст-ши? Вот, пăх ĕнтĕ ху куçупа—пĕрлешӳлĕ ĕç пире мĕн панине,—куратăн вĕт?

Кĕркуç пĕрлешӳлĕ вăй пурнăça çĕнетме пулăшнине, çапла ĕçлесен çеç тутă пурнăç тума май пуррине чĕрепе ăнланнă. Халь унăн иккĕленӳ çук.

— Есĕ тĕрĕс калатăн. Хут те мана йалта мĕн туччĕр, çав колхозăн мĕн виличченех фапăçатăп,—терĕ.

Саңук пит-сăпачĕ салхуланчĕ. Малттин те, Кĕркуç та вăл темскер синчен шутлавине туйрĕçĕ.

— Мĕн ес шутлатăн?

— Çав маткапах тăна çухатрăм ĕнтĕ. Чисти аптăраса çитрĕм. Темĕн тăвас унпа?

— Çапса тăксан,—уншăн кайса ларас килмест, уйăрса йарсан...—Саңук сăмахне каласа пĕтереймерĕ. Малттин хуллен, васкамасăр:

— Халĕ те çаплах-и-ха?—тесе тĕпчерĕ.

— Кăккуй çапла, урса кайа пусларĕ. Пуртăпа касса вакла-тăп тет Мана—хĕрарăма ытла хытă айăплас çук тесе мăкăртатат.

— Вçотки тата хытăрах ӳкĕтлесе пăхас пулат. Тĕрĕс, чăваш хĕрарăмĕсем ытла та кайа йулнă, уншăн епĕр вĕсене куренме пултараймастпăр Мĕн пур айăп çав тĕн сĕрĕмпе ĕлĕкхи кив йĕркере. Ĕлĕк йапала вырăнне шутланса, укçала сутăнса чурара пурăннă вĕт. Хĕрарăм çын вырăнне шутланман. Пур наркăмăш, усал çакăнта.

— Çук, ӳкĕтлесе май тухас çук пулĕ теп. Урăх май шырас пулат.

— Мĕнле вăл урăх май?

— Ачаича тавраш çук, уйăрлас! Мĕн унпа, вĕри çĕленпе чашкăрса пурăнас. Кулак хĕрĕ вĕт.

Малттин шухăша кайса тăрсан:

— Вăл хăвăр ĕçĕр. Ун çинчен ăс пама пултараймастăп. Анчах тата тепĕр тапхăр ӳкĕтлесе пăх-ха. Халĕ епĕр куракан чаплă ĕçсем çинчен тулккăм каласа пĕлтер Тен, çаксем çинчен пĕлсен, ирсĕр шухăш тĕтри сирĕлĕ,—терĕ Малттин Саңука шеллесе.

— Кун çинчен калăп-ха; çук, кун хыççăн та килĕшмесен—уйăрлатăп. Унпа пуçа çĕртес çук. Кайран, тен, хăйех, тăн пуç çаврăнсан, ырĕ.

— Санăн арăму мĕнле тата?—тĕпчерĕ Кĕркусран.

— Вĕсем килĕштернĕ. Халĕ унăн ликпункта вĕренме çӳрет,—терĕ Саҫук.

— Ну вот, санăн та вĕренме йарас пулат.

— Каймаст, пахлă вĕренпе сĕтĕрсен те каймастăп, тет.

— Нда. нумай ĕçлемеле-ха пирĕн хĕрарăмсем хушшинче. Ку пирĕн чи йывăр фронг, пĕтĕм Сойузĕпе илсен, хĕрарăм арçывсенчен нумайтарах вĕт,—терĕ Малттин.

Çапла калаçса пырсан виçĕ йулташ апат çиме шут тытрĕçĕ.

— Тăват сехетре, каçпа, çĕнĕ клубра колхоз сиезĕ уçăлат тет. Унччен столовăйа кйса апатланар,—терĕ Малттин.

Кĕркуçпа Саҫук килĕшрĕçĕ.

Виççĕш те вĕсем килĕшӳлĕ калаçса чугунçул тăрăх утса станцана таврăнчĕçĕ.

Çĕнĕле.

Анаткас урамĕ тăрăх Ухăҫванăн тăсăлса ларнă крыҫци тăрринче çĕнĕ вывеска çапăнна:

КИПЕК-КАССИНЧИ „МАЛАЛА“ КОЛХОЗАН ПРАВЛЕНИЙĔ

Саҫукпа Александров, тапак тĕтĕмпе сăрлатакан пуçĕсене кантармала тенĕ пек урама тухсан, шкула кайса килме шутларĕç.

Вуламали çуртра çпектакăҫ пулат тесен, Александров Хĕрлĕ çарăн 12-мĕш уйавне иртерме уйарна комиççи ĕçĕ çинчен чарăнса тăрса, чапла ларава мĕнле иртересси çинчен шухăшларĕ.

— Ачи аван пек, манан камăла кайрĕ, докладне тепле тăвĕ ĕнтĕ,— терĕ Александров

— Малттин-и?—терĕ Саҫук

— Ехĕ, çавă.

— А-а вăл первăй сурт, мĕн калама ун çинчен!—хушрĕ Саҫук. Саҫук хăлхине платниксем каскаланă сасă илтĕнсен, чăтаймарĕ.

Вĕсене правлени йышăнăвĕ тăрăх тăватă кун срук панине астуса илсен, Александрова колхозăн пĕрлештермели лашасем ваҫҫи пысăк вите тунă çĕре чĕнчĕ.

Урамри крыҫцаран калла çавранса, çиве тимĕр витнĕ сăрайлă сарлака варам картише кĕчĕçĕ.

Пысăк карташ. Пахча йенчи кĕтесре тарасилă çăл.

Икшер хутлă кĕлет Икке кайăк вĕçсе тухайми сарай.

Вăрăм сарлака сарайне кĕрсен, миçе лаша вырнаçма май пурри çинчен калаçса илчĕçĕ

— Утмăл стойлă пулат,—терĕ пĕри.

— Вăт—пураннă-ă! Ха!? Пураннă вет,—терĕ Упаҫҫа, пĕрлешӳлĕ витен аслă бригадирне суйланнăскер.

Упаҫҫа выҫăхсемпе тикĕс, лапкă тесе чи малтанах унăн хушматне палăртрĕç.

Пурте ăна выҫăх картин пуçлăхĕ тăвас терĕç.

Упаҫҫана ӗнесемпе, сурӑхсемпе ӗҫлесси йӑлтах йӑлӑхтарнӑ. Хӑй пурнӑҫӗнче вӑл 10-мӗш ҫул кӗтӳ кӗтнӗ вӗт. Сахал мар тарӑхнӑ. Ҫавӑнтах сахал мар выҫӑхсене йуратнӑ. Выҫӑхӑн йӑлине, усалланакан вӑхӑтне, калӑн, вӑл кунран-кун сӑнаса ҫырса пынӑ. Революци пулаччен виҫӗ ҫул хушши сӗнкӗртпе кӗтӳ кӗтнӗ. Акӑ хаҫ вӑл ӑна лайӑх астӑват Ҫак хуҫашӑн вӗт, унӑн утмӑл десетин ҫӗрӗ ҫинче виҫӗ ҫул хушши кӗтӳ кӗтсе ирушаланнӑ.

Упаҫҫа, йӑлӑхтарнипе пулас, ӗне-сурӑхсен картишне пӑхма килӗшмерӗ.

— Лашасем пӑхма! Лаша витин пуҫлӑхӗ тӑвас,—терӗ Кӗркуҫ.

Тиҫук-Пакур йышшисем варттӑн лахлатса кулчӗҫӗ „Ӗмӗрне лаша кӳлсе, лаша ҫине лаҫса курман ҫынна епӗ-вӗлерсен те хамӑн лашана парас ҫук“, тенине Упаҫҫа хӑй халхипех илтет. Ҫапах та вӑл Кӗркуҫ сӗннӗ ӗҫрен хӑраса ӳкмест. Курӑпӑр, кам лайӑх пӑхма пултарнине, ӗҫ кӑтартӗ.—тесе шухашлат Акӑ халӗ вӑл, ҫӗр ҫывӑрмасӑр тенӗ пек, кӑтартса пана вӑхӑтра хӑй ҫине хунӑ ӗҫе ӗлкӗртесшӗн тапаланат.

— Упаҫҫа мучи, тепле, вӑхӑтра ӗлкӗрейӗн-ши?—терӗ Саҫук. Упаҫҫа ҫӗлӗкне хывса пуҫне хыҫса илчӗ..

— Тата икӗ кун срук!—тесе кӑшкӑрчӗ Ҫпридун Мирунчӑ.

— Хамӑр ҫине илнӗ йапалана таватпӑрах ӗнтӗ,—тесе хушрӗ Упаҫҫа тарпа йӗпеннӗ ҫӗлӗкне тӑхӑнса. Александров, калӑн, хӑше мӗнле ӗҫленине танлаштарса виҫсе пӑхнӑ пек, сӑнаса пӑхса тӑчӗ.

Ҫпридун Мирунча ӑва чухларӗ. Хӑй ӑшӗнче: кӑтартса ҫӳресси мӗн вӑл,—терӗ те, ҫавӑнтах иккӗленчӗ. Ҫӗр уйӑрнӑ вӑхӑтра комиҫҫире ҫӳрени ун пуҫне килсе кӗчӗ. Ун чух патранса пӗтнисем, ҫынсем пӗр-пӗрипе тавлашса ҫапӑҫса кайнӑ хыҫҫӑн Ҫпридун Мирунчана тапӑннисем.. Вӑт аласене кейӗене чиксе ҫӳре, ҫӗр ҫывӑрмасӑр шутлама тӳрӗ килчӗ вӗт,—терӗ те, умӗнчи йӑвӑҫне чутлама пуҫларӗ.

— Акӑ ку выранта ӗлӗк вите пулнӑ. Кунта унӑн тухса ҫӳрекен хура-тура рыссакӗ тӑратчӗ. А-а, пурӑнна ҫав Мӗн калас,—ахаҫ пулман вӗт ҫак йапала. Ӗҫленӗ Сахал-и ӗлӗк уншан ҫынсем шӑнса ӗнтӗркенӗ,—терӗ Упаҫҫа, вырӑсла ҫавӑрса хурса.

— Халӗ хамӑрӑн пулат ӗнтӗ,—терӗ пӗри.

— Правӗлнӑ! Ҫапла!—хушрӗ Александров

Пӗреносенчен купаласа тунӑ сарайӑн хыҫала тухакан хапхине уҫрӗ Саҫук.

— Ата-ха, пер йапала кӑтартам

Александров нимӗн сӑмах чӗнмесӗрех Саҫук хыҫҫӑн тухрӗ.

— Пӑх, куратӑн ав, ҫав тӑвайккине?

— Куратӑп...

— Ҫак хуҫавах пулнӑ ӗнтӗ вал. Плантӑ вырӑнӗ ҫавӑнтах ситет. Кунта пурӗ ултӑ ҫурт вырӑнӗ шутланат. Ав ҫав тикӗс вырӑн, пахча варринчи, унта—кӳлӗ. Ӗлӗк ун патне земскисем хӑнана ҫӳренӗ. Ҫав кӳлӗ ҫинче вара шурӑ картуслӑ ылтӑн пакунлӑ ҫынсем, пуп тарвашӗсем ишсе ҫӳретчӗҫ. Халхи пекех астӑватӑп, епӗр ун чух пӗчӗкҫӗ,—ҫак пахчана чийа вӑрлама

кĕреттĕмĕр. Мĕнле кăва йăвăç ўсмест! Кунта пысăк пахча Хăй те вĕт таврари пĕр пуйан пулса пурăвчĕ.

— Йепле-ха вăл çак таравччен хесĕнсе йулвă?—тĕпчерĕ Александров.

— Ха-а, ку мĕн. Унăн хăйĕн ...удилви çĕр пулнă. 80 гектар пулвă, ăна революци пулсан, туртса илнĕ. 20 000 тенкĕ контрибуци хунă, ăна тўлесе татнă Банкра та укçа пулвă тесе калаçаччĕçĕ, тепле вара, ăна лайăхах пĕлместĕп.

— Апла вăл ĕлĕк тата та вăйлă пулвă?

— Е-е, хаљ унăн чĕрĕкĕ те йулман. Çак çурт кĕлеткипе сат пахчи, тата икĕ лаша, машинисем, леш арманĕ, тата икĕ ĕне, çĕр хăварнă.

— Хăй ăçта-ха вăл?

— Авă, ĕвер каç каларăмăр вĕт.

— А-а, да!

— Ун çиве иртвĕ çуркунче тырă çителĕклĕ хутăмăр. Хăй, Куливе историйĕ çакăнта ĕнтĕ.

— Ывăлĕ ларат-и?

— Ларат..

Мунчаран Марук тухса, сиввĕв пăхса кĕл тăкрĕ.

— Арăмĕ?—терĕ Александров, хуратуп кĕрĕк тăхăннă Марук çиве пахса Ун çинчи кĕрĕкĕ йакалнă, вырăнăн-вырăнăн çуталнă.

— Миçеп-ха вĕсем пулнă?

— Тепĕр ачи пур, Аркаш йатлăскер.

Александров нимĕн чĕнмесĕр тавран пăхса илчĕ, унтан Ухăљвап арăмĕ кĕрсе кайнă мунча çине пăхрĕ те, темĕн шухăша кайса тачĕ.

— Епĕ тĕлĕнетĕп сиртен. Çак çуртра çак таравччен вĕсене пурăнтарнинчев.

Саљук хĕрелсе кайрĕ Нимĕн калама аптăраса:

— Пĕччен... Малттин пĕрмайах Мускавра пурăнчĕ. Ун пирки РИК-ра та калаçрăмăр, анчах вăт çапла .

— Кулака тымарĕпех кăклас пулат. Епĕр çавăншăн та малти ĕретре тăракан çынсем. Ну, пĕр-икĕ çул кайала ун пек установкă пулман Тĕрĕс. Анчах хĕстерў пĕр самантлăха та чакман, халĕ вĕсене тымарĕпех пĕтересси паллă. Епĕр ăна тумала Ку сахал, ыттисем тата хĕсĕнсе ан йулччĕр. Çавна пирĕн хытă сăнас пулат.

Александров Саљука хулĕнчен хĕстерсе çавăтрĕ.

Хыçалти хапхаран картишне кĕрсен, Çпридун Мирунчă йулташла кулкаласа чĕнсе чарчĕ.

— Александров йулташ!

— Мĕн?

— Вăт шту, кăтартса çўресси мĕн вăл, вăт сивĕ çĕре алтса шăтăк чавасси урăх ĕç.

Ыттисем касса кĕртнĕ пурттисене çĕклемесĕр чарăнса пăхса тăчĕçĕ.

Александров ăна хирĕç нимĕн сăмах та таврăмарĕ. Кăшт кулса Çпридун Мирунчăн аллинчи лума илсе, чавалама пуçларĕ.

— А-а! мĕнле вăл!..

— Çамрăк çав!..

— Вăкăр пек вĕт...

— Çук, рабочисен вăй алăра, — терĕ Упаңңа.

Калаçса илчĕç ĕ.

— Ан тытса тăр, унăн хăйĕн те ĕç нумай.

— Хут çинче ларасси вăл темрен те йăвăр.

— Есĕр вăл шурă алăлă çын тесе шутларăр пулĕ,—терĕ Саңук.—Çук, вăл 12 çул токкăр пулса ĕçленĕ. Савăт цехĕнчен тухса колхоз уйне килнĕ вăл.

— Аван. .

— Çапла çав...

Çпридун Мирунчă Александров эллинчи тума калла илсе:

— Молочнйă. — терĕ.

— Йулташсем! Каçпа чан çапсан пуху пулат. Хĕрлĕ çар 12 çул тултарна уйава иртерес пирки чаплă лару пулат. Пырăр! — терĕ Александров.

Саңукпа Александров урама тухса шкул йенеле утрĕçĕ. Мунчасен патĕнчи кĕпер урла каçсан, Александров пуçĕнче пăтранакан шухăшне тытрĕ.

— Да, ун пирки сана лерех калас терĕм, тепле сăмах айне пулса йулчĕ. Итле-ха.

— Мĕн çинчен?..

— Ман шутпа, Ухăљван арăмне хваттер урăх çĕре тупса парас пулат. Ăнлавăтăн?

Саңук Александров сăмахĕпе килĕшрĕ Çавăнтах мĕнле сурта, кам патне хваттер тупса парасси çинчен шухăшлама тапратрĕ

— Халĕ ун пирки ан та шухăшла, председатĕле директив парас пулат, — терĕ Александров

— Çук, вăл хăвăласа кăларас çук. Хăравçă çын вăл, — терĕ Саңук çинчен...

Александровпа Саңук шкул умне çитсен, вĕсене хирĕç Мялттинпа Çеркуни тухрĕçĕ.

— Ну, браток, мĕнле? Доклад хатĕр-и? — терĕ Александров Малттине хулĕвчен çапса.

— Готов! Хут çак самантрах. Ку доклада епĕ Мускавранах хатĕрленсе килтĕм. Кăçхине те çĕрĕпех лартам...

— Аван.

— Ăна тăвăпăр. .

Малттина комсомолĕссем Александров пушар сÿнтерме кăшкăрни çинчен килсенех каласа панă Пурнчен ытла Александров Михетер патне кĕрсе ларни вĕчĕлтеттерчĕ. Анчах пĕри те, Александров хăй те ун çинчен шарламан. Малттин ыйтас-ыйтас тенĕ çĕртен, ўлĕме хăварса, колхоз бригадисем çинчен калаçма пуçларĕ.

Александров бригадăпа мĕнле ĕçленине лайăх пĕлет. Кашни ĕçе хăйне бригадăпа уйăрнă.

— Миçе бригадă ха пирĕн? — терĕ Малттин.

Александров Саңук çине пăхса шутласа тухрĕ.

1. Плотниксен бригади.

2. Колхозăн 300 вĕлле пулатĕ. Унта хăйне расна специалиссем уйăлассĕ.

3. Колхозăн ултă арман — унта.

4. Тимĕрç лаççи — тăваттă, унта хам пулăшатăп ĕнтĕ, вĕсем пурĕ 9 çын.

5. Выльăх пăхакан бригадă.

6. Уй ĕç бригадине хальтерех пуçлас пулатĕ. Ку пирĕн прорыв пулса тăрат.

7. Пайанхи кун чи пысăк ĕç — вăрлăх пуçтарса, хатĕрлесе, аласа тасатса хумала. Кун пирки ĕç пырат. Чи пысăк задач— кулаксене колхозран тасатасси. Йалĕпех колхоз тунипе лăпланса тăмала мар. Кулаксем колхоза шалтан ишме тăрăшаççĕ. Çакна пирĕн курас пулатĕ. Пайанхи çак пысăк ĕçсемпе пĕрлех, хăвăртрах лашасене пĕр çĕре пуçтарма витесем тăвас пулатĕ. Çураки валльи выльăхсене апат хатĕрлес пулат. Массăлă ĕçе вăйлатас пулатĕ. Ача çуртне тума пĕр-ик чи лайăх кулак çуртне пайăртса хурас пулатĕ...

Александров хуçалă сăмахсемпе хĕрсе калаçни Малттина Саньука, Çеркунийе хаваслантарса йачĕ.

Малттин комсомолĕссем каласа панă сăмахсене веçех манса кайса, çунатланса Алексанäровăн аллипе тытса чăмăртарĕ.

— Вот, да-а! именно, диктатура пролетариата! Çакăн пек çынсем йалта нумайтарах пулсан!

— Ку ĕç пĕр ман çинче çеç выртмаст. Вăл пуринчен ытла сирĕн çире. Мана парти хуçа пулса командоват тума мар, пулăшма йанă. Есĕр кунта çуралса ÿснĕ. Малашне те кунтах пурăнмала. Есĕр кам тăшманне, кам пирĕн иккенне малтанах курнă. Пуринчен ытла тăван чĕлхепе... Хут те ăçта пулсан та—пирĕн ĕç. Никам уйăрайми пĕрлĕхлĕ ĕçхалăх республикине çирĕплетесси.

— Правĕлнă, — терĕ Малттин

Александров сăмахне малала тăсса ĕçкĕ-çикĕ çинчен калаçма пуçласан, каллех Малттин Михетер патĕнче пулни çинчен хăйех каласа парат пулĕ тесе шухăшларĕ. Анчах Александров ун çинчен астутармасан нийепле те астуса илес çук. Ун пуçĕнче выльăх-чĕрлĕхсене пусса пĕтерни, класлă тăшмансем хыттăн пуçсене çĕклеме пуçлани сăнланса тăрат.

— Ман шутпа çак ĕçкĕ-çикĕпе выльăх-чĕрлĕхсене пĕтерни кулаксен агитатăрĕсенчен килет, — терĕ те, йалканаш вачар ĕçлени çинчен чарăнса тăче

— Тÿррипех калатăп, ман шутпа, Пальука кăларас пулатĕ,— терĕ Малттин

— Çĕмйунне те, иккĕшне те, вĕсене сирпĕтес пулат, — терĕ Çеркуни.

— Чухăн çын вĕт, çапах та, тÿрлетес çук ăна. Рас вăл пирĕн çула тытмаст... Ун пирки колхоз активĕнче сÿтсе-йавас пулатĕ.

— Правĕлнă!.. Çĕнĕрен суйлас пулатĕ.

— Райĕçтăвкомра ун пирки калаçса татăлас пулатĕ, хамăр активпа йачейкă шухăшне çак кунсенчех пĕлтерес пулат.

В. ДЕФЕРАН.

ЕКРАН.

ПОЕМА.

Иртнĕ хĕвхурлă кунçул.

I.

Ӳсен-тăран чĕр-чун тĕнчийĕн
Пĕртен-пĕр туртăм — ирĕке.
Хамах ĕçлеп, хамах еп çийĕп,
Текен йăх, паллă, — çирĕпрех.

Етемлĕхре нумай телейлĕх,
Етем вăл — ăслă чĕрĕ-чун.
Анчах, мĕн-ма пĕри „телейлĕ",
Тепри курат хĕн-хурлă кун?

Пĕри ĕçлет, ĕçлет канмасăр,
Çапах вăл выçă — асапра.
Мĕн айăпран? Хăйне шанмасăр:
„Райра", тет, пулăп тасарах.

Тепри ĕçет, çиет те лайăх,
Анчах, ĕçре пулса курман вăл.
Çавах ăна курсассăн, тайăн...
Вăл хăй хуçа, хăйех патша вăл.

II.

Нумай çулсем Раççей тĕвчийĕ
Çапла хĕсретвĕ пер-пĕрне.
Нумай çулсем выçă чунлийĕ
Хĕн-хурлăх тӳснĕ тĕттĕмре.

Мăнтăр чĕрелисем саваннă...
„Патшашăн!" тенĕ Михетер...
Урхашăн
Пурнăç питĕ аннă,—
„Телейĕм" тенĕ чейескер.

Чакка, Хури пит лайăх курнă,
Сетнере чĕннĕ кĕрешме.
Кăва сиссен, полици урнă,
Хĕрсех пикеннĕ йерлеме.

Полицисем Хурине тытнă,
Çĕрме ăсатнă Çĕпĕре.
Çĕпĕр тĕрмин сăнчăрĕ хытнă,
Мĕнле ăна ес çĕмĕрев?!

Нумай хĕрӳ чĕрелĕ паттăр
Çунса кĕллевнĕ тĕрмере...
Вĕсем ĕçхалăхне йуратвă,
Мулпа кĕрешнĕ чĕререв!

III.

Екран — çĕршыв екранĕ аслă...
Куçпа пăхса пуçра виçетĕп.
Ăна витĕр куçпа пăхсассăн,
Нумай хĕрсе, нумай пиçетĕн.

Куçпа екран çиве тĕллерĕм,
Хĕрсех пăхам-ха ун çиве.
Екран—„Патша Раççейĕ", терĕ.
Курап Раççейĕн „хуçине".

Тискер „хуçа", куратăп лайăх:
Ик пуçлă ирсĕр ăмăрт-кайак.
Çунаттипе çĕре хуплана,
Чĕрнисене йунпа сăрлана

Йувлă чĕрнийĕпе вăл пуснă
Хĕн-хурлă, ĕçлĕ халăха.
Мĕскĕн ĕç йышĕ пуçве уснă
Асап тӳссе нумайлăха.

Тискер картина, ах, тискерлĕх...
Ак савăт тухрĕ куç умне.
Ĕçлекене персе хĕстернĕ
Кунтц асаплăх хăй çумне.

Шаккат, шаккат, ĕçлет канмасăр.
Ыррийĕ çук
Путвал та выçлăх.
Ку пурнăç çулĕ — тĕттĕм, ансăр,
Утмашкăн кансĕр умлан-хыççăн.

IV.

Ак Атăл, авлă Атăл шывĕ,
Ун пĕр хĕррийĕ çӳллĕ сарт.

Мал йеннеле сĕвек хĕрриñĕ,
Унта вĕçĕмсĕрех хăйăр.

Çыран хĕрне хумсем çапаççĕ,
Пĕрин хыççăн тепри, кал-кал..
Ав, бурлаксем асапланаççĕ.
Вĕсен „т е л е й ĕ“ çавнашкал.

Баржăсене вăйпа туртаççĕ.
Çара уран, çĕтĕк тумтирлĕ..
Канма ларсан çапах йурлаççĕ.
(Хĕн-хур йуррийĕ пит те вирлĕ).

„Çӳлти хĕвел мана пĕçерчĕ,
Пиççе хуралтăм шăрăхран
Мана хĕн-хур персе хĕстерчĕ.
Асап çакăнчĕ ман мăйран.

Ей, анлă Атăл, Атăл хумĕ,
Мана чĕвет вăл кĕрешме.
Хумханакан канăççăр тумĕ
Пĕрмай чĕнет-çке пĕрлешме!“

Çак йурăсем йанравлă саслăн
Йухса анаççĕ Атăлпа.
Йе çил тухсассăн кассăн-кассăн
Вĕççе кайаççĕ йалала...

V.

Çак мăшкăл кунлă пурнăç çулĕ
Пумай чĕрешĕн çĕçĕ пулнă
Ĕçхалăхне пусмарлăх чулĕ
Пĕрмай пусарнă, хыттăн пуснă

Тӳсĕмлĕх петнĕ..
Тапхар-тапхăр
Тăвăл пуçланнă тапранма
Тăшман хăйĕн вăйне шанмасăр
Тапратнă вăрçă—йун тăкма.

Рассей чĕри йунпа çăвăнчĕ,
Йунпа хĕрелчĕ анлă Атăл...
Ĕçхалăхĕ вăрçса ывăнчĕ,
Вăрçса ывăнчĕ çамрăк-ватă.

VI. **Тăвăл.**

Асаплăх, хĕн-хурлăх тĕнчийĕн
Ултавлă чаршавĕ чĕтренчĕ.
Рассейăн йунланнă çĕр çийĕн,
Йăм-хĕрлĕ йалав ак çĕкленчĕ.

Ку хĕрлĕ йалав вăл—ĕç йышĕн,
Ĕç йышĕшĕн хаклă парне.
Ăна çӳлерех çĕклессишĕн
Ĕç йышĕ йухтарнă тарне.

Йалав çуралса сасăланнă:
— Ĕç çарĕ, пĕр харас вăрçа!
Мул йышĕ пире пусмăрланă,
Ишер, çĕмĕрер сăтăрçа!

VII.

Ей, пролетари!
Есĕ те, хресчен!
Хăрăссăн утар-и
Вут-хĕм айĕнчен!

Çапăçатпăр епĕр,
Çĕнтерӳ пирте!
Пирĕн вăй кĕрлетĕр
Хулара, хирте!

Пусмăр чулĕ вантăр,
Çĕршывран тасалтăр.
Пусмăрлăх йăвантăр!
Сăнчăрсене салтăр!

Вутлă-хĕмлĕ тăвăл
Пусмăра тустарчĕ.
Вутлă-хĕмлĕ тăвăл
Çунтара пуçларĕ.

Йун ĕмекен кайăк
Вут-хĕм ашне путрĕ.
Йекĕр пуçлă кайăк
Унта вилĕм тупрĕ.

Куппалах тăшманăн
Никĕсĕ пĕтмен-ха
Паттăрсем, ан манар!
Пусмăра витмен-ха.

Керенски — выç кашкăр—
Пусмăр пуçĕ пулнă.
— Тăшмансем, ан ташлăр,
Кунçуларсем йунлă!

Пĕрлешрĕç йалавăн айне
Салтаксем,
Пĕрлешрĕ рабочи, хресчен.
Ак Ленин сассийĕ йанрат:
—Йулташсем!—
Хĕвеллĕн трибуна çинчен.

--Епир — пролетари,
Епир — ĕçлекен!
Епир пултаратпăр
Пурне те тума.

Патша, буржуази —
Йуна ĕмекен,
Пайан ăна хирĕç
Пĕр харăс тухар!

Октабĕр хĕвелĕ хĕрелчĕ,
Октабĕр хăйулăн пăхат.
Йалав карăнчĕ, çĕкленчĕ,
Вут хĕм, кĕрешӳ вăл тăкат.

Ĕмĕрлĕх — хĕн-хурăн кунçулĕ
Кайаймĕ текех малала.
Пайан вăл ĕç вучĕпе çунĕ,
Ĕç йышĕ, утар малала!

VIII.

Револуци вутти чĕрĕлсе
Пусмăрлăх никĕсне хыпса илчĕ.
Йулашки пусмăра çĕмĕрсе
Пролетари пайан ирĕк илчĕ.

Хĕн-хура çунтарса ирĕк илчĕ,
Кĕрешӳ тивĕçпе пролетари.
Тĕрĕс çул кăтартса илсе пычĕ
Çĕнтерӳ патнеле Ленинăн парти.

Тăшман парăнасшăн пулмарĕ,
Тăшман çĕнтересшĕн каллех...
Пусмăрлăх хĕçне вăл хайрарĕ,
Шур кашкăр хăйрарĕ шăлне.

Деникин, Колчакĕ, Йӳдевич...
Тытăнчĕç вĕрме ирĕке.
Çук, сирен вăйсем хал йӳнелчĕç,
Çапатпăр, вататпăр сире! —

Çапла сасăларĕ ĕç çарĕ,
Пĕр харăс çĕкленчĕ вăрçа.
Шур кашкăрăн выçă çăварĕ
Кăшларĕ йĕс-тимĕр пăрçа...

Сахал-им ĕç йувĕ кӳлленчĕ
Шур кашкăрпа вăрçнă чухне?!.
Сахал-им кунçулĕ тӳленчĕ,
Мĕн çамрăк каларчĕ чунне!?.

Пусмăрсăр, ирĕклĕх кунçулĕ
Çамăллăн левкмеçĕ пире.

Мĕн чухлĕ хĕрарăм куççулĕ
Лӳшкетрĕ пул тăлăх хире?!.

Нумай, нумай ку вăрçă хирĕ
Пире вĕрентрĕ кĕрешме.
Мĕн чухлĕ паттăр пуçне çирĕ...
Манми Крепков та Кĕркуççем...

IX. Пайан.

Иртсе кайнă кунçулаылханатпăр,
Çитĕнет çĕнĕ хунав çирĕп, паттăр,
Çитĕнет çĕнĕ хунав—пролетарин.
Вĕлкĕшет хĕрлĕ йалав,
Вăл—ударник!

Пайан çĕршывăм çĕнĕ тумлă,
Кĕрле, çĕршывăм, хаваслан!
Сойузăма Вунулттă тулнă,
Сойузăм – паттăр арăслан.

Кив тĕнчеве ишсессĕн епĕр,—
Пуçланă çĕнĕ стройкăна.
Вăйа хурса хавас ĕçлетпĕр,
Епир — ударник—стройкăра!

Ăмăртупах пуратпăр епĕр
Ирĕклĕ пурнаç пурине.
Мĕн пур вайа ĕçе пиллетпĕр,
Ĕçрех хĕрер-и вутри пек!

Тĕпком—йалан малти çулпуçĕ,
Кĕрешӳри сӳнми майак.
Тĕпком мала, мала, çул уçĕ,
Утар мала! Ан йул кайа!

Пайан çĕршывăм çĕнĕ тумлă,
Кĕрле, çĕршывăм, хаваслан!
Ирĕклĕ çул Вунулттă тулнă,
Республик—паттăр арăслан.

Ей, хумсем, хумсем, алхасăр!
Еп сире саватăп.
Аслă тинĕс хумханмасăр,
Хумханат карапăм!

Васкасах ишетпĕр епĕр,
Тӳрĕ çул тытатпăр.
Çырана часах çитетпĕр,
Çĕнтерсех пыратпăр.

Çĕнтеретпĕр, çул уçатпăр,
Мăшкăла вататпăр.
Çĕнтерӳ пирте,—куратпăр,
Никĕс хăпартатпăр!

Е. ЗАХАРОВ.

„ЙЕРКЕН“ ПОЕМĂ.

«Йеркĕн» поемă — Шупуссынних (Н. Василйĕвăн) чи пысăк произведени. Малтан вăл „Сунтал“ журналра пичетленчĕ (1926/28 çулсенче), унтан уйрăм кĕнекенĕн, Мускаври „СССР-чи Халăхсен Тĕп издатĕлстви“-вче, пичетленсе тухрĕ (1930 çулта). Чăваш илемлĕ литературинче „Йеркĕн“, сăвăлă произведенисенчен — Элгерĕн „Хĕнхур айĕнче“ йатлă поеминчен кăшт анчах пĕчĕкрех. Урăх кун пек пысăк сăвăлă произведенисем пирĕн литературăра çук.

Хăйĕн поемин вĕçĕнче Шупуççынни калавă:

...Манăн пуçăм туса пачĕ йурă:
Пĕри ăна мухтĕ, тепри тĕплĕн тиркесе.
„Пулман ĕçсем — суйа“, тесе ăна хурĕ,
Кĕнекине чĕрĕ, чикĕ таçта тĕркесе.

Шупуççынни калави тĕрĕсех пулчĕ. Кун çинчен Хумма Семенĕн „Йеркĕн“ çинчен çырнă статйинче („Сунтал“ 1930, VI) вулатпăр: „Вулакансем (итлерах та çыракансем) хушшинче ку поемăна ик майлă хак пачĕç: пĕрисем пит мухтама тăрăшрĕç ăна, теприсем итла та хурлама пăхрĕç. Малтанхисем пит сахалланччĕ, тепĕр ушкăнĕнчисем — калама çук нумайăнччĕ вара. Тӳррипе каласан, чăваш публики „Йеркĕн“ çине пайăч кун та çавнашкалах пахат пулмала „Чăваш рабфакĕнче вĕренекенсем „Йеркĕн“ пирки йурийех тишкĕрӳ туса ирттернĕ. „Пит начар йапала, çапса укçа сайа йама та кирлĕ пулман“, тесе хак панă хăшпĕрисем“.

Мухтакансенчен чи малтан Н. Й Золотăва асăнмала. Вăл 1928 çулта çапăнса тухнă хăйĕн „Краткий очерк народной поэзии чуваш“ йатлă кĕнекинче çапла çырнăччĕ:

„Чрезвычайно ценная и художественно исполненная поэма Шубуснини „Ергень“ („Йеркĕн“), стоящая по доброте неизмеримо выше существующих к данному времени произведений, написана также силлабикой“, тенĕ.

„Йеркĕн“ поемăна пичэтре мухтакансем урăх пачах пулмарĕç. Автăр хăйĕн Мускавра 1930 çулта тухнă „Краткий очерк истории чувашской литературы“ йатлă кĕнекинче „Йеркĕн“ поемĕ çинчен çапла каланă:

„Поэма связана романтизмом, но это не помешало автору на фоне широкого полотна, изображающего старинный быт и обычай чуваш, ярко осветить разгул царских воевод и их ковни и всяческую эксплоатацию, совместно с таковыми же интересами и стремлениями миссионеров-архимандритов и попов, „Ергень“ даст картину сложной борьбы между чувашскими куштанами, продавшимися царским воеводам и колонизаторам, и отстаивавшими свою независимость трудящимися, во главе которых стояли народные герои, жертвовавшие собою во имя интересов „черноземного народа“.

Тата А. Отачкин хăйĕн „Йеркĕн“ поемă çинчен çырнă статйинче („Сунтал“, 1929, V) поемăн чĕлхине мухтаса çапла çырнăччĕ (статйин „Поемă чĕлхи çинчен“ йатлă йулашки уйрăмĕнче):

„Кунта нимĕнрен ытла халăх сăмахлăхĕпе усă курма пĕлни лайăх палăрса тăрат. Поемă калама çук вăрăм пирки унăн чĕлхи те пĕтĕмĕшпех тикĕс мар, пуклакрах тĕлсем те пур, анчах уйрăм тĕлсем „калама та çук ыра“. Пит илемлĕ йурăсен пуçламĕшĕнчи çанталăк картинисем: аллитерацисем, ассонансем тăташах тĕл пулаççĕ („Тăхăр Тăрăн тăрăшат“). „Йеркĕн“ стилĕ пирки вăйхалпа чăтăмлăха шеллемесĕрех ĕçлеме тивеçлĕ“.

Пичетре „Йеркĕн“ çинчен ырласа çырнисем урăх палăрмарĕç. Çавах та, пирĕн акă мĕн астумала: Н. В. Васильев калашле („Краткий очерк...“), „Йеркĕн“ „Хĕнхур айĕнче“ поемăпа пĕр танах, пирĕн шкул программине кĕрет: „Эти поэмы, рисующие чувашскую старину, весьма популярны и изучаются в чувашских школах, даже за пределами Чувашской республики“.

Çавăнпа пирĕн „Йеркĕн“ поемăна тĕплĕрех тишкĕрме тивет. Произведенийĕн йулашки сăмахĕсемпе пире автăр та ку ĕçе тума хушат:

Камăн кăмăл пулĕ — вăл пулăшма пĕлĕ:
Иунăшсене тупса мана парĕ кăтартса —
Мана кӳрĕ усă, хайшĕн пулĕ сиплĕ,
Еп малтанах хурап ун пек туса тав-туса.

Историлĕ илемлĕ произведенисем çырасси çинчен Елгер хăйĕн „Хĕнхур айĕнче“ йатлă поемăн умсăмахĕнче („Автăртан“ тенĕскерĕнче) çапла каланăччĕ:

„Çакăн пек хĕрӳлĕ саманара поетсемпе писатĕлсен те куç умĕнче пулакан çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем çинчен çутатса памала. Халĕхи вăхăтра ĕлĕкхи хĕнхурлă пурнăç çинчен историлĕ поемăсем çырса ларни килĕшмест те пек.— Мĕнле усă кӳме пултарĕ чăваш литературине халĕхи вăхатра елĕкхи пурнăс çинчен çырса пани? Пире халĕхи çинчен, тата çитес çутă пурвăç çинчен çырни кирлĕ,— тейĕç хăшпĕрисем. Ун пирки епе çакна калатăп: социалисамлă пурнăç тунă чухнехи хĕрӳлĕ тапхăрта та ĕлĕкхи классен кĕрешĕвĕ çинчен пĕлни, пуйансем чухансене йепле тиоккеррĕн пусмăрласа пуранни çинчен пĕлсе тăни — пире пĕр усăран пусне нимĕнле сийен те кӳрес çук. Емĕрсем тăршшĕнче пурнăç мĕнле улшăннине пĕлес тесен, тата вăл мĕн чухлĕ малала кайнине курас тесен, иртнипе халĕхине илсе пахаламала“.

Вырăссен паллă писатĕлĕ Артом Веçолăй ку ыйту пирки çырнă:

„Халĕ епĕ XVI ĕмĕрти пурнăçран, утаман Йермак Çĕпĕре çавăрса илни çинчен „Гуляй, Волга!“ йатла пысăк роман çыратăп. Хашпĕрисем мана çак йапалашăн, халĕхи пурнăçран татăлса аваллăха тăвăрăнвăшăн, ӳпкелешеççĕ. Кирлĕ-и аваллăх çинчен çырни? Ман шутпа кирлĕ. Пролетариатăн историйĕ 1905 çултан анчах мар, XVI ĕмĕртенех тапранса кайнă. Мĕншĕн-ха, апла пулсан, XVI ĕмĕрти ĕçлекенсем йепле пураннине, Хĕвелтухăçĕнчи патшалăхсене суту-илӳ капитале хăй тыткăвне çавăрса илнине кăтартса памала мар? Епĕ çак ыйтусене татса парасшăн та хамăн романра“.

Çапла ĕнтĕ, историлĕ илемлĕ произведенисене „аваллăха“ йуратнăшăн çырмаççĕ. Пирĕншĕн:

Анчах аваллăх темшĕн пит савăк,
Чун темшĕн туртат аваллăха?
(Хусанкай —„Iутар поечĕсене“)—

тенӗ сӑмахсем пӗтӗмпех йурӑхсӑр. Тӗрӗс калана И. Д. Кузнецов хӑйӗн „Тӑвӑлпа ҫунатланна поетсем, йе аваляхипе ҫуначӗсене амантакансем“ йатлӑ статйинче:

„Пулма пултарни пулӗ, анчах историйе „аваллӑха савма“ ҫырмаҫҫӗ. Кӗскен каласан: вӑл социалисӑм тума пулӑшнӑ таран кӑна кирлӗ“.

Ҫак пӗртен-пӗр тӗрӗс виҫепе виҫсе „Йеркӗн“ поемӑна пахаласан, епӗр ку произведенире ытла та пысак ҫитменлӗхсем куратпӑр.

Поемӑна вуласа тухсан, чи малтан пире акӑ мӗн шухӑшлаттарат: ҫав-тери пысӑк произведенине (15 йурӑлӑ поемӑ) автӑр ӗҫхалӑх массин пурнӑҫӗпе кӗрешӗвне, ӗҫҫыннисен паттӑрлӑхне кӑтартма мар,— ӗҫхалӑх тӑшманӗсен „чаплӑ“ пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене кӑтартма ҫырнӑ.

Поемӑн тӗп геройӗ—пуйан Урха: унпа произведени пуҫланат („Аслӑ Сившура, ват йуманлӑхра, пуйан та чаплӑ пурӑнат Урха“), унӑн вилӗмне кӑтартнипе пӗтет („Ҫапла калаҫса Иеркиней Урхана илсе кайса ҫакма хущрӗ хапхаран“...). Произведенири ытти мӗн пур ӗҫсем, мӗн пур кӗрешӳ—пӗтӗмпех Урха паттӑрлӑхне, унӑн чапне, унӑн хуйхи суйхине кӑтарма сӑнланнӑ. Пуҫламӑшӗнчен пуҫласа поемӑн вӗҫне ҫитиччен Урха пирӗн умра калама ҫук вӑйлӑ ҫын пек сӑнланат:

Паттӑр турӑ ян пек пурӑнат Сившура.
Ун пурн ҫӗ халаплӑ.
Вӑл пӑхма та пит патмар;
Кӗлеткийӗ кӗрнеклӗ,
Алл -ура тӗреклӗ...
Улӑп пекех Урха тӑрат патша умӗнче,
Аслӑ майран ӑшчиккине вӗркен ҫаврӑнса...

Урха нимӗнле тӑшманран та, нимӗнле кӗрешӳрен те хӑрамаст:

Тӑшман маншӑн — асамат
Кӗперри пек вӑй-хӑват.
Унӑн тӑрӑх улӑхма,
Пӳлӗх, пулӑш пуҫӑма..
Вилем — ҫынна парнис ҫук,
Хаман йата ҫӗртес ҫук...

Паттӑр Урха ҫиллене сен:

Унӑн х йар чӗринче
Йун веремест — вут ҫуват.
Чаплӑ пуҫӑн мимминче
Шухаш чуте а ҫаврӑнат...

Хӑй вилес умӗн те паттӑр Урха тӑшмана пӑртте парӑнмаст, вилӗмрен нимӗн те хӑрамаст. Хайне ҫактаракан Иеркиней Урха мӑнкӑмӑлла калат:

—Усал тӑшман, хайар, каскӑн утмав,
Нихӑҫ н та кертӗйӗртти пек еп чуппан.
Хамӑр чӑваш халахӗшен гарӑшрам.
Вырӑссемпе ҫӗрпе шывшӑн харкашрӑм.
Мана йытӑ те и чатмала мар хуо,
Тугупала каланине сӑмсупала турт.
Вилсер ҫакса — пӑхӑнмастап еп сана.

Ёçхалăх тăшманне автăр çакăнпек йусаса, паттăррăн кăтартни — вулакана тÿрех „Краткий очерк истории чувашской литературы" йатлă кĕнекере çав автăрах Йуманăн „Укăлча касси" йатлă драмăри шурă офицер Микул типĕ çинчен каланине аса илтерет:

„Микул... автором сильно идеализирован и представлен стойким и непоколебимым защитником своих идей, неподверженным слабостям не только безвольной массы, но и своих сторонников... Юман вложил в его уста перед смертью такие слова: „...Не поддавшись врагу, в борьбе сложили свои головы... Мы победим..." Такая идеализация врага советской власти в то время, как типы бедноты вышли более бледными, справедливо вызывает нарекания молодых писателей...

Н. В. Васильйĕвĕн Микул типĕ çинчен каланă çак сăмахĕсене пĕтĕмĕшпех Урха типĕ çинчен те калама тивет, „врага советской власти" вырăнне „врага трудящихся" тесе çеç улăштармала.

Çаван майлах чаплăлатса автăр Урха арăмне — Унерпине, унăн хĕрне — Чĕкеçне, майра патшана, войеводăна сăнласа кăтартнă. Хай хавасланнине пытараймасăр (пытарма та шутламасăр) поет „йурлат":

Унăн арăмĕ — Унерпи ĕçкĕре илем ĕ,
Сăрипе сăвлама хăнисĕн кăмăллă:
Каласасси пыл та çу,
Йур йурласран йулас çук...
Сăнĕ-пуçĕ — пан-улми,
Пиçсе çитнĕ çĕр-çырли...

Акă тата пуйан Урхан „илемлĕ чечек пек хĕрĕ":

Сат варринчи сар кайăк пек
Чĕкеç чечен чĕлхелĕ;
Ирхи сывлăм тумламĕ пек
Чĕкеç таса, илемлĕ:
"Кăтра хĕрне çырă çÿç,
Тăрăхла тĕксĕм хура куç...

Акă чаплă „майра патша" — Иккĕмĕш Кĕтерне:

Майра патша патшалăхне пĕлеесшĕн,
Çта пырсан та савăнаçа кÿресшĕн:
Йурлаттарат, ташлаттарат умĕнче,
Урăх унпăн çук та пекех çут тĕнче.

Кувта акă мĕн асăрхамала: Ухсай Йакăвĕ хăйĕн Шупуççынвине „Йеркĕн" пирки тăрăхласа çырнă епиграмминче („Сунтал" журналра) çапла каланăччĕ:

Ун аллинче Кашт кĕрейьест
Майра патша Комсомолка.

Ухсай Йакăвĕ кĕретĕнех йанăшнă: комсомолкăсем нихçан та поемăри „майра патша" пек вĕçкĕн, çăмăл ăслă пулмаççĕ.

Акă тата илемлетнĕ чаплă войеводă сăнĕ:

Хăйулă та харсăр, чейе, ватам çын,
Вутпала шыв витĕр тухса курнă çын
Еçет те, çийет те, ĕçне те тăват,
Килĕнче тулмасăрах хулана астават.
Пĕтĕм таврари çын ăна пăхăнат
Атăл çеç уйтан йăтмасăр хумханат,
Тата симĕс йăлăм хăш чухне çункалат.

Урхана, Унерпийе, Чӗкеҫе, майра патшана, войеводӑна ҫакӑн пек илемлетсе сӑнласси ӑҫтан вӑл?—Вӑл дворйан литературин метӑчӗпе ҫтилӗ. Акӑ ӑҫтан вӑл. Пушкинӑн „Полтавӑ“ йатлӑ поеминче вулатпӑр:

Богат и славен Кочубей.
Его луга необозримы;
Там табуны его коней
Пасутся вольны, не хранимы..

„Йеркӗн“ автӑрӗ уп хыҫҫӑн ҫырат:

Пуйан та чаплӑ пурӑнат Урха:
Ун хирӗсене виҫмен,
Ҫаранӗсене чикӗлемен..
Выҫӑх-чӗрлӗхне те ҫын суман.

Малала Пушкинӑнне вулатпӑр:

Но Кочубей богат и горд
Не долгогривыми конями
Не златом, данью крымских орд,
Не родовыми хуторами —
Прекрасной дочерью своей
Гордится старый Кочубей.

Шупуҫҫынни ҫырат:

Анчах Урха мухтанмаст ӗҫкӗпе,
Кӑчӑлне ҫеҫ пусарат унӑн шавепе..
Урхашӑн мултан та хакли,
Чаплӑхран та пахи —
Хӗйӗн савнӑ арӑмӗн парни —
Илемлӗ чечек пек хӗр ӳсни.

Тата ытти те, тата ытти те...

„Полтава“ поемӑсӑр пуҫне „Йеркӗнре“ Лермонтовӑн „Песня про купца Калашникова“ йатлӑ произведенийӗнчен илнӗ мотивсем те пур (Сухатӳри кӗрешӗве сӑнласа кӑтартнинче, Йеркивейӑн Урхана калана йулашки сӑмахӗнче). „Герой нашего времени“ йатлӑ романран илни те пур (Йеркивей Патиреке — Чӗкеҫе вӑрлама пулӑшсан — Урхамаха кайала пама пулни). Уйрӑм мотивсене илни вӑл ытла нимех те пулмӗччӗ, анчах „Йеркӗн“ автӑрӗ пӗтӗм ҫтил, тата сӑнласа кӑтартас метӑд тӗлӗшӗнчен дворйан поечӗсен, XIX ӗмӗрӗн малтанхи алӑҫуллӑхӗнчи вырӑс поет-класҫиксен пусӑмӗ айне пулса тыткӑна лекнӗ. Ҫак йапала вара поемӑна пит пысак сийен кӳнӗ. Кӑна „Йеркӗн“ ҫинчен ҫыракансем халӗччене сиснӗ.

Тӗрӗс калана кун ҫинчен И. Д. Кузнецов хӑйӗн „Халӗхи поезипе истори ҫинчен“ йатлӑ статйинче. Унта епӗр вулатпӑр:

„Чӑваш ӗҫхалӑхӗн ӗлӗкхи пусмӑрти пурнӑҫне кирлӗ пек аса илтерсе тӑни те ниттӗ кирлӗ. Халӗ ӳсен ҫамраксем илемле ҫырулӑх урлӑ та классӗн тымарӗсене, ӗлӗкхи пусмӑр тымарӗсене пӗтересшӗн, социализмӑма тума хастаррӑн пикенсе ӗҫлеме хӑнӑхса пымала. ...Пирӗн поезире иртнӗ пурнӑҫ ҫинчен пӗртте ҫырман тесси ҫук. Ҫыркалавӑ та, ҫыркаласҫӗ те Сӑнамалӑх хӑшпӗр поетсене хыпашласа пӑхса, тухар Илӗпӗр ак паллӑ поемӑна, Шупуҫҫынни „Йеркӗнне“. Ана вуланӑ хыҫҫан халӗхи ҫамраксем ӗлӗк чӑваш ӗҫхалӑхне пусмӑрласа тӑна классене курайми пулса ӑнкӑранаҫҫе-и?

Пирӗн шутпа, ҫук ах. Шупуҫҫынни, хӑй поеми ҫинчен хӑй — епӗ унта чӑваш халӑхне куштан-пуйансем хӗсӗрсе тӑнине кӑтартап, тет

пулин те, унта чи малтан Кĕтерне патша чăвашсем патĕнче те пулнă, тенĕ йевĕрлĕ картинă куçа кĕрсе тăратçке. Кирли çителĕклĕ марри, малтанах калас та, çав Пинегин пек историксем тăрăх çырниичен те килнĕ ĕнтĕ. Ăна кунта пысăк поет Шупуççынни умĕнче кăтартса хăварас пулат. Пирĕн поетсем историйе сахал пĕлеççĕ, час-часах йăнăш пĕлеççĕ, кирлĕ пек вĕренме тăрăшни те çав-терийех палăрсах каймаст. Иртни çинчен çырни кирлĕ, терĕмĕр. Вăл халăхи пурнăç мĕн-тери хăварт ĕçхалăхне кирлĕ пек малала туса пынине тавçăрса илме пулăшат. Анчах пĕлерех, шухăшларах çырмала“.

Д. Данилăвăн „Советская Чувашия“ йатлă кĕвекинче кун çинчен калана:

> Чуждые для советской литературы влияния и тенденция в творчестве Шубосинни в одинаковой степени относятся и к его большой поэме „Ергень“ („Фаворит“), в которой Васильев испытался отразить пугачевское движение в Поволжье и участие чувашских трудящихся в этом движении“.

Поемăра чухăнсем, ĕççыннисем, ван халăхсем йепле сăнланнă.

1. Уйав кунсем йерипен
   Иртсе кайрĕç Сившура.
   Нумай ĕçрĕç килсерен
   Ерехпеле пыл-сăра.

Кунта поет авалхи чăваш йалĕнче чухăнсем, „ерехпеле пылсăра нумай ĕçме“ пултарайманнисем пуррине манса кайнă. Ку — автăр хăйĕн „Хитре Чĕкеç“ йатлă поемăн малтанхи изданисенче:

Кармал йалĕ, аслă йал:
Пуйан та пур, чуххи те,
Чухăнни çеç çав авал
Пулман чăваш хушшинче,—

тесе çырнине аса илтерет.

2. Йантарса кайрĕç сасартăк сасăсем
   Хурала тăнă пыранлă бурлаксен.

Темĕн чухлĕ асап курса, хĕнхур айĕнче пурăннă бурлаксене „пыранлă“ (обжора) тесе чыслани — совет литературин çтилĕ марри такама та паллă пулмала.

Асăрхаттарни: „Пăран“ йатлă хăйĕн сăввинче Шупуççынни „пыран“ тесе кулака йат парат. Ку — пит вырăнлă:

Пыран пырлă кулак
Кăларнă сăпса сăннине.

3. Архимандрит хересе çĕклесе, ăмăртса
   Чуп тутарчĕ патшана пиллесе, ыр сунса...
   Унтан пĕрĕхтерчĕ пĕтĕм халăха.
   Пусма хатĕрленĕ путек силленнĕ пек,
   Тăчĕ халăх ура çине, сурăх кĕтĕ пек.

Ĕçхалăх поетне çакăн пек сăвлăхсемпе танлаштарусем пани пĕртте килĕшмеççĕ.

4. Малти йулан — хăй Урха,
   Куçĕ-пуçĕ çисĕм пек,
   Ун хыçĕнчен тушăрха
   Çиментейпе Патирек...

Йе тата:

Мулентейпе Патирек
Лапчăнаççĕ чĕрĕп пек.
Урха урай варринче
Салтак ачи пек утат

Пуйан Урхан тарçи вырăнчи пурăнакан Çимонтейе, Мулентейе, Патиреке çакăн пек хуçин хăрах ура пӳрни вырăнне те хумавни — каллех совет литературин çтилĕ мар

5. Çăра пыл та çивçе пир —
Йăваш чăваш ран
Кайăк ашĕ, хакла тир —
Йĕтĕм çармăсран..
Çаранчĕçĕ çармăссем,
Йĕтĕм — етем йăхĕçем..

Йе тата:

Аслă Атăл анатя
Таçта пит ката,
Хайĕн пуçне çиме-тĕр,
Каскăн калмăк çĕрĕ витĕр
Илсе кайат пур шыва —
Хайар тинĕс Хвалăна,
Çавал ăна пĕлеймест..
Вăл йуратат чăваша —
Ĕçчен, йӳрĕк чăваша.

Тăван халăха çакăн пек „йăваш, ĕçчен, йӳрĕк" тесе, çав вăхăтрах Совет сойузĕнчи ытти халăхсем çинчен „йĕтĕм" йе „каскăн" тесе çырни — совет илемлĕ литературинче йурăхлă марри паллах: кунта „шовинисăм" шăрши пур. Тен, поетăн киревсĕр шухăш та пулман пулĕ, — сасă йанăравлăхĕшĕн, аллитерацишĕн анчах вал çармăсна калмăк халăхне çавăн пек „йатсем" панă пулĕ тесе те шухăшлама май пур: çармăссем— „йĕтĕм—етем йăхăсем", „каскăн калмăк"... Апла пулсан, ку вара „вăйăран вăкăр тухни" пулат. Чăнах та, поетăн çавăн пек сас йанăравлăхĕпе хавасланса, шухăш ăр, пушă сăмахсем персе йани урăх тĕлте те паларкалаççĕ. Тĕслĕхрен:

Урхан тара халăхсем
Уйри ĕçе тухнă чух,
Шаккăлсене шакканă,
Йăлăм йенне кайнă чух,
Илпешсене илĕртнĕ..

Çак сăмахсенче таран шухăш пур тесе никам та калаймĕ: ăна „сăмахсемпе выльави" теççĕ

Ку акă мĕне аса илтерет. „Сунтал" журналра Есрел хушаматлă поетăн пултарулăхĕ çинчен пичетленнĕ статйара каланăччĕ:

„Есрелшĕн формă—произведени ăшчиккинчен малта тăрат. Вăл технякăла йĕнтерӳшĕн произведенин пур шухăшсене те парнене кӳме хатĕр... Рифмă шухăша йĕрсе ырат, тенĕ пек, Есрел те хăйĕн сăвви шухăшне рифмăран тата ритăмран кăларса пырат".

„Йеркĕн" поемăри хăшпĕр тĕлсем пирки те çав сăмахсене калама тивет. Кунта та хăш вырăнсенче „аллитераци" шухăша йертсе ынă, темеле.

Кирек-йепле пулсан та, „йĕтĕм çармăс", „каскăн калмăк" тенĕ пек „йатсене" совет литературинчен хĕртнĕ тимĕрпех çунтарса тасатмала.

6. Йанрат У р х а н йачĕ çĕкленсе.
Курайман тăшмансен кăмăлне хистесе.

Камсем-ши вăл „Урхана курайман тăшмансем"?
Улпут таврашĕ мар, паллах:

Шупашкарти войеводă увпала
Хĕллехи кунсемче çӳрет сунара.
Çĕрпӳри крепăçрен те ун ĕçки-çикине
Килсе çӳреççĕ вырăс хвицерсем...

Урханăн „ăратти", пĕлĕшĕ-тавраш те мар вăл „тăшмансем":

Туссем, пĕлĕшсем — нумай йал тенинче
Сарăлнă йĕри тавра ун ăратти...
Урхашăн хатĕр хута кĕме ăратти
Тата ĕçкĕ вĕн пуç йаракан йал йытти.

Урханăн „тăшманĕсем" акă çта: çав „туссен-пĕлĕшсенчен" —

Нумайĕш Урханăн йачепе ыр курат,
Йурлă çынсене май килсен пусмăрлат.
Çавăнпа та Урхана ытхан сунакан
Сахал мар вăртăн тарăхса пурнакан.

Кунта пирĕн ума ыйту тухса тăрат: апла пулсан, — пурнакан йурлă çынсем, чухăнсем пулсан, поет стихĕсенче: —

Йанрат Урханăн йачĕ çĕкленсе,
Курайман тăшмансен кăмăлне хистесе, —

тенисенче — автăр кăмăлĕ кам йенче: пуйан Урха йенче, йе ăна „курайман тăшмансем" — йурлă çынсем йенче? Чаплă эксплоататара хавасланса мухтанипе поет клас сисĕмне пачах манăçа хăварнă:

7. Чăвашсем хир тума çеремсем çĕтеççĕ...
Чунĕсене пусарма йурласа илеççĕ:

„Аталăн леш йенче
Шыв сасси, хум сасси..
Шупашкар хулинче
Чан сасси, пуп сасси...
Урханăн килĕнче
Еçкĕри йур сасси"...

Чăваш ĕççыннисем Урха ĕçки çинчен йурласа чунĕсене йепле пусарма пултарни пĕртте паллă мар.

Çак кăтартнă вырăнсенчен поет ĕçхалăхне сăнласа кăтартнă чухне йанăшсем туни курăнат. Çав вăхăтрах акă мĕн калама тивет: ку тĕлĕшпе поемăра йурăхлă вырăнсем те пур.

Акă вĕсем:

1. Урха йĕри-таврари ĕçхалах йунпе ĕмсе пурăнни çинчен поет пĕлтерет: Урхана —

Аса киле ăна салтакра пурăнни...
Шупашкарти войевод ăна тав туни:
Йĕри-тавра йалсене пусмăрлама пани...
„Уникă çинчи улахра
Тăхăр Таран тăрăшат.
Тават Марка майлашат.
Йĕршӳ çинчи улăхра
Икĕ Апам аптрана,
Вĕçĕ Шăмаш шамшакки
Урхашăнах хавшанă".

2. Вырăс, чăваш, çармăс ĕçхалăхне пусмăрласа пурнакансем çинчен вулатпăр:

Пуйан войеводă пухат хăнисене,
Йĕри-таврари чаплă çынсене...
Вырăсĕ, чăвашĕ, çармăсĕ те пур:
Пурте çинвĕçĕ те, йĕкет те маттур:
Çĕр ĕçлекенсен йунĕпе шӳнисем,
Халăх пурлăхне кӳпсе майнисем.

3. Акă мĕскĕн бурлаксем, тепĕр тĕлте ним айăпсăрах поетран „пыран“ йачĕ илтвĕскерсем. Атăл тăрăх пыраççĕ:

Гавар киммисене бурлаксем тăвата
Çыран хĕрринчен тăрмашса туртаççĕ:
Кăшкăрса, ылхавса, йурă йурла,
Кăкăр çурăчсене ĕç еле витеççĕ..

4. Шупашкарти чиркӳ тăррисенчи чансем:

Ак ĕнтĕ харасах кĕрлеме тытăнчĕç;
„Тĕвкĕлти-тевкĕлти, тин тун!
Пирĕншĕн пайан чаплă кун!
Войевода вăйланат,
Улпут çынни савăнат,
Ĕççынни çеç пусранат!..

5. Пуйан Урхан ниминче тара халăх йурлат:

Ĕçлесе ĕçчен епĕр пултăмăр,
Пĕчĕкрен тар-шурпа епĕр палламрăмăр.
Çавăнпа хура лутра пултăмăр,
Ыр çын хисепне кĕримарăмăр..

6. Улпутсенчен пĕри Шупашкарта майра патшана чăваш ĕçхалăхĕ çинчен каласа кăтартат:

Чăваш çынни йĕркесĕр,
Хăш чух ĕçлет кирлевсĕр.
Тĕк пураннă çĕртенех
Тапхăр-тапхăр тапранат,
Патшалăха чĕтретсех
Калăпăшпе пăлханат...

Патшан ĕççыннисене шелленмен çарĕсем пăлханакансене хĕçпашал вăйĕпе тискеррĕн чара-чара хăратса çитерне пирки —

Чăвашсем курчĕç çеç салтака —
Ҫаранипе сехрисем хăпреç,
Алăри хатрисем ӳкрĕçĕ:
„Пӳлĕхçĕ, пӳр инкекрен!“ терĕçĕ.
„Ахаљ те хырăç пит нумай,
Хутшăнмаст ши тата кулавай“...

7. „Патшана улпутсен пусмăрлăхĕ çинчен сăнласа каласем:

Мăнастир çумĕнче икĕ хутлă чул çурт,
Хĕрлĕпе сăрласа йерешленĕ мăн çурт
Хайаррăн пăхса ларат хула çинеле —
Патша пусмăрлăхĕн ирĕкне пĕлтерсе...

Йе тата:

Хусан хули чул хӳме,
Улпучĕсем чун çиме.

Çапла ĕнтĕ, кăтартнă тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: „Йеркĕн“ поемăра икĕ çтил — вырăс класçик-дворйан литературин çтилĕпе совет литературин çтилĕ пĕр тан пулса хутăшса тăраççĕ. Автăр вĕсен хире-хирĕçӳлĕхне сисмест.

„Йеркĕн“ поемăри клас кĕрешĕвĕ.

Хăйĕн поеми çинчен автăр çапла калавă, терĕмĕр:

„Йеркĕн“ дает картину сложной борьбы между чувашскими куштанами, продавшимися царским воеводам и колонизаторам и отстаивавшими свою независимость трудящимися, во главе которых стояли народные герои, жертвовавшие собою во имя интересов „черноземного народа“.

Малтан çак „халăх геройĕсем" çинче чарăнса тăма тивет. Вĕсем автăр шухăшĕпе, Йентимĕрпе унăн ывăлĕсем, пуриньэн ытла Йеркиней пулаççĕ.

Кам вăл Йентимĕр?

... Атăла Çавал кĕнĕ çĕре
Шуртаң шурă хуплат тĕмеске вĕтлĕхре .
....Шуртана харсăр чап авалтан
Хăварвă хăйĕнчен Йентимĕр çав шуртан.

Мĕнле ĕçсемпе Йентимĕр çав «харсăр чапа» хăварнă?

Йентимĕрĕн виç ывăл, виççĕшĕ те матур...
Çуркунепе шурта никамран та малта
Кĕтеççĕ кĕсмен..ĕ кимĕсем Атăлта.
Йентимĕр шанчăклă каскан тусĕсемпе
Качака утравĕнче хуралта кунĕпе.
Кимĕсем кăмăллă парнене памасан,
Çыранпа та ан ут пуçу хаклă пулсан.
Бурлака-тарçăна тĕкĕвмеççĕ ахаљ,
Хуçашăн-улпутшăн хатĕр вилĕм амаљ .
Çаплă пусмăрлаççĕ хуçасене Атăлта...
Çапла Çавал авинче каскăн çынсем пурнаççĕ,
Вырăс хуçа суттине тапхăр-тапхăр тапнаççĕ.

Çакăн пек ĕçпе-пурăнаççĕ Йентимĕрпе унăн ывăлĕсем. „Бурлака-тарçăна тĕкĕнмеççĕ" тени пит аван та ĕнтĕ, анчах тепĕр тĕлте поет акă мĕн кăтартат: „Каскăн" Йентимĕр ĕççыннине те питех шеллемест. Шупашкарти войеводă тăрăх, вăл—

Анат Сĕнтĕр вăрринчи ăста пăхăрçа
Тума хурсаччĕ ылттăн йарăм шăрçа,
Патшан шурă мăйне парнелесе çакма.
Çавна кунта кÿнĕ чух пусмăрласа çаратма
Темле вăрă-хурах хараман, именмен,
Пăхăрăçне вĕлерсе шыва утма шеллемен.

Кам тунă çак ĕçе?.Поет кайран пĕлтерет: Йентимĕр. Войеводă калат: „Пăхăрăçă шелех мар", тет Йентимĕр те, „халăх геройĕ" пуласскер, çавнашкалах каларĕ пулмала...

Йентимĕрпе ывăлĕсем, поет каланипе:

Утă çулма тапратсан
Чарăнаççĕ пĕр саман..
Кĕркуннене кĕрсессĕн,
Улри ĕçсем пĕтсессĕн,
Каллех тухаç шыв çине —
Ирĕк тутлăхне ĕçме.
Кĕркуннехи тĕтрене
Тав тумала каçхине.

Çапла ĕнтĕ, Йентимĕр килйышĕ, ытти хресченсем пекех, çĕр ĕçĕпе пурăнат иккен. Ку каçхи Атăл çинчи вăрă-хурах ĕçĕ— йалхуçалăх çумĕнчи „хушамлă тупаш" (добавочный доход) пулса тăрат иккен.

Çак „хушăмлă тупăш" ĕçĕ ăвăçлăрах пултăр тесе, Йентимĕр нимĕнле ĕç умĕнче те именсе, чарăнса тăмаст, нимĕне те тиркемест:

Пуçлăхсене йăпатсан,
Пăртак царне тăратсан—
Тĕттĕм çĕрле çÿреме
Ирек, теççе, кимсене.

Çапла майпа Йентимĕр
Иртме Хусан хуливчен
Кăçалхи çул шухăшлат...
Майра патша иртнĕ май
Хуралçăсем пиг нумай,
Çапах парне тыттарсан,
Хурал чармаст кас пулсан.
Çапла шухăш сăмахра
Иентимĕрĕн ку çура.

Пуçлăхсене, хуралçăсене парнесем парса, Атăл çинчи кимĕсене çарата-çарата тупнă пурлăхран пĕр пайне йалти сынсене салатам пекки туса, „ырă йат“ илме пикенсе пурăнат „халăх геройĕ“ текен Йенгимĕр:

Улăх çĕрне уйăрса
Çарансене пуçтарас,
Парнесене салатса
Йĕри-тавра ыр пулас.

Акă мĕнле сын вал Йентимĕр. Кунта акă мĕн асăрхамала: поемă вĕçĕнче Йентимĕр ывăлĕ—Йеркиней пуйан Урхапа çакăн пек сăмахсемпе намăслантарат:

Мĕншĕн улпутсем патне леçеттĕнччĕ кучченĕç?
Хăвăнтăн, кĕççĕ-пит, кĕрт йытти!

Урхана çакăн пек калави вырăнлă. Анчах çак йенчен Йентимĕр Урхаран пĕртте аван мар: вăл та „пуçлăхсене йăпатса“, вĕсене „парне тăрататă“, „хуралçăсене“ те „парне тыттарат“... Намшăн? Паллах, хăйшĕн! Атăл киммисене çаратса „хушăмлă тупăш“ (добавочный доход) тавасшăн, унтан тата çав „тупăшăн“ пĕчĕк пайне çынсене салатса „ырă йат“ илтсе пурăнасшăн! Çапла ĕнтĕ, Йентимĕрпе Урха хушшинчи уйрăмлăх ытла нумайах мар.

Кирек-мĕнле пулсан та, поет Йентимĕре вулакан ĕççыннин кăмăлне йурăхлă тип тăвайман. Ку çитмест ха, поет ăна пĕр тĕлте тӳрех „куштан“ тесе йат парат:

Йентимĕр те килте çук,
Хирĕç тама куштан çук

Çапла ĕнтĕ, Йентимĕр „халăх геройĕ“ йатне илме тивĕçли питех курăнмаст. Кайрантарах ăна автăр мухтавлă ĕçсенче кăтартма тăрăшат те, анчах вулаканăн питех ĕненес килмĕст. Тĕслĕхрен, акă Йентимĕр „ĕшнерĕ“ халăх умĕнче сăмахлат:

— Хура халăх, партак чарнăр-ха!
Манăн пĕр-ик сăмаха итлĕр-ха!
Сире пуханвашан малтанах
Хĕрӳлĕ салмлă мач сăмах...
Виличченех çапăçма пурте хатĕр пулăр-и?
Çак еç çинчен халех сӳтсе-йавса пахас.
Пысак ĕçе тума сăмах татса тухас.

„Хĕрӳлĕ салама“, „сӳтсе-йавса пăхас“—ку сăмах çаврăнăшĕсем халӡхи революци тапхарĕнче тип пуçланса кайнăскерсем.

Йеркиней, Йентимĕр ывăлĕ, автăр шухăшĕпе „халăх герой“ типĕ, вăл — „тип борца за свободу“. Унпа епĕр чи малтан поеман „Сухатӳ“ йатла VII йурринче паллашатпăр. Сухатӳ

пуххинче Йеркиней хăйĕн пичĕшĕсемпе çакăн пек йурласа çӳрет:

Епир виççĕн пĕр тăван;
Мăн Йентимĕр пирĕн атте..
Атте йачĕ Атăлта —
Иртен-çӳрен асăнат...
Вырăс кимми вырăнсăр
Атăл тăрăх аташат;
Иртмĕ халĕ парăмсăр;
Тăван тухат, тавлашат,—
Атте тухат атмапа,
Епир виççĕн виçепе,
Утмăл тантăш Тукшанпа...
Атăл шывĕ ким çĕтат.
Пирĕн атте пин тытат;
Хуçа тени хуçланат.
Атăл тĕпне пăчланат...

Çапла ĕнтĕ, „халăх геройĕсем“ „ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен ывăлĕ“— ашшĕ Атăл çинчи кимĕсене вăрă-хурахла çаратса туна пурлăхпа-мулпа ĕçхалăх хушшинче каппайса йурласа çӳрет...

Çак „паттăр“ ача Йеркиней Сухатӳре Урхан пултăрĕпе — Туйсарпа кĕрешме тытанат. Йĕркелĕ кĕрешсе Туйсара çĕнес çуккине кура, „борец за свободу“ тенĕскер, ултавлă хăтланса халăх умĕнче намăс курма пиеммест:

Урса кайва Йеркиней,
Тути-çăварĕ пăраннă,
Чĕри хăвăрт сикнипе
Пырĕ шалтах тăваннă
Йарса-йарса пусрĕ те,
Туйсар çине пит хăвăрт
Сиксе илчĕ сисевчен,
Аллисене йачĕ те,
Хĕсçĕ халхи чиккинчен.
Туйсар çавăнтах ăнтăрт
Шăнăрсене çемç-трĕ.
Хуллисене веçертрĕ..
Çав вăхăтрах Йеркиней...
Çавăрса çапрĕ хуэпала.

Йеркиней кун пек чăртмахла, ултавлă, йĕркесĕр хăтланнине курсан, „халăх“ пăлханма пуçлат:

Анчах пухă пăлханат,
Йеркинейе хур тăват:
„Ултаварĕ утаман,
Çӳç питтине пăракан,
Халăччен ун пек йăла çук...
Тарăраççĕ кун пек чух..“
Тесе халăх калаçат,
Кĕретӳшĕн хумханат.

Йеркинейĕн киревсĕр ĕçне курнă кĕтӳç „чăтса тăраймаст“, „пин тытакан“ Йентимĕр ывăлĕпе „кĕрешмешкĕн хăрамаст“. Вăл Йеркинейе те „хутлатат“:

Пăра-пăра илет те,
Çере кĕррĕс! тăват те.

Пăхса тăракан халăх кăна „пит хавас“, вăл,—

Кĕтӳç йатне асăнат:
—„Ай та, маттур Уламас!“
Тесе ăна хапăллат.

Ашшӗ „пин тытаканӑн“ ывӑлӗ мӗн тӑват?

> Йеркинейӗ вӑтанса
> Тӑрса утрӗ, вӑтанса...

Пуйан Урха хӗрне Чӗкеҫе йуратат те, „паттӑр“ Йеркиней Патиреке хӗр вӑрласа пама чӗнет:

> Патирек ула утӑ ыйтрӑм тет:
> „Урха хӗрне Чӗкеҫе вӑрлама пулӑшсан,
> Тавӑрӑп лашуна, ула ут пулӗ сан“,
> Тесе сӑмах пачӗ тет харсӑр Йеркиней.

Кайран Пугачов пӑлханӑвӗ вӑхӑтӗнче, поет ҫак Йентимӗрпе Йеркинейе „халӑх геройӗсем“ туса кӑтартма тӑрӑшнӑ:

> Чаплӑ утаман кӗҫӗн улӗнчен
> Халӑх хастарлӑх кӗтет ҫарӗнчен...

Ҫӗрпӳве ҫитсе кӗрсен Йеркиней пӗлет: ӑна хӑйӗн хӗрне качча парасшӑн пулманнипе тарӑхтарнӑ Урха—Ҫӗрпӳ крепӑҫӗнчи хӳтӗлӗхе пытаннӑ:

> Уртапала арӑмӗ те кунта, тет;
> Пӑлхавсенчен тарса килнӗҫ килтен, -тет.

„Ирӗклӗхшӗн кӗрешекен“ паттӑрӑн ҫитрӗ саванӑҫ:

> Йеркинейе урӑх ним те кирлӗ мар,—

тет автӑр, хӑй сисмесӗрех, хӑйӗн геройӗнчен пӗтӗм чаплӑхпа паттӑрлӑха хывса пӑрахса: хӑйне кӳрентернӗ хӑйӗн тӑшманне тупнипе „ним те кирлӗ мар“ таранчченех ҫителӗклӗнекен „герой“—вӑл йапӑх „борец за свободу“!

Ҫавӑнпа та поемӑн йулашки страницинчи сӑмахсем:

> Чӗкеҫ ҫинчен манма пулчӗ Йеркиней,
> Йемеленпе халӑхсем кар тӑрса
> Пур тӗнченшӗн тупӑш, терӗ вӑл,—телей...

Вулакана ӗненмеле пек туйӑнмаҫҫӗ: Йеркиней пек типсен мар вӑл „тӗнче телейне тупасси“ ҫинчен ҫунмалли. „Критикам не трудно будет установить, как преобразуется с годами тип борца за свободу, хотя бы Ергинея, в тип комиссара-хозяйственника Хунара“ (Йуманан „Пурлах комиссарӗ“ йатлӑ произведенири комунис типе),— генӗ автӑр хӑйӗн „Краткий очерк истории чувашской литературы“ йатлӑ кӗнекинче. Йеркиней пек типсенчен Хунар комунис пеккисем пулса кайнине ӗненме пит йӑвӑр,—ун пеккисем Махно отречӗсенче туллийех пулнӑ, мӗншӗн тесен вӗсене унта, поет калашле, „ирӗк тутлӑхне ӗҫме“ пит аван пулнӑ...

Поемӑри типсем ҫинчен каланӑ чухне тата кӑшт Чӗкеҫ ҫинчен каламала.

„Улмуҫҫинчен улми инҫех ӳкмест“ тенешкел, малала, поет Чӗкеҫ ҫинчен калат: Чӗкеҫре—

> Урхан пекех вӗрет йун.

Ҫавах, XVIII ӗмӗрте мар, XX ӗмӗрте те—йалти чӑваш хӗрӗ, темле пуйан килйышра та, Чӗкеҫ пек „артисткӑла“ хӑйне тыткаласа, театӑрти пек отретсем пама пултарнине ӗненме ытла та

йăвăр. Кун ҫинчен А. Отăчкин та ҫырнăччĕ: „XVIII ĕмĕршĕн Чĕкеҫ ытларах та хайуларах... Кунашкал сăмахсене халҕхи хĕрсем те пуртех калаймĕҫ“ („Сунтал“, 1929, V). Акă Чĕкеҫ сăмахĕсен тĕслĕхĕсем:

Атте, итле! Хĕрхенсе еп сана,
Нимĕнрен те ытла аслăлап сан йатна!
Йуратап килйыша, йуратап хурăнташа,
Анчах никамран та ытла,
Чунăмран та мала,
Йуратап йеркиҫей тантăша...
Сирĕншĕн епĕ аскăн,
Манăн каччă кăскăн,—
Йурат, тувă пăсăр,
Ҫапах, пире пулмĕ сăтăр...
Атте-апи, итле,
Акă епĕ йепле!.

Поемăн историлĕ тĕрĕслĕхĕпе ĕнентерӳлĕхĕ ҫинчен.

Кирек-мĕнле илемлĕ произведенире те чи пахи, чи кирли — вăл пурнăҫа тĕрĕс сăнласа кăтартни. Произведенире пурнăҫа мĕн чухлĕ тĕрĕс кăтартнă, ҫавăн чухлĕ унăн ĕнентерӳлĕхĕ те хăпарат. Историлĕ произведенисенче—историлĕ ĕҫсене пĕлсе, тĕрĕс пулма пултарнă пек, сăнласа кăтартни кирлĕ. Кун ҫинчен Енгĕлс каланă: типлă ҫынсене типлă обстановкăра кăтартмала, тенĕ.

„Йеркĕн“ автăрĕ поемăн вĕҫĕнче каланă:

Манăн пуҫăм туса пачĕ йурă:
Пĕри ăна мухтĕ, тепри тĕплĕн тиркесе—
„Пулман ĕҫсем, суйа“ тесе ăна хурĕ,—

тенĕ. Чăнах та, поемăра „пулман ĕҫсем — суйа“ темели вырăнсем сахал мар. Вĕсенчен хăшне-пĕрне Хумма Ҫеменĕ те асăрхаттарнăччĕ („Сунтал“, 1930, VI). Вăл хăйĕн статйинче чи малтан акă мĕн ҫине кăтартнăччĕ:

„Вулакан тăнланмала мар: чăваш пуйанĕ Урха килĕнче те (чăваш йалĕнче) хăй ҫемйинче веҫ чăвашла пурнаканскер, айакран курса йуранипех ăҫтан майра патшан йеркĕнĕ пулса тăнă-ха? Шупуҫҫынни куна вимĕн те лайăх кăтартса памаст. Ай, майра патшана йермешкĕн, лешĕ хăй тем пек ҫăмăл хĕрарăм пулнă пулсассăн та, ҫав-терийех ҫăмăл пулнă-ши вара?..“

Хумма Ҫеменĕ тĕрĕс каланă. Чăнах та, ку — ĕненме йăвăр йапала. Поемăра вулатпăр:

Акă Урха пырат хăйулăн, йар утса,
Хăй умĕнче хур аккăшне йăттарса...
Пирĕн Урха урисемпе шартлатса пуҫ тайат.
Ҫав тери хăйулă ҫынна,
Майра патша савăнчĕ...
Ҫывăх тума сăхланчĕ...

Ку йумахри пекех ĕнтĕ. Ахаҕ мар кун ҫинчен автăр та калат: „Кăвак хуппи Урхашăн уҫăлчĕ“.

Иккӗмӗш ӗненмеле мар вырӑн, Хумма Ҫеменӗ шухӑшӗпе, ҫакӑ: Атӑл кимми ҫинчен аннӑ-анман, майра патша Атӑл хӗрне пухӑннӑ ҫынсене ҫапла калат:

Пирӗн ҫӗршыв пуймала,
Тӑшман-сен путмала,—
Кӑва мӗнле тумала?
Сирӗн ҫине тайӑлса,
Купца ҫине кукӑрӑлса,
Хресчен ҫине хирӗнсе.
Хырӑҫ магӑҫ куланай,
Унӑн усси пит нумай—
Уснӗ-ҫемӗн ӳстерес,
Сисеччене сиктерес.

Ку сӑмахсем пирки Хумма Ҫеменӗ калат: „Патша хырӑҫ-марӑҫшӑн тӑнӑ пултӑр. Анчах ун ҫинчен вӑл пур ҫӗрте те ҫавнашкалах мӑшкӑласа каласа ҫӳренӗ-ши? Ҫав-терийех ухмахрах пулнӑ-ши? Ҫук, кунта Шупуҫҫынни майра патшана — ӗҫхалӑхӗн чейе тӑшманне — фальшива кӑтартнӑ“. Хумма Ҫеменӗ сӑмахӗсенче тӗрӗслӗх — ним те ҫук тесе калама, паллах ӗнтӗ, хӗн.

Кунашкал ӗненме йӑвӑр вырӑнсем поемӑра тата вумай. Акӑ хӑшпӗр тӗслӗхсем.

1) Майра патша Шупашкара пырсан воййеводӑ вечӗр тӑват:

Мӑнастыр хӳминче, суртӗнче..
Выльӑҫҫӗ, ташлаҫҫе алхасса.
Хирти ҫил пек улат ак сӑпнай,
Сӗм-вӑрман пек шӑхӑрат шӑхличи.
Йанкӑрмасам йантратаҫҫе пӗрехмай,
Шӑпӑрпала шӑрантарат пӗр мучи...

Кун пек „музыкӑ“ вечӗрта пулма пултарнӑ-ши, ӑна ҫын хӑлхисем тӳсме пултарнӑ-ши?

2) Урха Хусантан таврӑнсан арӑмӗ калат:

Манӑн кӗпе ҫинчи умӑмра
Майра патша ҫакнӑ вырӑс хӗресне
Куратна? Ӗнтӗ текех ҫук Урха:
Епӗ тене кӗтӗм, йата улӑштартӑм..

Йе тата Патирек Урхана каласа кӑтартат:

Шупашкарта вун чӑваш
Тене кӗнӗ мурҫвийаш,
Ҫавӑнпа та пуп таврать
Хаљ вӗсемпе хуранташ.

Истори документсем кӑтартнӑ тӑрӑх, „Йеркӗн“ поемӑри ӗҫ пулаччен (майра патша Шупашкара пыриччен) ҫирӗм ҫула йахӑн малтанах Сившупа Шуртан, Шемшер таврашӗнчи чӑвашсене пурне те тӗне кӗртнӗ, ҫавӑнпа поет каланисем пурнӑҫпа питех килӗшмеҫҫӗ.

3) Урхана Мускавра хупса лартсан, Ҫиментей кӗслеҫ Питӗре кайса, майра патша умӗнче кӗсле каласа, Урхана ҫӑлса килни ҫинчен ҫырни — кирек-мӗнле вулакана та фантазилӗ йумах пек анчах туйӑнмаласкер:

Ҫ в вӑхӑтра Питӗрте
Пирӗн кӗслеҫ Ҫиментей
Майра патша умӗнче

Кĕс е калат хĕренкей...
Выртат унăн умĕнче
Майра патша хăйаккăн,
Икĕ тăлмач ик йенче
Куçараççĕ вăраххăн...

Мĕн калат кĕслеç Çиментей? — Вăл чăвашсен туйĕсенче калапă авалхи „Мăн-кĕрÿ такмакне" урăхлаткаласа калат-мĕн. Унтан Çиментей майра патшана — вăл Урхана панă ылттăн мерчен çĕррине кăтартат.

Ылттăн мерчен çĕррине —
Хăй неркĕнне панине
Курсан, патша тĕлĕнет,
Пĕлсен, пĕлми çилленет...

Çавах та, майра патша Урхана çăлат. Киле таврăнсан Урха хăй арăмне калат:

Манăн вăйăм каллех çĕкленсе каймала,
Тин манпа войевода тавлашмĕ малала!

Çаксем пурте йумахран инçе тăмаççĕ ĕнтĕ.

4) Пугачов пăлхавăрне поет тĕрĕс сутатаймаст. Кунта та вăл, ытти çĕрти пекех, кирлĕреххи çинчен çырас вырăнне, ĕçкĕ-çикĕ çинчен калама тапратат.

Йентимĕрпе Йемелен
Самай пулат ыллашни,
Çапла иккĕн пĕрлешсен,
Калача çук варлатни —
Ĕçкĕпеле çăвăнпă,
Халапланса саванпă...

Буржуалă историксем хыççăн, поемăра та Хусана Пугачовăн кайала памала пулнине, ĕçкĕ пирки пулнă пек анчах кăтартнă:

Хусан хули пăхăнпă,
Анчах крепĕç парăнман,
Пугач питех тарăхна,
Çапах ĕçме чăтайман:
Хăй халăхне усĕртсе
Ирек йана вĕçертсе
Ĕçкĕ çике вăй сутти,
Усĕр пулсан чун сутти.
Пугач çаре ç варсан,
Çитнĕ чейе михалçан..

Поемăри „рок" („иртейменлĕх" йе „турçырнилĕх") çинчен.

Поемăра историре пулакан ĕçсем тата уйрăм çынсем çине марксисăмла пăхни куранмаст. Кунга „рок" тейекенни йе „турçырнилĕх" ĕçсене майлат. Малтан поемăри тĕп „герой" Урха çине телей „хĕррипе тан тăкăнат". Вăл ăна хăй те сисет иккен:

„Ăн шелле, арăмам, нимĕн те, ан кулян!
Кăвак хуппи çуталат—ытма çеç ан ватан!"
Лăплантарат арăмне Урха челхипе,
Ăшĕнче савăнат сарăлас чаплăхпе.

Чăнах та, поемă кăтартнă тарах, Шупашкара майра патша килсен, Урха хăй телейне тупат:

„...Ыр çын, есĕ ху
Пирĕнпе пырăн Хусана",

тет ӑна майра патша — Иккӗмӗш Кӗтерне. Кун пирки поет калат:

Кӑвак хуппи Урхашӑн уҫӑлчӗ,
Унерпийӗн кӑмӑлӗ хуҫӑлчӗ.

Урха Хусана кайса майра патшан „йеркӗнӗ“ пулат те, чапа тухса таврӑнат:

Урха ҫитрӗ килне
Войеводӑ лашипе, чаплӑ тумтирпе, —
Сӑнӗ-пуҫӗ палӑртат мӑнӑ кӑмӑлне...
Хӑйӗн сылтӑм аллин кача пӳрнинче
Ылттӑн ҫӗрӗ йӑлтӑртатат ахах куҫӗпе.

Ҫак вара Урханӑн чи ҫӳлӗ хӑпарнӑ, чи пысӑк чапа тухнӑ саманчӗ (авӑкӗ) пулса тӑрат. Малала Урханӑн телейӗ вӗҫсе кайат: темӗнле хӑтлансан та Урха хайӗн пӗтмеле шӑпинчен иртеймест. Пӗр самантлӑха вӑл, Ҫиментей кӗслеҫ Питӗре кайса килсен, каллех хӑпарат, — „манӑн вӑйӑм каллех ҫӗкленсе кайма-ла, тин манпа войеводӑ тавлашмӗ малала!“ — тет Урха. Анчах ку вӑхӑтлӑха ҫеҫ пулнӑскер-мӗн: телейсӗр, йыта вилӗмӗ ӑна кӗт-сех тӑнӑ иккен. Пугачов пӑлхаварӗ тапранат те, Ҫӗрпӳ крепӑҫ-не тарса пытаннӑ, „пуйан та чаплӑ“ Урхана ҫакса вӗлереҫҫӗ... Поет кӑтартнипе, Урха хайӗн шӑпинчен нимле те иртме пулта-райман. Кӑна терлӗ паллӑсем те, Унерпи тӗлӗкӗ те малтанах пӗлтернӗ иккен. Хӑрушӑ паллӑсем иккӗ пулнӑ: пӗри — Урха килкартинчи йуманӗ вӑхӑтсӑр шулҫӑ тӑкни, тепри — ҫав йуман урлӑ ҫӑхан кӑранклатса вӗҫсе иртсе кайат. Кусем ҫинчен поемӑ-ра акӑ йепле каланӑ:

Кӑҫал Урханӑн килкарти варринче
Йуманӗ шулҫӑ тӑкнӑ йупа уйахчен.
Куншӑн Мулентей — шӑпӑрӑҫ тухатмӑш
Пӗр ир пычӗ те, тупса паҫӗ тешмӗш:
— „Ырра мар, Урха, ҫапалчӗ ват йуман;
Асту: алп сӑ, ҫӗрле ҫӳрен тӑшман,
Пуҫу ҫине йарӗ сасартӑк инкек,
Хыр кутне парне пар-ха ип каланӑ пек“.
— „Е, ҫав, ват супнӑ, мӗскер лекӗртетен!
Кирлӗ мар ҫӗртен чун шиклентерен!“
Сапла Мулентейпе Урха калаҫат,
Ҫапах та шикленсе йумана пахкалат.

Ҫав вӑхӑтрах йуман урлӑ карклатса
Вӗҫсе кайрӗ ҫӑхан хӑратса.
— „Ах, пӗсмилле, ан пӑрах!“
Терӗҫ иккӗш харӑсах,
Унтан кӗ‘еҫ пӳртеле
Пичке тӗпне тӗплеме..

Урхапа Мулентей пӳртре халап йарса йӑпанма тӑрӑшаҫҫӗ, анчах нумай та вӑхӑт иртеймест — хӑрушӑ паллӑсем ӗҫе кӗме те пуҫлаҫҫӗ иккен:

Ҫапла ларнӑ вӑхатра
Сас илтенчӗ пӑлтӑрта:
Пӳрт алакне йар уҫса,
Кӗрет вӑр-вар васкаса
Асран кайнӑ етем пек
Ҫӳлти касри Патирек...
— „Ырӑ, чаплӑ тус Урха,

Илсе килтӗм пӗр хыпар:
Ӗҫсем пирӗн питех мар“...
Касса кайрӗҫ ҫӗҫӗ пек
Ку сӑмахсем Урхана...
—„Ерне ӗнтӗ еп сисеп
Темле инкек пуласса,
Сан хыпарна ӗненеп,
Акӑ йепле иҫмасса!“

Урха патне васкаса пынӑ Патирек „ҫичӗ йал ҫынни... туртса илчӗ Ҫавала“ тесе пӗлтерет. Ҫакӑнтан вара тапранса кайаҫҫӗ Урханӑн телейсӗр ӗҫӗсем. Мускава кайса „ҫӳлӗ башңӑна“ („Полтавӑ“ поемӑри Кочубей пек) хупӑнса ларасси, тата ытти те. Икӗ хӑрушӑ паллӑ пулни ҫитмест,—тата Урхан арӑмӗ Унерпи те хӑрамала тӗлӗк курнӑ иккен Пӗр сӑмахпа, чӑвашсен авалхи йурринче каланӑ пек,—„турӑ ҫырнинчен иртме ҫук“:

Чипер арӑм Унерпи
Калат тӗлӗк курнине:
—„Кӗҫӗр тӑла кисеппи
Куртӑм,—тет вӑл,—ирхине.
Кисеп тӑла килнинчен
Тухса ӳкрӗ сисиччен.
Унтан кайрӗ йаванса
Таҫта ҫырма тӗпнеле,
Кӗҫ ҫавӑнтах ҫаврӑнса
Тӑла тӗрки хиреле
Кусса-шуса кайрӗ пек.
Вӗҫси-хӗрри курӑнми
Вӑл тӑсӑлса выртрӗ пек.
Ех, ырри мар, хам туйми
Тӗлӗк курса ҫывӑрни!
Темскер чӗре картлатат,
Шар пулассӑн туйӑнат.
Аскӑн майра патшана
Таҫтан пулчӗ тӗл пулни...“

„Йеркӗн“ поемӑн геройӗ Урха произведенин пуҫламӗшӗнчен вӗҫне ҫитиччен авалхи драгеди йатлӑ произведенисенчи геройсем пек сӑнланнӑ: вӑл—паттар, хӑйулӑ, вӑйла, маттур ҫын, анчах ӑна йӑвӑр шӑпа, телей тӑрни, „кӑвак хуппи ҫутӑлма“ пӑрахни пӗтерет. Авалхи грексен епӑслӑ произведенисенче те ҫакӑн пек геройсем сӑнланнӑ. Вырӑссен паллӑ критикӗ В. Г. Белински, авалхи грексен „Илиада“ йатлӑ епӑслӑ произведенине тӗпчевӗ май, ҫапла калана: Ку поемӑн геройӗ—Ахилл мар, мӗншӗн тесен вӑл хӑй тӑвас тенӗ пек нимех те тӑваймаст, ӑна урӑххӑн ирӗкӗ, влаҫӗ пусса тарат. Ҫав урӑххи—Ахилларан вӑйлӑ, аслӑ, пысӑк,—унтан иртме май ҫук. Вӑл—„шӑпа“ тенин, „турӑҫырнилӗх“-ӗн ирӗкӗ („воля судьбы“) пулат,—тет. „Йеркӗн“ поемӑпа унӑн геройӗ ҫинчен те ҫакӑн майлӑ калама сӑлтав пур.

Йепле пулсан та, поемӑ автӑрӗ маркҫисӑм вӗрентӗвне, историлӗ материалисӑм вӗрентӗвне ӑнланса илсе, унпа усӑ курни произведенире курӑнмаст.

Поемӑн ҫтилӗпе формӑлӑ елеменчӑсем ҫинчен.

Произведенин никӗсне хунӑ йурӑхсӑр тӗп шухӑш, паллах ӗнтӗ, унӑн пахалӑхне, пӗтӗмӗшпе илсен, пӗтерсе пӑрахнӑ. Маларах

аса илнĕ Н. Золотов калани—„Чрезвычайно ценная и художественно-исполненная историческая поэма Шубосинни „Ергевь" стоящая по доброте неизмеримо выше существующих к данному времени произведений", тени—тĕрĕс сăмах мар. Кунта И. Д. Кузнецовăн çак сăмахĕсене аса илни вырăнлă пулĕ: „Пирен час-часах тĕшне кăларса пăрахса хуппипе илемлетме хăтланаççĕ. Анчах кунта çакна манмала мар: măйăран йе кирек мĕн çав йышши йапаланăн хуппине тешши пĕр-пĕринчен уйăрăлма пултараççĕ. Илемлĕ произведенисенче формăпа содержани пĕр-пĕринпе уйăрăлми çыхăнса тăраççĕ, вĕсен хушшинче „диалектиклă пĕррелĕх". Çапах та, ку сăмахсем илемлĕ произведенисенчи форма елеменчĕсем çинчен—чĕлхе çинчен, сăмах çаврăнăшĕсем çинчен, илемлетекен прийомсем çинчен т. ыт. савнашкал йапаласем çинчен каласа тĕпчеме йураманнине пĕлтермеççĕ.

„Йеркĕн" поемăра аван, маçтăрлăхпа çырнă уйрăм вырăнсем сахал мар. Кăна паллă тумасăр иртме май çук. Çавăн пек илемлĕ поезин вайлăлăхне, уççăнах катартакан вырăнсене вуланă чухне ирĕксĕрех поетăн сăмахĕсене аса илмеле:

Чĕлхи-çавар пит аван:
Хурçă çурса татмала.
(„Пĕтелмей").

Акă, тĕсвĕхрен сахал сăмахпа вайлă, витĕмлĕ картинасем сăнласа кăтартма пултарнине палăртакан вырăнсем:

1. Аслă чаплă Шупашкар,
Сырса илнĕ çичĕ вар.
Вирçĕ теме, хĕрлĕ ту.
Çăн тўпинче Хуралту.
Йалтăраççĕ чиркисем.
Мĕкĕреççĕ чанĕсем..
2. Манастыр сумĕнче икĕ хутлă чул çурт,
Хĕтлĕпе сăрласа йерешлене мăн çурт,
Хвйарран пăхса ларат хула çинеле—
Патша пусмăрлăхĕн ирĕкне пĕлтерсе...

Йе тата çутçанталăк курăнавĕсене сăнласа кăтартакан картинăсене етемсен кăмăлĕпе, вĕсен ĕçĕсемпе килĕштерсе, маçтăррăн çыхăнтарма пĕлни е палăртакан вырăн:

Енте çиçем çиçет аслати авăтат,
Пĕтĕм тĕнче тĕсĕ тĕксĕмпе хуплинат.
Çилтавăлпа тухса çавра çил ахарат,
Пĕлĕтпе çер тусан çавăранса хутшăнат.
Йавăççем аванса, çўç пуçне салатса,
Ўлеççĕ çилпеле чĕрчун хăратса..
Йăлтарти йăлтăрти пĕлĕт хемле пушши
Шартлатса тăсăлат çер чикки тăрăшни...
Урха çитнĕ-çитмен сырса илчĕç тўрех
Хăйĕн çывăх туслă хурăнташ-пĕлĕшсем,
Арăмĕ чĕтресе чупса пычĕ кĕл тĕслех,
Пуплеме те пĕлмест, сĕлкĕшленнĕ куçĕсем...

тата ытти те.

Пумай тĕлсем, уйрăмăнах çичĕ сыпăклă çтихпа çырнисенчен ытла та йака:

Йухат Йĕрĕшў йăлтăртатса
Симес улăх хушшипе,

Гуй çĕлен пек авкаланса
Çырма çатра таршшипе
Ӑнта-кунта вĕтлех вăрман
Йĕршшӳ икĕ йенĕпе:
Кĕреньпе хуня йуман,
Тата шешкĕ йĕркипех...

Çав вăхăтрах, поемăра йапăхрах сăвăланă вырăнсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕх:

Чăвашсем йерипен уйсене тухса
Йумахлахра пуçтараççĕ йĕкел:
Вăл—выльăх-чĕрлĕхе самăртакан ѐмел—
Кăçал калама çук тухăçлă пулса.

Ку произведенире Шупуççынни чăваш фольклорĕпе калама çук сарлакан ăн усă курнă. Анчах фольклор произведенисен пахалăхĕ пĕр пек мар. Çакна астуса, писатĕлсен фольклорăн йурахла елеменчĕсемпе анчах усă курмала.

Ку йенчен илсен, „Йеркĕн“ поемăра автăр фольклор материалĕпе нимĕн асăрхамасăр, нимĕн суйламасăр, нимĕнле виçе тавраш пĕлмесĕр, пĕлме те тăрăшмасăр—усă курни паллă. Кирек-мĕнле вулакана та çакăн пек „фольклор чечекĕсем“ йăлăхтарса çитереççĕ:

Туй арăмсем, акăшсем
Тăрăхласа йурăр,
Мăшкăлаççĕ халь вĕсем:
...Пирĕн шăллăм нимăсăр,
Арăм тĕлне тупмасăр,
Хыт сак çинче çĕр каçнă.
Ура салтас, саланас,
Çĕр выртмасăр кайас мар,
Хăналанас, туй тăвас,
Виçĕ кунсăр уйрас мар...
Айта, инке, йара пар,
Йулашкине пире пар“.

Мĕн тума кирлĕ пирĕн илемлĕ литературăра çакнашкал „чечексем“? Темĕншĕн пирĕн пысăк поет çавăн пек йапаласемшĕн „каççах“ кайат. Тĕслĕхрен, тухатмăшсем хăйсен „пăставăш чĕлхи-самаххисемпе“ „Хитре Чĕкеç“-ре те, „Вĕри çĕлен“-ре те, „Хĕр хули“-ре те (1923 çулта тухнă „Чăваш календар“-ĕнче пичетлевĕ), „Йеркĕн“ поемăра та вулакана хăшкалтараççĕ.

„Хĕр хули“ йатлă произведенире те, „Йеркĕн“-ре те „тухатмăш Мулентей“ пĕр „пăставăш чĕлхи“нех, кăшт улăштарам пекки туса, калат. Кун пек йапала поетшăн „асран каймин аки сухи“ вырăннех пулмала.

Арамсем, хĕрсем васкамарĕç килсене,
Вакларĕç самах, çапрĕç пайтах талпаса,—

тет поет пĕр тĕлте. Ку сăмахсене „Йеркĕн“ автăрĕ çинчен калама та йурат. Анчах, çавăн пек „талпас çапнин“ усси нумайах мар.

Чехов каланă: „Пĕрремĕш актăра пăшал çакăнса тăрат пулсан, йулашки актăра унăн перес пулат“, тенĕ. Ку сăмахсем илемлĕ произведенире кирлĕ марри, ытлашшийĕ ним те пулмала мар тевине пĕлтернĕ. Тӳррех калас пулат: „Йеркĕн“ поемăра „пемен пăшалсем темĕн чухлех...“

Йулашкинчен тата акă мĕн çине çаврăнса пăхмала. Хăйĕн поемине Шупуççынни, авалхи класçик текен поетсен прийомĕпе усă курса, йурлавçă сăмахĕсемпе пуçлат, ун сăмахĕсемпе пĕтерет. Йурлавçăн пуçламĕш сăмахĕсем çаксем:

Сарă кăтра çӳçĕме
Епĕ турам-и?
Вăрăм йаштак пĕвĕме
Тӳрĕ тытам-и?
Шурă çамкан сарлаки
Çынна курăнтар:
Ватă çын та çамрăкки
Мана пуç тайтăр.
Пуç тăрине картуса
Чалăш лартам-и?
Хура пустав сăхмана
Йӳле йарам-и?
Тĕрлĕ умлă шур кĕпи
Капăр курăнтăр:
Сарă хĕрсен кăмăлĕ
Пире пăхăвтăр.
Вут хĕлĕхлĕ кĕслеве
Алла тытам и?
Шĕвĕр пурне вĕçсемпе
Кĕвĕ калам и?
Епĕ илтсе пĕлнине
Пĕтĕм çын пĕлтĕр,
Иртсе кайнă ĕçсене
Илтсе тĕлентĕр.
Хутран-ситрен, ывăнсан
Пуçла сулам-и?
Çăвар типе пуçласан
Пăртак сыпам-и?
Кусăм-пусăм вут та хĕм
Выляса кайтăр;
Илтсе тăран йаш-кĕрĕм
Мана тăнлантăр

Çапла ĕнтĕ, „сарă кăтра çӳçлĕ“, „вăрăм йаштак пӳлĕ“, „сарлака шурă çамкалă“, „вут хĕлĕхлĕ кĕслелĕ“, йурлавçă поет „пĕтĕм çын“ валђђи, „ватă çын та çамрăкки“ валђђи йурлат иккен. Уншăн клас уйрăмлăхĕ çук.

Поемă вĕçĕнче йурлавçă калат:

Вун хĕлĕхлĕ кесле, йурăм вĕçне тĕпле,
Илтсе тăран халăх,— сана пултăр сывлăх;
Тепĕр йурă йурлăп—ун чух тата итле,
Йурлăп халђи çинчен — унта тупăн ырлăх.

Ăçтан илнĕ Шупуççынни çакăн пек йурлавçа типне. Паллах, ку йурлавçă — пролетари йурлавçи мар: пролетари поечĕ пĕтĕм халăх валђђи йурламаст, вăл ĕççыннисем валђђи йурлат, тата вăл Урха пек улпутсем çинчен хаваслана йурлама пултараймаст. Ку йурлавçă — Совет йурлавçи те мар, мĕншĕн тесен, „Совет йурлавçи“ „пролетари йурлавçинчен“ айакрах тамаст, вăл вăй çитнĕ таран çак йулашки йата тивĕçлĕ пулма тăрăшат.

Поемăри йурлавçăн сăн-сăпачĕ — дворйан литературинчен хывçен илнĕскер. Сăмахран, вăл тӳррех авалхи пуйан çĕрулпучĕсен ĕçки-çикисенчи „гусляры-скоморохи“ текен мыскарасăсемпе йурлавçăсене аса илтерет. Тĕслĕхрен, Лермонтовăн „Саттур

Калашник хуçа çинчен хунă йурри“ (ăна „Нарспи“ авторĕ чăвашла куçарнă) кĕслеçĕ-йурлавçасен çакăн пек „йуррипе“ пуçланат:

Ей, аслă патша, ей, Иван ĕмпӳ!
Сан çинчен епĕр йурă хутăмăр,
Ху йуратнă чуру, сыхлавçу, çинчен
Тата паттăр хуçа Калашник çинчен,
Ĕлĕкхи шайпа йурă хутăмăр,
Кеслепе выљатса йурра йытăмăр,
Пĕр вуларăмăр, такмакларăмăр,
Ăна ырă халăх итлесе тăчĕ,
Çине аслă улпут Ромадан Матви
Куркипех тыттарчĕ пире йӳçнĕ пыл,
Унăн шурă питлĕ сарă арăмĕ
Кĕмĕл тирке çинчен çĕклесе пычĕ
Пурнăçпа тĕрленнĕ çĕнĕ алшăли.
Виçĕ кун, виçĕ каç хăна пултăмăр,
Çак йурра итлесе тăранаймарĕç çав.

Лермонтов поемин I-мĕшпе II-мĕш йурри çак сăмахсемпе пĕтет:

Ай, ачисем, йурлăр-ха, кĕслĕрсене майласа.
Ай, ачасем, ĕçĕр-ха, ĕçĕрсене астуса
Кăмăлне кӳрер-ха ырă улпутпа
Унăн шурă питлĕ сарă арăмне.

Поемă кĕслевçĕ-йурлавçăсен çакăн пек йуррипе пĕтет:

Ей-ех, маттур каччисем,
Есир çамрăк кĕслевçĕсем,
Йăнтăр йантăр сассисем!
Ытла хитре пуçласан, хитререх те пĕтерĕр,
Пур çынна та йураса ун кăмăлне çитерĕр.
Мухтав аслă улпута!
Мухтав хитре арăмне!
Мухтав мĕн пур халăха! Мухтав!

Пĕр иккеленмесĕрех каламала: çаксем пурте „Йеркĕн“ поемăри пуçламĕш йуррине те, „Йеркĕн“ содержанине те пит аса илтереççĕ.

Паллах, вĕсем Шупуççынни çине хытă пусăмланă. Çавăн пирки вара поеми вулакана гĕлĕвтерекен йапала пулса тăнă.

Халĕ вулакан поетăн çак сăмахĕсем ĕçе кĕрессине кĕтет:

Тепĕр йура йурлăп — ун чухне тата итле:
Йурлăп халхи çинчен — унта туйăн ырлăх.

В. ДОЛГОВ-ХУДАР.

МЕТОД ЙĂНĂШĔ.

А. ПЕТТОКИ ÇЫРНĂ „ÇИРĔМ ИККĔ“ ÇИНЧЕН.

А. Петтоки граждăн вăрçи вăхăчĕ çинчен пысăк йапалах çырчĕ. Вăл „Çирĕм иккĕ“ (йатсăрсем) йатлă поемă пичетлесе кăларчĕ. Паллах ĕвтĕ, вăл унăн утăмĕ пулса тăрат, анчах вăл произведенире, унăн лайăх йенсемпе пĕрлех, ытла та пысăк ситменлĕхсем пур Вăл çитменлĕхсем автăра пысăк йăнăшсем патнех илсе пырасçĕ

„Çирĕм иккĕ“ пирки çыракансем те ĕнтĕ пулчĕç. „Петтоки й-шăн „Çирĕм иккĕ“ йатлă поеми Хĕрлĕ çар историн пĕр татăкне кăтартакан, граждăн вăрçин йатсăр паттарĕсем çинчен каласа кăтартакан паха, илемлĕ произведени“, — тет çак произведени çинчен Локаф-ăн чăваш уйрăмĕ[1].

Кун çинченех тата Д. Данилов „Советская Чувашия“ кĕнекере çапла çырат: „В последнее время Петтоки выступил с большой поэмой „Двадцать два“... Основное достоинство творческой работы т. Петтоки в том, что поэт, работая на материале героических битв Красной армии, защищавшей завоевания Октября, старается подходить к теме с точки зрения сегодняшних задач социалистического строительства, а не просто, как к героике прошлого“[2].

Ку поемă пирки урăх çĕрте çырман, çавăнпа та епĕр „Çирĕм иккĕ“ çинчен кĕскен те пулин çырас тетпĕр.

„Çирĕм иккĕ“ поемăна авгăр 1928 — 1930-мĕш çулсенче, хăй Хĕрлĕ çар ĕретĕнче чухне çырнă. Поемăн тематики те Хĕрлĕ çар пурнăçĕнчен илнĕскер. Поемăна конструкци йенчен пăхсан, епĕр çакна куратпăр: унăн малта пролог пекки, кайра епилог пекки пур. Çырма пĕтĕмпех сăвăпа, сăвăн тĕрлĕ техникипе усă курса çырна. Ăна вăл поемă варри илнĕ пуйан событисем çинчен çутăраххăн, çивĕчреххĕн каласа парас шутпа тунă

Поемăра кăтартнă ĕçсем граждăн вăрçи вăхăтĕнче пулса иртнĕ. Вырăнĕ — Украинă. Ку вырăнсене капиталисла патшалăхсем хупăрласа илнĕ. Ун чухне Хĕрлĕ çарпа шурă çар хушшинче хайар кĕрешӳ (граждан вăрçи) пынă. Хĕрлĕ салтаксем нимле йăвăрлăха пăхмасăр паттăррăн кĕрешнĕ.

Петтоки хăйĕн поеминче çак пысăк темăна лартнă. Унта вăл хĕрлĕ салтаксен массине, вĕсене йертсе пыракансене кăтартасшăн пулнă.

---

[1] Кĕнеке умсăмахĕнчен.

[2] „Советская Чувашия“, стр. 205. Курсив пур çĕрте те пирĕн.— В. Д.

Хӗрлӗ салтаксене, автӑр поемӑра кӑтартнӑ тӑрӑх, йатсӑр паттӑрсем—„çирӗм иккӗн“ йертсе пыраççӗ, „шуррисем хура çӑхан пуххи пек“ шавласа ӗçеççӗ.

Кӗркунне. Хӗрлисен задачӗ — „вӑрттӑн йӗр йӗрлесси“ (29 стр.). Вӗсем шуррисен фронтне пырса кӗреççӗ, анчах шуррисен аллине лекеççӗ.

Çуркунне. Çирӗм икӗ йатсӑра шуррисем персе вӗлереççӗ. Поема çакӑнпа вара пӗтет. Йулашкинчен автӑр:

Çирӗм иккӗн вӗсем — йатсӑрсем,
Çирӗм иккӗне йурӑра астӑвӑр!
Çирӗм иккӗн вилнӗ паттӑрсем,
Çирӗм иккӗн йатсӑр комунар"—

тесе хурат.

Çакӑн пек, кӗскен каласан, „Çирӗм иккӗн“ содержанийӗ,— ӑна автӑр мӗнле çыхса пыни çинчен малала каласа парӑпӑр.

*
* *

А. Петтокин „Çирӗм иккӗ“ поемине вуланӑ чух, Александр Блокӑн „Вуниккӗ“ йатлӑ поеми аса килет. Мӗншӗн тесен, çак поемӑсене иккӗшне те символисӑм меточӗпе çырнӑ. Символиссен тӗп художӗствӑла меточӗ — с и м в о л, тӗп шухӑшӗ — м и с т и ц и с а м. Çаксем урлӑ символиссем пурнӑçа кӑтартса парасшӑн. Вӗсен шухӑшӗсем тӗнлӗ, тӗтрелӗ, тӗксӗм тухаççӗ. „Çирӗм иккӗри“ шухӑшсем те çавӑн пекрех тухнӑ. Унта революцилӗ шухӑшсемпе пӗрлех мистикӑла шухӑшсем те пур „Çирӗм иккӗри“ геройсем те ытла та çинçе тухнӑ, вӗсем граждӑн вӑрçи геройӗсем пек мар.

Пӗтӗмӗшпе илсен, „Çирӗм иккӗ“ революциле произведени, анчах автӑр мистикӑла шухӑшсемпе пысӑк трагедийе лекнӗ. Петтоки революципе мистикӑна, хастарлахпа макӑрува çырлахтарасшӑн пулнӑ. Революципе граждӑн вӑрçине йурӑхсӑр обрӑзсемпе кӑтартнӑ. „Революци вӑйхӑвачӗ“ тенӗ уйрӑмра революци çинчен вӑл çапла çырат:

„Шханулӑ çӗр çийӗн,
Çерçийӗн
Çивче çиçӗм çиçет...“
(„Çирӗм иккӗ“, 13 стр.).

Йе тата:

....Чарусӑр çиçӗм çиçкӗнет.
Çиç, çиçем,
Çивчӗн,
Çирӗп!
— Йалт-йалт!
— Чӑат-чолт!“,—

тет вӑл революци çинчевех „Ç и ç ӗ м“ йатлӑ сӑввинче[1].

Кунта автӑр Октабӗрти революци çинчен ӧнтӗ çырат. Ун шучӗпе, „çивчӗ çиçӗм“—вӑл Октабӗрти революци. Анчах Октабӗрти революци „çиçӗм“ пек кӑна пулнӑ-ши? Пирӗн шутпа, çак Аслӑ революцийе „çиçӗмпе“ (çивӗч-и вӑл, çивӗч мар-и?—пурӗ пӗрех!) таплаштарса обрӑзлани килӗшӳсӗр йапала, йурӑхсӑр, символла

[1] „Трактӑр“, 2-мӗш кӗнеке.

образ. Мĕншĕн тесен, çиçĕм — стихийăлă вăй кăна, ăна никам та йертсе пымаст, вăл хăй-тĕллĕнех пулса пырат. Октябĕрти революци апла пулман, Октябĕрти революци организациленнĕ вăй йертсе пынипе пулнă. Çиçĕм пĕрре курăнат те çухалат, тĕнче çав-çавах йулат. Октябĕрти революци ун пек йапала пулман. Вăл çĕнĕ общчĕствăн, çĕнĕ историн алăкне уçса, пĕтĕм Раççейри халăхсен пурнăçне тĕпрен урăхлатрĕ, вăл пĕтĕм тĕнчешĕн калама çук хăватлă вăй пулса тăчĕ. Октябĕрти пролетари революцине çитекен вăй тĕнчере ку вăхăтчен пулман та Вăл „ç е р ç и й ĕ н“ кăна вĕçсе иртмен, çерçи çиçĕмрен те вăйсăр, анчах Октябĕрти революцийе çиçĕмпе те танлаштарма çук. Çерçи вĕçнĕ пек, çиçĕм пек „чăлт-чолт!“ пулса иртекен „революцирен“ кулмали кăна йулат. Мĕншĕн тесен, вăл чăн-чăн революцирен ытла та катэра тăракан йапала иккенне такам та пĕлет.

Малала автăр хăйĕн символĕсемпе пĕтĕмпех мистикă ăшне кĕрсе ӳкет. Вăл революци çинчен çырат:

„К ă в а к х у п п и й ĕ (?!)
У ç ă л ч ĕ п ĕ р р е,—
Ç ĕ р т ӳ п и й ĕ
П у л м а л а п и р е“ (23 стр.).

Турра ĕненекен çынсем каланă тăрăх, „к ă в а к х у п п и“ — вăл „турăран“, айакри вăйсенчен („светуй сывлăшĕнчен) килекен йапала. Вăл пĕтĕмпех тĕнрен тухса тăракан, етем ăстăнне лапăртакан шухăш. Революцийе „кăвак хуппи“ уçăлни пек туса кăтартни пĕрре те тĕрĕс мар. Октябĕрти революцийе „турă“ мар, малта пыракан ĕççыннисем комуннисcен партийĕ йертсе пынипе тунă.

Автăр тепĕр çĕрте çырат:

„Куççуль тăкат ват имеш,
Кетет, кĕтет çулран..
В ĕ ç с е к а й а н х у р а к ĕ ш
К а л а т: „а н к ĕ т у л н а!“ (27 стр.).

Ку ĕнтĕ каллех автăр мистикине кăтартакан йапала. Вăл: „турă пур, ăна пуççапăр!“ темест пулсан та, савăн тавра çӳрекен шухăш. Тĕн çыннисем вĕрентнĕ тăрăх, хуракĕш „светуйла“ кайăк, вăл инкек-синкек пулассине те каласа парат. „Çирĕм иккĕ“ автăрĕ те хăйĕн кайăкпе инкек пуласси çинчен калаттарат.

Çапла, автăра символисăм меточĕ — „кăвак хуппи“, „светуйла“ кайăк—„хуракĕш“ каланисем патне туртат Çавăнпа та, А. Петтоки „Çирĕм иккĕ“ поеминче пысăк трагедийе лекет. Пĕр йенчен. вăл хăватлă революцийе кăтартасшăн. тепĕр йенчен ăна религиле-мистикăла шухăшсем айаккала туртаççĕ. Çапла çав, „вилнĕ арусен кивĕ йăлисемпе шухăшĕсем чĕррисен ăстăнĕ çинче йăваррăн тăраççĕ“ (К. Маркс).

Çакăнта ĕнтĕ автăрăн тĕп трагедийĕ, поемари çитменлĕхсемпе йăнăшсен тĕп социала сăлтавĕсем те çакăнтах.

Поемари çирĕм икĕ геройа илсе пăхсан та епĕр çавнах куратпăр. Çирĕм икĕ герой та çав трагедипех сыхăннă. Сыхăннă

кӑна та мар, ҫак трагеди вӗсене хӑй ҫумне ҫыхса, пӑталаса, кӑшӑлласа лартнӑ.

Автӑр ҫирӗм икӗ комунар урлӑ мӗн кӑтартасшӑн пулнӑ-ха? Калас пулат, ку вырӑн ытла та тӗксӗм, ытла та ҫинҫе тухнӑ. Ҫавӑнпа та, автӑр мӗн кӑтартас тени те паллӑ мар. Пӗр йенчен, ҫирӗм икӗ герой урлӑ автӑр пӗтӗм Хӗрлӗ ҫара кӑтартасшӑн пулнӑ; иккӗмӗш йенчен, Хӗрлӗ ҫарти разведкӑна кӑтартасшӑн пулнӑ; виҫҫӗмӗш йенчен, комуниссен партин Хӗрлӗ ҫарти руководствине кӑтартасшӑн пулнӑ

Ҫирӗм икӗ герой ҫинчен автӑр ҫырат:

„Ҫирӗм иккӗн хӑйсем,
Ҫирӗм ик ҫын:
Пӗлмеҫҫӗ мӗн йатлӑ хӑшши,
Аҫти ҫын
Мӗн тӑвас-ха йатпа?!.
—Пӗр йат пур:
Кашнийӗн пӗр йат—
Б о љ ш е в и к!“ (17—18 стр.).

Йе тата:

„Ҫирӗм иккӗн малта
Йӗр йӗрлеҫ“ (18 стр.).
„Ҫирӗм иккӗн
Утаҫ малалах,
Ҫӗр хушшийӗн
Ҫитеҫ пӗр йала“ (24 стр.).

Ку сӑмахсенчен, ҫирӗм икӗ ҫын пурте бољшевиксен партинче тӑни курӑнат. Поемӑра урӑх бољшевиксем ҫук. Паллах ӗнтӗ, ҫирӗм икӗ бољшевикӑн руководствӑ парса тӑмала пулнӑ, паллах ӗнтӗ, ҫак бољшевиксем урлӑ автӑр комуниссен партин Хӗрлӗ ҫарти руководствине кӑтартасшӑн пулнӑ. Ҫав вӑхӑтрах ҫак бољшевиксем разведкӑ пулса тӑраҫҫӗ. (Мӗншӗн разведка бољшевиксем анчах кайни паллӑ мар). Ҫак ҫирӗм икӗ герой шурӑ ҫар аллине лекеҫҫӗ. Шуррисем ҫирӗм икӗ бољшевика персе вӗлереҫҫӗ,—ҫакӑ вара поемӑн финалӗ пулса тӑрат.

„Пӗр ӗмӗтре ҫунса
Вилчӗҫ пӗр ӗҫшӗнех:
Ӗҫхалӑхне сунсах
Керсе ӳ рӗҫ ҫер ӑшне“ (34 стр.).

тет кун ҫинчен автӑр Пурте пӗтет: руководствӑ пӗтет, разведка пӗтет, поемӑри Хӗрлӗ ҫар та таҫта кайса кӗрет (ку та пӗтет пулас?) Ҫаканпа поеми те салхулӑн пӗтет:

„Йурлӑ, кӗслем, сӗрле!
Чун хавалне тапрат!
Манӑн йурӑ—ҫирӗм иккӗшӗнех,
Ҫирӗм иккӗшӗнех макӑрат“.

Кунтан епӗр тата мӗн куратпӑр-ха? Поемӑри ҫар амасӑр хуртсем пек саланса кайат. Геройсем паттӑррӑн кӗрешес вырӑнне пӗрмайах к у ҫ ҫ у љ п е ҫ ӑ в ӑ н а ҫ ҫ ӗ, пӗрмайах т а к а н а ҫ ҫ ӗ. Поет хӑй те макӑрат, йурри те макӑрат, поет хыҫҫӑн ҫил те макӑрат.

„Манӑн йурӑ ҫирӗм ик туслӑнах,
Ҫирӗм иккӗшӗнех м а к ӑ р а т“ (28 стр.).
„Хура тивӗҫ кӑпӑкӑн й ӗ р с е
Чӑтаймасӑр тем пек хумханат“ (11 стр.).

„Лăпам çийпе йĕрсе
Вăш-вăш вĕрет тек çил“ (33 стр.).

Йе тата:

„Ак утаççĕ, утаççĕ...
Чупаççĕ, такăнаççĕ...“ (16 стр.).
„Тек утас,
Такăнас“ (18 стр.)
„Çĕр çи çайĕн
Утас такăнсах“ (23 стр.).
„Выçса халран ÿкое,
Ывăнса—ура утмаст“ (28 стр.).

Çав вăхăтрах:

„Ака, çавра çилĕн
Вĕçет утлă çар;
Умра-ыхсра вилĕм,—
Ан пăх! (?) Йарапар!“ (21 стр.).

Револ̧уци çулĕ такăр пулнă темĕпĕр. Анчах вăл револ̧уци геройĕсем пĕрмайах такăнни пĕрре те пĕлтермест. Макăракансем те пулман темĕпĕр. Анчах вăл унăн геройĕсем пĕрмайах макăрнине пĕлтермест. Револ̧уци, граждăн вăрçи геройĕсем „Çирĕм иккĕри“ пек тĕкеĕм, тĕрексĕр пулман. Вĕсем хушшинче тата расналăх пулнах. Тем пулсан та, çирĕм икĕ бол̧шевик пур йенчен те пĕр пек çирĕм икĕ çăмарта пек пулман. Çавăнпа та вĕсене обезличкăласа кăтартни тĕрĕс мар. Тата мĕншĕн утлă çар „çавра çилĕн“ (стихийăла), ниме шута илмесĕр, ниçтала пăхмасăр, пĕр тĕлсĕр (таçта? Вĕт умра та, хыçра та вилĕм!) вĕçтерет? Умра вилĕм пулсан, мĕншĕн вилĕм çине „ан пăх!.. йарапар!“ тесе ыйрас? Ку вара çапăçува чĕнекен призыв пулат-ши? Йе тата: епĕр нимрен те хăрамастпăр, пурте пире „нипочем“ тени пулат-ши? Мен пулсан та, поемă кулăшла пĕтет, çирĕм икĕ „бол̧шевика“, çирĕм икĕ „комунара“ ним пĕлми ÿссĕр шура офицерсемех тытса персе вĕлереççĕ. Кун хыççăн „пинĕн-пинĕн“ пынă массăсем те таçта кайса çухалаççĕ.

Калас пулат, ку çитменлĕхсемпе йăнăшсем пĕтĕмпех автăр методĕнчен килнĕ. Епĕр халĕ социалисăмла реалисам меточĕшĕн кĕрешетпĕр. Пурнăçа тĕрĕс, марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕ витĕр пăхса кăтартмала тетпĕр „Тĕрĕслĕхе сырăр“,—тенĕ Сталин йултăш совет писатĕлĕсене,—анчах „Совет сойузĕ çинчен калана тĕрĕслĕх канфетка пек тутлă, тата Тула хулинче тăвакан сăмавар пек çутă пулма пултараймаст“, —тенĕ вăл. Анчах вăл Совет сойузĕ çинчен, иртнĕ çулсенчи кĕрешÿ çинчен каланă тĕрĕслех пĕтĕмпех йÿçĕ, харушă, куççулĕ пулнине те пĕлтермест. Пире хамăр йăвăрлăхсем çинчен кăтартса пани те кĕрешĕве чĕнтĕр, вăй-хал патăр, пушаннă шăпăрсене тереклĕх патăр, -- литературăпа искусствă ăна тума пултараççĕ.

„Стучи барабан и тревогой
Уснувших от сна пробуди—
Вот смысл величайший искусства—
А сам маршируй впереди“—

тенĕ ĕлĕкех нимĕççен паллă поечĕ Генрих Гейне. Анчах „Çирĕм иккĕ“ çÿлте калана пек тухман. Вăл ытла та тĕтрелĕ, çемçе шăнарлă, вулакана религиле-мистикăла шухăшсемпе хупăрлакан пулса тухнă.

Автăр. тен, хăйĕн субйективлă ĕмĕчĕпе пĕтĕмпех урăхла шутлавă пулĕ, анчах пуçра капланса килекен шухăшсене калама пĕлес пулат. Поемă çырасси çăмăл ĕç мар. Хăш чух, шухăшсене калапласа партма пĕлмен пирки, сийĕн кӳрекен йапаласем те пулма пултараççĕ.

Малала тата уйрăм вырăнсем çинчен кăшт калăпăр. Украинă çинчен 9-мĕш страницăра автăр çырат:

Украинă—
Вĕçсĕр хир.
Украина—
Тĕрлĕ пир,—

тесе Тепĕр çĕрте Украинă çинченех калат:

Украинă хирĕ —
Лаптăк такана.

Çапла вара, пĕр образĕ тарăх—„Украинă — вĕçсĕр хир“, тепĕр образĕ тарăх —„лаптăк такана“. Ку образсене удачнăй тесе калама çук. Вĕсем тарăх, Украинăва „вĕçсĕр такана“ теме те пулат.

Кунта тата чĕлхе çинчен калма тивет. Автăр сăмахсене калама çук хуçкаласа пĕтернĕ. Хуçса пĕтернĕ сăмахсене хăшне-пĕрне сноскăпа ăнлантарса панă Сăмахранах: „чăршийĕ—чаршавĕ“. „çур—çывăр“. „мĕн чулĕ—мĕн чухлĕ“, „улă ывăлĕ“, „çӳксем — çĕвĕксем“, „сер — есĕр“, „куклевсанаç — куклевсе аваç“. „кĕрсӳкрĕç — кĕрсе ӳкрĕç“ т. ыт. т. Пĕр сăмахпа каласан, Петтоки çырнă сăмахсене нумайĕшне сноскăпа ăнлантарса парас пулат. Вулакансене уксак, алăсăр, çурçансăр, куççăр, хăлхасăр, чĕлхесĕр сăмахсем кирлĕ мар, вĕсене чечеклевсе таракан пурнăçран илнĕ литературăлă илемлĕ чĕлхе сăмахĕсем кирлĕ. Паллах, çырасса çырмала, анчах хамăр тăван чĕлхене йусассине те манмала мар. „Чĕлхене илсен мĕн куратпăр-ха? — тет ку ыйту пирки С. П. Петров — Тепер чухне чĕлхерен мăшкăлани, тăрăхлани палăрат. Уйрăмăнах пирĕн хаçатсенче чĕлхене мăкăлтаса, пăсса, ăнланмала мар çыраççĕ. Чăваш чĕлхине ăнланма пĕлсен, вăл аван чĕлхе. Ăва пичетре те аванлатмала... Чĕлхе çине пӳрне витĕр пăхни кирлĕ мар“[1].

Çакăн пек „Çирĕм иккĕн“ тĕп ситменлĕхĕсемпе йăнăшĕсем. Вĕсем пурте автăр творчествă методне лайăх çавăрса илейменнинчен килнĕ. Вĕсем тата втăр халăх сăмахĕсемпе, халăх творчествипе усă курма пĕлменнинчен те килнĕ Ку тĕлĕшпе Петтоки йулташăн анчах мар, ытти пис тĕлсемпе поетсен те нумай ĕçлемеле. Тăрăшса ĕçлемесен боçшевисамăн пысăк искусствине тума çук. Ку та сахал, ку тĕлешпе мĕн пур совет писатĕлĕсен пĕрлешсе, апрăн ала тытса ĕçлес пулат, пĕр-пĕрин çитменлĕхĕсемпе йăнăшĕсене пĕрре пытармасăр, йултăшла кăтартса парас пулат. Петтоки йултăша та пирĕн пулăшмала, пирĕн литературăра комунис-писатĕлсем ытла та сахал. Петтоки пирĕн комунис-поетсенчен пĕри. Унăн ку поемăра чылай шăйрăксем пулчĕç, — паллах, вĕсене малашне вăл тумĕ, шанатпăр!

Шупашкар, 29-III-33 г

[1] „Сунтал“, 8-мĕш №, 1932 ç

Н. ВАÇАНКА.

Чăвашла илемлĕ литературă кăларас ĕç.

Пичет ĕçĕ, кĕнеке-хаçат кăларасси клас кĕрешĕвĕнче пит те пысăк вырăн йышăнса тăрат. Ун çинчен тата ĕçхалăхне мĕнле хаçат, мĕнле чĕлхепе çырнă илемлĕ литературă кирлине В. И. Ленин тата Сталин йулташсем пит те аван, çивĕччĕн тата татăклăн кăтартса параççĕ.

> „Пурнăçăн пур йенĕсенчен те илнĕ чĕрĕ, конкретлă тĕслĕхсемпе, примерсемпе пичетĕн массăна воçпитани парас тĕлĕшпе ĕçлемеле. Капиталисăмран комунисăма куçнă вăхăтра пичетĕн чи кирлĕ ĕçĕ çакă пулат“,—тет В. И. Ленин.
>
> „Пичет пит те пысăк вырăн йышăнса тăни паллах. Пичет пирĕн партипе рабочи класăн кашни куллен, кашни сехетре, ăнланмала чĕлхепе тата ĕçхалăхне кирли çинчен калаçа паракан чи вăйлă хĕçпăшалĕ“,—тет Сталин йулташ.

Халăха çывăх, лайăх ăнланмала чĕлхепе, тата çав вăхăтрах ыйтусене тарăнăн илсе çырма пире большевиксем вĕрентсе каланисем сахал мар Çак задачсене йепле пурнăçласа пыни йенчен пăхса, пирĕн хамăр ĕçсене пахаламала та ĕнтĕ.

Октабĕр революцийĕ нушалă, тĕттĕмри Раççей вырăнне урăх, çутă сăн-сăпатлă патшалăх туса хучĕ. Пичете, кĕнеке-хаçат кăларас ĕçе илсе пăхсассăн, пирĕн 15—16 çул хушшинчи ÿсĕмсем пит те пысăк.

1913-мĕш çулта Раççейре пурĕ 859 хаçат çеç пулнă пулсан, 1932-мĕш çулта, пĕрремĕш пйатилеткă хыççăн, пĕтĕм Совет Сойузĕне пурĕ 6775 хаçат хисепленет. 1932-мĕш çулта Совет Сойузĕнче пурĕ пилĕк мĕлйард № хаçат тухнă. Вĕсемсĕр пуçне тата журналсем, альманахсем те темĕн чухлĕ.

Патша влаçĕ чухне Раççейре вырăс мар халăхсенчен 22 халăх çеç хаçат кăларма пултарнă Халĕ хаçат 67 чĕлхепе тухса тăрат (1932 çулхи хисеппе).

Кĕнеке кăларас тĕлĕшпе илсессĕн те, халĕ тĕнчере Совет Сойузĕ пек кĕнеке кăларакан пĕр патшалах та çук. Кĕнекесен тиражĕ йенчен те тĕнчере епĕр чи малти выранта тăратпăр. Тата виçта та кĕнекесем пирĕнни пек хăвăрт массă хушшине вырнаçмаççĕ.

СССР-че пĕр çулталăкра пурĕ 50 000 тĕслĕ кĕнеке (кĕнеке йачĕн хисепĕ) кăларнă. Кĕнеке кăларас тĕлĕшпе паллă вырăн йышăнса тăракан Германи, Америкă, Англи патшалăхĕсем пирĕнтен чылай кайра тăраççĕ. Кĕнеке фронтĕнче епĕр, кĕнеке содержанийĕ йенчен кăна мар, хисепĕсем тĕлĕшпе те капиталисла патшалăхсене хăваласа çитсе иртсе кайнă

Пирĕн чăваш хаçачĕсене илсен, декабĕр уйăхĕ тĕлне (1932 çул) республикăри тата район хаçачĕсем пурĕ 35 хаçат хисепленеççĕ. Вĕсем чăваш республикинче, Тутар, Пушкарт р-че, Вăтам Атăл крайĕнче, Çĕпĕрте тата Мускавра тухаççĕ. Асăннă 35 хаçатсемсĕр пуçне, пирĕн тата хапрăк-савăтсенче пичетленсе тухакан

хаҫатсем пур (Ҫӗмӗрлере, Вӑрнарта, Шупашкарти типографинче тата ыт. те). Чӑваш республикин тӗп хулинчех 5 хаҫат: „Канаш“, „Ҫамрӑк колхозник“, „Колхозник йалавӗ“, „Пионер сасси“ тата вырӑсла хаҫат „Красная Чувашия“ тухса тӑраҫҫӗ. Хаҫатсемсӗр пуҫне темиҫе журнал тата „Трактӑр“ алӯманах. Самарта, Мускавра, Хусанта алӯманахсем тухрӗҫ, татах кӑларма хатӗрленеҫҫӗ.

Ку ӳсӗмсем пурте Октабӗр тивлечӗпе пулнӑскерсем. Аслӑ Октабӗр револӯуциччен чӑвашсен хаҫат-журнал тавраш ӗ пулман теме те йурат. Пӗр вӑхӑта наци интеллигенцин, буржуази кӗввипе йурлакан, ӗҫхалӑхӗшӗн пачах йут идеологилӗ „Хыпар“ хаҫат тухнине кӑна асӑнма тивӗҫ.

Кӗнеке кӑларни йенчен илсе пӑхсассӑн, Октабӗр револӯуциччен, ҫӗр ҫул хушшинче те (1800 — 1917 ҫ. ҫ) чӑвашла пурӗ 430 йатла кӗнеке анчах кӑларнӑ, вӗсенчен нумайӗшӗ, пурте пекех теме те тивӗҫ, тӗн сӗрӗмӗ кӑларакан кӗнекесем пулнӑ: 352-шӗ (80%) тӗн кӗнеки, ӑслӑлах кӗнекисем ҫук, вӗренӳ кӗнекисем — 5%, илемлӗ литературӑ — 24 кӗнеке (5%) тухнӑ шутланат.

Илемлӗ литературӑ тӗлӗшпе илсессӗн — 24 кӗнеке шутне „Чӑваш йумахӗсемпе халапӗсем“ (унта „Арҫури“, „Нарспи“, „Йантрак йантравӗ“ тата ытти), Лермонтовпа Пушкинӑн хӑшпӗр сӑввисем (К. В. Ивановпа Н. Шупуҫҫынни куҫарнӑскерсем), Шупуҫҫыннин „Ерех ӗҫме, тапак туртма пӑрахӑр“ кӗнеки, „Пӗтелмей“, Н. И. Полоруссовпа И. Йуркинан вак-тӗвек произведенийӗсем, Т. К. Кирилӑвӑн „Тырӑпул пулнӑ ҫул“ йатлӑ кулакла поеми тухнӑ. Хушӑран пӗчӗк кӑлендарсенче, букварсенче „Сармандейӗн“ пек вак-тӗвек йумахла калавсем, сӑвӑсем пулкаланӑ. Урӑх нимӗнех те пулман темеле. Хӑшпӗрисем ҫыркаланӑ пулсассӑн та, вӗсен произведенийӗсем пичетленмен, халах хушшине сарӑлман.

Идеологи тӗлӗшпе вӗсем мӗнле произведенисем пулни паллах ӗнтӗ. Хушӑран кӑна 1905 — 1907 ҫулсенчи хусканупа пуҫланнӑ револӯуцилӗ сӑвӑсем (Тайӑр Тимки, Шелепи т. ыт.), ескизсем пулнине пӗлетпӗр. Ҫавӑнпа та пӗр иккӗленмесӗрех пирӗн илемлӗ литература, чӑваш ӗҫхалӑх литератури Октабӗр хыҫҫӑн ҫеҫ пуҫланнӑ теме пултаратпӑр та.

Октабӗр револӯуци хыҫҫӑн чӑваш ӗҫхалӑхӗн кӗнеке-хаҫат ӗҫӗ, искусствӑ ӗҫӗ те вӑйлан ӳсме тытӑнчӗ. Хусанта, Улӯйанӑвскинче, Мускавра кӗнекесем тухаҫҫӗ, чӑваш писатӗлӗсем, поечӗсем, драматургӗсем палӑра пуҫлаҫҫӗ (Ҫеҫпӗл, Ахах, Талмӑрзи, Ф. Павлӑв, А. Акимӑв, Н. Йефремӑв тата ытти те)

Чӑваш автономийӗ пуҫланнаранпа кӗнеке кӑларас ӗҫ Шупашкарта тымарланма тытӑнат. Вӑл ҫуллен ҫул ӳссех пырат:

1923 ҫулта	28 тӗслӗ кӗнеке	—	115	пичетлӗ листа тухнӑ;
1928 ҫулта	89	„ „	435	„ „ „
1929 ҫулта	119	„ „	454	„ „ „
1930 ҫулта	145	„ „	422	„ „ „
1931 ҫулта	175	„ „	572	„ „ „
1932 ҫулта				
план тӑрӑх	280	„ „	1280	п/л тухмала пулнӑ;
кӑларнӑ	333	„ „	958	пичетлӗ листа

Вӗсенчӗн 1930 ҫулта 37 тӗслӗ кӗнеке — 77 пич листа илемлӗ литературӑ ҫине ӳкет; 1932-мӗш ҫулта (план тӑрӑх) 46-шӗ 118 пич. листа илемлӗ литературӑ ҫине ӳкет.

Кӑларасса 1932-мӗш ҫулта пурӗ 333 тӗслӗ (118%) кӗнеке, 958 листа (75%) кӑларнӑ терӗмӗр. Вӗсенчен илемлӗ литература— 33 кӗнеке (71,7%)—119,5 листа (101%) тултарнӑ.

Ку шута илемлӗ литература пайне: чи пӗчӗк ачасем ваљљи, шкула кайакансем ваљљи, ҫитӗнсе ҫитнисем ваљљи кӗнекесем, пйесӑсем, критикӑпа теори произведенийӗсем кӗреҫҫӗ. Тата музыка кӗнекисем те пур.

33 кӗнеке ҫителӗклӗ мар. Писатӗлсем хаҫатсем ҫине ҫырса тӑмасан, „Сунтал“, „Хатӗр пул“, „Трактӑр“ пулмасан, Самарта, Хусанта илемлӗ литературӑ произведенийӗсем пӗрре те тухмаҫҫӗ пулсассӑн,—33 кӗнеке вӑл, паллах, пиг те сахал пулмала. Самарта явӑ, Вӑтам Атӑл крайӗнче, аљманах, Тукташӑнне икӗ кӗнеке, Йангасӑнне, Сенӗкӗнне т ыт. произведенийӗсене кӑларнӑ

Чӑвашсен патшалӑх издатӗлствин (Шупашкарти) шкулсене ваљљи тата йалхуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӗнеке ытларах тата васкавлӑ кӑларма кирлӗ пулнипе, илемлӗ литературӑ кӑларасси питех пысӑк вырӑн йышӑнаймарӗ. Ҫапах та, 1930 ҫулта Чӑвашгиз кӑларнӑ мӗн пур кӗнекесенчен 11,6%, листаж тӑрӑх—9,5%, илемлӗ литературӑ ҫине лекнӗ. 1932 мӗш ҫулта — план тӑрӑх — 11,7% пулнӑ, листаж тӑрӑх та ҫавах.

Пӗрремӗш пйатилеткӑра Чӑвашгиз пурӗ 679 тӗслӗ кӗнеке, 15 080 пич. листа кӑларнӑ пулсассӑн (679% ӳсӗм), иккӗмӗшӗнче 2 438 тӗслӗ кӗнеке кӑларма йышӑннӑ.

Кӗнеке кӑларас ӗҫӗн иккӗмӗш пйатилеткӑ ваљљи палӑртнӑ планӗ тӑрӑх, илемлӗ литература кӑларасси ҫакӑн пек ӳссе пымала:

1933 ҫул	48 тӗслӗ,	100 авт. листа	—125 пич/л.	пулат.
1934 „	60 „	140 „ „	175 „	„
1935 „	75 „	160 „ „	200 „	„
1936 „	80 „	180 „ „	225 „	„
1937 „	90 „	210 „ „	270 „	„

1932-мӗш ҫулта пирӗн плана палӑртнӑ кӗнекесем план тӑрӑхах тухса пыманнине палӑртмала. Ҫитӗннисене ваљљи кӑларакан произведенисем йенчен кӑна илсессӗн, планра пулнисенчен ҫаксем пичетленмесӗр йулнӑ:

1) Краснован—„Таваллӑ“, II-мӗш кӗн; 2) Патманӑн—„Мӗншӗн“, II-меш кӗнеки; 3) Лашманӑн—„Кашкӑр ӗшни“ (повӗҫ); 4) Етгерӗн—„Ачалӑх“ (калав); 5) Аг кован—„Сӗм-вӑрманта“ (калавсем); 6) Петтокин—„Сӑккул Аљукӗ“ (повӗҫ); 7) „Ударниксен призывӗ“ (сборник); 8) Иван Мучин—кулӑш калавӗсем тухмасӑр йулнӑ.

Ун вырӑнне В. И. Краснован—„Вугра“, Максим Горйкин—икӗ кӗнеке: „Амӑшӗ“ тата „Манан университетсем“, Ф. Гладкован „Пуҫурялӑ стем“, Тукташан—„Вакар ҫырми“ повӗҫӗн I-мӗш кӗнеки тухнӑ. Драмкружоксем ваљљи „Вуниккӗре йатлӑ сборник тата „Трактӑр“ аљманах 3-меш кӗнеки тухрӗ.

Мĕн курăнат-ха çаксенчен? Пирĕн ку çулсенче пысăк прозăла произведенисем—чăваш автăрĕсем çырнисем пит те сахал тухнă.

Сăвăсем йенчен илсен, акă 10 кĕнеке: А Петтокин —„Çирĕм иккĕ", Уйап Мишшив—„Çамрăк вăхăт", Миттан — „Кăмăл". Ахтубайăн — „Ударлă кунсем", Краснов-Кĕçĕвнин — „Çункав", Есрелĕн — „Рот фронт". Келин — „Октабĕр кĕввисем", Хузанкайăв—„Çĕрйĕркелӳ", А. Ниманăн. Аттайăн кĕнекисем тухнă.

Пйесăсем йенчен илсен, чăваш автăрĕсен: Алгерĕн, Агаковăн, Мраңккан, Айзманăн тата кĕçĕн формăсен сборникĕ тухмала пулнă Агаковăн—„Хăвăт", Мраңккан—„Пĕрремĕш категори" тата куçарнисем Покровскин — „Трахомă", Й. Арковăн—„Çурхи", тата асăвнă сборник пичетленнĕ.

Теорипе критикă кĕнекисем тухман.

Йурă-музыкă йенчен — „Октабĕр ачисем" (В. Воробйовпа В. Жачĕвă çырнă ача-пăча йурри-вăййисен кĕнеки), тата С. Максимовăн—„Тури чăваш йуррисем" пичетленсе тухрĕç.

Ача-пăча литературĕ тĕлĕшпе тухнă кĕнекесем пуртепе пĕрех (пĕр Ниамаң сборникĕсĕр пуçне) вырăсларан куçарнисем. 1932-мĕш çулхи планпа йышăннă произведенисем, автăрĕсем хатĕрлесе çитерсе парайманнипе, тухман.

1932 çулхи план çинчен тата çакна асăрхаттарса хăвармала: илемлĕ литература кĕнекисем 46 вырăнне 43 тĕслĕ кăна тухнă пулсан та, кĕнеке пысăккĕшĕ йенчен илсессĕн, план тулнă—вĕсем 119 пич. л (101%) йышăнаççĕ. Çак ĕнтĕ пирĕн илемлĕ литературă произведенисем, хуллен çеç пулин те, пысăкланса, анланса пынине кăтартат.

Ку таранччен тематика тĕлĕшĕпе епĕр хамăр республикăри промышлĕннăç предприйатисем çинчен (Улатăрти савăтсемпе скипитар савăчĕсĕр пуçне) чылайах çырнă, художĕствă тĕлĕшпе аптрамалах мар очĕрксем пур. Паллăрах комувăсемпе колхозсем çинчен кĕнекесем кăларнă. Анчах Чăваш республикĕн тулашĕнчи предприйатисем çинчен çырни пит те сахал (Сталинградри Трактăрстрой, Горйкири Автосавăт тата Мускаври хăшпĕр савăт çинчен çырнине кăна асăнма пултаратпăр).

Днепрострой, Магнитогорск, Кузбасс т. ыт. строителствă ыйтăвĕсем, техникă, вĕренӳ фровчĕсем илемлĕ литературăра тивĕçлĕ вырăн йышăнайман-ха.

Чăвашиздатăн 1933-мĕш çулхи илемлĕ литературă кăларас планĕ хатĕрленнĕ чухне, пирĕн:

1. В. **И Ленинпа Сталин** пичет тĕлĕшпе панă установкăсем асра пулнă. „Пичетленсе тухакан произведенисем массăва пурнăçран илнĕ, чĕрĕ, конкретлă фактсемпе, кăтартулă примерсемпе куллен-кун вĕревтсе ӳсме пулăшса пыччăр", тенĕ.

2. ПСК(б) Партин Тĕп Комитечĕ издателствăпа илемлĕ литературă организацийĕсем пирки йышăннисеве, расвах хамăр условире, Чăваш республикинче ĕçлемешкĕн Чăваш Обкомĕн аслă çекретарĕ С. П. Петров йулташ панă кăтартусеве асра тытнă.

Социалисӑмла промышлӗннӑҫ тата йалхуҫалӑхӗ ӳссе пынӑ май, ӗҫхалӑх массин культурӑлӑ туртӑнӑвӗсем хӑларса пыраҫҫӗ. Пӗрремӗш пйатилеткӑран иккӗмӗшне куҫнӑ май, хамӑр тӗплӗн хисепе илнӗ итогсем тӑрӑх — пирӗн вӗренӳ фронтӗнче ҫӗнтерӳсем пысӑк. Пӗтӗм Совет Сойузӗпе пирӗн шкул вӑхӑтӗнчи ачасем пуртепе пӗрех — 30 мӗлйун ача—шкулта вӗренеҫҫӗ; 1924-мӗш ҫулта пурӗ 7 мӗлйун ача ҫеҫ вӗреннӗ. Кунсӑр пуҫне пирӗн ҫитӗннисене вӗрентес ӗҫ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрат: малтанхи пйатилеткӑ вӑхӑтӗнче (4 ҫулта) пурӗ 38 мӗлйун ҫын вӗреннӗ. Чӑваш республикинчи хисепсене илсессӗн, пуҫламӗш шкулта 105 пин ача вӗренет, ҫитӗннисем 100 пине йахӑн вӗреннӗ. Вӑтам шкулсенче, аслӑ шкулсенче, техникумсенче, рабфаксенче вӗренекенсем мӗн чухлӗ тата! Промышлӗннӑҫпа колхозсенчи актив та пӗчӗк мар, вӗсене пурне те кӗнекесем кирлӗ.

Илемлӗ литературӑ кӑларас плана тунӑ чухне:

а) Чӑваш ӗҫхалӑх массин вулакапӗсене, пуринчен ытла шкулта вӗренекенсене выръссен тата ытти халӑхсен класиклӑ литературипе тата халӗхи литературипе паллаштарма кирлине;

у) тапхӑр-тапхӑран планпа пулса пыракан политикӑлӑ хуҫалӑх кампанисем валли произведенисем кирлӗ пулассине;

ы) литературӑпа ҫывӑх тӑракан театӑр, музыкӑ искусствисен ыйтӑвӗсене;

ӗ) Чӑваш Совет писатӗлӗсен ӳссе пыракан кадӑрӗн зайавкисене, вӗсен вӑйӗ те ӳссе пынисене; тата —

и) иртнӗ ҫулсенче кӗнеке кӑларас ӗҫ итогӗсене, вӗсен ӳсӗмӗсемпе пӗрлех пысӑк ҫитменлӗхсем те пуррине шута илнӗ.

Театр историйӗ ҫинчен, унӑн халӗхи ӗҫӗсемпе задачӗсем тӑрӑх выръсларан куҫаръннӑ класиклӑ пйесӑсене, Ахахӑн, Талмӑрзан тата ытти вилнӗ писатӗлсен пичетленмен произведенисене пичетлеме кирлине пӗле тӑрах, театр ҫула тесе, парса хӑварма тиврӗ

1933-мӗш ҫулхи план тарӑх, илемлӗ литературӑ пурӗ 42 тӗслӗ, 155 пичетлӗ листа кӑларма йышӑнтӑмӑр. Вӗсенчен: 1) „Трактар" альманах 5 кӗнеке; 2) В Красновӑн, А. Талвирӑн, Л Агаковӑн, В. Рзайӑн—романсемпе повеҫсем; 3) М. Трубинан, С Фоминӑн, Ҫ. Шӑпчӑкӑн калавсемпе новеллӑсем, очӗрксем; 4) Уйӑпӑн, Петтокин, Мӗтри Ваҫлейӗн, Краснов-Кӗҫӗннин поемисемпе сӑввисем; 5) Ҫамрӑксен сборникӗ; 6) выръсларан тата ытти чӗлхерен пролетариле паллӑ произведенисене куҫармала; 7) пйесӑсем Алагерӗн, П. Н. Оҫиповӑн, М. Трубинан, В. Айзманӑн, Мранькан, Агаковӑн ҫӗнӗ пйесисем, тата Лашманан йала валли ҫырнӑ пйесисен сборникӗ тухмала; 8) теорипе критикӑ тата музыкӑ енченчен — план пӗлтӗрхи йеверлех, чухӑврах; 9) ача-пӑча литературине вумайрах кӑлармала, тата чӑваш авторӗсем ҫырнӑ произведенисем ытларах пулмала, терӗмӗр.

1933-мӗш ҫулхи илемлӗ литературӑ кӑларас планра акӑ мӗнчи палли асӑрханат:

Иртнӗ ҫулсенче вак-тӗвек кӗнекесем ытларах тухнӑ пулсан, халӗ пысӑкрах тата анлӑ произведенисем: роман, повеҫ, поемӑ

жанăрĕпе çырнисем ытларах тухмала. Писатĕлсем çавăн пек произведенисем çинче ытларах лараççĕ.

1932 ç 10 кĕнеке сăвăла çырнисем тухнă пулсан, 1933 çулхи планра поемăсем ытларах пулмала, сăвăсем темăлă сборниксене кĕмеле.

Прозă çинчен Пĕлтĕр, куçарнисемсĕр пуçне, пĕр Красновăн „Вутра“ повĕçĕ çеç тухнă пулсассăн, 1933-мĕш çулта план тăрăх, Талвирăн „Ылтăн ту“ (роман), В. Красновăн „Тăвалла“ II-мĕш кĕнеке (роман), Рзайăн „Тăпра каласат“ (повĕç), М. Трубинан — калавсем, С. Фомпнăн — калавсем пичетлепсе тухрĕç, бригадăпа хатĕрленĕ сборниксем, МТС тата колхозсем çинчен çырнă очĕрксем, савăт истори материалĕсем, „Комсомоли“ — комсомол писатĕлĕсемпе поечĕсен сборникĕ тухмалаччĕ.

Вырăсларан куçарнисем: А. Фадейĕвăн „Разгром“ (пичетрен тухрĕ). Д Фурмановăн „Чапаев“, В. Дубровцвăн „Конец Самодуровки“ тухмала.

Кусемсĕр пуçне тĕнчери революцилĕ литература сборникне куçарса хатĕрлеме, Бела Иллешăвне „Тисса горит“ романне куçарма пана.

Çаксем пире акă мĕн çинчен калама тивĕçлĕх параççĕ. Пĕр йачĕпе кăна роман, повĕç, поемă тенишĕн мар, таранраххăн илсе калатпăр, содержанипе формă (идеологипе художĕствă пахалăхĕсем) тĕлĕшпе те пиçсе çитнĕ, усăлă, кирлĕ произведенисем, класикла произведенисем хатĕрлес йенеле куçрăмăр. 1933 çулхи план ытти çулхи плансенчен çавăнпала расвах уйрăм тăрат. Анчах та, ку пĕрре те ытти жанăрсене (очĕрк, калав, новеллăсем, художĕствăлă фелйетонсем, кулашсăвăсем т. ыт.) хак хуманнине пĕлтермест. Вĕсем пирĕн пĕлтĕрхинчен те ытларах тухмала. Хăшпĕрисем халĕ (А. Федорăв, Ив. Моис çырнă очĕрксен сборникĕсем, Трубинан, В. Красновăн калавĕсем, Ç Шăпчăкăн очĕркла фелйетонла произведенисем) пичетрен тухаççĕ те ĕнтĕ. Произведенисем, хисепĕ тăрăх — вĕсем ытларах та тухаççĕ, листаж (кĕнеке виçи) тĕлĕшпе илсессĕн çеç шултра произведенисем ытларах вырăн йышăнмала.

Сăвăсемпе поемăсем: А. Гидашанне куçарса „Кĕрешÿ сăввисем“ йатлă сборник пичете панă, П. Хузанкайăн „Сулмак“, А. Петтокин, çамрăк поэтсен (А. Ĕçхĕл, Услп В., Л. Пушкай) сборникĕ т. ыт. пичете пама хатĕр.

Пйесăсем: 1) Айзман — „Вăрман кайăкĕсем“, 2) Мраҫккан „Елнет“ (1905), 3) И Н. Осиповăн — „Çĕнĕ хум“ драмăсем, 4) Лашман — йала ваҫҫи пйесăсен сборникĕ, 5) Ф. Павловăн — „Палта“ пйесине çĕнетсе „Сутра“ комедипе пĕрле кăларма пичете панă.

Вырăнти драмкружоксене ваҫҫи пйесăсем пит те сахаллине асра тытса, аҫманаха пйесăсем кĕртме паллă туса хунă. Ача-пăча пйесисем те пичете панă. Теорипе критика уйрăмĕ планра пачах пулман.

Музыкă произведенийĕсем йенчен: планра П. М. Кривоносăвăн хор кружокĕсене кăтартусем памалли кĕнеки кăна хисепленет. С. Макçимовăн музыкă теори кĕнеки пичетре, 25 массăлă йурă кĕнеки вăл пичетрен тухрĕ.

Ача-пача литератури каларас план тарах — шкулсенченхи йе тан çеç шкула кайна ачасем ваҫҫи илемлетсе каларма́ли кĕнекесем:

1) „Пирĕн пуçла́хсем“, 2) „Пирĕн класла тăшмансем“, 3) Сывла́хшăн, тасала́хшăн кĕрешер“, 4) „Октябренинсем“, 5) „Колхозра“, 6) „Вĕренме шкула ăсатни“, 7) „Çӳрев майĕсем“, 8) „Пирĕн Хĕрлĕ çар“.

Çитĕннĕ, вăтам çулхи ачасем ваҫҫи: 1) „Ударник геройсем“, 2) „Днепрогеспа Атăлстрой“, 3) „Граждан вăрçи çинчен“, 4) „Çамрăксен бригади колхозра“, 5) „Техникăна çĕнсе илессишĕн“, 6) „Сывлăхпа сыхлăх ĕçĕ“.

Çак хисеплесе кăтартнă план йепле пурнăçланни çинчен, тухнă кĕнекесен пахалăхĕ çинчен уйрăм статйа çырăпăр. Халĕ çакна çеç асанса хăварма́ла пулат.

Иртнĕ çул планра йышăннинчен ытларах учебниксем каларма кирлĕ пулнă пирки, ытти литература планĕпе пĕрле илемлĕ литература планне те чакарма тиврĕ.

Пирĕн çитменлĕхсемпе умра тăракан задачăсем.

1932/33 çулсенче пичетрен тухнă кĕнекесен аван йенĕсемпе, вĕсен çитменлĕхсемпе йунашарах, пирĕн ĕçре пысăк çитменлĕхсемех пур. Вăл, чи малтан — пурнăçпа тан пыраймани тематика чухăнраххи, ăнланмала мар, вăрăм пуплевлĕ произведенисем пичетленни („Пуçуралă стем“). Хăшпĕр кĕнекесенче корректура йанăшĕсем пит те вумайййи („Разгром“, „Трактăр“ альманахăн 3-мĕшпе 6-мĕш кĕнекисем т. ыт.) тата пит те йапăх хут çинче пичетленсе тухни („Трактăр“ 3-мĕш кĕнеке, вăлах пит те кайа йулса тухни).

Пирĕн 1934 çулта пĕтермели тепĕр пысăк çитменлĕх вăл — çырнă кĕнекесене хăвăртрах пичетлесе, тухнисене çавăнтах, çийĕнчех тишкĕрсе хаçат-журналсенче тивĕçлĕ хак парса пыманни, библиотекăсенче чăвашла кĕнекесем çителĕклĕ марри пур пеккисене те унга тирпейлĕ усраманни пулса тăрат. Кĕнекесене техникă тĕлĕшпе йапăх кăларнипе асăнмасăр хăварма çук.

Драмалă произведенисем ака пирĕ пайанхи кун тем пекех кирле Редакцисене куллен темиçе çын пйеса ыйтма пырат. Чăваш республикинчен кăна мар, Тутар, Пушкăрт республикĕсенчен, Вăтам Атăл крайĕнчен, Горйки çывăхĕнчи саватсенчен, Уралран, Çĕпĕртен килеççĕ. Тем чухлĕ çыру йараççĕ вуласшан çунакансем.

„Сунтал“ журнал вăхăтра тухман пирки тата сухăраççĕ кăна подписчиксем Райоисене командировкăна кайсассăн та, кулленпе пĕрех, районра ĕçлекенсене, колхозниксене, учителсене, вĕренекенсене çавăн çинчен ответлесе кăмăлсăрлататăн: — Çĕнĕ пйесă çук, тухаймарĕç-ха пичетрен. — А, хăçан тухат вăл? Пит те кирлĕ-çке... теççĕ. Çук çав, çук тенипех çырлахас килмест. Тек ун пек ответлес марччĕ. Пирĕн писателсем пйесă çырмаççĕ теме пултараймасăр. Çĕнĕрен темиçе автăр (Элгер, Еллийĕв т. ыт.) пйесăсем çинче лараççĕ. Ака, çӳлерех планра асăннă автарсен произведенийĕсем те хатĕрех.

Сăмахран, П. Н. Осиповăн „Çĕнĕ хум“-не чăваш театăрĕ темиçе хут выљаса пачĕ, района тухса та выљаса пачĕç. Пйеси те аван, пайанхи куншăн пит те паха произведени. Вăл массăна кăмăла кайни çинчен хаçатра та çырчĕç („Красная Чувашия“ хаçат—ку пйесăна выљаса пана хыççăн çавăнгах колхоза кĕме кăмăлласа заявлени çыракансем пулнине те асăнат). Çапах та, епĕр ку пйесăна вăхăтра пичетлесе йала çитерейменĕмĕр. Çитменнине тата театăрта мĕнле выљани пирки те, пйесă пахалăхĕ пирки те çийĕнчех тивĕçлĕ отзыв пулмарĕ. Пйесăна тин „Трактăр“ аљманаха патăмăр.

Айзманăн, Мраљккан драмисем, Лашманăн кĕçĕн формисем тата П. Йефремăвпа II. Доронейĕн ача-пăча валљи пйесисем таххçăнах типографире выртаççĕ, пĕр-иккĕшĕ ĕнтĕ унта выртсах кивелсе те кайреç (Клас кĕрешевĕ халљи тапхăрта Айзман драминчи йевĕрлĕ кăна мар ĕнтĕ. Пйесă хăй вăхăтĕнче пичетленнĕ пулсассăн, паллах, усси унăн ытларах пулмалаччĕ) Ф. П. Павловăн пйесисем, „Уçтук“ (вырăсларан куçарнăскер), Кулыгивăн Тупа тупи“, Айзманăн „Вутра“, Мраљккан драмă, Максимов-Кошкинскин „Садурпа Илем“ т. ыт. пичете пама йуралă пйесăсем пур. Вăхăтрах пичетленсе тухаймаççĕ-ха вĕсем те.

„25 массалă йурă“ кĕнеки чăваш республикĕ XII çул тултарине уйавлава тĕле тухмалаччĕ. Тин, çултталăк çурăран, йăшаланса тухрĕç ку йурасем типографирен, пайан кун та йала шуса çитеймен ха вĕсем.

„Комсомоли“ сборнике 1931 çулта хатĕрлеме тытăннă, тин пичете патăмар т. ыт. Типографи ĕçлесе ĕлкĕрейменни те, вĕсен ĕçĕсем йĕркеллех марри те пурах та пирĕн, хамăр ĕçпе питех мухтанаймăпăр. Тӳррипех çак çитменлĕхе йышăнса, пирĕн ăна тӳрлетмешкĕн халех çине-тăрса петĕм вăйпа хурас пулат.

Теорипе критика тĕлĕшпе кайа йулса пыни—тепĕр пысăк çитменлĕх пулса тăрат пирĕн ĕçре. Пичетленсе тухна произведенисене вăхăтра, тата тивĕçлипе те тĕплĕн, маркçисла хак параймастпăр.

Акă, аљманах 7 кĕнеке тухрĕ. Аçта тата кам ун çинчен тĕплĕн çырчĕ? Хăшпĕрисем уйрăмăн хăйсен шухăшĕсене каласçĕ, районсенче, шкулсенче унпа хытах интересленни сисĕнет Анчах пĕтĕм массапа унăн ӳсĕмĕсемпе .çитменлĕхĕсем çинчен тишкерни çук-ха В Леонтйĕв йулташ Мускавра тухакан „Национальная литература“ бӳллетен çине 2-мĕш кĕнеке çинчен пăтраштаркаласа отзыв пекки çырчĕ те, уссийĕ-мĕнĕ увăн палăрмарĕ. Çийелтен кăна тапăргатса кайнă, аљманаха тĕплĕн вуланă çын унăн статйинчи хăшпĕр шухăшĕсене ĕненес çук—ку хаклав çителĕклĕ марри паллах. Леонтйĕв йулташ аљманахра ырри нимĕнех те çук тенĕ пекех сăмах параххса кăтартрĕ пулин те, аљманахăн 2-мĕш кĕнекинче тата ытти кĕнекисенче те пирĕн калаçмалăх ĕçсем пурах. Ултă-çичĕ кĕнекисене пĕрле пĕтĕмĕшпе илсе калаçма та вăхăт пек туйанат.

Уйрăм писатĕлсен творчĕствине илер: Уйăп Мишшинне, Иван Мучинне, т. ыт. Кам çырнă, мĕн çырнă вĕсем çинчен?

Хаçат-журналсенче ку ыйтусем тăрăх сӳтсе-йавассисĕр пуçне, раснах литературă организаци умĕнче халĕ тăракан пысак задачăсем, теорилĕ ыйтусем тăрăх (социалисăмла реалисăм) уйрăм кĕнекесем тĕпчевле ĕçсем хатĕрлесе каларма та вăхăт ĕнтĕ.

Асăннă мĕн пур çитменлĕхсене çине-тăрсах пĕтермеле. Чи малтан—илемлĕ литературăна хайар клас кĕрешĕвĕ условинчи, социалисăм строителствинчи йулса пыраслăха пĕтерессишĕн кĕрешмеле.

Ку таранччен пичет ĕçĕнче пирĕн либералла çемçелĕхсем те сисĕнкелерĕç. (Ку статйара халĕ ăна примерсемпе кăтартса тăраймăпăр). Ăна пĕтĕм тымарĕ-мĕнĕпе тăпăлтарма та вăхăт, вăйсем те çук мар.

Ĕçхалăхĕшĕн сийенлĕ, идеологи тĕлĕшпе йут, йе иккĕленӳлĕ шухăшсем саракан произведенисене творчĕствă ĕçĕпе çĕнтерсе пырса, илемлĕ литературăри идеологилĕ тасалăхшăн, художĕствăлă пахалăхĕшĕн, произведени качĕствишĕн пур вăйа хурар.

Рабочисемпе колхозниксен, ĕçхресченсен массине, пĕтĕм писатĕлсене, литкружок членĕсене, чăваш чĕлхине вĕрентекенсене литературă фронтне мобилизацилесен, тата кӳршĕри халăхсен писатĕлĕсен организацисемпе, вĕсен кĕнеке каларакан организацийĕсемпе çывăх пулса, парторганизаци кăтартăвĕсене куллен пурнăçласа пырсан çеç, пĕр чарăнмасăрах литературă фронтĕнчи икĕ сулăнчăкпа та: сылтăм опортунисăмпа, либераллă туртăнусемпе тата „сулахайла" çаптаракан çăмăлттайлăхпала кĕрешсе, вĕсене çĕнтерсе пырсассăн çеç епĕр умра тăракан задачăсене туса çитермеле.

Чăваш Совет писатĕлĕсем! Илемлĕ литература пичетлесе кăларас ĕçе, журнал-алъманахсен программине, листаж тĕлĕшпе кăна мар, Ленинпа Сталин йулташсем вĕрентнĕ пек, парти организацийĕ кăтартса пынă пек ĕçлесе, клас кĕрешĕвĕнчи тата çивчĕ хĕçпăшал тумашкăн пирĕн пултармалах.

Литературă фронтĕнчи класла кĕрешĕве, 1931 çулхи творчĕствă çулне тĕплĕн, йĕркелĕн, болъшевикла çирĕплĕхпе хатĕрленсе тухар!

Ф. МЕЦЕНАТОВ.

ĔÇ ЙУРРИСЕМ.

ВĔСЕМ ЙЕПЛЕ МАЙПА, ХĂÇАН ПУÇЛАНСА КАЙНИ ÇИНЧЕН.

„Ĕç йуррисем“ тесе пулăшакан йурăсене калаççĕ.

Пуринчен ытла ертелпе ĕçлемели ĕçсенче ĕç йуррисем питĕ кирлĕ пулаççĕ. Йурă вĕсене каварлантарса, харăс тытăнма пулăшат. Сăмахран, пурве те паллă, хаљ те йурлакан „Сăвай йуррине“ илер. Кунта вал пилĕк-ултă çынна папкăпа сăвай çапнине пулăшма кирлĕ. Кашни хăй тĕллĕн, вĕсем, пĕри те вăл папкăна йатса çапма пултарас çук. Ертелпе те харăс йатмасассăн каллех ĕç майлă пыма пултараймаст. Ав лашасем, йăвăр йапалана вийепле те часах туртса тапратаймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен ĕçе харăс пĕр вăхăтра, пĕр çекундра харăс пуçлама йĕркелекен çук. Сăвай çапнă чух епĕр темиçе вăй пĕр вăй пек пулса тăнине куратпăр. Вĕсем йурă пулăшнипе пурте харăс йатаççĕ: „Хоп, пĕрре! хоп, иккĕ! хоп, виççĕ! хăп, тăваттă!“ тесе кĕвĕлесе пыраççĕ. Çаксене каланă чух вĕсем пурте питĕ те харăс, пĕр çын пек йатаççĕ, ĕç те йурăпа аван, çăмăл шăват, ывăннине те туймаççĕ.

Çавăнпа та ал-ура ĕçĕсенче, ертелпе тумали ĕçсенче мĕн ĕлĕкрен çавăн пек ĕç йуррисемпе усă курса пынă, вĕсем кирлĕ пулнă. Пĕр йенчен, ĕлĕк машинсем те пулманнипе, пĕр çын тăвайман ĕçе ертелпе, пĕр шутлă пулса ĕçлемеле пулнă. Çавăнпа та ĕç йуррисем мĕн чул аван пуçланнă, çавăн чухлĕ вĕсем ун чух кирлĕрех пулнă.

„Трудовое пение есть спутник массовой работы и начало упорядочивающее ее“[1], тесе çырат нумай вĕреннĕ çын Бÿхер.

Ĕç йуррин пуçламĕш кун-çулĕ пит те авалхи ĕмĕрсене, етем дикарле пурăннă вăхăтах кайса çапăнат. Дикарсем ушкăн-ушкăн пысăк ертелпе пурăна пуçласан, ĕçсене те ушкăн-ушкăнăн ĕçлеме пуçлана. Йăвăр ĕçсем те вĕсен умне тухса пыра пуçланипе, вĕсене пĕччен тума май та килмен, çавăнпа та вĕсем: туртмали, йатмали, çапмали, шутармали йăвăр йапаласене харăс йатма, харăс туртма, сасă парса, кăшкăрса, пурте пĕр çын пек, пĕр самантра кÿлĕнсе туртма вĕренсе пынă. Сасă шучĕпе туртна шут иккĕшĕ пĕр вăхăтра ларса пынипе, ĕçлеме те çăмăл пулнă. Пĕччен-иккĕн тума пултарайман ĕçсене те тума пултарнă, çăмăл та, савăнăçлă та пулнă.

Калăпăр, пĕр ушкăн халăх шывран пĕрене кăларат.

Вĕсем ăна кашни хăй тĕллĕн турткалашнипе нихăçан та тапратайас çук. Ушкăнпа харăс туртса, пурте пĕр пĕренене тытса, вĕсем çăмăллăнах темĕн чухлĕ пĕрене кăларма пултараççĕ.

[1] Бюхер—„Работа и ритм“, М., 1923 г., 222 стр.

Çавăн пек харăс, пĕр самангра темиçен кӳлĕнсе ĕçлемеле чухне ĕлĕкех дикарсем те сăмах-сасăсемпе: „Аљо, аљо! айта-хоп! хов! хов!" майлă шухăшсăр сасăсемпе çухăрса туртма, ĕçлеме вĕреннĕ[1]. Ун чухне вĕсем сăмахсемпе кăшкăрман, мĕншĕн тесен вĕсен калаçу чĕлхи те йурăсем ваљљи пулса çитмен. Çапах та, сасăсемпе çыхăнса вĕсем пысăк, кирлĕ ĕççем тума пултарнă.

Дикарсем куллеххи ĕçе йалан ĕçлеме, ӳт-пӳпе пуçа ватакан йăвăр ĕççене ĕçлеме йуратман. Паллах, вĕсен техникă, хаљхи пек ĕçхатĕрĕсем пулман Весемшĕн ĕç — нуша, асап, хуйха. Вĕсем нушапа, йе хаваслăх килсен çеç ĕçлеме пултарнă. Хаљхи çынсем пек вĕсем кулленех 6—7 сехетшер ĕçлеме чăтма пултарайман. Плансăр, йепле тӳр килнĕ, апла ĕçленĕ, теççĕ вĕсем çинчен. Çавăнпа та, пĕр пуçланă ĕçех вĕсен тахçанччене пынă. Çурçĕр Америкăри индейцăсем çинчен çакăн пек калаççĕ:

„Çурçĕр Америкăри индейцăсем йăвăç хăвăллатса кимĕ тăвас пулсан, нумай çулсем иртгереççĕ. Çапла вăра, кимĕ туса пĕтеричченех йăвăçĕ çĕрме те пуçлат"

Савăн пек йăвăр ĕççем нумайланса пынипе, ирĕккĕн тăвас килменнипе, вăйлă ăрусем начар ăрусемпе çĕнтерсе илсе, йăвăр ĕççене вĕсене тугарма пуçланă, йе хăйсен хăрарăмĕсене ĕçлеттерпĕ.

Ĕç ритăмĕпе йура ригăмĕ килĕшӳлĕ пулнипе ĕççем мĕн пĕтиччченех пĕр пек йухса пынă. Хăш ĕç ташă пекех пулса тăна; ӳт-пĕве ташланă пек чӳхенме килнĕ. Ана „покопос" йатлă халăхăн пурнăçĕнчен илнĕ фактсемпе çирĕплетеççĕ

Покопоссем çĕр ĕçлесе пурăннă. Вĕсем арçынĕ-хĕрарăмĕпех рис акнă чух пĕрле ĕçленĕ: ана тăрăх арçынсем малтан тимĕр хатĕрпе, катмак пеккипе çĕре шăтарса пыраççĕ, хĕрарăмсем пурте пĕр харăс пĕшкĕнсе çав шатăксене рис пĕрчисене пăрахса тăпра витсе пыраççĕ. Пурте пĕр пек ташланă пек чӳхенсе пыраççĕ. Харăс пуçăнма, пĕшкĕнме музыкă сасси май панă. Ĕçпе ташă çемми, ĕç йурри малтан пĕрле пулнă. Вĕсем ергеллĕ ĕçре çуралса, ĕçе тикĕс туса пыма кирлĕ пулнă. Çапла, ĕлĕк çынсене пĕрле ĕçлеме йăвăр ĕççем вĕрентнĕ, йăвăр ĕççене тума ĕç йуррисем, ташăсем пулăшнă. Çавăнпа вĕсем пурте пĕр тĕлтех çуралса тухнă теме пулат.

Çапла, искусства (ташă, вăйă йурă т. ыт.) ĕçрен пуçланса кайнине пĕлетпĕр Искусства, художества, орнамент ĕçпе йапаласем çумне кайарах çеç çыпçăнат. Чи ĕлĕкрех пӳртсене хитрешĕн тăрăшса мар, сивĕрен кана купаланă, кайран, хитрелетме те тытаннă. Çапла, ĕçрен искусствă, илем, орнамĕнт т. ыт. пуçланат[2].

Анчах, пурăна-киле классем, феодалсем, буржуази пуçлансан, ĕлĕк дикарсен ĕçĕнче çуралса тухнă. вĕсене пулăшнă ташă,

[1] „Связь песни с работой тем сильнее, чем на более низкой ступени развития стоит изучаемый народ", тет Бӳхер çав кĕнекерех, стр 35.

[2] „Танцы первобытных народов являются ничем иным, как сознательным подражанием известным работам", тет Бӳхер.

„...Пляски являются в подобных случаях простым воспроизведением телодвижений работника", тет Плеханов („Введение в изуч. искусст. и литер. по Марксу, Ленину и др.." Л, 1926 г, стр. 77).

йурă . улпут-хуçашăн, буржуазишĕн ĕçсĕр кувĕсене савăнса ирттерме—вечĕрсем, балсем тума, çивçе пилĕксемпе шур алсене еикме кирлĕ йапала пулса тăраççĕ. Çапла вара, буржуазишĕн хăйне майлă искусства, естетикă (класлă искусствă, естетикă) пуçланат. Ку ийтусем пирки Енгелс, Маркс шухăшĕсене çирĕплетсе, çапла калат:

„Подобно тому, как Дарвин открыл закон развития органической природы, так Маркс открыл закон развития человеческой истории,— тот простой, но заслоненный до сих пор идеологическими наслоениями, факт, что люди должны есть, пить, иметь жилища, одеваться, прежде чем заниматься политикой, наукой, искусством, религией и т. д., и что следовательно, производство непосредственных материальных средств существования и соответственно степени экономического развития и состояния народа или эпохи образуют ту основу, из которой должны быть выведены, а значит, и об'яснены (а не как это делалось до сих пор, наоборот) государственные учреждения, правовые воззрения, искусство и даже религиозные представления людей" (Из речи Ф. Энгельса на похоронах К. Маркса, „Под знаменем марксизма", 823 г., № 2—3, стр. 10.

Йе тата:

„Чем дальше будет удаляться от экономической та область, которую мы исследуем, тем больше она приближается к чисто-абстрактно-идеологической" (К. Маркс и Ф. Энгельс—„Письма", „Введение в изуч. искусст. и лит. по Марксу и др..", стр. 33).

Плеханов кув пирки çапла çырат:

„Малтанхи клас пуçланачченхи етемлĕхĕн искусстви, естетикă, орнаметикă т. ыт. ĕçрен тухса кайат. Ташăсем те ĕçлеме пулăшнă. Класлă обчăра хитрелетнĕ ташăсем, буржуази хĕрĕсен ташшисем вимĕпле ĕçпе те çыхăнмаççĕ, ĕçе пулăшмаççĕ, çитменнине, шурă лăлă хĕрсем усăлă ĕç туман. Вĕсен ташшисем—ĕçлекен клас ĕнси çинче пуранакан ĕçсĕр клас психологине кăтартакан ташăсем", тет.

Çапла капиталисăм вăхăтĕнче ĕлĕкхи ĕçрен тухнă ташă-йура (искусствă, естетикă) буржуази аллине—унăн ĕççĕрлĕх вăхатне савăнăçлă ирттерме куçат. Çав вăхăтрах вĕсене тăрантаракан ĕçхалăхе, буржуазин вăйлă техникă—машинсем, станоксем çумĕнче буржуазишĕн пит те йўвĕ хакпа ĕçлесе, çемйипех ўт-пў йенчен те харса пырат: вăл йурлама вăхат та тупаймаст, савăнăç та кураймаст, ывăнат; кунта ўт-пўшĕн майлă ритăм çук, асаплăх çеç. Ĕлĕкхи ĕççенче (ал ĕçĕ, ертел ĕçĕ) урăхларах, йурласа та ĕçлеме пулва,—ритăм пулнă Ритам - вал ĕçпе йурă пĕр вăхатра, пĕр майлă вăйпа, шăп ларса килĕшсе пыни Кашни ĕçеп хăйне уйрам ритăм пулна Ритăм—йухăм, ĕçпе йурасен йухăмĕ (виçе) Сăвă çырас ĕç те çак майпа пуçланна, теме пулат. Пур ĕçĕн те хăйĕн ритăмĕ, хăйĕн музыкĕ пулнă, вĕсем ĕçлеме те пулăшнă, çăмăллатна. Кун пирки çав асанна Бўхерах çапла çырат „Кашни уйрăм ăрасна ĕçен хăйен йурри-çемми пур вăл палланах çав ĕçпе килĕшўлĕ ларса пырат, вăл çеме улшăнмаст" (37 стр.), йе „йурласси ĕç ритмивчен килекеп йапала. Унăн темпĕ те çавăнпа—ĕç темпепе килĕшўлĕ. Унпа пĕр пек ларса пыма хăвăхат" (40 стр.) тет.

Илĕпĕр ертелпе сӳс тӳнине, пир çапнине, авăн çапнине т. ыт. те. Вĕсенче тукмак, тăпачă пуринче те, пĕрин хыççăн тепри автарса çапса, кĕвĕ-йурă, музыкă пекех илтĕнет. Ун пек çапни ĕçе те çăмăллатат, ывăннине те мантарат, савăнтарат, хаваслантарат ӳт-пĕве те. кăмăла та. Çапла ĕç ритăмĕ ĕçе çăмăллатат.

Пулăçă та хăйĕн киммине иштермели кĕреçине—кĕсменне туртнă чух хăй йуррине йурлат, йурри ишнĕ виçене ларат („Раз! раз!.. иш, ки-мĕм, иш, кимĕм..“). Сăпка сиктерсе кăнчеле арласа ларакан хĕрарăмăн та ритăм пулмасан, ĕçĕ сыхланат.—унăн виçĕ ĕçе сыхса пымала: сиктересси (ура), арласси (алсем), йурласси (сăвар). Пурте вĕсем йĕркелĕ шăваççĕ сăпкаçă йуррипе килĕшсе („О-о-о .. а-чи-не, пап-пи-не. а-чаш-лам .. çупар-лам.. “). „Ачине“ сăмаха илсен: а тесе йурланă чух, урине пусат. чи—йăтат, не—пусат т. ыт. Çапла пĕр пек пусса тăнипе сиктерессине, унăн ханăху (навык) пулнипе, ĕçлеме чарми пулат.

Ĕçе çăмăл, аван. çураçулă тăвасси—йурăна çăмăл, аван йурланинчен те килнĕ теме пулат, м. т. вĕсем иккĕшĕ сыхăнулă. Хăвăрт ĕçре йурă та хăвăрт йурланат. Çавăн пекех, хăвăрт йурласан, ĕçĕн те хăвăрт шума, васкамала пулат.

Йурăпа ĕç пĕр-пĕрне пулăшни, васкатнă пирки пурнăçра та вĕсем çине урăхла пăхма пуçлаççĕ. Чăнахах та, ĕçе хăвăрт, аван тăвасси—аван, хăвăрт йурланинчен те килет пулсан, йурă ăсти ĕçе те аван, хăвăрт тăват теме пултарнă, вал çынна мухтанă. Кунта епĕ çакăн пирки пурнăçра тĕл пулакан икĕ факта илсе кăтартасшăн: пĕри мăшăрлану пирки, тепри çын ĕçĕпе нумайрах усă курасси (эксплоатаци) пирки. 1-мĕшĕ: „Тикĕс йурлама пултарайман çын, йе илемлĕ, аван йурлайман çын—ĕçе те вачар тăвасси палла ĕнтĕ хаљ. Аван йурлаканни—ĕçре те мухтавлă, аван ĕçлет“ („Гармония работы и песни“), тенĕ.

Хĕрсен пахалăхне виçнĕ чух та хăшпĕр халăх вĕсем йурлани тăрăх хаклани пулнă. „Хĕрарăм йурламаст пулсан, вăл ĕçне те начар тăват ĕнтĕ“, теççĕ Африкă çыннисем. „Иашă хăйне ваљљи арăмлăх хĕр шырама кайсан, лашине кăкарса, арман çумне пырса тăрса хĕр йурланине тăнлат. Ăна аван йурлакан (йурласа ĕçлекен) хĕре тупма хушса йанă, мĕвшĕн тесен ун пекки, арăм тусан та, аван ĕçлекенскер пулат, шанчăклă“, теççĕ.

Çапла, авланнă чух ĕçлĕхлĕ хĕре тупас тесе хĕр йурланине вăрттăн итлеççĕ.

Çакăн пек, латышсен качч исем хĕр çураçма кайсан, аларман авăртса йурласа ларакан çĕре пырса, айакран вăрттăн итлени çинчен пĕлтерет Бӳхер. Хĕр аван йурлат пулсан - ĕçре те аван, тенĕ. Ĕçлĕхлĕ арăм пулат, тесе, вăл хĕре качча илме, арăм тума тăрашна.

Хĕр хурлăхлă йурлат пулсан — ĕç йăвăррине, асаплине пĕлтернĕ. Аларманĕпе ĕçлесе ларакан хĕрсен йуррисене те çырса илнĕ. Аларманĕсене йăтса куçса сӳренĕ чух йăвăррипе хĕрсем акă, мĕнле йурласа ĕçленĕ иккен:

О, поход Бванамоколу на Котангу...
О, поход на Котангу и вновь назад в Удигию..
О, О, О!..

II-мĕшĕ: çын ĕçĕпе усă курни (експлоатаци).

Чăнах та, йурă хăвăрт пынипе ĕç те хăвăртлансан — мĕншĕн хăвăртрах йурлаттарас (сас парас) мар? Вăл ĕçлеттерекеншĕн те усăлă. Сахал вăхăтрах нумай ĕçлеттерме пултарать. Илер авăн çапниве: хуçа, вумайрах çапчăр тесе, тара кĕрĕшнĕ сынсене:—хоп-хоп, йара пар! раз, два, три! раз, два, три!.. тесеваскатать, йе ертелре çапать пулсан, хай пулсан, хăй тăпачиве хăвăртрах антарать.

Çав майпа ыттисем те хăвăртрах çапма пуçлаççĕ. Ĕç ритми те хăвăртланать, ĕç те часрах та, нумайрах та пулать. Ертел çинче вăл ĕç хисепĕн уйрăмлăхĕ нумай пулса тăрать. Çавăнпа та, нимесенче (тырă вырнă чух т. ыт) кĕрĕшсе кунла ĕçленĕ çĕрте, йе хуçа хăй тарçи-халăхне ĕçлеттернĕ чух — йалан ĕçлекенсене васкатма пахаççĕ, тĕкĕрлеççĕ. Ĕлĕк, феодалисăм, крепостничество вăхăчĕсенче те, „баршчинă" вăхăтĕвче музыкпала ĕç ритăмне хăвăртлатса, помешчиксем хресченсене çапла васкатса ĕçлеттернĕ. Йăвăр ĕçре асапланнипе йурăсен содержанийĕсем те хурлăхлăн йанăранă. Акă, хуçа тарçи алармаи авăртнă чух мĕн çинчен йурлать:

> Эй, вози, мели скорей, помни—Дшелаба силен!
> Чуть замешкался ты, он палкою ударит,
> Если палки не найдется,—из ружья стрельнет пожалуй.
> Эй, вози, мели со всех ты сил!..

Ĕç хăвăртлăхĕ ертеллĕ ĕçре чăнах та вĕçĕ-хĕррисĕр хăвăртланма пултарать. Сăмахран: кирпĕч йе арбуз пĕр алран тепĕр алла ывăтнине илер. Унта нихăшин те йулма çук, пурин те пĕр-пĕрин пенине тытмала пулать. Раз-раз... персен—йерипен, раз-раз-раз... персен—хăвăрт пулнине пĕлтерет: икĕ арбуз пенĕ çĕре виççĕ перет. Хăшĕ те пулин найанлансанах арбузĕ çĕре ўкме пултарать. Çапла пурне те пĕр пек хăвăрт ĕçлеттерет. Ун пек ĕçсенче пĕри хĕрсе кайса васканипе, ĕç çав-терц вĕçĕмсĕр хăвăртлавнипе, алсем те ĕлкĕрейми пулаççĕ, ўт-пĕве те ĕшентереççĕ. Баршчинă вăхăтĕнче музыка ĕçе хăвăртлатнă пекех, вĕсем хыççăн-и фабрикантсем машинĕсене хăвăрт ĕçлеттерни те рабочисене хавăртлатать, ĕшентерет.

Çапла, классем пуçлансан, çĕрулпучĕсемпе буржуйсем ĕçлекенсемшĕн ĕлĕкхи савăнăçлă ĕçрен—асаплăх туса хураççĕ. Ĕççынни машин хыççăн хăваланипе йурлама, савăнма, ĕçлеме те ĕлкĕреймест, васкать. Ăна капиталисĕм савăнăçлă йурăсемпе мар, куççуљсемпе çыхăнтарать. Вĕсен йурри — куççуљпе тухакан ахлату йурри, куççуљ витĕр асаплăн йынăшни. Мĕншĕн тесен, мен чухлĕ вĕсем вăйлăн ахлатаççĕ, çавăн чухлĕ капиталиссем савăнаççĕ, вĕсем мулланаççĕ, нуйаççĕ.

Социалисăмла çĕршывра çеç ĕçлени те, васкани те хамăршăн: ĕç — хисеплĕх, хаваслăх, чыслăх, паттăрлăх пулса тăрать. Капиталисла çĕршывра ун пеккине нихçан та кураймăн[1]. Çапла,

[1] „Соцсоревнование производит коренной переворот во взглядах людей на труд, ибо оно превращает труд из зазорного и тяжелого бремени, каким он считался раньше, в дело чести, в дело славы, в дело доблести и геройства. Ничего подобного нет и не может быть в капиталистических странах" (Сталин—Политотчет на 16 с'езде ВКП (б).

класлă обчăра, ĕç йурри çынна експлоатацилекен йурă пулса тăрат.

Вĕреннĕ çынсем сăнанă тăрăх, йурă, музыкă ирĕклĕн ĕçлекен çынсене çеç мар, ытти чĕр-чунсене те хаваслантарнине пĕлетпĕр. Çапла, тĕвесем—утнă чух хуçисем калакан музыкă сассипе урисене илсе пынине те сăнанă, музыкă илĕргнипе тыркассем (сусликсем) ташланине, уй-йыттисене, тăманасене, раксене астарса тытни çинчен те пĕлетпĕр Ташă кĕввине илтсен, пулăсем шывран çӳлеле сикнине те сăнанă.

Выљăхсем те музыка вĕренсе çитеççĕ, тĕрлĕ музыкă инструменчĕсене, тĕрлĕ çын шăхличĕ сассине те уйăраççĕ. Çав майпа кĕтӳçĕ, выљăхĕсем саланса кайсан, йе ытти кĕтӳпе хутăшсан, хăйĕн шăхличне шăхăртса пуçтарсан, хăй выљăхĕсем хăйсен хуçи шăхличине вĕренсе çитеççĕ иккен.

„Лифљандире естонсен кĕтӳçĕсем кĕтĕве йурă-çемĕпе хăвалаççĕ, малтан йеринен, кайарах хавăртран каланипе, выљăхсем те хавăртрах утма пуçлаççĕ" (106 стр.). Йе тата: „Италире кĕтӳçĕсем кĕтӳ умĕн пыраççĕ, саса йуррине (шăхличе) уйăштарсан, сыснасем те ун май улшăнса утаççĕ. Хăйсен кĕтӳçĕн шăхличĕ сассине илтсен, ун патне пухăнма та пултараççĕ Кашни кĕтӳçĕн хăйĕн кĕвви; çапла вара, тĕрлĕ кĕтӳ темиçе кĕтуве хутшăнса кайсан, кĕтӳçсем кашни хăй шăхличĕпе шăхăртсан, хăй выљăхĕсене хăй патне илсе пыма, суйласа илме пултарнă", тет Бӳхер (118 стр.).

Епĕр, ватă çынсен йумахĕсенчен пуп тарçи (Иван тарçă) шăхличпеле улмуççи çинчен пупсене ташлаттарса вайран йанине: „Йăван, чарăн, Йăван, чарăн!.." тетернине, унăн сыснисене йалан кăпăклантарса таврăннине илтнĕ пулсан,—вăл йумахсем çавăн майлă чăн та пулма пултарнине ĕнентереççĕ. Ку йумах—çавăн пек ĕçсенчен кулса тунă народи пулса тăрат, темеле.

Хамăр хушăра та çамрăксем тупăс-мĕн, ташă кĕвви калама пуçласан, урасем хăйсемех ташлама пултараççĕ хăйсемех çĕкленсе кайаççĕ. Музыкăсăр ташлама та питĕ йавар, кашни ташăн тата хăйĕн кĕвви. Хăшпĕр çынсем музыкă калана чух пуşшех аван шухăшлаççĕ, паха, чаплă йапаласем те çырма пултараççĕ т. ыт. те.

Ĕлĕкренне ĕç йуррисем нумайĕшĕ улшăвнă, нумайĕшĕ çухалнă. Меншĕн тесен, вĕсем ӳсе пыракан ĕçсен ритмине (машин ритăмне) çитеймесĕр тăрса йулнă. Ĕлĕк ĕç йуррисем ĕç ритмине ларса пырса, ĕçсене çăмаллатма, пуринчен ытла ертеллĕ ĕçре кирлĕ пулнă пулсан,—халь ĕç хушшинче вăхăт ирттерме, машинсем çумĕнче кичем пуласран йурлама çеç тăрса йулаççĕ. Машина нимĕнле ĕç йурри те, чăнах та, çслеме пулашу парайас çук кунта техника саккунĕсем. Çавăнпа та, ĕлĕкрех ĕç йуррисем нумайрах та, кирлĕрех те пулна.

Пурана кипе çав ĕç йуррисем сахаллана пыраççĕ, ĕç ритминчен парăнса йулма пуçлаççĕ, м. т. аслăлăх, техникă вăйланнине, тĕрлĕ пысăк машинсемпе ытларах усă курма пуçлаççĕ. Машин хыççăн йурă çитсе пыраймн пулат. Ал-ăста ĕçĕ те майĕпен сахалланса пыра пуçланипе. йе вăл те техникă çулĕпе кайнипе йурă ритмине тарса пыракан ĕç сахалланса пынă. Ĕç хушшинче халĕ йурлаççĕ пулсан, вĕсем нумайĕшĕ кичем

пуласран, тенĕ пек, вăхăта ирттерме çеç, вăл йурăсем ĕçпе питех çыхăнаймаççĕ. Вĕсен содержанийĕ кăна хăйсем тăвакан ĕç çинчен пĕлтерет; йе машин кĕрлевĕ сассипе ритмине сăвăлат (речитатив). Çавăн пек пулса тăраççĕ халӆхи нумай ĕç йуррисем.

Çапла, халӆхи вăхăтра виçĕ тĕслĕ ĕç йуррисем пуррине куратпăр: 1) халĕ те ĕç ритмипе ларса пыракан (ĕçе пулăшакан) ĕç йуррисем; вĕсем халӆ сахалланнă (сăвай çапни, йăвăр йапала туртни т. ыт. те; 2) содержанийĕ кăна тăвакан ĕçпе çыхăнни, ритмĕ лармаст („Хресчен йурри", халӆхи колхоз йуррисем т. ыт. те), 3) машин ĕç ритмне (йанравне) сăвăлла калăплави (речитатив) („Вата пăчкă" т. ыт.).

Халĕ вĕсене уйрăмăн пăхса тухар

I. Ĕç ритмипе ларса пыракан, ĕçе тума пулăшакан ĕç йуррисем: „Сăвай йурри". „Каска йурри", „Авăн çапни", „Пир çапни" т. ыт. кĕреççĕ. Ку ĕçсене халӆ те алăпах ĕçлеççĕ. Çавăнпа ертеллĕ ĕç аван пытăр тесе, халĕ те йалан йурласа ĕçлеççĕ. Йурă ĕçе пулăшат те. Уйрăмăн илсе сăнар.

„Сăвай йурри".

Кĕпер тума пире чĕвчĕç,
Сăвай çапма пире хушрĕç.
Сăвай, сăвай, тӳрех лар,
Çĕр тĕпнелех анах пар.
Пирĕн тукмак вимех мар—
Перех йатар та, пĕрех çапар.
Ай-пĕрре!
Хай-иккĕ!
Çи-виççĕ!...
Хей-çитрĕ!..

(„Сунтал", № 7, 1929 ç.).

„Ай-пĕрре!" тенĕ çĕре çитсен — пурте сăвайне харăс йăтаççĕ. Кун пек йурăсенче содержани те пулат. Час-часах ĕçне иртсе çӳрен çынсене, хуçисене, хĕрсене тăрăхласа йурлаççĕ, ăна импровизаци теççĕ.

Сăмахран:

Сăвайне епĕр сăвапăр,
Кĕперне епĕр хывăпăр.
Кĕперри пултăр йăлт хурçăран,
Карлăкĕ пултăр йас-пăхăртан,
Каçакан пултăр ĕнчĕ пушмаклă..
Лаши пултăр çил-çунатлă...
Ай-перре!..
(Çавăнтах).

Вырăслисем:

1. Ну-ка, примемся мы дружно,
Поскорей окончить нужно!
Эй, дубинушка ухнем!..
Эй, раз!.. Эй!..

2. Гей, тяни!.
Гей, вбивайте, отпускайте!
Гей, тяни!
Хозяин идет! Тише теперь!

Сахал мар ватнă „Дубинушка" темиçе ĕмĕрсем хушшинче хуçасем алинчи чурасене, бурлаксене ĕçлеттерсе. Ахаӆтен мар вырăс поечĕ Некрасов, Герцен хăйсен произведенийĕсенче пусмăрти халăха хĕрхенсе çапла çырнă.

А. И. Герцен хăйĕн „Былое и думы" кĕнекинче хăйне Çĕпĕре, вак халăхсем хушшине ссылкăна йапи çинчен çырнă тĕлсенче çапла çырнисем пур. Унăн сарлака Атăл урлă çуркунне каçса каймала пулнă. Ăна кимĕ çинче те (дощаник) жандарм астуса пынă. Вĕсене каçараканĕ тутар пулнă. Каçармали хатĕрĕ хыснан пулнă. Пута пуçласан тутар вилĕме мар аса илнĕ,

хысна хӑмисемшӗн ответ тыттарассине хӑраса аса илнӗ. Герцен ӑна: „Хӑмасемпе пӗрле ху та путатӑн вӗт, ответ тытассинчен ма харан?" тесен,— тутар: „Аванччӗ, батќӑ, чӑнах та путатӑп пулсассӑн, анчах путаймасан?.." (192 стр.).

Ҫапла путаймасан хӑмасемшӗн тутара ҫирӗп ответ тыттарасси — Атӑлра вилессинчен те хӑрушшӑн туйӑннӑ. Ҫак тутар сӑмахӗсем, чӗререн тухнӑ сӑмахсем, — чухӑнсем, вак халӑхсем йепле йӑвӑр пусмӑрта асапланса ӗмӗре ирттернине питӗ те аван кӑтартса параҫҫӗ. Чеховӑн геройӗсем те... чиновник, ҫӗвӗҫ унтан укҫа ыйтсан, ӑна ҫупат, ҫӗвӗҫӗ ҫапах „спаҫибӑ" тет, йе лашине калаҫса чуна йӑпатаҫҫӗ т. ыт.

Некрасовӑн „Дубинушка" йурринче те чухӑн асаплӑхне питӗ те аван кӑтартнӑ:

И от дедов к отцам, от отцов к сыновьям
Эта песня идет по наследству.
И к дубине везде прибегают в нужде,
Словно к самому верному средству.
И на Волге-реке, утопая в песке,
Он ломает и ноги и спину,
Надрывает там грудь, и чтоб легче тянуть,
Все поет про родную дубину:
Но ведь время придет и проснется народ:
Разогнет он усталую спину
И в родимых лесах на врагов подберет
Здоровее и крепче дубину..

Илер: „Размышления у парадного под'езда", „Кому на Руси жить хорошо", „Мороз-красный нос" произведенисене; пурте вӗсем асаплӑх ҫинчен пӗлтереҫҫӗ: чӑнах та, вӑл вӑхӑтра ӗҫхалӑхӗ Некрасов каланӑ пек: найкӑшу йеверлӗ йурӑ кӑларнӑ.

...Создал песню, подобную стону.
(„Размышления..").

Ҫавӑн пек асаплӑ ӗмӗрсенчен хӑтарса Октабӗр револуци ҫеҫ саванӑҫлӑ ирӗклӗх тупса пачӗ.

„Каска йуррисем" — йӑвӑр йапалана туртнӑ йе хӑпартнӑ, йе кустарнӑ чухне йурламалли. Кун пек чух, йалан харӑс туртма: хай-ишша! хоп-ишшо! ай-та раз!.. тесе туртаҫҫӗ. Акӑ тӗслӗхсем:

Атӑр тӑрӑр, канат тытӑр,
Хӑвӑртрах, хӑвӑртрах!
Ей, ей! Хӑвӑртрах, хӑвӑртрах,
хӑвӑртрах...

Ой, да, ой, иш-ша!
Ой, иш-ша раз!
Ой, давай, ой, иш-ша!
Ой, иш-ша раз!

Йе:

Ой, тавай, харӑсрах,
Харӑс та харӑс!.. ой!..
(„Ҫенӗ йурӑсем", 22 стр).

Йе тата

Атӑр тӑрӑр, вӗрен тытӑр,
Хай-ишша!.
Вӗрен тытар, кӳлӗнср те—
Хай-ишша!..

Харас туртар, йӑвантарар,
Хай-ишша!.
Ӗҫӗ пӗтсен канма ларар,
Хай-ишша!..

(„Сунтал", № 10, 1927 ҫ.).

„Хай-ишша" тенӗ чух харӑс туртаҫҫӗ.

Импровизаци пур йурӑсенче те тӗл пулат. Ёҫленӗ чух кичем пуласран кулмали, тӑрӑхламали сӑмахсем те хушаҫҫӗ: сӑмахран:

Пуп ҫаннийӗ мӗн сарлакӗш?
Ха-ха-ха!
Аршӑн ҫурӑ пулат пуҫ те,
Хи-хи-хи!
Дйакӑн ҫӳҫӗ метӑр ҫур та,
Ха-ха-ха!
Дийечукӑн куҫ чармак та,
Хи-хи-хи!
Улпут алли ҫеп-ҫемҫе те,
Ха-ха-ха!
Купец хырӑмӗ пичке пек те,
Хи-хи-хи!

Куштан чышки чукмар пек те,
Ха-ха-ха!
Пӗрре ҫапсан ванмала та,
Хи-хи хи!
Хура халӑх вӑй-хӑвачӗ—
О-хо-хох!
Улӑпран та ирттерет те,
Ой-ой-ой!
Камран епӗр хӑрас пур та,
Ак йепле!..

(Вантер пухнӑ).

„Хи-хи-хи... Ха-ха-ха...“ тенӗ чух туртаҫҫӗ.

Йе тата:

... Хӑҫан иртӗ-ши ҫак ӗмӗр те,
Ҫак бурлакра ҫӳресси?!

Ах, анчах! Харӑстин, харӑстин,
Х рӑстин харӑс та, харӑс!
(„Ҫӗнӗ йурӑсем“, 22 стр.).

Ку йурра Илет (Елнет) шывӗ ҫинче сулӑ тӑвакансем йурланӑ тет.

Авӑн ҫапни.

„Икӗ тӑпач“: (ху ҫа) — пат-пат, виҫӗ тӑпач: (хӑ-вӑрт-рах)—патти-пат; тӑваттӑн (та-та хӑ-вӑрт) — пат-ти пат-ти (5, 6, 7, 8—ҫавах).

Тӑпачсем пӗр-пӗрипне ҫыхӑнулӑ: пӗри хӑвӑрт антарсан, иттисене те йулма ҫук, ӗҫ хавӑртланма пултарат кӗвӗ хыҫҫӑн кайса. Авӑн ҫапнин кӗввипе чӑвашсен поечӗ Ваҫанкапа (Шаланка) Ф. П. Павлов ӳкернӗ.

Пӑтти-пат! пат-пат!
Пӑтӑлти-патӑлти, пӑтӑлти-пат!
Пӑтӑлти-пат, пат-пат.
Пурнӑҫ, пурнӑҫ, пурнӑҫ кӗчӗ,
Пурнӑҫ кӗчӗ уй-хиртен..

Пӑтти те патти-патти-пат!
Пӑтӑлти-пат, пат-пат...
Патӑл-пат!
Пат-пат!
Пат!

(Шаланкӑ, „Авӑн ҫапни“, „Сунтал“, 1 №, 1927 ҫ.).

Йе тата:

Пӑт-пат,
Пӑт-пат,
Пӑт-пат, пӑт-пат!
Пӑт-пат, пӑт-пат..
Пӑт-ти пат, пӑт-ти пат!
Пӑт-ти пат, пӑт-ти пат!

Пӑт-ти, пат ти, пӑт-ти, пат-ти,
Пӑт-ти пат-ти, пӑт-ти пат-ти...
Ир-те пу-лат, каҫ-та пу-лат,
Пу-лат, пу-лат, пу-лат, пу-лат...
Пӑ-тӑл-ти, па-тӑл ти, пӑ-тӑл-ти, па-тал ти.
Па-тӑл-ти, па-тӑл-ти, пӑ-тӑл-ти, па-тӑл-ти.

(Ф. П. Павлов, „Ҫӗн сӑрнай“, 13 стр.).

Йе тата тӑваттӑн-улттӑн ҫапни:

Пӑтти патти пӑтти-пат,
Ех сассийе улттӑн.
Пӑтти-патти, пӑтти-пат,
Ех тыррийӗ! ылттӑн! (Мӗтри Ваҫлейӗ).

Йе:

Ҫӑтти-ҫатти, ҫӑтти-ҫат!
Ҫапуҫҫине тӑпачи,
Ёҫҫывнине кулачи.

Ҫӑтти-ҫатти, —
Ҫӑтти-ҫат...
ҫап!

(Преккей, „Сунтал“, 8—7 №, 1927 ҫ.).

Пир çапни.

Тăмпăртăк, тăмпăртăк.
Тăмпи-тăмппя, тăмпăртăк
Аса ҫар и пушавсан,
Пире ҫапы шăл ăртăк.

Атăр халĕ çапар-ха
Çĕнĕ пурнăç тăвиччен,
Сўрен пусма пуличчен,
Машинăсем кĕрлаччен...

(Гумилин, „Сунтал", 12 №, 1927 ç.).

Йе тепре:

Тўнк-тўнк! хўнк, хўнк!
Хунк-хунк, хунк, хунк!
Шаккин, Пăлтăр, Пăрмус маткин
Пир ça ăнат, пир çапнат..

Шăк-шак шухăшăм,
Качча кайма, тет шухăш,
Чунăм савни Макçамăн
Качча илме, тет шухăш!..
Хунк! хунк! шак! шак!

Шăкки шак! шăкки-шак!

(Йуркки П., „Сунгал", 8 №, 1925 ç.)

Авăн, пир çапнă чух йе сўс тўнĕ чух çапла йурласа ĕçлесен, ĕçре çăмăлрах ĕçлеме те пулăшат Анчах ку йурăсене ĕçсене кура майласа тунă (звукоподражание), ĕçрен тухман вĕсем. Кунтах „Сăпка йурри" т. ыт кĕрет. „Сăпка йурри" ĕлĕкех ĕçпе пĕр тех пуçланнă, ĕлĕк: о-о-о, о-о-о... тесе, вĕсене сăмахсăр йурланă. Утма пулăшакан йурăсем те (маршевые песни) кунтах кĕреççĕ. м. т вĕсем утма пулăшни — ĕç тума пулăшнийех вăл. Стройпа утни те ĕçех.

Кунта: „Хутлам-хутлам", „Ай улми", „Малала утар" т. ыт. кĕреççĕ (пурте „Çĕнĕ йурăсем" сборникре).

Акă „Малала утар" йурра илер:

Малала утар, харăс пусар,
Пĕрлешсе ĕçре ыр курар,
Харăс, харăссăн утар,
Хĕрлĕ йалав, хĕрлĕ йалав айĕнче (2 хут).

Йе вырăсли: Майаковскин „Возьмем винтовки новые", „Готовься, целься", „Моряк", „Дуня", „Лейся, лейся..." пионер йуррисем т. ыт.

Ташă, вăйă, музыка, поези те ĕçрен, ĕç ритминчен тухса кайнă терĕмĕр: усăлăх (утилитарность) малта тăнă. Ташăсем ĕçсене тума (дикарсен) пулăшнă пулсан, вĕсем çав упражненисене ĕçлемен чух та тунă, выљанă, м. т. вĕсене аванрах хăнăхни тепĕр чух ĕçлеме те пулăшат Çав майлах, епĕр те пионерсемшĕн физкуљтурă вăййисенче пурнăçра кирлĕ пулакан упражненисене тума тăрăшатпăр (ĕç, сыхлăх ĕçĕ).

Поезипе музыкă та ĕçпе çыхăнса тăрат. Еç йурринĕ ĕç ритмне ўкерсе илме хăйĕн ритмне поезипе музыка вăйланма халăлат. Ĕç ритмĕ виçинчен. Аристотел каланă пек: сăнлăх ритмĕ (ташă), сасă ритмĕ (музыка), калаçу ритмĕ (поези) пуçланат. Малтан вĕсем ĕçре пурте пĕрле пулнă, ĕçе тума пулăшса пынă. Кайарахпа çеç вĕсем, пĕр-пĕринчен уйрăлса кайса, кашни хăйне уйрăм искусствă пулса кайнă.

Чи малтан ташă ĕçĕн хускану ритмĕ урăх çулпа кайат. Йурăпа сăмах (музыка, поези) пĕр-пĕринчен уйрăлмасăр пумайччен пĕрле пыраççĕ. Вĕсем халљ те уйрăлса пĕтеймен. Ун çинчен пире халљхи халăх йуррисем те аван кăтартса параççĕ. Унта халљ

те сăмах (поези, йурă сăввисем) музыкăран (кĕвĕрен) уйрăлса кайман халăх йуррисене сăмахсăр йурласах каймаççĕ. Йурă пирки унта сăмахсене те ваткаласа йурă ритмне кӳртеççех: ăмма, пулч, сарă, сар т. ыт. сыпăксене хĕссе йе чăсса.

Çапла, халăх поезийĕ — хаҕхи литературăн çурма çулĕ. Анчах унта сăвă-поези музыкăпа пĕрле Хаҕхи поетсен сăввисем — музыкпе пăрахса хăварнă поези. Кунта сăмахсем çеç, музыкă çук Çавăнпа та, майĕпех поези ритмĕ те, музыкăн çирĕп ритмĕвчен уйрăлнипе урăх çулпа кайа пуçларĕ. Хаҕхи поезин ритмĕ музыкăсăр йĕркелекен çирĕп мел çуккипе ирĕксĕрех тăсăлса, калаçу чĕлхи патне çитсе тăра пуçларĕ. Çавăнпа та хаҕхи поетсен сăввисенчен йурă тума та йăвăр. Ахаҕтен мар композитăр Воробйов Мĕтри Васлейĕн пĕр сăввине, теми тем пекех килĕшнĕ пулсан та, йурă тăвайимасăр темиçе çул аппаланат. Йурă ваҕҕи тесе сăвă ене ирĕксĕрех хăйне уйрăм виçепе çырма лекет.

II Машин йе алĕçĕ ритмĕпе ларакан йурăсем машинсем тухсан, йе алĕçе те тĕрлĕ инструментсемпе ĕçлеме пуçласан йурă ĕçлеме пулăшайми пулат. Унта машинсем çын: ой, ишшо! тенисемсĕрех шăваççĕ. Çын кунта хаҕ хуралçă пек çеç машина пăхса, йĕркелесе пырăканни. Вăл техникă вăйĕ кĕрлевне ӳкерсе илсе савăнма пултарат. Сăмахран акă, вырасларан çак примерсене илсе пăхар:

Стукай, стукай,
Многорукий,
Стукай, гукай,
Стукай, тки! (машин çивчен).

Перепалки, перебранки,
Смех и снег летит в глаза.
Ех, тальянки д, медны планки,
Тонки, звонки голоса!

(Безыменский, „Комсомолия").

Йе тата пойăс кĕперпе пыни:

Мост! мост! (пăравус хашлатни).
Пошел! пошел! (вагунесем).
Поехали! поехали! (ураписем).

Чăвашлисем — „Тимĕрçĕ йурри":

Чанк, чанк! чанк!
Чанк, чанк, чанк,
Чанк, чанк!

Хĕрхенместпĕр алсене —
Чанк, чанк, чанк, чанк, чанк!
(„Шкул йуррисем", 16 стр.)

Пăчкă кĕвви.

Епĕ вата —
Шăлăм катăк —
Халтăр-халтăр,
Палтар-палтар!
Çамрăк чухне
Питĕ асрăм —
Тем чул вăрман касса пасрăм.
Халĕ шăлăм

Шăлтăр! карĕ —
Шăмăм-шаккăм
Шултăркарĕ!..
. . . .
Хай-хай!..
Най-най!
Йаш-йаш!
Чăш-чаш!

(Куттуй, „Ватă пăчкă" — „Тутарсен хаҕхи лит-чен").

Ой, ишшо!
Кăштин-кашин пăчкăсем
Йурăсем вĕçлеççĕ.

Ушкăн-ушкăн ĕççыннисем
Ăмăртса ĕçлеççĕ.
(Доровей П., „Сунтал", № 2, 1930 ç.).

„Кĕсле“ (марисен йурри).

Кăлттин-кăлттин кĕсле тус,
Кăлт кăлт сикеç пӳрнесем;
Çĕнĕ савăк çемме куç!
Хыпкăланаç хĕлĕхсем!.

(Ваçанка, „Сунтал“, № 11, 1931 ç.)

Утнă-чупнă чухнехи кĕвĕ:

— Сывпул, йалăм!..
Шăхăрайрăм...
Лăстăрти-лăстăр
Йурттарайрăм.

(„Ут йуртти“, Шаланкă).

Автобусĕ пĕр хашкарĕ,
Пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн,
Сывă пулăх, Шупашкарĕ
Епĕр тепре киличчен..

(„Автобуспа“, Уйăп, „Çамрăк вăй“, 70 стр).

Тăпачă, пир çапни йуррисем ушкăна та кĕме пултараççĕ. Вĕсене те пир çапни, авăн çапни кĕвĕ пек кайран тунă. Анчах вĕсем çапнă чух хаваслантарма, ĕçе хăвăртлама та пултараççĕ. Кунти йурăсем ĕçсене тĕкĕнме, пулăшма пултараймаççĕ; автобус, машин т. ыт. ритмне çеç ӳкерсе параççĕ, вĕсен ритмне улăштарма пултараймаççĕ.

III. Содержанийĕсем çеç ĕçпе çыхăнакан йурăсем. Халь „Сунтал“ журналра, йурă сборникĕсенче тухакан йурăсем пурте пекех çавнашкал.

Ку йурăсен виçи (ритмĕ) ĕçпе çыхăнмаст, ĕçе пулăшмаст, ĕçе ырласа çеç хаваслан йурланат; содержанийĕ çĕнĕле ĕçлеме, çĕнĕ пурнăç тума йăхăрат:

Сăмахран, ĕлĕк:

Ирпе ирех çĕр çынни
Тухрĕ кайрĕ сухана.
Ани çине çитрĕ те,
Кӳлсе лартрĕ сухапуçне.

Ей ну, йара пар
Суха-касси хĕррипе.
Хуллен-хуллен ута пар,
Ана тăрăх йара пар...

Халĕ:

Ей-ну, тăрлаттар!
Кăвак тĕтем кăларса

Калăпăшпе сухалар,
Йăрансене тĕп туса

(„Хресчен йурри“, „Çĕн сăрнай“, 90 стр.).

Çапла, пурăна-киле кун пек йурăсем те содержанийĕсене улăштарса пыраççĕ; пурнăçран йулмаççĕ.

Йе:

Савасем, сурласем
Йăлăхтарчĕç.

Трактăрсем, жнейкăсем
Кӳлĕнсе ларчĕç.

(Шаланкă, „Ытарма çук“, „Трактăр“, 5-мĕш кĕнеке).

Йе:

Çапат, сăрта ватат вăл—
Ударлă ĕç
Йанрат вăйхаллă йурă —
Ударлă ĕç.
Есрe пире мухтав, хисеп,
Катмакĕ пирĕншĕн чул кагат.

Хирте пирĕн ав трактăрĕ
Йанрат, чупат,
Йанрат те савăккăн чупат.
Пур вăйпа, пур вăйпа
Илйич програмне тултарар!
Атăр! Атăр! Атăр!

(„Ударниксен маршĕ“, А. Гидаш сăвви, Ваçанка куçарнă)

Кунта, хаљхи хаваслӑ содержанилĕ йурӑсенче музыкĕ те революцилĕ, малала кайма, çĕнĕ ĕçе тытӑнма чĕнет. Композитӑрсем те хаљхи сӑвӑ-йурӑсеве тунӑ чух хастарлӑ кĕвĕпе (музыкӑпа) тума тӑрӑщаççĕ.

Çапла, хаљ çыракан йурӑсем ĕç ритмне лармаççĕ, ĕçе тӳррĕнех (непосредственно) йурланӑ вӑхӑтрах пулӑшса пымаççĕ пулин те, вĕсем пролетариле çĕнĕ содержанипе пролетарилĕ, хаваслӑ музыкӑ формипе çыхӑнса, хаљхи савӑтра, колхозсенче хастарлӑн ĕçлеме вӑйхал параççĕ. Çĕнĕ сӑвӑсем те (стихи) вуланӑ хыççăн итлекене вӑй параççĕ. Сӑмахран, Жаров сӑввине илер:

По рухляди, гнили и стари,
Чем жив допотопный уклад,
Ударим, ударим, ударим —
Примером ударных бригад!

Ĕçленĕ чух та ку сӑмахсене асӑнса ĕçре усӑ курма пултараççĕ. Çав вӑхӑтрах:

Урамра тĕттĕм, çĕрле,
Çук ни уйӑх, ни хунар.
Епĕр иксĕмĕр пĕрле —
Урӑх ним те кирлĕ мар,

текен сӑвӑсем ĕçлеме мар, – ĕçрен тарма, çĕрĕпе чупма çеç вĕрентеççĕ. Ирхине ĕçе те ун пек ларсан тухма ĕлкĕреймĕн: ку ĕç сӑвви мар!

Хаљхи йурӑ сӑмахĕсене, сӑввисене çав Жаров сӑвви пек çырма тӑрӑшмала. Сӑвӑ та, йурӑ та ĕç патне йыхӑртӑр, ĕçшĕн йанӑратӑр. Акӑ мĕнле çырмала йурӑ-сӑвӑсеве:

Ирхине гудокĕ сас парсассӑн,
Стройкӑна тухатпӑр васкаса.
Чул пура тӑрне кар хӑпарсассӑн,
Вӑйхала пиллетпĕр ӑмӑртса. (Пушкай).

Çакӑн пек йурӑсем нумайлансах пыраççĕ: „Сунтал“ журналра, йурӑ кĕнекисенче те чылай

Хаљхи ĕç çинчен йурлакан йурӑсене çаксене шутлама пулат:

1. „Колхоз йурри“ — муз. Павловӑн, сӑвви Ваçанкан.
2. „Коллектив йурри“ — „Сунтал“, 11 №, 1931 ç., муз. Максимовӑн.
3. „Колхоз хирĕнче“ — „Сунтал“, 1 №, 1931 ç., муз Воробйовӑн, сӑвви Йехрим Иванĕн.
4. „Колхоз ачисем“ — „Сунтал“, 10—11 №, 1930 ç., муз. Воробйовӑн, сӑвви Н. Ваçанкан
5. „Çĕнелнĕ йал“ — „Сунтал“, 12 №, 1931 ç., муз. Чернышевӑн, сӑвви Пушкайӑн.
6. „Ӑмӑртулӑ çар“—„Сунтал“, 12 №, 1931 ç., муз. Хирбиковӑн, сӑвви Н. Ваçанкан.
7. „Пирĕн çар“—„Сунтал“, 12 №, 1931 ç., муз. Т. Лисковӑн.
8. „Колхозниксен ĕç йурри“—„Сунтал“, 9 №, 1931 ç., муз. Максимовӑн, сӑвви Хударӑн.
9. „Колхозла йал“—„Сунтал“, 2 №, 1931 ç.—Т. Парамоновӑн.
10. „Епĕр вӑйлӑ“—„Вуниккĕре“ сборник—Хирбиков—Ваçанка.
11. „Кунсем“—„Сунтал“, 1931 ç., Уйӑп Мишши.
12. „Хурçă крепӑç“—Мĕтри Ваçлейĕн, муз. Чернышевӑн.
13. „Çамрӑк пионерсен субботник йурри“.
14. „Çĕнĕленчĕ çĕршыв“—муз. Кривоносовӑн, сӑвви Ехминӑн.
15. „Строителсен йурри“.
16. „Бригадӑ хатĕр“.
17. „Максӑм çăпата тӑват, тет“—С. Максимовӑн.
18. „Пĕлес çок“, „Сунтал“, № 4—5, 1930 ç., халӑх йурри.
19. „Йĕтĕн“—„Шкул йуррисем“ сборникрен.
20. „Еç йурри“, „Сунтал“, 2 №, 1927 ç.

ТУПМАЛИ.

Стр.

1. **П. Н. Осипов.** Çĕнĕ хум (V пайла драма) 3
2. **Уйăп Мишши.** Йулашки штурмсем (поема, малтанхи сыпăкĕ) . . 43
3. **Е. Еллийĕв.** Йышран уйрăлсассăн (калав) 55
4. **В. И. Краснов.** Тăвалла (роман, иккĕмĕш кĕнекин йулашки сыпăкĕсем) 98
5. **В. Деферан.** Екран (поемă 115

ТЕОРИПЕ КРИТИКА.

6. **Е. Захаров.** „Йеркĕн" поема 118
7. **В. Долгов-Худар.** Метод йăнăшĕ (А. Петтоки çырнă „Çирĕм иккĕ" çинчен) 140
8. **Н. Ваçанка.** Чăвашла илемлĕ литература кăларас ĕç 146

ХАЛĂХ ТВОРЧĔСТЬИ.

9. **Ф. Меценатов.** Ĕç йуррисем 155

Ответлă редактăр **Н. ВАÇАНКА.**

Редколлеги членĕсем: **И. Кузнецов, А. Золотов, Иван Мучи, Уйăп Мишши Е. Захаров, Митта Ваçлейĕ, П. Осипов.**

Тех. редактăр **Н. Йангас.**

Ответ редактор Н. ВАСЯНКА.
Техн. редактор Н. ЯНГАС.

Сдано в производство 29/XII—33 г. Подписано к печати 27/I—34 г.

Формат 62×94/16. Тираж 4000 экз.
Изд. листов 10½. В одном изд. листе 52 000 знаков.

Индекс X—3. Чувашгиз № 226. Заказ № 3392.
Уполн. Чувашлита № 1183.

Типография № 2 Чувашского Государственного Издательства в гор. Алатыре, Чувашской АССР.